К 84 09(=Чув)
М 96
Ч-39699



Альбина Мышкина

# Атте пилĕ

Национальная библиотека ЧР
4-039699

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К Ф К84.09(=Чув)
М96

Альбина Мышкина

# АТТЕ ПИЛӖ

Повеҫсемпе калавсем

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2004

кр.

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2Рос=Чув) — 4
М 12

ПРОВЕРЕНО
2010

ч-39699

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Мышкина А.Ф.**
М 12 **Атте пилĕ:** Повеçсемпе калавсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 159 с.

Альбина Мышкина хăйĕн хайлавĕсенче паянхи çамрăксен кăмăл-туйăмне, шухăш-ĕмĕтне туллин уçса парать. Пурнăçри юратупа вилĕм, ултавпа курайманлăх, укçа-тенкĕ тыткăнне çакланнă яшсемпе хĕрсене чĕрери ĕненӳ малалла талпăнма хăват панине витĕмлĕн кăтартать.

«...Вăхăт çитсессĕн нумайăшĕ пулĕ. Пĕчченлĕх тунсăхĕ. Амăшлăх телейĕ... Пурте пулĕ. Анчах ырату чĕререн сирĕлмĕ. Çак ырату çапса ярсассăн çĕкленме, ӳксессĕн тăма пулăшĕ. Çухату чуна хытарĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме, пуçа пĕкмесĕр утма вĕрентĕ. Çакă пурте малашне пулĕ...» — çырать автор тĕп сăнар пирки «Атте пилĕ» повеçре.

**УДК 821.512.111 — 93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) — 4**

**ISBN 5-7670-1377-2**

© Мышкина А.Ф., 2004
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2004

# ПОВЕҪСЕМ

## ВИҪĔ ХĔРПЕ САР КАЧЧĂ

### Пĕрремĕш пайĕ

#### 1

Тунсăх ҫур утравĕ... Самаях улшăннă иккен эсĕ. Ҫурхи шывсем пĕр шелсĕр ҫурнă санăн кăкăрна. Тахҫан тем пысăкăш сарăлса выртаттăнччĕ-ҫке. Тип ҫырмана икке пайлаттăн. Халĕ вара... Икĕ ҫынна ҫума-ҫумăн лармалăх ҫеҫ юлнă. Ун чух кунта ем-ешĕл те сĕтеклĕ курăк ешеретчĕ. Ун чух... Тăхта-ха, миҫе ҫул пулман эпĕ ҫакăнта? Пĕр ултă-ҫичĕ ҫул та пулĕ. Ҫук, тата ытларах: ҫичĕ ҫул та ултă уйăх. Мĕнле хăвăрт иртет иккен пурăнăҫ!

Туслăх ҫур утравĕ... Тĕрĕссипе, ун ячĕ апла мар. Нимĕнле ят та ҫук унăн. Ăна эпĕ ҫапла ят панă. Ҫак ҫĕр лаптăкĕ пирĕн туслăха ҫуратрĕ. Ҫирĕплетрĕ. Кайран вара вăлах уйăрчĕ... Туслăх ҫур утравĕнчен тунсăх ҫур утравĕ пулса тăчĕ.

Мĕн чухлĕ вăхăт ирттермен пулĕ эпĕ кунта! Мĕн чухлĕ ĕмĕт, мĕн чухлĕ шухăш юхса кайнă ҫак тип ҫырмара. Чарăна пĕлмен шухăшсем, пурнăҫа кĕмен ĕмĕтсем... Паян вĕсем пурте ĕнерхи кунра, иртнĕ пурнăҫра юлнă. Ҫак ҫур утрав ҫинче ҫуралса ҫирĕпленнĕ туслăх та манăҫа тухнă. Шел, халĕ ҫакă пĕтĕмпех асаилӳре кăна пурăнать. Манăн асаилӳре...

Пĕтĕмпех улшăннă кунта. Пĕтĕмпех. Тăвайккинче ешерекен йăмрасем те.

— Аппа, ытла хĕррине ан пырăр. Кунта ҫĕр хăйне хăй ишĕлсе тăрать.

Турăҫăм, ун сасси! Пулма пултараймасть...

— Мĕн?! — хам хыҫра вăл — Ваня — тăрассине шанса вăрт ҫаврăнтăм. Кăлăхах. Ман умра пĕр ҫич-сакăр ҫулхи арҫын ача тăрать иккен.

— Ытла хӗрринче тӑма хӑрушӑ теп.

Унӑн сасси... Чуна ҫывӑх, ҫепӗҫ сасӑ. Чим-ха, ку ача пӗтӗмпех Ваня сӑнлӑ-ҫке! Ун кӑвак куҫӗ, кӑшт каҫӑртарах сӑмси, ҫӳхе тути. Ҫамки ҫине усӑннӑ ҫӳҫ пайӑркисем те пулин Ваньӑнни евӗрех вӗлкӗшсе тӑраҫҫӗ.

— Эпӗ асӑрхарӑм-ха. Эсӗ мӗн ятлӑ?

— Сергей. Эпӗ ав ҫавӑнта, ту ҫинче, пурӑнатӑп.

Ту ҫинче? Пӗтӗмпех улшӑнса пӗтейменха иккен кунта.

— Кам ачи пулатӑн вара?

— Ман анне Нина ятлӑ.

— Аҫу?

— Атте? Ҫук вӑл. Вилнӗ манӑн атте.

Вилнӗ! Ваня вилнӗ-и? Ҫук! Ку йӑнӑш. Пысӑк йӑнӑш. Тен, ку ача Ваньӑн мар? Тен, эпӗ йӑнӑшатӑп? Анчах... Анчах акӑ вӑл. Кӗлеткипе те, сӑнӗпе те каснӑ лартнӑ Ваня. Вӗсен хушшинче пӗр уйрӑмлӑх ҫеҫ — ҫул хушши. Ҫакӑ ҫеҫ. Ҫакӑ ҫеҫ...

## 2

Питӗрнӗ-и? Тӗлӗнмелле. Нихӑҫан та кӑнтӑрла хапхана питӗрсе ларман. Таҫта ют яла кайнӑ-шим? Нумайлӑха-ши?..

— Елюк мар-и ҫав? Куҫ хавшарӗ, паллаймарӑм.

— Эпӗ те-ха. Кӗрейместӗп ак, — шухӑша кайнӑран хам ҫума кӳршӗ карчӑкӗ, Санюк аппа, пырса тӑнине те сисмен. — Сывлӑх сунатӑп. Пирӗннисем ӑҫта-ши?

— Инкӳ пӗчченех юлчӗ вӗт... Чирлекелет юлашки вӑхӑтра. Ватах мар пулин те, чӗрипе аптрать. Виҫӗм кун «Васкавлӑ пулӑшу» чӗнсех больницӑна ӑсатрӑм.

— Ах, инкек! Халӗ мӗнле-ши?

— Микул Ваҫҫи райцентра кайсан кӗрсе тухрӑм терӗ. Чиперех терӗ.

Мӗн тӑвас ӗнтӗ халь ман? Ялта пӗлӗшсем нумай, кам патне каям-ши?

— Ҫул ҫинчен канмалла пирӗн пата кӗр, — ман шухӑша вуланӑ пекех сӑмахларӗ Санюк аппа. — Аҫу килне кӗрсе курас тесен, уҫӑ манра. Кил-ҫурта пӑхкаласа тӑма инкӳ мана хушса хӑварчӗ.

— Тавах ӗнтӗ. Чӑрмантарса ҫӳрем мар. Килех кӗресчӗха ман.

— Мĕн чăрманни ĕнтĕ, — пиçиххи çумĕнчен уçă çыххине салтса илнĕ май калаçрĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ. — Каярах та пулин каçса лар. Именсе ан тăр. Кӳршĕсем вĕт.

— Каçатăп. Ак кĕрсе вырнаçатăп та каçатăп.

— Каç çав, каç.

Чĕриклетсе уçăлчĕ хапха. Тăпсине тахçантанпах сĕрмен пулас. Чуна çӳçентерекен сас парать. Кил карти хушшине те курăк пусса лартнă. Ку çуртра пачах та пурăнман пекех.

Тăван килĕм! Атте килĕ. Ытла тăлăххăн ларатăн эсĕ. Нумаях пулмасть-çке çакăнта, пĕр темиçе çул каялла кăна, пурнăç вĕресе тăратчĕ: пӳртре ача-пăча хĕвĕшетчĕ, витере — выльăх-чĕрлĕх. Халĕ вара кунта тупăкри пек шăплăх. Пурнăç чарăнса ларнă тейĕн. Тахçан тăвăр пулнă пӳрт те пуш-пушах. Ун ăш-чикĕ ерипен асапланса вилекен вата евĕр мĕскĕннĕн курăнать. Нӳрĕпе кăвакара пуçланă стенасем пӳртри сывлăша йывăрлатаççĕ. Сывлăш пӳлĕнет.

...— Елюк, мĕншĕн çывăрмастăн? Çывăр. Иртерех-ха тăма. Ултă сехет çитсен хамах вăрататăп.

— Çук-ха, çывăрас килмест. Ман сăвă çырмалла. Ĕнер çыраймарăм. Тен, халĕ шăрçалăп.

— Çырса пăх-ха апла. Анчах пĕчĕккисене ан вăрат.

Пĕчĕк йăмăкпа шăллăм ман çумра, кăмака сентри çинче, ним сисмесĕр çывăраççĕ. Ирхи тĕлĕк тутлă — вĕсем вăранмĕç-ха.

Атте каллех кăмака умне пĕшкĕнчĕ. Кашни ирех, эпир шкула кайиччен, пире валли вĕри апат хатĕрлет вăл. Паян та акă пĕтĕм тĕпеле пиçсе пыракан шаркку шăрши сарăлнă. Юрататăп эпĕ атте кăмака умĕнче ĕçленине сăнама. Асамçă пек туйăнать мана вăл çак самантра. Унăн ырă та ăшă куçĕ тарăн шухăша путнăн курăнать. Мĕн çинчен шухăшлать-ши атте çакăн пек самантсенче? Пирĕн, хăйĕн çул çитмен ачисем, çинчен-ши? Тăван килтен инçетрисем çинчен-ши? Анне çинчен-ши? Паллах. Паллах, пирĕн çинчен. Ун пурнăçĕнче эпир кăна. Чи хаклисем. Чи юратнисем. Анчах анне пирĕнпе пĕрле мар. Атте çумĕнче паян эпир çеç. Пурнăçа пĕлмен, чăн-чăн йывăрлăхсене курман, атте-анне çунатти айĕнче ачашшăн çитĕннĕ тĕпренчĕксем. Халĕ вара çурма тăлăх пепкесем. Анне те, атте те халĕ пирĕншĕн атте. Туятăп, çăмăл мар ăна. Анчах вăл — чăтăмлă, вăл — вăйлă.

Аттеçём. Атте. Юрататăп эпё сана. Паян çак тёксём те тăлăх пÿртре эпё çакна татах та ытларах туятăп. Вăхăт пур сурана та тÿрлетет теççё. Анчах манăнне мар. Эсё çукки маншăн мёнле пысăк çухату пулнине вăхăт иртнёçемён вăйлăрах та вăйлăрах туйса пыратăп. Ку суран нихăçан та тÿрленмё. Çулсем иртнёçемён вăйлăрах çеç сурать вăл, чёрене кăшлать, ыраттарать. Нумай çулсем хушши хамран хам тартăм. Чёре ыратăвёнчен, пёчченлёхрен.

Шел, хам канăça тупаймарăм.

### 3

— Иртме юрать-и?

— ?..

· Санюк аппа килёнче нимех те улшăнман. Тёрленё чÿрече каррисем, стена çинчи сăн ÿкерчёксем. Пурте хăйён ялан-хи вырăнёнче. Сăн ÿкерчёксем... Вёçё-хёррисёр пурнăçăн пёчёк саманчёсем. Чи хаваслă е тарăн шухăшлă самантсем. Хаваслă е тунсăх сăнсем. Палланисем. Палламаннисем. Акă тата, эпё те пур иккен кунта. Аннепе, аппапа.

...Эпё пёр çич-сакăр çулта. Çёртме, çук, утă уйăхё. Шăрăх кун. Паян эпё иртеппех аттепе касура çÿретёп. Кётÿ яла аниччен вăхăт ытла нумай. Халё кăнтăрла та çитмен-ха. Манăн вара хăвăртрах сулхăн çёре пытанас килет. Анчах юрамасть. Чăрсăр пăрусем çакна кăна кётеççё. Тахăш вăхăтра пăрçа уйне кёрсе кайма ёлкёреççё, мурсем. Лакăштатса чуп вара вёсем хыççăн. Пичче килсен мана киле ярёç. Анчах темшён васкамасть-ха вăл. Хёвелё вара кăшт та хёрхенме пёлмест. Хёртет те хёртет. Паянхи кун сулхăн юхан шыв хёрринче выляма аван.

— Елюк! Çывăрса каймарăн пулё те?

— Эпё халех!

— Хамах хăвалăп. Эсё киле вёçтер. Ирпе аннÿ зоо-цирк курма каяс пек калаçрё. Вёçтер.

— Эсё мёнле вара?

— Пёчченех пăхкалăп. Киле çитсен иччÿне васкат. Кăнтăр апачё те чиксе килтёр.

— Юрать.

Вёçтертём вара эпё, çара уранскер, ешёл çерем тăрăх. Атте мана каялла чёнсе илесрен шикленнипе-ши е анне

хулана мансăрах тухса каясран хăранипе, çаврăнса пăхмасăр чупрăм...

Çак сăн ӳкерчĕке çав кун тунă. Зооциркра Санюк аппапа ун Люся хĕрне тĕл пултăмăр. Пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр...

— Ай-уй, Елюк килнĕ иккен! Эпĕ кил хушшине тухнăччĕ те.

— Эпĕ-ха. Хама тупрăм ак.

— Сăн ӳкерчĕк пирки калатăн-и? Юнашаррине пăх-ха.

— Санюк аппа! Мĕнле лекнĕ сан пата ку сăн ӳкерчĕк?

— Люся чиксе хунă ăна.

Ман ачалăхăн тепĕр саманчĕ. Виççĕн — Нина, Валя тата эпĕ ку ӳкерчĕкре. Уйрăлми туссем те, пĕр çулхисем те мар. Çав самантра ăнсăртран юнашар пулнăран çеç пĕрле сăн ӳкерттернĕ эпир. Хăçан, кам ӳкернĕ ăна — халĕ аса илейрес те çук.

— Эсĕ ура çинче ан тăр, вырнаç диван çине, — чĕнчĕ мана кӳршĕ карчăкĕ. — Яланлăха-и е хăнана çеç килтĕн?

— Çитет пулĕ тĕнче касса çӳресе. Çурçĕртен кăнтăралла, тухăçран анăçалла пулса курман вырăн юлмарĕ пулĕ.

— Пĕчченех-и-ха?

— Пĕчченех. Ман упăшка пуласси çуралма ĕлкĕреймен-ха.

— Вăхăт ĕнтĕ. Вăхăт. Пĕччен пурнăç — çур пурнăç çеç.

Санюк аппа, эс яланхи пекех пит тĕрĕс калатăн. Анчах пӳрмен пулсан? Мĕнех тăвайăп эп?

— Сан ӳсĕмрисем пурте çемьеллĕ ĕнтĕ. Санран чылай çамрăккисем те пĕрлешсе пĕтрĕç пулĕ. Халĕ ытла ир çемье çавăраççĕ çав.

— Ытла ватă мар-çке. Ĕлкĕрĕп-ха.

— Уншăн мар калатăп. Пурнăç иртет-çке. Пурнăç. Пурин те хăйĕн вăхăчĕ. Хĕл варринче улма йывăççи çимĕç памасть.

— Санюк аппа, ман вăхăчĕ çитмен пулĕ апла. Ялта мĕнле? Çич çул ытла пулман килте. Ман тантăшсем тата епле? Нинăпа Валя ăçта?

— Çич çул çитрĕ те-и вара? Эх, вăхăт хăвăрт иртет. Тантăшусем-и? Кам ăçта саланнă. Тĕрлĕ çĕре. Çимук Катти ялтах. Кӳршĕлле пурăнакан Кĕркурие качча тухрĕ те кашни

çул тенĕ пек ача çуратса парать. Галя таçта стройкăра. Унти хусаха качча тухнă. Уйăх каялла мăшăрĕпе яла килсе кайрĕç. Нина ялтах. Упăшкасăр ача çуратрĕ. Халĕ ача садĕнче ĕçлет. Ачине, Çеруша, шеллесе вилетĕп.

— Мĕншĕн?

— Юлашки вăхăтра Нина ĕçме вĕренчĕ. Час-часах эрниэрнипе урăлма пĕлмест. Пăсăлчĕ хĕрарăм. Пăсăлчĕ.

— Валя мĕнле?

— Эсĕ мĕнле Валя пирки ыйтатăн? Леш касри Çимунăн усрав хĕрĕ пирки мар-и?

— Аха. Çавăн çинчен.

— Вăл сан хыççăнах ялтан тухса кайрĕ. Ферма çуртне тума килнĕ бригадăри пĕр платника качча тухрĕ те кайрĕ. Халĕ вăл ăçтине, мĕнлине ялта никам та пĕлмест пулĕ. Çимунĕ патне хыпар янине те илтмен.

— Кӳршĕри Ваня тата ялтах-и?

— Куштан Ваççа Иванĕ-и? Тĕнче касса çӳрет пуль.

Апла иккен. Саланнă çĕршыв тăрăх тантăшсем. Шел. Анчах Валя, Нина е Катя шăпи мар пăшăрхантарать мана. Мана вăл çеç кăсăклантарать. Çапла. Мĕншĕн хама хам улталас? Нумай çул хыççăн тăван яла эпĕ пĕр ăна курма çеç килнĕ. Пĕр уншăн...

Ваня, Ваня... Хаяр та çепĕç, ачаш та илемлĕ. Чун илли те пурнăç хавасĕ. Сан ятна пин хут ылханнă эпĕ. Çĕр хут асран кăларса ывăтма тупа тунă. Асăмран чĕрсе пăрахнăччĕ те пуль. Анчах та чĕремрен, вĕри чĕререн мар. Кашни касах ман кашни тĕлĕкре сан сăну. Сӳнекен туйăма çĕнĕрен чĕртекен, чĕрене ыраттаракан, пĕчченлĕх тунсăхне илсе килекен сăн. Миçе çул санран тартăм эпĕ. Тартăм... Тартăм — хăтăлаймарăм. Халĕ таврăнтăм.

## 4

Тӳпери çăлтăрсем яланхилле çап-çутă. Пачах та улшăнман вĕсем. Илĕртӳллĕ, анчах ытла та сивĕ. Çĕртен пинпин çухрăмра, çав вăхăтрах пирĕн пата пит çывăх.

Паян, шăпах паян çак çăлтăрсем уйрăмах йăлтăркка, паян вĕсем уйрăмах çĕр патне çывăх, илĕрӳллĕ. Çапах вĕсем ĕнерхи, виçĕм кунхи евĕрех сивĕ, чĕрене пачах та

ӑшӑтмаççӗ. Çӗнӗ уйӑх шевли те яланхи пекех. Унӑн вӑрӑм урисем такӑрлатнӑ сукмак тӑрӑх таçта инçете кайса çухалаççӗ.

Эпӗ те пӗрре мар çак сукмакпа куç курнӑ инçете кайма ӗмӗтленнӗ. Анчах сукмак мана яланах тӑлӑххӑн ларакан шурӑ хурӑн патне кӑна илсе çитеретчӗ. Çак хурӑн айӗнче ансӑр сак ларатчӗ. Акӑ вӑл. Икӗ çын лармалӑх лутра сак. Халӗ те хӑй вырӑнӗнчех. Халӗ те çирӗп, яп-яка. Камӑн ӑста алли туса лартнӑ-ши ӑна? Кӑна никам та пӗлмест. Эп хама мӗн астунӑранпах ларать вӑл. Ача чухне эпир кунта килле выляттӑмӑр. Кайран касхи шӑплӑха тимлеме çӳре пусларӑмӑр. Кӑшт каярах вара...

...— Елюк, сана çапла минут хыççӑн минут пӗр чарӑнми иртнишӗн шел мар-и?

— Валя! Пурӑнма кӑна пусларпӑр-çке. Умра ӗмӗр. Тулли ӗмӗр! Санпа ман пурнӑçра вуншар пин, миллион самант, минут, сехет пулӗ.

— Анчах мана ыран вилме пӳрнӗ пулсан? Ун чух вара мӗнле?

— Валя! Сур-ха виç хутчен.

— Тем чул сурсан та пӳрнинчен иртеймӗн. Эпӗ вара юратма та, пурӑнма та ӗлкӗреймен.

— Аха, юратма! Юратма ӗлкӗрес килет иккен-ха. Уншӑн мӗн пӑшӑрханатӑн? Саня сан хыçран йыт çури пек çӳрет.

— Елюк, эп...

— Акӑ ӑçта вӗсем, çурхи шӑпчӑксем! Ваня, кил-ха кунта. Шӑпчӑксен юррипе киленер.

Сисмен те иккен эпир пирӗн пата хамӑр кас ачисем, Ваньӑпа Саня, пырса тӑнине.

— Аха! Кунта-и-ха вӗсем, кашта çинчи сар чӑхсем?

Çапла выляса-кулса Ваня пирӗн хушша кӗрсе ларчӗ. Анчах ансӑр сак çинче виççӗне тӑвӑртарах. Вальӑпа иксӗмӗр те пӗр харӑс ура çине сиксе тӑтӑмӑр.

— Ӑçта васкатӑр? Эпӗ хурчка мар, тытмастӑп, — Вальӑна хӑй çумӗнчех тытса хӑварчӗ Ваня.

Эпӗ пӗчченех кӑшт айккине, тӑлӑх хурӑн айне, кайса тӑтӑм. Çак самантра, пӗлместӗп темшӗн, хама ытла та тунсӑх пулнине туйса илтӗм. Шӑпах çак самантра ман чӗрере тем йӑшӑлтатса илчӗ. Ман пурнӑçра ытла тӑрукках

темĕн улшăнчĕ. Халиччен пачах шухăшлаттарман кӳршĕ ачи Ваня ман чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ.

Шăпах çак каç, çак самантра çуралчĕ пулĕ манăн юрату. Пĕрремĕш черчен те хаяр юрату...

— Чĕнсен те илтместĕн. Е пирĕн пеккисемпе калаçса çăвар тутине те ямастпăр-и?

Шарт сиктерчĕ мана пыр тĕпĕнчен хăйăлтатса тухакан сасă. Эпĕ çав сасă еннелле пуçа пăртăм. Куçăм тĕлне вăтам пӳллĕ хĕрарăм мĕлки шуса тухрĕ. Пĕрре пăхсан вăл чылай ватă курăнать. Тирпейсĕр çыхнă, тĕссĕрленнĕ тутăр айĕнчен ылтăн сарă çӳç кăтрисем курăнаççĕ. Анчах тăнлав тĕлĕнче вĕсем кăвакара та пуçланă. Куç айĕнче, тута кĕтесĕсенче нумай вĕтĕ пĕркеленчĕк, самаях сарăлнă кĕлетке. Хăй кăштах сыпнă пулас. Куçĕ тĕтреллĕ чĕнтĕрпе сырăннă. Куçĕ тахçан илемлĕ пулнă курăнать. Халĕ вăл хăй илемне çухатнă ĕнтĕ.

— Ырă каç пултăр. Паллаймарăм-ха.

— Ан йĕрĕн. Çӳп-çап купинчен тухнă пакăç мар эп, — терĕ хĕрарăм ман çума ларнă май эпĕ сак вĕçнерех сикнине курса. — Çĕтĕк-çурăк, килсĕр ыйткалакан та мар.

Ку вăл — Нина. Пулма пултараймасть! Нина. Яштака пӳллĕ те илемлĕ, яланах тирпейлĕ Нина... Халĕ çак хĕрарăм кĕлеткинче ăна аса илтерекен нимĕнле йĕр те юлман. Санюк аппа ун çинчен «ĕçкелет» терĕ. Анчах тахçан эп пĕлнĕ Нина çак таранах нĕртен тухасси çинчен шухăшлама та пултарайман.

— Чĕлхӳне те çăтрăн-им тата? — тута хĕрринчи те йĕрĕнчĕк, те хаярлăх куллине пытармасăр çаплипех калаçрĕ хĕрарăм.

— Нина!.. Аван-и, Нина?

— Палларăн-и-ха апла? Палларăн. Эпĕ вара сана ав леренех уйăрса илтĕм. Çак сак çинче сан пек каçăрăлса ларакынни ялта урăх никам та çук...

— Кунта нимĕн те улшăнман. Çич çул мар, çич кун та иртмен тейĕн.

— Иртнĕ çав, иртнĕ. Çичĕ çулĕ те, яшлăх кунĕ те.

Пурнăçра тĕлĕнмелли нумай. Пурăнатăн çапла нумай çулсем хушши юнашар, анчах пĕр-пĕрне лайăх пĕлсе çитейместĕн. Ак Нинăпа эпĕ ултă кил урлă çеç пурăнатăп. Эпир нумай çул хушши пĕр-пĕрне кашни кун курнă пулĕ.

Тен, кунне темиçе хутчен те. Эпĕ вара ăна пĕрремĕш хут хам пĕр вун виçĕ-вун тăватă çулта чухне çеç курнă пек астăватăп. Темме пула-çке маларах асăрхаман эпĕ ăна. Нихăçан та пĕрле выляманран çапла-ши ку? Е вăл манран çулталăк çурă-ик çул кĕçĕнрех пулнăран? Пĕлместĕп. Нина ытларах арçын ачасемпе çӳренĕ. Уйрăмах леш касри Володьăпа питĕ туслăччĕ. Кайран çак туслăх юратăва та куçрĕ пулас. Анчах ытла çирĕп пулмарĕ курăнать вăл. Часах хуçăлчĕ. Нина вун ултта çитсен юхха хĕр ятне илтрĕ. Вара ун пĕтĕм пурнăçĕ анаталла кусма пуçларĕ. Юлашкинчен вăл туссемсĕр, савнисĕр — пĕччен — тăрса юлчĕ. Ăна мĕн пулнине никам та ăнланмарĕ. Нина хăй те кама та пулин мĕн те пулин ăнлантарса пама тăрăшмарĕ.

### 5

...Эс йĕретĕн-и, эс йĕретĕн-и,
Ма салхуллă сан йăл куллу?
Шăнкрав куракĕ парне пултăр-и?
Шăнкрав куракĕ — уйрăлу...

Юрă кĕввине пăсса çухăрашрĕ хĕрарăм. Юрланинчен ытла кăшкăрашрĕ вăл. Сасси ларсан вара хăй умĕнчи сăмакуна кĕленчеренех сыпа-сыпа илчĕ. Йӳç шĕвеке хĕрарăм пĕр çӳçенмесĕр ĕçрĕ. Юнашар выртакан хура çăкăр татăкне те тĕкĕнмерĕ. Унăн хăвăртрах ним пĕлми пуличчен ĕçсе лартас, хăй пурнăçĕ çинчен манас килчĕ. Анчах эрехĕ те пуçа каймарĕ, шухăшсем те юхма чарăнмарĕç. Нина паян нихçанхинчен те ытларах тăнне çухатиччен ĕçсе лартасшăн çунчĕ. Çакăн сăлтавĕ вара Елюк пулчĕ. Каçхи тĕлпулу ăна пăлхантарса ячĕ, хĕрарăм чунĕнче асаилӳ хумне çĕклерĕ.

Елюк... Вăл каллех Нина çулĕ çинче. Вĕсен пурнăç çулĕсем тĕл пулсан яланах хĕресле касăлаççĕ.

Утас çук урăх, чупас çук урăх
Сывлăм сырăннă сукмакпа.
Шăнкрав куракĕ парне пултăр-и?
Шăнкрав куракĕ — уйрăлу.

Самаях ерипен юрларĕ Нина. Хăйĕн пĕтĕм мĕскĕнлĕхне нихçанхинчен уççăн курчĕ вăл. Чунĕ çемçелсе кайнине,

куçĕ куççульпе тулнине туйса илчĕ. Йĕрсе ярас мар тесе чунне хытарни те пулăшмарĕ: тăварлă куççуль шăрçисем пурпĕрех пĕр чарăнми юхрĕç. Юлашкинчен чăтăмлăхĕ те пĕтрĕ — пуçне сĕтел çине хучĕ те ĕсĕклесех ячĕ. Хыттăн. Хытăрах та хытăрах.

— Анне! Анне, ан макăр.

Нина пуçне çĕклерĕ. Сĕтел кĕтессинче çичĕ çулхи ывăлĕ тăрать. Ачан тахçанах çуса тасатман кĕпи хăйĕн тĕсне çухатнă, çанă вĕçĕсем çĕтĕлнĕ. Нумай вăхăт хушши хачă курман çӳçĕ самаях çитĕнсе кайнă.

— Анне, манăн çиес килет. Апат пĕçер-ха...

— Апат-и-ха сана! Апат-и? — хăйĕн пĕтĕм тарăхăвне ачи çине силлерĕ хĕрарăм. — Хăлха чикки кирлĕ мар-и тата?

Тапранса кайнă трактор пек кĕрлерĕ Нина. Ачине хыттăн çутăлтарса ячĕ, чарăнми киревсĕр сăмахсемпе ятларĕ. Пĕчĕк Сергее татах та çупкă лекетчĕ пулĕ, анчах лешĕ хăвăрт хăй вырăнне, тĕттĕм кăмака хыçне, кайса ларчĕ. Амăшĕ вара тем таранччен пĕр-пĕчченех янăрашрĕ. Юлашкинчен ывăнчĕ пулас: кĕленче тĕпне пушатрĕ те ларнă çĕртех тĕлĕрсе кайрĕ. Часах пӳртре вăл илемсĕррĕн хăрлаттарса çывăрни кăна илтĕнсе тăчĕ.

Кăмака хыçĕнче хӳтлĕх тупнă Сергей вара чылайччен шăлне çыртса куççульне çăтрĕ. Вăл йĕме кăна мар, хытăрах сывлама та хăрарĕ. Хытса кайнă пекех ларчĕ. Анчах ача кăмăлĕ ача кăмăлех. Часах пĕтĕм пит-куçĕ куççульпе çăвăнчĕ унăн. Хăй çаплипех сас кăларма хăрарĕ-ха. Чунĕ çурăлса каясла кăшкăрчĕ пулин те ача пĕр сассăр ĕсĕклерĕ, куççульне пытарма пуçне минтер айне чикрĕ. Кунта ун аллине лӳчĕркенсе пĕтнĕ пĕчĕк сăн ӳкерчĕк лекрĕ.

— Атте, — хăй сисмесĕрех сасăпа каларĕ ача. Кайран хăйĕнчен хăй хăраса пуçне минтер айне татах та шаларах чикрĕ.

Çак сăмаха çичĕ çулхи Сергей хăйĕн кĕске пурнăçĕнче пĕрре те каласа курман. Ашшĕне пĕрре те пулин курнине астумасть. Сергейсен килĕнче ăна нихăçан та аса илмеççĕ. Вăл çук, пачах çук пекех. Анчах Сергей хăй халиччен курман, палламан çав çын çинчен чылай пĕлет. Аслисен калаçăвĕнче ăнсăртран та пулин ун ячĕ тухсан ача

хăлхине вăштах çĕклет. Пĕр сăмах сиктермесĕр итлеме тăрăшать. Аслисем вара Сергее ним ăнланман ача вырăнне хурса час-часах ун умĕнчех: «Каснă лартнă Куштан Ваççа Иванĕ», — теççĕ. Çакна тĕрĕслемех Сергей Ваççа пиччесен килĕнчен çак сăн ӳкерчĕке йăтса тухрĕ. Кайран вара, пӳртре пĕччен юлсан, чылай вăхăт хушши сăн ӳкерчĕкри çынна хăйĕнпе танлаштарчĕ. Çынсем йăнăшмаççĕ. Каснă лартнă...

«Кураймастăп. Кураймастăп! Кураймастăп!!!» — пĕтĕм тĕнче илтмелле кăшкăрас килчĕ ачан. Çапах та вăл паçăрхи пекех шăпăрт пулчĕ. Куççульпе нӳрленнĕ пĕчĕк минтерне кăна хытăрах та хытăрах çыртрĕ. Сергей хăйĕн амăшĕ вăранасран, хĕнеме пултарассинчен хăрарĕ. Ачана çак шăплăх та, çак тĕттĕмлĕх те шиклентерчĕ. Çавăнпа вăл пĕр сассăр куçне хупса выртрĕ. Ача хăвăртрах ыйха путма, илемлĕ тĕлĕксем курма ĕмĕтленчĕ. Анчах çывăрса каясси пулмарĕ унăн. Тепĕр самантранах вăл хырăмĕ питĕ выççа çитнине туйса илчĕ. Ача чылайччен çиес килнипе çапăçса — ун çинчен манса кайма тăрăшса — выртрĕ. Çĕнтереймерĕ. Май килнĕ таран шăпăртрах пусса сĕтел патне пычĕ, унта выртакан çăкăр чĕлли патнелле аллине тăсрĕ. Анчах пĕр чĕптĕм вăй юлманскерĕн пуçĕ çаврăнса кайрĕ те сĕтел çинчи кĕленчене йăвантарса ячĕ. Лешĕ çав самантрах урайне ӳксе çĕмĕрĕлчĕ.

— Кам мурĕ кунта?! — ыйхă тĕлĕшĕпе кăшкăрса ячĕ амăшĕ. Хăй умĕнче ывăлне курсан вара: — Ак сана, шуйттан çурине! — тесе хыттăн çутăлтарса ячĕ.

Пĕчĕк Сергей пĕр сассăр пӳрт кĕтессинелле ывтăнса кайрĕ. Анчах амăш çапнине те, пырса çапăнса ыраттарнине те туймарĕ вăл. Хăй аллинчи татăк çăкăра хăвăрт-хăвăрт хыпа пуçларĕ. Ача çак самантра алăри чĕлĕ çинчен çеç шухăшлама пултарчĕ. Унăн тутине, ăшшине кăна туйрĕ.

## 6

...— Валя, Елюк, — çаплипех ӳкĕтлерĕ Саша, — айтăр пирĕнпе шашлыка. Хамăр кас ачисем çеç каятпăр.

— Елюк темле те, манăн каяс килмест-ха, — килĕшме васкамарĕ Валя.

— Мĕн темли пултăр, пыратпăр. Валя, эсĕ те кутăнлашса ан тăр. Кайса килер ĕнтĕ тата.

— Юрĕ-çке. Анчах ытла нумай тăмăпăр, — юлашкинчен килĕшрĕ-килĕшрех Валя.

Паçăр, Саша чĕннĕ чух, Валя турткаланса тăчĕ пулин те, шашлыка каймалли вăхăт çитессе чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Темиçе тĕрлĕ кĕпе улăштарса тăхăнчĕ — пĕри те кăмăла каймарĕ. Юлашкинчен джинс йĕмпе çутă кăвак джемпер тăхăнма шутларĕ.

Калаçса татăлнă вăхăта Вальăсен хапхи умне икĕ мотоцикл çитсе чарăнчĕ. Сашăпа Ваня иккĕшĕ пĕр харăс çитнĕ иккен. Тин çеç вун пиллĕк тултарнă хĕре çакă савăнтарчĕ те, хурлантарчĕ те. Хăйне илемлĕ тесе шутламанран тӳрех иккĕн килни савăнтарчĕ ăна. Çав вăхăтрах халăх умĕнче хăй кăмăллакан каччă çумне пырса ларма хăю çитерейменни хурлантарчĕ. Валя нимĕнле те Ваня мотоциклĕ çине пырса лараймарĕ. Лупашкаран иртмессерен каччă çумне сĕртĕнме тивесси вăтантарчĕ ăна. Вăл йăпăрт-япăрт Саша хыçне вырнаçрĕ. Лешĕ, çакна кăна кĕтнĕ пек, хăйĕн «тимĕр утне» çийĕнчех чĕртсе ячĕ. Самантран хăлхара çил шăхăрни тата мотор кĕрлени çеç илтĕнсе тăчĕ.

Ваня вăрман уçланкине чылай кая юлса çитрĕ. Ун хыçĕнче Елюк ларса килчĕ. Вĕсем çитнĕ чух уçланкăра вальс кĕвви янăратчĕ ĕнтĕ. Ваня мотоциклне чарнă-чарман, хальхинче Саша тусĕнчен маларах, Валя умне пырса тăчĕ. Тепĕр самантран кăшт тунсăхрах илемлĕ кĕвĕ хĕрпе каччăна хăй ытамне илчĕ. Вĕсем пĕр сăмахсăр, пĕр-пĕрне куçран пăхма вăтанса ерипен çаврăнчĕç. Валя хăйĕн пуçĕ çăмăллăн çаврăннине туйса илчĕ, ал-ури çыхланчĕ, пит-куçĕ хĕмленсе çунчĕ. Хăйне хăй туйми пулчĕ тейĕн çав. Ташă кĕвви те хăлхана кĕмерĕ.

— Валя... Валя, — таçти тĕпсĕр шăтăкран тенĕ пек илтĕнчĕ Ваня сасси. — Мĕншĕн чĕнместĕн? Мĕншĕн?..

Хĕр пуçне çĕклерĕ. Ик мăшăр куç пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç. Валя хăйĕн чĕри сиксе тухасла тапа пуçланине туйса илчĕ. Тук! тук! тук! Тăнлава темĕн шаккарĕ.

— Валь, эсĕ мана питĕ-питĕ килĕшетĕн, — çаплипех çепĕççĕн пăшăлтатрĕ каччă.

— Эсĕ те... мана... килĕшетĕн, — аран-аран сас пачĕ

Валя. Вăл хăйĕн пичĕ çунса тухасла хĕрелсе кайнине сиссе пуçне Ваня хулпуççи çумне тайрĕ.

Хĕрпе каччă пичĕсем пĕр-пĕрне сĕртĕнчĕç. Куçа куç тинкерчĕ. Хĕлхем тутасем пĕр-пĕрин патнелле туртăнчĕç. Тахăш самантра куçсем хупăнчĕç, тутасем пĕрлешрĕç.

— Ванюша! Ташă вĕçленнĕ! — çумрах кăшкăрса ячĕ Нина. — Мĕн çаплипех уйрăлаймастăр? Айтăр. Шашлык пиçрĕ.

Нина сасси уяр кунри аслати пек пулчĕ. Валя, хăйне пуçран çапнăн, кăвайт еннелле тапса сикрĕ. Ăна Ваня та чарма ĕлкĕреймерĕ.

— Чĕннĕ сана такам, — хаяррăн пăхса илчĕ Ваня Нина çине. — Мĕн çапкаланса çӳрен?

— Эпĕ мĕн... эпĕ... — хăйне хăй хӳтĕлеме пăхрĕ Нина.

Ваня ăнăçсăр пырса тухнă хĕрпе калаçса тăмарĕ. Вăрт çаврăнчĕ те Вальăна шырама васкарĕ.

Нина пĕр вăхăт ним хускалмасăр тăчĕ. Ун чунĕнче темĕн йăшăл турĕ. Çакă кĕвĕçӳпе ăмсану туйăмĕ пулчĕ. Хăйĕнпе пĕр çулти Валя каччăсемпе Нинăран маларах çӳре пуçлани кĕвĕçтерчĕ ăна. Çак темĕн тунсăх туйăмĕ те пулчĕ. Мĕн ачаран килĕштерекен тусĕ Володя Нина хĕр çулне кĕрсе пынине асăрхаманни хурлантарчĕ. Именчĕк каччă çав вăл Володя. Хĕртен виçĕ çул аслăрах пулин те, ытла та хăюсăр. Ăна çак Ваньăпа танлаштараймăн. Ваня хаваслă, чарусăр тата кăшт хаяр ача. Нинăна пурпĕрех чĕмсĕр те йăваш Володя ытларах килĕшет. Хĕрпе каччăн пĕрпеклĕхсем нумай. Нина та, ун пекех, пысăк ушкăна юратмасть. Ытларах пĕччен е Володьăпа пĕрле пулма тăрăшать. Ĕмĕтленме, нумай çырăрма юратать. Тĕрĕссипе каласан, Нинăпа Володьăна нумай калаçма та кирлĕ мар. Вĕсем пĕрпĕрне сăмахсăрах ăнланаççĕ. Анчах каччăн Нина чĕринчи юрату хĕлхемне те пĕр сăмахсăр туйса илесчĕ те. Çук вĕт. Е туйсан та курмăша перет Володя?

— Шăнмарăн-и? — пиншакне хĕр хулпуççийĕ çине уртса ячĕ тем самантра юнашар пырса тăнă Володя. Пиншакне уртса ячĕ те хăй айккине, такам йăвантарнă çăка çине, кайса ларчĕ. Вăл хĕр умĕнче пĕр самант кăна пулчĕ, анчах Нина унран эрех шăрши кĕнине туйса илчĕ. Çакă ăна тĕлĕнтерчĕ. Халиччен Володя эрех-сăра сыпнине курманччĕ вăл.

— Нина, — куçне айккинелле тартса сăмахларĕ каччă, — ман санпа калаçмалли пур.

— Мĕн çинчен?

— Нина... — хăй сăмахне нимĕнле çавăрса калаймарĕ Володя. — Мана кĕркунне салтака илсе каяççĕ.

Хĕр хăйĕн чĕрипе каччă кун çинчен мар, урăххи, вăл тахçанах кĕтни, çинчен калаçу пуçарасшăн пулнине туйса илчĕ. Анчах сăмах чĕнме васкамарĕ. Халĕ вăл ун тусĕ мĕншĕн эрех сыпнине те ăнланса илчĕ. Хăюллăрах пулма. Çакă хĕре кулăшла пек туйăнчĕ. Çапах Нина паçăрхи пекех ăнланманçи пулчĕ. Унăн тĕнчери чи сăваплă сăмахсене çак каччă чĕлхинчен илтес килчĕ.

— Эпĕ юрататăп сана, — юлашкинчен пулеметпа пенĕ пек хăвăрт каласа хучĕ Володя. — Тахçантанпах юрататăп...

Ваньăпа Вальăн пăшăлтатăвне те, Володьăпа Нина калаçăвне те çак каç уçланкăн чи тĕттĕм кĕтессине пытаннă пĕр мĕскĕн чун çеç курса, илтсе тăчĕ. Ăнсăртран çеç тăвата чĕре юратупа тата туслăх çулăмĕпе çуна пуçланине курнă хĕр уçланкăри кăвайт сӳнсен те хăй вырăнĕнчен хускалмарĕ. Çак вăхăтра вăл хăйĕн пĕчченлĕхне, хăй юратăвĕн пĕтĕм ыратăвне кăна туйрĕ. Çĕр çинче çак каç унран телейсĕр çын çукчĕ. Ку вăл Елюк пулчĕ.

## Иккĕмĕш пайĕ

### 1

Вĕлт-вĕлт туса хыçа юлаççĕ нумай хутлă çуртсем, шурлăхсем, лутра хурăнсем, ялсемпе хуласем. Самантлăха кăна курăнаççĕ кĕр сăрипе сăрланнă уйсемпе вăрмансем. Кайран вара инçете-инçете юлса çухалаççĕ.

— Çамрăк çын, сирĕн туртмалли тупăнмасть-и?

Тамбурта пирус ĕмсе тăракан арçын пуçне сасă еннелле пăрмасăрах кĕсйинчен «Marlboro» пачкине кăларчĕ, çавăн пекех сăмахсăр тăсса пачĕ.

— Тавах. Эпĕ Эля ятлă, — чĕвĕлтетрĕ такам пирус чĕртнĕ май. — Сире мĕнле чĕнмелле?

Арçын тинех çăварĕнчен çăра тĕтĕм вĕрсе кăларакан çын еннелле çаврăнчĕ. Ун умĕнче самаях çамрăк, çав тери чипер хĕр тăрать иккен. Хулпуççи çине хумлăн-хумлăн

шуса анакан ылтăн тĕслĕ çÿç, пĕкĕ пек авăнчăк та çÿхе куç харши айĕнчен пăхакан пысăк та кăн-кăвак куç, хупхура та çăра вăрăм куç хăрпăкĕсем, кăшт шĕвĕртерех тÿрĕ сăмса, хĕп-хĕрлĕ писев сĕрсе хулăнлатнă тута хĕррисем тăрăхларах пит çинче ытла та асамлăн курăнаççĕ. Пĕтĕм пĕвĕ илĕртÿллĕ те илемлĕ. Кĕлетки çумне тачă выртакан кĕске кĕпи вара арçынсене каçăхтаракан пĕтĕм мăкăра аван палăртать.

— Иван Васильевич, — çăварĕнчи пирусне кăлармасăрах хуравларĕ арçын.

Çакна илтсен тăруках ахăрса ячĕ хĕр.

— Тен, Василий Иванович?

Арçын хĕр мĕнрен кулнине ăнкарса илчĕ те хăй те кулмасăр чăтаймарĕ.

— Пулма та пултарать. Ентешсем мар-и-ха эпир унпа?

Çапла паллашрĕ Эля ятлă вырăс хĕрĕпе Иван Васильевич. Тĕрĕссипе, вăл Иван Васильевич тесе чĕнмеллех ватă çын мар. Кăçал кăна çирĕмултта кайрĕ. Анчах ăна, прораб пулнăскере, инçетри стройкăра урăхла нихăçан та чĕнмен. Ачалăх кунĕсенче Ванька, яшлăх çулĕсенче Иван, Ваня тесе чĕннине паян Иван Васильевич хăй те манса кайнă. Стройкăра ăна çамрăксем кăна мар, хăйпе пĕр çулхисем те, сухаллă ватăсем те хисеплесе ашшĕ ячĕпе кăна чĕнетчĕç. Çавăнпа Эльăн хаваслă кулли Иван Васильевича хăй çапах та çамрăк пулнине аса илтерчĕ.

— Сирĕншĕн вара, чиперкке, Иван. Ванька тесен те кÿренместĕп, — шÿтлеме пăхрĕ вăл.

— Ванька-встанька, — çаплипех кулма чарăнмарĕ Эля. Тепĕр тесен, ăна кулни те килĕшет. Шăнкăр-шăнкăр сасси, тип-тикĕс шурă шăл речĕ хĕре татах та илĕртÿллĕрех кăтартать. — Эсĕ хăш куперен?

— Виççĕмĕшĕнчен. Кĕретĕн-и хăнана?

— Темле. Сан кÿршÿсенчен аван мар.

— Ним аван марри те çук. Пĕчченех эпĕ. Хальлĕхе. Куратăн пулĕ, вакун çурри пушă. Эпир те иккĕн çеçчĕ. Вăл та пулин иртнĕ станцире анса юлчĕ.

— Апла пулсан... Анчах эпĕ хĕр тусăмпа-ха. Ăна пĕччен тăратса хăварма аванах мар.

— Эля! Купе пушă тетĕп-çке. Чĕн тусна та.

Хĕр хăйне икĕ хут чĕнессе кĕттерсе тăмарĕ. Тепĕр



Ч-39699
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

самантран виççĕмĕш купе алăкне пырса шаккарĕç. Хăнасене кĕтекен Иван Васильевич алăка уçса килнисене шалалла ирттерчĕ. Эльăпа пĕрле килнĕ хĕр те самаях çамрăк. Тусĕнчен кăшт пĕчĕкрех те туллирех пулнине пăхмасăрах Венера (иккĕмĕш хĕрне шăпах çапла чĕнеççĕ) сăн-пичĕпе илемлĕ. Икĕ хĕрĕ те самаях хăюллă иккен. Вĕсем хăйсемпе пĕрле çур литр шур эрех те чиксе килнĕ. Иван Васильевич вара çул çине илнĕ апат-çимĕçне сĕтел çине кăларса хучĕ, вакунсем тăрăх тĕрлĕ эрех-сăра, пылак çимĕç, пирус-сигарет сутса çӳрекен официантран тата тепĕр литр эрех илчĕ. Пуçланчĕ вара асар-писер ĕçкĕ! Малтанах хĕрсем хăйсене сăпайлă тыткаларĕç-ха. Анчах пĕр-ик черкке хыççăн чиперккесем пачах вăтанма пăрахрĕç. Иккĕшĕ те ик енчен пырса ларса купе хуçине хывăнтара пуçларĕç. Арçын, паллах, хирĕçлесшĕн пулчĕ, анчах Эля унăн çăварне хăйĕн писевлĕ тутипе хупларĕ. Тепĕр самантран Венера Иван Васильевич çăварĕ патне тăп-тулли эрех кĕленчи илсе пычĕ.

— Ну! Кăтарт ху мĕнле арçын пулнине. Яр кĕленчеренех!

Ӳсĕрĕлме ĕлкĕреймен Иван Васильевич çакă пĕтĕмпех ырăпа иртес çуккине чĕрипе туйрĕ. Анчах хĕрсене хирĕçлеме унăн вăй тупăнмарĕ. Çак çур литра пĕр сывлăш çаврăмĕпе ĕçсе ямасан арçын чысне çухатассăн пек туйăнчĕши ăна? Кам пĕлет? Анчах вăл кула-кулах кĕленчене алла илчĕ. Пĕрремĕш тумламне çăвара ярсан вара текех чарăнаймарĕ. Хĕрсем кĕленчене сывлăш çавăрса яма та çăвартан кăларттармарĕç. Пĕр ăстрăмпах пушатрĕ вăл çур литр эрехе. Юлашки тумламне çăтса ярсан вара тăруках ӳсĕрĕлсе кайрĕ те тăнне çухатса йăванчĕ. Мĕскĕн Иван Васильевич! Хăйĕн чипер хăнисем унăн кĕсйинчи пĕтĕм укçи-тенкине, чăматанĕнчи парне тесе илнĕ хаклă япалисене илсе кайнине те сисмерĕ.

— Чипер юл, айван, — ăнăçлă сунар пулнишĕн савăнса ахăлтатрĕç чипер майрасем. Юлашкинчен «сунарçăсем» сĕтел çинчи уçман эрех кĕленчине те пуçтарса чикрĕç.

## 2

— Пассажир юлташ! Пассажир, сирĕн станцине çывхарса пыратпăр. Анса юлма хатĕрленĕр.

Иван Васильевич вырăн çинчен аран-аран çĕкленчĕ.

Çан-çурăмĕ вут пуленки пекех хытса кайнă. Шыçса хăпарнă куçне уçма та йывăр. Мĕн мурĕ пулнă-ши? Пуç кĕрхи çил пек улать. Иван Васильевич мĕн пулнине аса илме тăрăшрĕ. Чипер майра... Эля... Ун тусĕ Венера... пылак тутасем... хаяр эрех... Ăçта-ха унăн хăнисем? Арçын пушă купене пăхса çаврăнчĕ те тĕлĕннипе хытса ларчĕ. Йĕри-тавра ун япалисем сапаланса выртаççĕ. Сăран тиртен çĕленĕ чăматанĕ вара ниçта та курăнмасть. «Çаратрĕç!» — вĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Иван Васильевич хурах кăшкăрма хатĕрччĕ, анчах хăйне вăхăтра тытса чарчĕ. Кам ĕненĕ ăна? Хăв япалусене хăв ĕçсе янă тейĕç кăна. Ĕнентерсе те параймăн. Шыçса тухнă куç, сĕтел çинчи ĕçкĕ юлашкийĕ — йăлтах урăххине ĕнентереççĕ. «Эх, ăс кĕмен тăмана, — хăйне хăй вăрçрĕ Иван Васильевич. — Чипер майра курнипех пуçна çухатнă. Айван-çке, айван!» Çапла мăкăртата-мăкăртата арçын купен пур кĕтессинче те сапаланса выртакан япаласене хутаçа пуçтарса чикрĕ, кивĕ, лӳчĕркенсе пĕтнĕ пиншакне тăхăнса ячĕ те тамбура тухрĕ. Хăйне юлашки йĕм таранах çаратса кайнине çаплипех ĕненес килмерĕ унăн. Çакă пĕтĕмпех хаяр шӳт, усал тĕлĕк пек çеç туйăнчĕ. Ытла айванла çакланчĕ-çке вăл. Иван Васильевич тăван яла çĕнтерӳçĕ пек мăнаçлăн пырса кĕресшĕнччĕ. Халĕ вăл çĕнтерӳçĕ мар, çумăр айне лекнĕ чăх чĕппи пек ытларах курăнать. Капла яла пырса кĕнинчен кĕменни лайăхрах. Анчах ăçта вырнаçĕ Иван Васильевич ют хулара? Ни пĕлĕшсем, ни тăвансем çук. Хăна çуртне вырнаçма кĕсье тĕпĕ яка. Çитменнине, пуйăс та станцине çур çĕр иртсен пĕр сехетре çитет. Çĕр каçмалли пĕртен-пĕр вырăн та вокзал кăна. Хытă сак çинчех çĕр çĕрлеме тивет.

Çак шухăшсемпе анса юлчĕ пуйăс çинчен Иван Васильевич. Анчах шутланă пек пулмарĕ. Пĕчĕк вокзал алăкне питĕрнĕ иккен. Пуйăс вырăнтан хускалса кайсанах арçын перрон çинче пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ. Ăçта каймалла? Инкеке, мухмăрĕ те минутсерен вăйланса пырать. Çак самантра аптраса çитнĕ Иван Васильевич нимĕн çинчен шухăшлама та, пĕр ытлашши хускану тума та пултараймарĕ. Вăл пуçĕ айне тумтир çыххине хучĕ те перрон çинчи вăрăм сак çинех выртрĕ.

Те тĕлĕрсе, те çывăрсах кайнăччĕ ĕнтĕ Иван Васильевич, такам силленипе вăранчĕ.

— Эх, çав хальхи çамрăксене! — такамăн хулăн сасси кĕчĕ унăн хăлхине. — Хăйсене пĕртте уямаççĕ-çке. Капла шăнса пăсăласси те ним мар. Тăр. Тăр, ывăлăм.

Иван Васильевич хăйне ирĕксĕрлесе çĕкленсе ларчĕ. Вăл ыйхăран вăратнăшăн кăмăлсăрланчĕ. Ăна тăратнă çын лутра кĕлеткеллĕ, сарлака çан-çурăмлă, вăрăм шурă сухаллă мучи пулчĕ.

— Апла выртсассăн каçхи патруль те тытса кайĕ тата, — хăй сăмахне малалла каларĕ çакскер. — Айта çĕклен, киле кай.

— Эпĕ пуйăс çинчен анса юлнă-ха. Ку хулара пĕлĕшсем çук.

— Ăçта кайма тухнă вара?

— Тăван çĕршыва. Чăваш ене.

— Эсĕ чăваш-им?

— Çапла.

— Ак тата. Ман юратнă кинĕм те чăваш хĕрĕ вĕт! Ун ентешĕсем — ман ентешсем. Каяр ман пата.

— Сире чăрмантарасси-ха.

— Мĕн чăрмантарни! Эпĕ пурпĕрех ĕç вĕçлесе киле кайма тухнă, айта. Мана Степан Иваныч тесе чĕнеççĕ.

— Иван Васильевич... Иван.

## 3

Тăван килтен инçетре хăвăн ентешне тĕл пулма тӳр килни ялан уявпа пĕрех. Ăçта та пулсан чăваш хĕрĕ çинчен илтсен вара Иванăн чĕри уйрăмах хытă тапа пуçлать. Çав хĕрпе курса калаçмасăр та лăпланаймасть ун пек чух каччă. Кашнинчех ăна çак хĕр Валя пулассăн туйăнать. Халĕ те, вокзалта ăнсăртран паллашнă мучи хыççăн утнă май, Ивана таçта çывăхра хăйне Валя кĕтнĕнех туйăнчĕ. Чĕри те кашни утăм тумассерен вăйлăрах шаккарĕ. Кăкăртан тухса тарас пек.

— Çитрĕмĕр! — лутра йывăç çурт умĕнче тăп чарăнчĕ Степан Иваныч. — Ирт, — пĕчĕк калинккене уçса Ивана валли çул турĕ мучи.

Халиччен пĕлмен туйăм Иванăн ал-урине çыхлантарчĕ. Алăк урати урлă аран каçрĕ вăл. Унта та пулин такăнчĕ.

— Çутă çут. Çутмалли стена çинче, сылтăмра.

Чăлт çутăлса кайрĕ лампочка. Тĕттĕм урамран кĕнĕ çынсен куçĕсем самантлăха пачах курми пулчĕç. Çутта хăнăхса çитсен Иван куçĕ умне Степан Иваныч пӳрчĕн ăш-чикĕ туллин тухса тăчĕ. Пур çĕрте те типтерлĕх. Таса. Кашни кĕтесрех ку çуртра хĕрарăм алли пурри лайăх курăнать. Тĕреллĕ шап-шур чӳрече каррисем, таса пит шăлли, типтерлĕ пуçтарнă тĕпел кукри. Анчах çак çуртри кашни япала кунта пĕр тăлăх чун кăна пурăннине ытла та лайăх палăртать. Пĕртен-пĕр ансăр кравать, тĕпелте — сĕтелпе пĕр пукан. Пĕр ытлашши япала та çук. Пӳртри сывлăш та темĕнле тунсăхлă.

— Пĕччен эпĕ, — те Иван шухăшне вуларĕ, те ахаль çеç каларĕ мучи. — Ывăлăмпа кинĕме çĕнĕ микрорайонта хваттер панă. Мана та чĕнеççĕ-ха хăйсем патне. Анчах хам ĕмĕре ĕмĕрленĕ вырăнтан мĕнле таçти юта каяс? Килĕшмерĕм хам çурта сутса вĕсем патне куçма.

— Пĕччен пулсан та типтерлĕ сан кунта.

— Типтерлĕхне кинĕм тăвать. Ĕçе кайиччен е ĕç хыççăн кĕрсе пуçтарса, тасатса хăварать. Ӳркенмест ман кинĕм. Инçетерех пулин те, час-часах ман пата кĕрсе тухать.

Тахăш самантра сĕтел çине пуçтарчĕ вашават Степан Иваныч.

— Ытла пуянах мар та, мĕн пуррипе çырлахма тивет, — сĕтел хушшине чĕнчĕ мучи. — Мухмăра ирттерме кĕленче тĕпĕнче кăшт юлнă ак.

Хăй мĕнле выçă пулнине тинех туйса илчĕ Иван. Хирĕçлемесĕр сĕтел хушшине вырнаçрĕ те апат çинĕ май Степан Иваныч калаçăвне итлерĕ. Мучи вара калаçрĕ те калаçрĕ. Степан Иваныч сăн-пичĕпе, кĕлеткипе çамрăк курăнать пулсан та, çулĕсем чылай иккен унăн. Кăçал тăххăрмĕш теçетке вакланă. Ик вăрçăра пулнă вăл, çичĕ хутчен аманнă. Алă пилĕк çул хушши депора пăравус юсанă. Халĕ те, тахçанах пенсире пулнине пăхмасăрах, ватă рабочи хăй ĕçне пăрахмасть. Çамрăксене ĕçе вĕрентет.

— Эх, эпĕ те çав, ватсупнă! Хăнана сăмахпа тăрантаратăп. Санăн вара выртса канас та килет пулĕ, — Иван анасланине асăрхаса каларĕ мучи. — Вырнаç кравать çине.

— Çук, çук. Эпĕ сак çинче те лайăх çĕр каçатăп.

— Эсĕ манăн хăна. Эпĕ килте хам валли вырăн тупатăп.

Ăçта эсĕ, Валя? Ăçта? Çутта сӳнтерсен те чылай вăхăт хушши çывăрса каяймарĕ Иван. Çак ыйтăва вăл хăйне юлашки сакăр çул хушшинче сахалтан та пин хут панă. Анчах хуравне тупайман. Халĕ те пĕлмест ăна вăл. Тупĕ-ши Иван хăçан та пулсан çак хурава? Тĕл пулĕ-ши Вальăна?

...— Кураймастăп! Кураймастăп!

— Валя! Ирĕк пар ăнлантарса пама.

— Мĕн ăнлантарасшăн эсĕ, Ваня? Ху мĕнле выльăх пулнине-и?

— Пулам эп выльăх. Эп айăплă. Анчах эпĕ унăн пĕрремĕш те юлашки те мар. Ăна эп ирĕксĕрлемен.

— Ку пачах та сан айăпна çăмăллатмасть. Хĕр пĕрре йăнăшни сана унран кулма нимĕнле ирĕк те памасть.

— Каçар, Валя! Каçар! Юрататăп эпĕ сана.

— Юрататăп тетĕн. Анчах эпĕ те çĕр çине хĕр пулса килнĕ. Эпĕ те хĕрарăм пулăп. Паян Нина урлă каçнă пекех, хăçан та пулсан эсĕ ман çинче те пушмакна тасатăн. Чăх кайăк мар, хĕрарăм çын мар тесшĕн-и эсĕ мана? Манăн вара, ытти хĕрсенни, хĕрарăмсенни пекех, мăнаçлăхăм, хамăн чунăм пур. Эпĕ те санпа шай çынах.

— Каçар! Чĕркуçленсе ларса каçару ыйтам-и тата?

— Мĕне кирлĕ мана эс чĕркуçленни? Мĕне кирлĕ сана эп каçарни? Сана Нина, унăн пулас ачи — санăн ачу — каçарĕ-и? Эпĕ вара сана кураймастăп! Çакăн пек ирсĕр, хура чунлă çынна юратма пултарнишĕн хама кураймастăп! Курахмастăп!

## 4

«Курахмастăп... Курахмастăп...» Çаплипех янăрарĕ хăлхара. Тĕлĕк-ши ку е чăн? Акă вăл — Валя. Куç умĕнчех. Анчах паян унăн пичĕ хаяр мар, вăл ăшшăн кулать. Ирхи хĕвел ун куллине татах та ăшăрах тăвать. Савăнăçпа çиçет сăн-пичĕ. Илемлĕ куçĕ кăна ытла та тунсăх. Темĕнле ырату, пăлхану, пысăк тунсăх вĕсенче.

— Ырă ир пултăр. Аван-и, Ваня?

«Çывăратăп-и эпĕ?» — вĕлтлетрĕ пуçра шухăш.

— Палламалла марах ватăлтăм-ши вара? Е ыйхунтан вăранса çитеймерĕн-и? Эпĕ ку. Валя. Мĕн усала курнă пекех хытса кайрăн?

— Валя... — кăшкăрса е пăшăлтатса çеç каларĕ-ши çакна Иван, анчах хăй сăмахне вăл илтмерĕ. — Валь! Ăçтан? Мĕнле?

— Хам пăятама Степан Иваныча кĕрсе курас терĕм. Эсĕ вара кунта мĕнле çилпе килсе тухнă?

Иван тăрса тумланчĕ. Тăхăннă вăхăтра вăл çул çинче хăйпе пулса иртнĕ пăтăрмах çинчен кĕскен каласа пачĕ. Паллах, пурне те каламарĕ Иван. Нумай япала çинчен асăнмасăр хăварчĕ. Ун калавне итленĕ май Валя чупа-чупа тенĕ пекех ирхи апат хатĕрлерĕ.

Иван Вальăна юлашки хут курнăранпа сакăр çул иртнĕ. Мĕн чухлĕ вăхăт! Мĕн чухлĕ... Валя çак сакăр çул хушшинче самаях улшăннă. Çав вăхăтрах пачах та улшăнман. Хĕр чухнех тулли кĕлеткеллĕччĕ вăл. Халĕ вара татах та сарăлнă. Çавăнпах пулĕ çӳллĕшĕпе те пĕчĕкрех курăнать. Çакна пăхмасăрах Валя хăйĕн илемне çухатман. Яланхиллех типтерлĕ вăрăм çӳçне ĕнсе çине пуçтарнă. Паян Валя тата та илемлĕрех. Анчах ку ĕнтĕ текех хĕр илемĕ мар, хĕрарăм илемĕ. Чун кăмăлĕпе вара ним чухлĕ те улшăнман курăнать. Вашават, ĕçчен те çепĕç.

— Мĕншĕн шăплантăн? — Иван паçăртанпах сăмах чĕнменнине кура çеç сас пачĕ Валя.

— Сан çине пăхатăп ак. Санпа киленетĕп. Илемлĕ эсĕ, Валя.

— Мĕн илемĕ ĕнтĕ текех.

— Çук, çук. Эсĕ питĕ илемлĕ.

— Ай, Ваня, тем ан калаç. Питĕме ахаль ан хĕрет. Акă ларса апатлан. Степан Иваныч ирех ĕçе тухса кайрĕ. Манăн та васкамалла. Хальлĕхе чипер юл.

— Чим, тăхта!

Анчах Валя пӳлĕмрен хăвăрт тухса кайрĕ. Чăннипех те васкать пулас вăл. Е Иванран хăвăртрах уйрăласшăн пулчĕ.

Валя, Валентина. Тухса кайрĕ те вăл — пӳртре те тĕксĕмленчĕ. Пĕр минут каялла кăна, хĕрарăм тĕпелте кăштăртатнă чух, пĕтĕм пӳрт хаваслă та пуянччĕ. Халĕ вăл каллех чухăнланчĕ, салху сăн çапрĕ ăна.

Тунсăх туйăмĕ арçын чĕринче те вăйланчĕ. Халĕ тин Иван нумай çул каялла пĕр хăй айванлăхне пула мĕн

çухатнине пĕтĕм ăс-тăнĕпе ăнланса илчĕ. Пурнăç тĕрекне, чун хаваслăхне, пĕрремĕш юратăвне... Пĕтĕмпех çухатнă вăл. Анчах, тен, яланлăхах мар. Çак сакăр çул вĕсен туйăм çирĕплĕхне тĕрĕслени кăна пулмарĕ-ши? Тен, паянхи тĕлпулу та ăнсăртран мар. Шăпа ку. Тен, пĕтĕмпех каялла тавăрма та кая юлман? Тен, Валя... паян та юратать?

## 5

Пӳртрен вĕçнĕ пек тухрĕ те Валя — чарăнчĕ. Ирхине яланах лăк тулли пулакан пăчă троллейбуса пĕртте ларас килмерĕ. Смена пуçланиччен вăхăт чылай. Çуран та çитĕ.

Мĕншĕн ытла хăвăрт тапать чĕре? Ăçта васкать вăл? Мĕнрен тарать? Хăй мĕншĕнех çапла пăлханса кайнине Валя пит лайăх пĕлет. Çапах тĕлĕнет. Шутламанччĕ хĕрарăм тĕлпулу çапла çитессе. Хăйĕн туйăмĕ вилнĕ, лере, таçта инçетре, юлнă тесе пурăнатчĕ вăл. Çук иккен. Пĕтĕмпех мар.

Ваня... Вальăн пĕрремĕш юратăвĕ. Вунултă çулта юратса пăрахрĕ вăл пуçтах Ваньăна. Е çук? Калама пулать-и вара çак сехетрен, çак минутран эпĕ сана юрататăп теме? Юрату ерипен тĕвĕленет. Сехетсерен, минутсерен вăйланать, çирĕпленет. Валя та Ваньăна ачаран кăмăлланă. Юрату мĕнне пĕлмесĕр, ыт ахаль кăна. Кайран вара килĕштерӳ туйăмĕ юратăва куçнă. Анчах хăш самантра? Кам пĕлет?

...— Ваня хăвалать! Ваня тытать!

Пĕр çĕре пуçтарăннă ача-пăча чăл-пар саланчĕ. Кашниех Ваньăран аяккарах чупса кайма тăрăшрĕ. Валя та ыттисемпе пĕрлех айккинелле тапса сикрĕ. Анчах ытла вăйлах мар, Ваньăран чи аякра тăрать-çке вăл. Арçын ача, паллах, ăна хăвалас çук. Унран япăх чупакансем те чылай.

— Валя, тар! — кăшкăрчĕ хыçран такам.

Шăп та лăп ик утăмра Ваня тăрать. Хĕр ача çиçĕм пекех вырăнтан хускалчĕ. Анчах ăнăçсăр. Урлă выртакан патакран çакланчĕ те хырăм çине шаплатрĕ. Хыçранах пыракан Ваня вара Вальăран такăнчĕ. Те юриех, те ăнсăртран хĕр ача çине ӳкрĕ.

— Эпир ура хурса ӳкерме калаҫса килӗшмен, — хӑлха ҫумӗнчех илтӗнчӗ Ваня сасси.

— Тӑр! Мӗн ҫаплипех выртатӑн?

Ваня шӳтле-шӳтле ура ҫине ҫӗкленчӗ. Ҫапах хӗр ача ҫумӗнчен пӑрӑнса кайма васкамарӗ.

— Пулӑшам-и? — аллине тӑсрӗ вӑл.

Валя ун аллине асӑрхаман пек пулса хӑех тӑрса ларчӗ. Самаях хытӑ ӳкнӗ иккен вӑл. Чӗркуҫҫи ҫинче чылай пысӑк суран. Юнӗ те юхать.

— Ай-уй, эсӗ аманнӑ! Хур шӑнӑр курӑкӗ, — тахӑш самантра сиплӗ курӑк тупса татрӗ Ваня. — Хур, хур. Атту уксах уралла хӗр пулӑн та, хамӑнах качча илме тивӗ.

Валя хӑйӗн суранӗ чӑтма ҫук ыратнине туйса илчӗ. Ӳлесе макӑрма та хатӗрччӗ вӑл. Анчах Ваньӑн шӳчӗ, кӑмӑллӑ сасси хӗр ачашӑн эмелтен те сиплӗрех пулчӗҫ. Ыратнине пӑхмасӑрах Валя та шӳтлеме пӑхрӗ.

— Халь авланма тивет ӗнтӗ. Тиветех.

## 6

— Валентина. Семеновна-а! Мӗн эсӗ паян пӗрре те хӑв пек мар? Чӗнсен те илтместӗн. Калаҫсан — итлеместӗн.

— Э-э, — Валя пуҫне ҫӗклерӗ. Ӑна хӑйпе пӗр бригадӑра ӗҫлекен Надя тусӗ чӗнет иккен. — Каҫар. Шухӑша кайрӑм та...

— Мӗн ҫинчен кунӗпех шухӑшлатӑн вара? Вӑрттӑн савни тупса ятӑн-им?

Валя хӑйӗн тусӗ ытла та тӗл лектернинчен тӗлӗнчӗ. Унӑн вӑрттӑн шухӑшӗсене вулать тейӗн.

— Мӗн савниййӗ ӗнтӗ пирӗн текех, — тӳрех хирӗҫлеме васкарӗ вӑл. — Иртрӗҫ пулӗ пирӗн вӑхӑтсем.

— Ах тур! Ак ҫитмӗл ҫулхи карчӑк тӑрать. Валя! Эсӗ хӑҫан юлашки хут тӗкӗр ҫине пӑхнӑ? Эсӗ халь... Эпир халь санпа чи сӗткен ҫырласем.

«Эсӗ питӗ илемлӗ, — янӑрарӗ ҫак вӑхӑтра Вальӑн хӑлхинче. — Илемлӗ! илемлӗ...» Вӑл каллех хӑйӗн ӗҫӗ ҫинчен те, Надя тусӗ ҫинчен те манчӗ. Асаилӳпе ӗмӗт ӑна таҫта инҫете-инҫете илсе кайрӗ.

— Валь! Смена вӗҫленчӗ. Эсӗ ҫӗрӗпех ӗҫлесшӗн мар-и тата?

Пурте киле кайма пуҫтараннă иккен. Пĕр Валя ҫеҫ ĕҫ тумĕпе. Хăй ҫапла сўрĕк пулнăшăн аванмарланчĕ хĕрарăм.

— Эпĕ ку ҫурта паянах комисси аллине парасшăн, — хăйне хăй шўтпе тўрре кăларма пăхрĕ Валя.

Бригадăри хĕрарăмсем пĕр харăс кулса ячĕҫ.

— Капла сана валли материал ҫитерейменĕпĕр. Хĕрхен эс пире, — шўт ҫине шўтпе хуравларĕҫ вĕсем. — Айта каяр. Ыран валли ĕҫ хăвар.

Пĕрле ĕҫлекенсенчен юлас мар тесе вăйлах хыпаланчĕ пулин те, Валя стройкăран чи юлашкинчен тухрĕ. Халь тин хĕрарăм хăйĕн хăвăртрах киле чупмалли ҫинчен шутласа илчĕ. Ҫула май унăн лавккана апат-ҫимĕҫ, виҫĕ ҫулхи ывăлне садикран кĕрсе илме ĕлкĕрмелле. Валя тинех пылак ĕмĕт пĕлĕчĕсемпе сывпуллашса ҫĕр ҫине анчĕ. Вăл тăруках хăй ҫемьеллĕ пулнине аса илчĕ. Намăс. Мĕнле намăс! Уйрăмах Валя хăйĕн упăшки Валера, пĕчĕк Ванька ывăлĕ ҫинчен ҫапла ҫăмăллăн манма пултарнишĕн намăсланчĕ. Мĕнле манма пултарнă вăл вĕсем ҫинчен? Мĕнле?

Валя ҫичĕ ҫул каялла качча тухрĕ. Унăн упăшки Валера вĕсен ялне ферма ҫурчĕ тума килнĕччĕ. Вăл качча юратса кайман. Юратуран тарса тесен тĕрĕсрех те пулать. Мĕн юратăвĕ пулма пултарнă вĕсен хушшинче? Платниксен бригади ялта ҫичĕ уйăх пурăнчĕ. Ҫак вăхăт хушшинче Валерăпа Валя пĕр-пĕрне виҫĕ хут та курман пулĕ. Ыррăн пĕрре те калаҫман. Ун чухне Валя Ваньăпа ҫўренĕ. Ҫапах та Валера качча кайма ыйтсан пĕр иккĕленмесĕр килĕшрĕ. Шăпах ҫак вăхăтра вĕсем Ваньăпа иккĕшĕ хытă вăрҫăнчĕҫ. Нина ун савнинчен ача кĕтнине пĕлчĕ те, уйрăлчĕҫ. Вальăна ялта Ваньăпа, Нинăпа юнашар пурăнма питĕ йывăрччĕ. Ҫавăнпах васкаса качча тухрĕ. Килтисем чарнине те пăхмарĕ. Вăрттăн тухса тарнă пекех кайрĕ.

Паянхи кунччен Валя ҫапла качча тухнишĕн ўкĕнменччĕ. Паян та ўкĕнмест вăл. Валера лăпкă, ĕҫчен арҫын. Вальăран сакăр ҫул аслăрах пулнине пăхмасăрах пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе пурăнать мăшăр. Ҫителĕклĕ те тату пурăнаҫҫĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Пурте лайăх, пурте пур. Анчах... Ҫакна Валя паян уйрă-

мах аван туйса илчĕ. Анчах юрату çук. Качча тухнă чух Валя вăхăт иртнĕçемĕн юрату килĕ тесе шутларĕ. Йăнăшрĕ...

Килмерĕ... Паллах, хăнăхрĕ вăл Валерăна. Унтан ытла мар.

— Анне, мĕншĕн кая юлтăн? Пурне те илсе кайрĕç. Эпĕ пĕчченех.

Хăй шухăшĕпе пыракан Валя садик тĕлне çитнине те сисмен. Акă пĕчĕк Ванюша та хапха умĕнче кĕтет ăна.

— Ванюша! Ан кӳренсем ĕнтĕ аннӳне. Кăштах каярах юлтăм ак, — урăх нимĕн те калаймарĕ Валя ывăлне. Мĕн калайĕ вăл пĕчĕкскере? Мĕн ăнлантарса парайĕ? Хăй те нимĕн ăнланмасть.

— Манăн маттурсем те çитрĕç, — çапла кĕтсе илчĕ арăмĕпе ачине Валера. Вăл Вальăн тулли сумкисене илчĕ те пушатма кухньăна кайрĕ. — Паян пире ĕçрен иртерех ячĕç, — илтĕнчĕ кухньăран ун сасси. — Эпĕ каçхи апат та хатĕрлерĕм. Тӳрех апат çиме килĕр.

Вальăпа ывăлĕ хывăнса çăвăнчĕç те кухньăна кĕчĕç. Плита умĕнче тăракан упăшкине курсан Валя ăна тин çеç курнăн чарăнса тăчĕ. Темĕнле ачашлăх, ăшă хум килет ун енчен. Ăнлантарса пама йывăр çакна. Анчах Валя пĕрремĕш хут хăйĕн упăшки ăна мĕнле хытă юратнине туйса илчĕ. Сăмахсăр, чĕрипе ăнланчĕ.

Хĕрарăм чĕри юрату хумне тытакан чи сисĕмлĕ хатĕр-сенчен пĕри. Пĕр йăнăшсăр ĕçлет вăл. Юрату суккăр теççĕ. Анчах унăн чи çивĕч куçĕ вăл — чĕре.

— Тавах, Валера, — пĕрремĕш хут хăй пырса чуптурĕ Валя упăшкине. — Тав.

## 7

Кун хыççăн кун хăвăрт иртсе пычĕ. Ваня Степан Иваныч килĕнче пурăна пуçлани уйăх ытла ĕнтĕ. Вата мучи ăна вăхăтлăх ĕç тупма пулăшрĕ. Строителе вĕреннĕ Иван валли депора та ĕç тупăнчĕ. Кăмăла каякан ĕçех мар та — çапах юрать. Тепĕр тесен, арçынна ку пачах та пăшăрхантармарĕ. Çак кунсенче ир те, каç та Иван пĕр шухăшпа çеç пурăнчĕ.

Валя... Акă кам пăшăрхантарчĕ, асаплантарчĕ ăна. Уйăх ытла иртрĕ пулин те, чуна уçса пĕрре те калаçаймарĕç вĕсем. Валя унран тарса çӳрет тейĕн. Степан Иваныч патне çаплипех кашни кун кĕрсе çӳрет-ха вăл. Анчах Иванпа калаçасран кашнинчех пăрăнать. Ытларах ун калавне итлет, хăй çинчен вара пачах калаçмасть. Иван çамрăклăх кунĕсем, иккĕшĕн хушшинчи юрату çинчен калаçу пуçарма пăхсан сăлтав тупса пăрăнса утать.

Йăнăшрĕ курăнать Иван. Валя чĕринче юрату пачах юлман. Вилнĕ вăл, пĕр йĕрсĕр çухалнă. Анчах хĕрарăм куçĕнчи хĕлхем, Ваньăна курсан çуралакан хĕлхем, мĕне пĕлтерет? Вальăн тунсăхлă, салху сăнĕ тата?

Иккĕленӳпе паллăмарлăх кăшларĕ çак кунсенче Иван чĕрине. Вăл канăçне çухатрĕ. Апат çиме ларсан апачĕ анмарĕ, çывăрма выртсан ыйхи килмерĕ унăн.

Тата мĕн чухлĕ вăхăт çапла асапланнă пулĕччĕ ĕнтĕ Иван, анчах пĕррехинче хĕрарăм хăех сăмах пуçарчĕ.

Çак кун Валя Степан Иваныч патне ĕç хыççăн кĕчĕ. Вăл тӳрех тĕпелте кăштăртата пуçларĕ. Иван, яланхи пекех, унпа киленсе ларатчĕ.

— Ваня, — сасартăк калаçа пуçларĕ Валя. — Ваня, сана яла таврăнсан лайăхрах пулать. Эсĕ яла кайма тухнă вĕт.

— Хăвалатăн. Мĕншĕн?

— Ăнлан. Çапла сана та, мана та лайăх пулĕ. Иксĕмĕре те.

— Эсĕ мана хăвалатăн, анчах эпĕ сана юрататăп. Çаплипех юрататăп.

— Калаçар мар кун çинчен.

— Мĕншĕн? Эсĕ те мана юрататăн вĕт. Эсĕ те... Апла пулсан мĕншĕн таратăн? Манран тарса пытанăн. Мана хăваласа ярăн. Анчах хăвăнтан ăçта пытанăн? Юратуран мĕнле тарайăн?

— Ваня! Вань! Ваня, чарăн! Эпĕ çемьеллĕ çын. Манăн упăшкам, ывăлăм пур. Текех эп ирĕклĕ çын мар.

— Çемье, çемье!.. Юратусăр пурнăç... Мĕне тăрать вăл?

— Мĕн вăл юрату? Маншăн вăл — çемье. Упăшкам, ывăлăм... Степан Иваныч, юлашкинчен. Çакă вăл ман юрату...

— Эпĕ вара?

— Эсӗ... Эсӗ манӑн ҫамрӑклӑх. Хавасла ҫамрӑклӑх. Анчах яшлӑх кунӗсем иртсе кайрӗҫ. Текех каялла таврӑнмӗҫ. Эп паянхи кунпа пурӑнатӑп. Иртнипе мар. Паянхи кун вара маншӑн — Валера тата пӗчӗк Ванька. Вӗсем кӑна.

— Манӑн... Манӑн вара мӗн тӑвас?

— Таврӑн яла. Таврӑн Нина... ывӑлу патне. Эсӗ вӗсене кирлӗ. Сана — вӗсем. Пуринчен ытла ывӑлна кирлӗ эсӗ. Ачана ашшӗ кирлӗ... Кай. Телейлӗ пул.

## 8

Шак! шак! шаккаҫҫӗ кустӑрмасем чугун рельссене. Миҫе пин ҫухрӑм юлчӗ пуль хыҫра. Умра тата мӗн чухлӗ-ши?

Пурнӑҫ кустӑрми те ҫавнашкал. Чупать. Чупать хӑй йӗрӗпе. Эпир килетпӗр те каятпӑр. Кустӑрмасем ҫаплах чупаҫҫӗ. Ҫын ӗмӗрӗ ҫак ҫулӑн чи пӗчӗк пайӗ. Кам алӑ, кам тӑхӑр вунӑ ҫул пурӑнать.

Такама вара тата сахал пурӑнма пӳрнӗ.

«Эпӗ... Мана миҫе ҫул панӑ?» — хӑйӗнчен хӑй ыйтрӗ Иван. Акӑ вӑл чӗрӗк ӗмӗр хушши ҫӗр ҫинче пурӑнать. Ку нумай. Ҫителӗклӗ. Ҫав вӑхӑтрах питӗ сахал. Хыҫра ҫирӗм пилӗк ҫул. Умра вара? Тата ҫирӗм пиллӗк? Вӑтӑр? Хӗрӗх? Е ҫулталӑк кӑна? Сехет? Самант?

Тӗлӗнтермӗш япала вӑл пурнӑҫ. Пурӑнатӑн ҫапла. Пурӑнатӑн. Анчах умра хӑвна мӗн кӗтнине пӗлместӗн. Ӑҫта йӑнӑшрӑн? Ӑҫта ҫук?

Ачана ашшӗ кирлӗ. «Акӑ вӑл манӑн чи пысӑк йӑнӑш, — вӗлтлетрӗ шухӑш. — Пысӑк йӑнӑш». Иван Вальӑн юлашки сӑмахӗсене аса илчӗ. Халӗ ӑна вӗсенче тӗрӗслӗх тӗшши те пур пек туйӑнса кайрӗ. Анчах ача тесе юратман ҫынпа ҫемье ҫавӑрма... Ҫук. Иван ку йӑнӑша тумасть. Пӗрре тахӑнни те ҫителӗклӗ.

Урапасем чугун рельссене ҫаплах шаккарӗҫ. Чӳрече леш енче ялсемпе хуласем, тусемпе айлӑмсем вӗлтлете-вӗлтлете юлаҫҫӗ. Вӑрӑм та мӑнаҫлӑ пуйӑс хӑватлӑн малалла ӑнтӑлать. Такама уйрӑлу, такама тӗлпулу парнелеме васкать.

## Виççĕмĕш пайĕ

### 1

Кашни самантăн хăйĕн илемĕ, хăйĕн асамлăхĕ. Хăйĕн юмахĕ. Анчах кашниех хăй юмахне тупаймасть. Çавăнпах пулĕ кам хĕллене, кам çуллана юратать. Такама çур кунĕ кăмăла каять, теприне — кĕркунне. Кашни вăхăтăн хăйĕн илемĕ, хăйĕн пуянлăхĕ, хăйĕн сăрри. Кашни çулах вăл урăх. Кăшт та пулин урăхларах.

Нумай чухне эпир, хамăрăн кулленхи ĕçсем ăшне путнăскерсем, çакна асăрхамастпăр. Пирĕншĕн паян та ĕнерхи пекех, кăçал та пĕлтĕрхиллех.

Инçе çултан таврăнсан кăна çак улшăну ытла та витĕмлĕн курăнать. Эс пĕлекен, чуна çывăх паллăсем таçта çухалнă, саншăн ют сăрăсем çуралнă.

Станцирен яла çуран таврăнакан Иван та çакна тӳрех асăрхарĕ. Ачалăх, яшлăх кунĕсенче çак сукмакпа миçе пин хут утман пуль вăл. Кашни кукăр, кашни тĕмĕ, кашни чечек паллă пулнă. Халĕ вара? Халĕ кунта пĕтĕмпех улшăннă. Пĕтĕмпех мар пулсан та, ытла нумайăшĕ.

Ак çакăнта тахçан патвар та мăнаçлă ватă юман ларатчĕ. Паян ун вырăнне çĕре пуçланă тунката кăна юлнă. Кунта вара çамрăк хурăнсем ӳсетчĕç. Ĕнтĕ вĕсем те ĕлĕкхи мар. Ӳссе лапсăрккаланнă. Ку тĕмĕсем пачах та çукчĕ... Яштака вĕрене те ватăлнă, аялти турачĕсем хăрнă, хуçăлнă.

Çак вĕрене айĕнче Иван пĕр çĕр кăна тăман. Вальăпа иккĕшĕн юратнă вырăнĕччĕ вăл. Шăпах çакăнта хĕрпе каччă тупа тунă. Иван çав каç йывăç çине «Валя + Иван = юрату» тесе çырса хучĕ. Акă халĕ те пур вăл. Хуралнă, тĕксĕмленнĕ, çапах вулама пулать. Анчах халĕ ун сăмахĕсемпе юнашарах «Галя + Толя = любовь» тени курăнать. Ку сăмахсем хуралма ĕлкĕреймен-ха. Вĕсене тинтерех çырнă курăнать.

Кам вăл Галя? Кам вăл Толя? Иван пĕлмен, палламан çамрăксем. Мĕн чухлĕ пулĕ вĕсем халĕ ялта. Тахçан йĕпе сăмсасем çеç пулнă, халĕ вара каччăсемпе хĕрсем шутне кĕнĕскерсем.

Ав урам пуçĕнче пĕр ушкăн ача вылять. Тахçан Иван çара уран чупса çӳренĕ вырăнтах. Пачах палламан ачасем.

Иванăн киле мăн çулпа каймалла. Анчах вăл темшĕн ача-пăча пуçтараннă еннелле утрĕ. Арçын пырса çитнĕ çĕре туслă вылякан ачасем пĕр-пĕринпе çапăçса кайрĕç. Тĕрĕсрех каласан, пĕтĕм ушкăн пĕр пĕчĕк те имшер ачана тӳпке пуçларĕ.

— Иптешсем! Йышпа пĕрине тапăнма юрать-и вара? — вăрçам пек турĕ Иван ачасем тĕлне çитсен.

Ачасем чăл-пар саланчĕç. Анчах инçете мар. Леш имшеркки вара пĕчченех çĕр çинче выртса юлчĕ. Çулĕпе вăл пĕр ултă-çичĕ çулта.

Типтерлĕ те таса тăхăннă тесе калаймăн ăна. Вăрăм çӳçĕ, унтан-кунтан çĕтĕлнĕ кĕпипе йĕмĕ çинче пӳрне хулăнăш тусан, тăм, пылчăк. Алли те, пичĕ те хуп-хура. Апла пулин те ачан ӳт-пĕвĕнче кăвакарнă, суранланнă вырăнсем аван курăнаççĕ.

— Тăр, — аллине тăсрĕ Иван. Вăл ачана ура çине тăма пулăшасшăн пулчĕ. Лешĕ арçын çине пуçне çĕклесе пăхрĕ. Самант кăна. Вара ура çине çиçĕм пек хăвăрт сиксе тăчĕ те айккинелле тапса сикрĕ... Пĕр самант... Иван ачана мĕн пулнине ăнланаймарĕ.

— Эй, мĕн пулчĕ? — теме çеç ĕлкĕрчĕ вăл. — Кам ачи вара ку? — Паçăрхинчен çывăхарах пырса тăнă ачасем еннелле çаврăнчĕ арçын.

— Юхха Нина ывăлĕ, — терĕ ыттисенчен кăшт аслăрах курăнакан арçын ача. — Сергей.

— Вĕлтрен кайăкĕ! Вĕлтрен кайăкĕ! — пĕр харăс тенĕ пекех кăшкăрса ячĕç ыттисем.

Шап пырса лекрĕ Иван ĕнсине тăпра муклашки. Арçын пуçне пăрчĕ те Сергей куçне курчĕ. Вăл курайманлăхпа, хаяр курайманлăхпа, çиçрĕ.

## 2

Шап! пырса лекрĕ арçынна тĕллесе пенĕ тăпра муклашки. Сергей хăйĕн куçĕ шывланнине туйса илчĕ. Çук, ачасемпе çапăçнă чух суранланни ыратнăран мар, чунĕ кӳтсе килнĕрен, хĕссе ыратнăран макăрчĕ вăл. Ача пĕрре пăхсах хăй умĕнче ашшĕ тăнине ăнланчĕ. Акă мĕнлескер

иккен вăл! Нихăçан та курман, чун-чĕререн курайман, анчах юнпа тăван атте. Атте! Ача çак сăмаха персе ярасран хăрарĕ. Çак самантра унăн нихçанхинчен те вăйлăрах пулас килчĕ.

Сергее хĕвел тăруках сӳнессĕн, аслати хаяррăн кĕмсĕртетессĕн, çак çынна çĕр çăтассăн туйăнчĕ. Анчах хĕвелĕ те тĕксĕмленмерĕ, çĕр те пайланмарĕ. Арçын та ним пулман пекех ун умĕнче тăчĕ. Ача çиçĕм пек çак вырăнтан тапса сикрĕ. Хăйĕн юратнă кĕтесне, ял вĕçĕнчи кӳлĕ хĕррине, вĕçтерчĕ. Кунта вăл хăва хушшине кĕрсе ларчĕ те ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ.

Мĕн таранччен ларнă-ши Сергей çапла? Калама йывăр. Вăл пуçне çĕкленĕ чух анăçра юлашки хĕвел шевлисем вылятчĕç. Ача йĕре-йĕре çывăрсах кайнă ĕнтĕ.

Киле каймалла. Пĕчĕк Сергейĕн вара ниçта та каяс килмерĕ. Килĕнче ăна ӳсĕр амăшĕ кĕтнине аса илсен вăл çӳçенсе илчĕ. Анчах хырăмĕ выçăпа касăлса ыратни ăна килех хăваларĕ.

Сергей, яланхиллех, киле пахча витĕр кĕчĕ. Мĕн те пулин тупса çăвара хыпма ĕмĕтленчĕ. Килте пурпĕрех нимĕн те çимелли çук-çке. Пахчара та... Çуркунне акса хăварнă кишĕр йăранĕ çӳллĕ мăян ăшне путнă. Тепĕр тесен, вăл йăран çинче тахçанах пĕр кишĕр те çук. Кăшт тымарлана пуçласанах ăна ача тăпăлтара-тăпăлтара çисе янă.

Сергей ăмсанса кӳршĕ Кĕркури пиччесен пахчине пăхрĕ. Вĕсен унта темĕн те пур: кишĕрĕ, çарăкĕ, суханĕ... Анна аппа пахчара ĕçленĕ чух ачана кашниччех мĕн те пулин татса парать. Паян вăл та курăнмасть.

Çапла, выçă хырăма мĕнпе улталамаллине тупаймасăрах ача пӳрте кĕчĕ. Алкумĕнче ăна тахçанах манса кайнă шăршă тытса чарчĕ. Чăр-р! турĕ выçă хырăм. Сергей пӳрт алăкне шăппăн уçрĕ. Амăшĕ сĕтел хушшинче, ун еннелле çурăмпа ларать. Çывăрать пулас.

— Ăçта çӳретĕн кунĕпех? — çаврăнса пăхрĕ Нина.

Сергей ăçта тăнă çавăнтах хытса тăчĕ. Тĕлĕк-им ку? Амăшĕ çӳç-пуçне пуçтарнă, çĕнĕ тутăр çыхнă, илемлĕ çипуç тăхăннă. Ӳсĕр те мар курăнать.

— Ăçта çӳретĕн тетĕп? — тепĕр хут ыйтрĕ Нина. Ачи чĕнменнине кура ун патне тăрса пычĕ.

Сергее амăшĕ хĕнеме хатĕрленнĕн туйăнчĕ. Вăл пĕрик утăм каялла чакрĕ. Пўртрен тухса тарма хатĕрленчĕ. Анчах амăшĕ... Амăшĕ тăруках ун умне чĕркуçленсе ларчĕ те ăна хăй çумне чăмăртарĕ. Çакна кĕтмен Сергей сывлаймиех пулса ларчĕ.

— Эй, шуйттан çури евĕр хура-çке эсĕ! — ачана ытамĕнчен ямасăрах калаçрĕ Нина. — Юрать-и вара çапла? Эсĕ ман маттур ача вĕт. Айта çăвăн. Пĕрле апат ларса çийĕпĕр.

Нина ывăлне çăвăнма пулăшрĕ, таса тумтир тăхăнтартрĕ, суранĕсене эмеллерĕ. Сергей çаплипех пĕр сăмах та калаймарĕ. Амăшĕ сĕтел çине вĕри апат лартнине курсан вара ачан çăварĕ те уçăлса кайрĕ. Çапах чĕнеймерĕ.

Çак каç Сергей хăй пурнăçĕнче пĕрремĕш хут кăмака хыçĕнчи çĕтĕк-çурăк çинче мар, таса та çемçе вырăн çинче асамлă тĕлĕксем курса çывăрчĕ. Амăшĕ вара нумай вăхăт хушши ун кĕпе-йĕмне тасатрĕ, сапларĕ, çĕлерĕ.

## 3

Миçемĕш хут ĕнтĕ Иван хăйĕн ĕнсине сăтăрчĕ. Паçăр кăнтăрла имшеркке ача тăпра муклашкипе лектернĕ вырăнта халĕ те çунса тăнă пек. Паллах, Ивана ку туйăнчĕ кăна. Ĕнсерен лектерни мар канăçсăрлантарчĕ ăна. Ача куçĕ асран тухмарĕ. Мĕн чухлĕ курайманлăх, ырату вĕсенче. Нина ачи... Сергей... Иван ывăлĕ. Çапла, ку вăл Иван ывăлĕ, Арçын пачах иккĕленмерĕ. Çакна çирĕплетме мĕскĕн çине пĕрре пăхса илни те çителĕклĕ.

Куç умĕнче — нўрлĕ çĕр çинче выртакан имшер ача. Нина пачах пăхмасть иккен ăна. Çĕтĕк-çурăк тумтир, мунчала курман ал-ура, турапа хачă мĕнне пĕлмен пуç... Акă унăн ывăлĕ.

Иван тинех хăйĕн тата Нинăн айванлăхне пула кам асапланнине ăнланчĕ. Ку вăл Нина та, Иван та мар. Вĕсен çылăхĕшĕн çак айăпсăр чун, мĕскĕн ача, пĕчĕк Сергей асапланать. Мĕншĕн? Нумай чухне аслисен йăнăшĕсемшĕн ним айăпсăр ачасем нуша тўсеççĕ. Тĕрĕс-и ку?

Пĕлет-ши Сергей хăйĕн ашшĕ Иван пулнине? Паллах, пĕлет. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл ăна ĕнсерен шаплаттарчĕ. Ăнсăртран мар.

Кил картинче автан сас пачĕ. Тул çутăлса килет иккен.

Иванăн ыйхи вара çаплах килмерě. Халě унăн шухăшěсем Нина çине куçрěç. Курчě вăл ăна. Паçăр, киле таврăннă чух, урам варринче. Тӳрех паллаймарě Иван хěрарăма. Тӳррипе каласан, çак хěрěнкě хěрарăм кам пулнине те арçынна урампа иртсе пыракан Татюк инке каларě. Иван хăй паянхи Нинăна тем тусан та паллаяс çукчě. Улшăннă.

Пуçěпех улшăннă. Ку ěнтě Иван пěлекен типтерлě те йăваш, хаваслă та чипер хěр мар. Арçын умěнче типтерлěхпе тасалăх çинчен маннă, пурнăç хаваслăхне пěлмен, ытла та ир ватăлнă хěрарăм тăрать. Çӳç-пуçě арпашăннă, тахçан хаваслăхпа çиçнě илемлě куçě шыçса тěксěмленнě. Çакă куçра вăл тахçан пěлнě илемпе хěрӳлěх йěрě паян пачах курăнмасть.

Арçын Нинăна паллаймарě пулсан, хěрарăм вара Ивана тӳрех палларě. Çакна Иван унăн куçěнчи хěлхемрен ăнланчě. Те савăнăç, те курайманлăх хěлхемě пулчě ку. Ăна Иван пěлеймерě.

Автан татах та татах авăтрě. Арçын вара çаплах шухăш çăмхи вěçне çитеймерě. Мěн тумалла халě унăн? Яла таврăннă чух вăл çирěп шухăш тытнăччě. Анчах халě Иван иккěлене пуçларě. Мěн тумалла? Хăйěн йăнăшне мěнле тӳрлетмелле? Мěнле?

## 4

— Куштан Ваççа Иванě таврăннă теççě-им?

— Çапла. Ěнер хам куртăм.

— Ара, çав. Эп те куртăм. Анкартинчен. Ах, шукăль тăхăннă та çав.

— Мěн эсě, Вера кин? Шукăль тет тата. Кивě пиншакпа кăначчě-ха.

— Ара, çав. Ара... Нинине курсан мěнле хытса тăчě тата. Хěре хăй пăсрě те халь тěлěнет.

Ахальтен мар виç хěрарăм пěр пасар теççě иккен. Мěнле тěрěс сăмах! Çăл патне пухăннă ват кинемисем чакаксем пек чакаклатрěç. Анчах эпě вěсен сăмахне текех итлесе тăмарăм. Чěрем вăйлă тапнипе хăлха илтмиех пулчě пулас. Хăлхара Иван таврăннă тени çеç янăрарě.

Иван... Ваня... Вăл та çаврăнса çитрě иккен. Шăпа пуль

ку? Манăн шăпа. Юратăва çĕнĕрен чĕртме паракан самант. Мĕнле юратăва? Çакăн пек шухăш хам пуçра çурални мана кулăшла пек туйăнчĕ. Иванпа ман хушăра нихăçан та нимĕнле юрату пулман. Туслăх. Çапла, туслăх пулнă. Анчах юрату мар. Иван яланах Вальăна юратнă. Вальăран уйрăлсан вара каччă пĕр манпа кăна çӳремен. Вăл Нинăпа та, Ирăпа та, Соньăпа та тата мур пĕлет кампа вăхăт ирттернĕ. Эпĕ вара ăна юратнă. Яланах. Чĕререн, пĕтĕм чун-чĕререн. Юратнă та шаннă. Шаннă хăçан та пулсан Ваня мана асăрхасса. Халĕ... паян çакă вăхăт çитмерĕ-ши?

Мĕн терĕç-ха тата кинемисем? Нинăна курсан... Апла тĕл пулнă-ха. Мĕн çинчен калаçрĕç-ши? Вĕсен калаçмалли пурах. Яла таврăннă чух Ваня ывăлне курни аса килчĕ. Теме сиссе чĕре ыратса илчĕ. Çакă Иванăн хальлĕхе чăмăртанман çемье пур тенине пĕлтерчĕ-ши? Пĕлме çук. Анчах манăн Нина çинчен те, пĕчĕк Сергей çинчен те шутлас килмерĕ. Хамăн пуласлăхăм, хамăн телейĕм пăшăрхантарчĕ. Ваньăсăр эпĕ телейлĕ пулас çук. Апла пулсан мĕншĕн пăрăнмалла манăн хам телейрен?

Кунĕпех пуçăмра тĕрлĕ шухăш явăнчĕ. Ал-ура ĕç патне пымарĕ. Вун çиччĕри хĕр евĕрех хĕвел анасса кĕтрĕм. Иванпа курса калаçма ĕмĕтлентĕм.

Кĕтнĕ чух вăхăт хăвăрт иртмест. Анчах пурпĕрех ерипен те пулин шăвать. Эпĕ те каç пуласса кĕтсе илтĕм-илтĕмех. Ăçта каймалла? Ăçта тĕл пулăп эп Ивана? Ниçта кайма аптрамалла. Эй, тепĕр тесен... Уттарам урасем ăçта илсе кайнă çĕре. Урасем вара мана хурăн патне илсе çитерчĕç.

Никам та çук. Пĕчченех вырнаçрăм сак çине. Тĕрлĕ шухăш пуçа кĕрет. Пурин çинчен те, çав вăхăтрах ним çинчен те мар ман шухăшсем.

— Ырă каç, Елюк! Мĕншĕн пĕчченех ларатăн?

Мĕнле çывăх, анчах палламан хулăн сас. Пуçа çĕклерĕм.

— Ва-а-ня! Иван!

— Салам. Эсĕ те ялта иккен. Пурнăçсем мĕнле? Чиперленсе кайнă эсĕ, пăхатăп та.

— Мĕн эсĕ! Чиперленнĕ тет. Ватăлнă тесен тĕрĕсрех пулĕ. Эсĕ ак çирĕпленнĕ, арçын пулнă.

Çапла пĕр-ик сăмахпа перкелешсе илтĕмĕр те шăплантăмăр. Пирĕн калаçу вĕçленчĕ. Иван манпа юнашар вырнаçса ларчĕ те пирус чĕртсе ячĕ. Тем çинчен шухăша кайрĕ вăл. Тарăн шухăша. Эпĕ те сăмах чĕнмерĕм. Ун шухăшне татас темерĕм. Эпĕ Иван çак самантра манран, çак вырăнтан инçетре пулнине лайăх ăнлантăм. Пурпĕрех сăмах чĕнмерĕм. Ăна лайăхрах сăнама кăна тăрăшрăм. Хама çывăх, тахçан пĕлнĕ йĕрсене шырарăм. Тупаймарăм. Ытла та улшăннă Иван.

— Елюк, эпĕ авланас тетĕп, — тăруках калаçа пуçларĕ каччă.

— ?..

— Йышăнĕ-ши мана Сергей? — те манран, те хăйĕнчен ыйтрĕ Иван.

## 5

Сергей ашшĕ яла таврăннăранпа самаях вăхăт иртрĕ. Çак тапхăрта вăл кашни кун тенĕ пек Нина патне килсе кайрĕ. Малтан Сергей унран ютшăнчĕ. Хăй ăна мĕнле курайманнине пур япалара, кашни сăмахра кăтартма тăрăшрĕ. Каярахпа вара Сергей унсăр тунсăхла пуçларĕ. Кашнинчех вăл килессе чăтăмсăррăн кĕтрĕ.

Ашшĕ яла таврăннăранпа Сергей амăшĕ те чылай улшăнчĕ. Ача хăйĕн амăшĕ самаях хитре хĕрарăм пулнине курчĕ. Çӳç-пуçне пуçтарсан, илемлĕ çи-пуç тăхăнсан питĕ чипер иккен вăл.

Сергей ĕнтĕ таса тумтирпе, çĕнĕ пушмакпа çӳрет. Амăшĕ ăна кунне виçĕ хут вĕри апат пĕçерсе çитерет. Çакна хăнăхман ача малтан хăйне юмахри пек туйрĕ. Ырă тĕлĕкри пек. Çавăнпа та куçне уçсан çакă пĕтĕмпех çухалассăн хăрарĕ. Халĕ те, хăнăхрĕ пулсан та, кăшт шикленет.

Паян та Сергей хăйĕн ашшĕне кĕтет. Вĕсем пĕрле пулă тытма кайма калаçса татăлнă. Анчах ашшĕ темшĕн килме васкамасть-ха. Улталарĕ-ши вара? Ача ним тума аптранăран вăлтине тепĕр хут майлама тытăнчĕ. Паян çĕр хут та тĕрĕслерĕ пулĕ те, çапах...

— Эсĕ хатĕр мар-им-ха, Сергей? — кăмăллăн калаçрĕ ача çумне пырса тăнă Иван. — Пар-ха, хам пăхам вăлтуна.

— Хатĕр! Паçăрах хатĕр. Ăман тытса та хатĕрлерĕм.

— Маттур. Айта. Аннӳне кӗрсе кала та каяр.

Алран алӑ тытӑнса утрӗҫ Иванпа Сергей. Хаваслӑн та мӑнаҫлӑн, пуҫне ҫӳле ҫӗклесе пычӗ ача урам тӑрӑх. Хӑй пурнӑҫӗнче пӗрремӗш хут пӗчӗк Сергей урам тӑрӑх ҫаппа нимрен хӑрамасӑр, ниҫта васкамасӑр, лӑпкӑн утрӗ. Никам та хыҫран «вӗлтрен кайӑкӗ» тесе кӑшкӑрмарӗ. Урамри ачасем ӑна ӑмсанса пӑхса юлчӗҫ.

Нумай пӗлекен, таҫта та пулса курнӑ Иван пиччӗшне ача-пӑча тӳрех юратса пӑрахрӗ. Каҫса кайсах итлеҫҫӗ вӗсем ун калавӗсене. Кашниех Иван пиччӗшпе юнашартарах ларма тӑрӑшать. Анчах лешӗ кашнинчех Сергее ҫеҫ хӑйпе ҫумӑн лартать. Унпа ҫеҫ ҫапла урам тӑрӑх аллаллӑн тытса утать. Ҫавӑнпа ӑмсанаҫҫӗ те ӗнтӗ ачасем Сергее. Хисеплеҫҫӗ. Яланах мӑшкӑлласа ҫеҫ калаҫнӑ леш касри Андрей та халӗ Сергейпе сумлӑн калаҫать...

— Ҫитрӗмӗр. Меллӗрех вырӑн тупар. Ҫакӑнта эпӗ ача чух ак ҫакӑн пек карас тытнӑччӗ, — аллине чавса таран тытса кӑтартрӗ Иван.

— Эй-й! Ҫакӑн пысӑкӗшех мар пулӗ? Ытла пысӑк.

— Чӑнах та, ытла пысӑк. Кӑшт пӗчӗкрех пулас...

Арҫынпа ача пӗр харӑс кулса ячӗҫ. Иванӑн шӳчӗ питӗ вырӑнлӑ пулчӗ. Сергей кула-кула хӑй чӑнкӑ ҫыран патне питӗ ҫывӑха пынине те асӑрхаман. Ӑнсӑртран шуса кайрӗ те шыва ӳкрӗ. Ҫакӑ пӗтӗмпех питӗ хӑвӑрт пулса иртрӗ. Ача кӑшкӑрса яма та ӗлкӗреймерӗ. Ишме пӗлменскер тӳрех пӗве тӗпнелле кайрӗ. Ӑна сывлӑш ҫитмерӗ. Вӑл ҫӑварне уҫрӗ. Анчах сывлӑш вырӑнне ӳпкине шыв кайрӗ...

— Сергей! Ҫеруш! Ывӑлӑм... Мӗнле эс?

Сергей аран-аран куҫне уҫрӗ. Ун умӗнче чӗркуҫҫи ҫинче ашшӗ ларать. Ача сасартӑк хӑй халь тин вилӗм аллинчен хӑтӑлса тухнине ӑнланчӗ. Вӑл ашшӗне мӑйӗнчен ҫакӑнчӗ те макӑрса ячӗ.

— Ывӑлӑм! Ан макӑр. Эпир пӗрле. Манпа чухне нимрен те ан хӑра.

Сергейӗн ҫак самантра ашшӗне мӗнле вӑйлӑ юратни ҫинчен калас килчӗ. Анчах ача «атте» тенисӗр пуҫне урӑх ним калаймарӗ. Тепӗр тесен, Иван хӑех ывӑлӗ мӗн каласшӑн пулнине чухларӗ. Ӗнтӗ тин арҫын хӑй те ҫак пӗчӗк чуна мӗнле вӑйлӑ юратнине туйса илчӗ. Вӑл ывӑлне

хытăрах чăмăртарĕ, ăна йăпатасшăн пулчĕ. Анчах шăпах халĕ пур сăмах та ытлашши пулнине ăнланчĕ те нимĕн те каламарĕ.

## 6

Хура кĕркунне. Çут çанталăкăн чи тунсăх саманчĕ. Эпĕ яла таврăннă чух йĕри-тавра сип-симĕсчĕ, чечек-курăк ешеретчĕ. Тӳпере кайăксем чĕвĕлтететчĕç. Халĕ çакă пĕтĕмпех таçта çухалнă. Тунсăх... тунсăх кăна юлнă.

Чĕрере те тунсăх. Пĕччен килсе кĕтĕм тăван яла. Пĕрчченех тухса каятăп. Ăçта? Кăна хальлĕхе хам та пĕлместĕп. Телей шырама. Тĕнче аслă-çке. Таçта мана, пĕр мана кăна кĕтекен çын та пур пулĕ. Пирĕн вăхăт çитмен ĕнтĕ. Çавăнпа пĕр-пĕрне тĕл пулман ку таранччен.

Каллех тăван ялпа сывпуллашатăп. Манăн çак самантра тăван енĕн кашни кĕтесне, кашни тĕсне асра хăварас килет. Инçетри вăрман, тин кăна сухаласа пăрахнă анлă уй, çип пек тикĕс урамсем, тарăн вар, пĕчĕк çеç çур утрав... Ачаран пĕлнĕ, чĕрене çывăх, юратнă кĕтес.

Çапла эп чылайччен тăтăм. Каллех хамран хам таратăп иккен. Лере инçетре телей тупатăп тени те суя йăпану кăна. Анчах кунта та юлма пултараймастăп. Иванпа пĕр ялта пурăнма, ăна кашни кун курма, вăл урăххин пулнине пĕлсе тăма ытла та йывăр. Йывăр чĕрене кĕллентерекен, ăса пăтраштаракан юратупа кĕрешме. Çак юрату хама çунтарса яма пултарасси пăшăрхантармасть-ха мана. Эпĕ хам ăссăрлăха пула пĕчĕк Сергей шăпине пăсасран, ачан телейне аркатасран хăратăп.

Авă вĕсем. Виççĕн. Пĕр çемье. Икĕ мăн çын. Варринче ача. Çакă пуль вăл телей. Атте-анне çумĕнче пурăнма вĕренни. Атте те, анне те сана юратнине пĕлсе тăни.

*1994*

# ÇУР ÇĔР ХЫÇÇĂНХИ ШĂНКĂРАВ

## Пĕрремĕш пайĕ

### 1

Пĕт-пĕлтĕк! Пĕт-пĕлтĕк! — путене сассипе янăрарĕ алăк çумĕнчи шăнкăрав. Алăка уçма васкамарĕç. Пĕт-пĕлтĕк! Пĕт-пĕлтĕк!

— Салам. Мĕнле килме пĕлтĕн? — кăшт кӳренчĕк, кăшт йĕкĕлтеш саспа кĕтсе илчĕ килнĕ çынна хваттер хуçи.

— Ырă каç, Диана. Иртме юрать-ши?

— Ирт килтĕн пулсан.

Çӳллĕ те хытанка каччă кĕрсе тăчĕ. Аллинчи хĕп-хĕрлĕ, шултра кĕл чечек çыххине хĕр еннелле тăсрĕ, чуптуса илме пăхрĕ. Вăрт çаврăнса чакрĕ Диана. Чечекне те илмерĕ, чуптума та ирĕк памарĕ.

— Ирт килтĕн пулсан, — темле тунсăхлăн чĕнчĕ тепĕр хут каччăна. Çавăнтах йĕкĕлтесе те илчĕ: — Сашок, килти пек пул.

«Сашок» тени каччăна килĕшсех каймарĕ. Анчах вăл хăйĕн кăмăлсăрлăхне палăртмарĕ.

— Эсĕ çаплах мана кӳренсе çӳретĕн-и? — хĕр кăмăлне çавăрас тесе йăпăлти саспа ыйтрĕ каччă.

— Çаплах.

— Диана! Тен, çитет кутăнлашса.

— Кутăнлашса? Манăн санпа ĕç çук. Акă алăк — тух та ут.

Каччă чĕнмерĕ. Мĕнех калайăн сана тух та ут тенĕ чухне. Саша пурпĕрех тухса кайма васкамарĕ. Вăл кĕтрĕ. Мĕне? Хĕр кăмăлĕ çемçелессе, йăл-йăл кулса хăйне мăйран уртăнасса. Кăмăлсăр Диана хăй çумне вăйлăрах та вăйлăрах пăчăртанасса... Кĕтрĕ. Кун пек вăрçăнни вĕсен маларах та пулкаланă-çке. Вăрçăннă та мирлешнĕ. Мирлешнĕ те вăрçăннă.

— Диана! Тута тăсни сана пĕртте килĕшмест, — ĕнтĕ шӳтпе хĕр кăмăлне çавăрасшăн пулчĕ аптранă каччă.

— Килĕшмест тĕк килĕшмест. Каларăм-çке — сан ĕç çук. Тата мĕн каласшăн?

Мĕн каласшăн? Мĕнех калама пултарать Саша? Хĕрĕн

çилли вăрăм та çӳллĕ хӳме евĕрех пулчĕ. Пăрăнса иртме те, урлă каçма та, каласа ӳкĕте кĕртме те çук. Темĕнле аптăрав. Ăнăçсăр самант.

— Хăвалатăн пулсан каятăп. Пĕр кайсассăн урăх таврăнмастăп.

— Эп сана хăваламастăп, — кулас темен çĕртен кулса тинех кăшт çемçенрех сăмах хушрĕ хĕр. Анчах çав самантрах сиввĕн те типпĕн: — Чипер çӳре, — тесе хучĕ.

Саша текех сăмах чĕнмерĕ. Вăл лăпкăн, пĕр кӳренӳсĕр аллинчи кĕл чечек çыххине хăйпе хĕр хушшине сапаларĕ. «Чипер», — терĕ те тухса кайрĕ.

Каччă хăтланăвĕ Дианăна тĕлĕнтермерĕ те, кӳрентермерĕ те. Кӳренмелĕх те, тĕлĕнмелĕх те вăй юлмарĕ ĕнтĕ унăн. Чуна çунтарса кăларакан ырату ăна пĕтĕмпех вăйсăрлатрĕ. Ерипен, тĕлĕкри пек çăмăллăн шуса анчĕ хĕр урайнелле. Йĕплĕ кĕл чечек тунисем çинех чĕркуçленчĕ. Ӳте тирнине туйса йăнăшса, ĕсĕклесе ячĕ.

...Диана Сашăпа паллашнă кун нимĕнпе те палăрса тăмарĕ. Çулталăкри ытти виç çĕр утмăл пилĕк кун пекех хăвăрт иртсе кайрĕ. Иртсе кайрĕ, анчах хĕрĕн асне, чĕрине кĕрсе юлчĕ. Диана халĕ те ăна кашни çеккунчĕ тарах астăвать.

Çав кун кăнтăрлахи апата тухнă Диана хăйĕн тус-юлташĕсемпе пĕрле ĕç вырăнне таврăнма васкамарĕ. Паян иртенпех унăн халиччен çимен е тахçанах тутанса курман çимĕç астивес килчĕ. Çывăхри пĕчĕк пасарта кун пекки тупăнмарĕ. Çавăнпа хĕрĕн пĕчченех лавккана кайма тиврĕ. Чĕлхе Мускава илсе çитерет теççĕ пулсан, хырăм тени çĕр чăмăрĕ тавра та утса çаврăнтарать пулĕ. Диана та паян хăй шыракан çимĕçе илсе çимесĕр ĕç вырăнне таврăнас кăмăллă пулмарĕ. Телее, нумай шырамарĕ. Мĕн шырани лавкка умĕнче тупăнчĕ. Диана ют çĕршывра кăларакан тĕрлĕ çимĕçсене юратсах каймасть. Сайра хутра çеç туянать вăл вĕсене. Паян вара хĕр тӳрех ютран илсе килнĕ пылак пăр умĕнче чарăнса тăчĕ. Анчах хăшне туянмалла? Тем тĕрли те пур кунта. Тĕрлĕ тутăлли, тĕрлĕ тĕсли, тĕрлĕ хакли. Пăхса тăрсан-тăрсан пурпĕрех мар-и тесе «Казанова» ятлине суйласа илчĕ.

Тутлă çимĕç пĕрре çыртса илсенех кăмăла кайрĕ. Кашни тутанмассерен вара — ытларах та ытларах. Анчах те-

лей инкексĕр çӳремест пулас. Такам мурĕ Дианăна хыçалтан пырса çапăнчĕ те çăвар патне илсе пынă пылак пăр лач туса асфальт çине ӳкрĕ. Ӳлесе ярас килчĕ хĕрĕн. Тутине пĕлмелĕх те, тăранмалăх та çиеймерĕ-çке вăл.

— Çисе тăранайманнине çуласа тăранас çук, — сăмах чĕнчĕ Дианăна пырса çапăннă çамрăк каччă.

Диана ун çине сиввĕн пăхса илчĕ.

— Ан кӳренĕр. Эпĕ ăнсăртран, — çаплипех сăмахларĕ çакскер. — Акă манăнне илĕр. Эпĕ ăна уçман та-ха.

Диана çухалса каймарĕ. Параканран ил, çапаканран тар тенине асра тытса каччă тăсса пană çимĕçе пĕр тав сăмахĕсĕрех илчĕ.

Çапла тĕл пулчĕç Дианăпа Саша, çапла паллашрĕç.

## 2

Хĕвел шевли карса хунă чӳречерен сăрхăнса кĕрсе Диана пичĕ çине ӳкрĕ. Ыйхăран вăранса лăпкăн çеç выртакан хĕре ачашларĕ. Анчах Дианăн паян пĕртте шевлепе киленсе выртас килмерĕ. Кăмăлĕ пулмарĕ. Ним сăлтавсăр кăмăлĕ пулмарĕ. Ним сăлтавсăр... Çук, сăлтавĕ пур.

Диана лăпкăн выртрĕ. Анчах канлĕн мар. Хĕрĕн пачах та вырăн çинче йăваланса выртас килмерĕ. Тăрас кăмăлĕ те пулмарĕ.

Ĕнтĕ вăхăт та чылая кайнă. Тăмалла... Йывăррăн çĕкленчĕ Диана вырăн çинчен. Ним тĕллевсĕр хваттер тăрăх çӳрерĕ. Тĕпелтен алăк патне, алăкран — тĕпеле. Кирлĕ мар çĕртенех япаласене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна илеиле хучĕ. Çапла ним сăлтавсăрах кухньăна та темиçе хутчен кĕрсе тухрĕ. Кĕтесре ларакан холодильникран пуçланă эрех кĕленчи кăларчĕ. Пĕчĕк черккене тултарчĕ. Анчах çакă хĕре сахал пек туйăнчĕ курăнать. Вăл пушă стакан илчĕ, унта хĕррипе тан тенĕ пекех эрех ячĕ. Çакна Диана пĕтĕмпех васкамасăр, пĕр шухăшсăр хăтланчĕ. Çак ĕçе вăл мĕн çуралнăранпах туса пурăннă евĕр. Хăнăхнă йăлапа пурнăçланă пек.

Тулли стакана ӳпĕнтермелли кăна юлчĕ. Анчах Дианăна темĕскер чарса тăчĕ. Хĕр тăрукках стакан çийĕнче хаяррăн вăрçăнакан ӳсĕр хĕрарăмпа арçын, хăранипе кравать

айне пытаннă пĕчĕк ача ĕмĕлкисене курчĕ. Диана хăраса кайрĕ. Мĕн тăвать вăл? Мĕн хăтланать? Çак таранах вăйсăрланса кайрĕ-ши? Йўç шĕвек ун юлашки шанăçĕ-ши? Çук. Диана куçĕ умĕнчен пĕр-пĕрне мĕнле те пулин вăйлăрах ыраттарма тăрăшакан ўсĕрсен, çакна пĕтĕмпех пăхса ларакан ача сăнĕсем каймарĕç. Хăлхара усал сăмахсем, шăппăн-шăппăн ĕсĕклекен сасă янăрарĕ. Çук. Ку Диана шăпи мар. Унăн çак ыратăва чăтмалăх та, кунран пин хут вăйлăраххине тўсмелĕх те вăйĕ пур. Чун-хăват вăйĕ. Хĕр стакана сĕтел кĕтессине шутарса лартрĕ. Ваннăй пўлĕмĕ еннелле утрĕ. Анчах таврăнчĕ. Апăрша стаканне алла илчĕ. Çук, ĕçмерĕ вăл ăна. Ерипен каялла кĕленчене ячĕ те пĕр-пĕр кунра кирлĕ пулать тесе холодильника пуçтарса лартрĕ.

Хăйĕн ўт-пĕвĕпе чунне Диана вĕри шыв тултарнă пысăк ваннăра çеç вăйсăрланма ирĕк пачĕ. Мăй таранах шыва путса канлĕн выртрĕ...

Пĕт-пĕлтĕк! Пĕт-пĕлтĕк!

Диана ваннăйран тухнăччĕ те ĕнтĕ. Тĕкĕр умĕнче вăрăм çўçне типĕтсе тăратчĕ.

Пĕт-пĕлтĕк! Пĕт-пĕлтĕк!

— Эс тем, ку таранччен çывăрмастăн пулĕ те? — яланхи пекех хаваслă кулăпа, ырă кăмăлпа çитсе кĕчĕ Дианăн чи çывăх тусĕ Рая. — Э-э-э! Мунчи тутлă пулчĕ-и? Салам.

— Салам. Ирт.

Туссем пĕр-пĕрне пит çăмартинчен чуптуса сывлăх сунчĕç.

— Эсĕ тем, сўрĕк кăмăллă? — Диана хыççăн пўлĕме кĕнĕ май чĕвĕлтетрĕ Рая.

— Çук-çке. Ăçтан шутласа кăлартăн? — хăйĕн япăх кăмăлне кăтартас мар тесе тунчĕ Диана.

— Ак тамаша! Пăх та кур. Суясшăн тата. Куçу сутать вĕт, куçу.

Диана чунра мĕн пуррине Райăран пытарма пăхни усăсăр пулнине ăнланчĕ. Вăл тусĕн хулпуççийĕ çине пуçне хучĕ те пĕчĕк ача пекех куççульпе ĕсĕклесе ячĕ.

— Çаплах хытă кўрентерчĕç-и? Кам?

— Саша... Хăваласа ятăм эпĕ ăна.

— Тĕрĕс тунă. Таси паха. Вăл мана нихăçан та килĕшмен.

Нихăçан та килĕшмен. Килĕшмен... Дианăна килĕшнĕçке çав пуçтах Сашок. Питĕ килĕшнĕ. Мĕнле вăйлă килĕшнине пĕр Диана кăна пĕлет. Вăл анчах.

## 3

Иртенпех хула пасарĕ тăрăх çӳрекен Роберт самаях ывăнчĕ. Йӳнĕрех тавар тупасси, ăна хаклăрах хакпа вырнаçтарасси çăмăл ĕçех мар. Кирлĕ çынсемпе паллашасси, ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелесси те питех ĕшентерет. Анчах кĕсьере вак укçа шăнкăртатнисĕр пуçне хут укçа хулăнăшне те туяс тесен Робертăн кустăрмари пакша пекех кускалама тивет. Вăл кускалать те. Эрнере çичĕ кун, талăкра çирĕм тăватă сехет хушши кускалать.

Паян та Роберт ăçта кăна çитмерĕ-ши, кампа кăна каласмарĕ. Тĕлпулусем вара яланах ăнăçлă пулмаççĕ. Хăш чух каятăн, кĕтетĕн — усси çук. Ку тĕлĕшрен паянхи кун каччăшăн тухăçлă пулчĕ. Кама курас тенине курса калаçрĕ вăл, мĕн тăвас тенине турĕ. Услам тума та пултарчĕ. Çавăнпа кăмăлĕ те лайăх. Ара, енчĕк укçа тĕркипе тулса тăнине курма кам хавас ан пултăр.

— Эй-й! Хамăр ялсем! Мĕн палламасăрах иртетĕн? — Роберта çурăмран тĕртсе чĕнчĕ такам.

Каччă хыçалалла çаврăнчĕ. Ун умĕнче хăйĕн чи çывăх тусĕ Иван тăрать.

— О-о-о! Иван, иптеш ачи! Здорово! — салтака ыталаса илчĕ Роберт. — Хăçан таврăнтăн?

— Ĕнер çитрĕм. Паян яла каятăп.

— Ĕлкĕретĕн яла. Кĕтекен савнисем çук вĕт.

Савнисем çук тенине илтсессĕн Иванăн хавас куçĕ тĕксĕмленчĕ. Чатук Танине аса илчĕ ĕнтĕ вăл. Салтака кайсан тата виçĕ уйăхран хăйне манса урăххине качча тухнă савнине. Улшăнăва Роберт та асăрхарĕ. Хăй ытлашши персе янине ăнланчĕ вăл. Анчах каланă сăмах кайăк пек — вĕçсе тухсан тытаймастăн.

— Ĕлкĕретĕн яла. Эс таврăннине паллă тăвар. Пĕрре ресторанах кĕрсе ларар-ха.

— Ресторан тăрăх çӳреме укçи çукрах. Ак каплах, пĕрик кĕленче илсе паллă тăвăпăр.

— Айта-айта. Манăн пур.

— Пуян инке еткер хăварчĕ-им?

— Инке укçипе калаçмастăп. Эп хам укça çапатăп, — вĕçкĕн сасăпа хуравларĕ Роберт. Çавăнтах аванмарланса кайрĕ — салтакран таврăннă чух хăй те çерçи пекех çараччĕ-çке. — Суту-илӳпе аппаланатăп. Паян шăпах укça илтĕм.

— Каяр ара хăналатăн пулсан. Тепĕр чух манран тухать.

Хăналанмаллипех хăналанчĕç вара туссем. Те пилĕк çĕр, те улт çĕр тенкĕлĕх ĕçсе-çисе янă — шутламан. Çур çĕр çитеспе кăна тухрĕç ресторантан. Киле таксипе каяс-шăнччĕ, анчах ытла та ӳсĕрскерсене никам та лартасшăн пулмарĕ. Хăйсем тата вĕçĕмсĕр хăлаçланчĕç, тем юрлама пăхрĕç. Камах лартса кайтăр ĕнтĕ вĕсене? Урăлтаркăч машини пуçтарса кайсан кăна.

Малтан каччăсем пĕрлех утрĕç, анчах часах Иван таçта çухалса юлчĕ. Те кая юлчĕ ĕнтĕ вăл, те пĕр-пĕр тĕмескерен такăнса ӳкрĕ. Кăна Роберт пĕлмерĕ. Пĕлесех те килмерĕ. Вăл хăй те тĕттĕм тăкăрлăкра темиçе хут такăнса самаях вараланса пĕтрĕ.

— Мурсем! Çутă майлаштараймаççĕ вĕт, — усал сăмах-семпе ятлаçрĕ Роберт.

Пĕрре-иккĕ ӳксе тăнă хыççăн каччă самаях урăлчĕ. Утти те çирĕпленчĕ. Те утрĕ вăл, те пĕр вырăнтах тапăртатрĕ, анчах ытла та ерипен малалла шурĕ. Акă такам ăна хăвалаcа çитрĕ те иртсе кайрĕ.

— Э-эй! — тем каласшăн пулчĕ ăна Роберт. Лешĕ чарăнса тăмарĕ.

Ун вырăнне милици машини пырса чарăнчĕ. Хăвăрт сиксе аннă икĕ çамрăк милиционер Роберт патне чупса пычĕç.

— Çамрăк çын! Сирĕн пирĕнпе пымалла пулать, — ĕнтĕ каччăна машина патнелле сĕтĕрнĕ май калаçрĕ вĕсенчен пĕри.

— Ăçта сĕтĕретĕр эсир мана? Манăн киле каймалла, — усал сăмахсене суйламасăр янăрашрĕ Роберт.

— Килна урăлсан кайăн. Халĕ вара малалла ут, — резина патакĕпе ураран самаях вăйлăн çапса сăмах хушрĕ иккĕмĕш.

— Ăçта илсе каятăр эсир ман упăшкана? — таçта çы-

вăхрах янăраса кайрĕ хĕрарăм сасси. Кĕтмен çĕртен пулнăран вăл милиционерсене те, Роберта та хăратса ячĕ. — Манпа вăл. Кăшт каярах çеç юлчĕ.

Хĕрарăм урăх сăмахласа тăмарĕ. Икĕ милиционер хушшинче тăракан Роберта çавăтрĕ те малалла утса кайрĕ. Урăлтаркăч машини нимсĕрех тапранса кайрĕ.

— Э-э! Чим-ха, арăмăм. Эп хăçан авланнă вара?

— Урăлтаркăчра çĕр каçас килет пулсан машинăна каялла тавăр, — Роберт хăйне йĕкĕлтенине ăнланса хаяррăн хуравларĕ хĕрарăм. Вăл каччăран вĕçерĕнсе малалла утрĕ.

— Э-э! Тăхта-ха. Эпĕ вара мĕнле?

— Мĕн мĕнле? Килна кай. Телейĕ пулсан чиперех çитсе пĕтĕн.

— Киле? Ăçта ман кил? Эпĕ хăш урамра?

Хĕрарăм пĕр хушă сăмах чĕнмесĕр Роберт çине пăхса тăчĕ. Унтан: «Ут ман хыçран», — терĕ те ерипен малалла вĕçтерчĕ...

— Ирт, — алăк кукринчи çутта çутса иртме чĕнчĕ хĕрарăм.

Роберт алăк урати урлă шиклĕн ярса пусрĕ. Шикленмен çын та шикленĕ. Тем шутлă-ха ку хĕрарăм. Ара, пачах пĕлмен арçынна çапла ним мар çур çĕр варринче хăй хваттерне илсе килчĕ те. Хăй самаях ӳсĕр пулин те, каччăн ăс-тăнĕ тăрă.

— Мĕн алăк кукринчех çухалса кайрăн? — каччăн шиклĕхне ăнланса лăпкăн сăмах хушрĕ хĕрарăм. — Салтăн та ирт. Эпĕ чей лартса ярăп.

Роберт тумтирне хывса кухньăна кĕчĕ. Халĕ тин вăл хăйне урăлтаркăчран çăлнă хĕрарăма çутă çинче курса сăнама пултарчĕ. Çулĕпе вăл çирĕм виççĕ-çирĕм тăваттăран аслăрах пулмарĕ. Чиперкке те, нĕрсĕр те мар. Вăрăм çырă çӳç, тăрăхла пит, çӳхе илемлĕ тутипе кăшт вăрăмрах сăмса, хыткан кĕлетке тата тунсăх куç. Унăн пĕтĕм сăнĕнче темĕнле çирĕплĕх палăрса тăрать.

— «Эй» теме аван мар. Эсĕ мĕн ятлă? — газ плити умĕнче кăштăртатнă май калаçрĕ хваттер хуçи.

— Роберт. Эсĕ?

— Диана.

Калаçу çыпăçмарĕ. Çакăн пек тĕлĕнтермĕш лару-тăрăва лекнĕ Роберт пĕтĕмпех çухалса кайрĕ. Мĕн темелле, мĕн

ыйтмалла? Кăна каччă пĕлмерĕ. Диана вара сăмахлас кăмăллă пулмарĕ. Чей те вĕсем ытлашши калаçмасăр ĕçрĕç. Кайран Диана вырăн сарчĕ.

— Эсĕ диван çине вырт, — сарса пĕтерсен лăпкăн пĕлтерчĕ вăл Роберта. Каччă кĕлеткинче арçынлăх вăйĕ ÿссе-ÿссе пынине те асăрхамарĕ тейĕн. — Эпĕ çутта сÿнтеретĕп.

Çутă сÿнчĕ. Диана хăйĕн кравачĕ çине майлашса выртрĕ.

— Диана, — çурма саспа чĕнчĕ каччă хĕре. Хуравлакан пулмарĕ. — Диана, мана пĕччен сивĕ.

Хĕр каллех чĕнмерĕ.

Роберт тем хушă хăй вырăнĕ çинче йăшăлтатса выртрĕ. Юлашкинчен чăтăмлăхĕ пĕтрĕ. Вăл ерипен çĕкленчĕ те хĕр патне пычĕ.

— Диана, ăшăт-ха мана.

— Роберт, ан алхас, — тинех сас пачĕ хĕр. Анчах ун сасси каланă сăмахсене хирĕçлерĕ. Хăй кай терĕ пулин те, ун сасси кил тесе илĕртрĕ.

Каччă вăшт кăна хĕрпе юнашар вырнаçрĕ. Диана паçăрхи пекех ун еннелле çурăмпа выртрĕ. Роберт ачашшăн хĕре çупăрларĕ, нÿрлĕ тутипе Дианăн çара хулпуççине, мăйне чуптурĕ. Лешĕ вара нимĕнле туйăмсăр, тăм кĕлетке пек выртрĕ. Каччă çаплах чуптурĕ, кăшт чĕтрекен аллисемпе хĕр кĕлеткине ачашларĕ. Чуптурĕ те ачашларĕ.

Тем самантран Диана тăруках Роберт еннелле çаврăнчĕ. Тăрăннăн сывла-сывла качча ачашла, чуптăва пуçларĕ. Унăн тути вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕ. Тути кăна-и? Хĕрĕн пĕтĕм кĕлетки лăпкăлăха манса чĕтре-чĕтре илчĕ. Роберт хăюланчĕ. Вăл хăйĕн арçынлăхне ирĕке ямалли самант çитнине ăнланчĕ.

— Çитет, — тăрук хыттăн каласа хучĕ пĕтĕмпех каччă ытамне путнă Диана. — Çитет алхасса. Кайса вырт хăв вырăну çине.

Уяр кун аçа çапнине Роберт курманччĕ. Хĕр сасси ăна пĕтĕмпех хытарса лартрĕ.

— Çитет терĕм. Кай, — качча тĕртсе ячĕ Диана. Роберт чутах урайне персе анатчĕ. — Темиçе ан калаттар.

Пуçран чукмарпа çапнă пек, тăна кĕреймесĕр çĕкленчĕ

вăл хĕр çумĕнчен. Хăй вырăнĕ çине кайса выртрĕ. Мĕн пулчĕ ку? Тĕлĕк е чăн? Çакна ăнланаймасăрах Роберт çывăрса кайрĕ.

## 4

Тук! тук! шаккаççĕ кусакан урапасем чугун рельса.

Тук! тук! шаккать тимĕрçĕ хĕртнĕ тимĕре.

Тук! тук! сиксе тухасла янăрать тăнлав.

Тук! тук! Кĕлеткере пĕр чĕптĕм вăй çуккине туйса вăранчĕ Иван. Ёнерхи ресторан уншăн ахаль иртмерĕ. Каччăн шăм-шакĕ кисĕпле хĕненĕ евĕрех ыратрĕ. Пуçĕ çурăлса тухасла янăрарĕ те шавларĕ. Эрех-сăрана Иван ĕнер кăна пĕрремĕш хут ĕçмен. Анчах халиччен хăйне паянхи пек япăх пулнине астумасть. Ытларах ĕçнĕ пулас. Ытларах... Çемçен каланă. Ĕçсе янă эрехе черккепе мар, литр-литрĕпе шутлама пулать пулĕ. Тĕлĕнмелле. Мĕнле çитсе пĕтнĕ-ши Иван аппăшĕ патне? Чăннипех те тĕлĕнмелле. Пĕрле ларса ĕçнĕ Роберт хăш самантра, ăçта çухалса юлнă-ши тата? Тем пек тăрăшсан та Иван ĕнерхи хавaслă касăн ăнăççăр вĕçне аса илеймерĕ.

— Тук! тук! — хальхинче каччă пуçĕнче мар, алăка шаккарĕç. — Тук! тук! — Иван вырăн çинчен çĕкленчĕ. Анчах вăй-халĕ пулманран пĕр утăм та тăваймарĕ. — Тук! тук!

— Уçатăп, уçатăп, — аран-аран алăк патне çитсе сăмах чĕнчĕ Иван. — Эсир мĕн çăмăлпаччĕ? — алăк умĕнче темле хĕр тăнине курса ыйтрĕ вăл.

— Сан пек чипер те çамрăк каччăсене тутлă ыйхăран вăратас кăмăлпаччĕ, Ванюш.

Хăйне ятран чĕннине илтсен каччă хĕр çине сăнарах пăхрĕ.

— Диана! Каçар тӳрех палласа илейменшĕн, ирт, — умри хĕр Рая аппăшĕн чи çывăх тусĕ иккенне ăнкарса аванмарланчĕ Иван. Мĕнле тӳрех паллаймарĕ-ха вăл ăна? Тепĕр тесен, аппăшĕн тусне каччă пĕрре-иккĕ кăна курнă. Ăна та пулсан салтака кайиччен.

— Çаплипех ватăлса кайрăм-и вара? Палламалла та мар, — йăл-йăл кулса калаçрĕ алăкран кĕнĕ Диана.

— Мĕн эсĕ? Эпĕ хам мухмăр-сухмăрпа сана тӳрех паллаймарăм.

— Çапла пултăр ĕнтĕ, çапла пултăр, — каччă именсе кайнине асăрхаса калаçăва урăх еннелле пăрма васкарĕ Диана. — Эсĕ хăçан таврăннă?

— Виçĕм кун çитрĕм. Эсĕ ирт. Эпĕ çăвăнса тирпейленем.

Хĕр пӳлĕмелле иртрĕ, каччă — ваннăйне. Рая патĕнче Диана пĕрремĕш хут кăна мар. Ăçта мĕн выртнине, ăçта мĕн ларнине вăл хваттер хуçинчен те лайăхрах пĕлет пулĕ. Çавăнпа та хĕр хăна пек, тĕпеле иртсе лармарĕ: пӳлĕме тирпейлеме пуçларĕ. Кайран Диана кухньăна иртрĕ. Купаласа хăварнă таса мар чашăк-тирĕке çуса тасатрĕ, чей вĕретме газ чĕртрĕ. Ĕнтĕ халь хăна пек ларма та юрать.

Диана кухньăрах, пĕчĕк сĕтел çумĕнчи пукан çине вырнаçса ларчĕ. Тем самантран ĕмĕтпе шухăш тĕнчине путрĕ. Газ плити çинчи чейник шавĕ хĕрĕн шухăш кустăрмине татах та хытăрах хăваларĕ. Малалла та малалла, хăвăртрах та хăвăртрах...

...Кĕрхи çăлтăрлă каç. Ансăр сукмакпа иккĕн аллааллăн тытăнса утаççĕ. Васкамасăр, çăлтăрлă тӳпепе киленсе, тем çинчен лăпкăн калаçса утаççĕ.

— Диана, парнелем-и сана çут çăлтăр? — хĕре чарса тăратса ыйтрĕ каччă.

— Ай-уй, Çемен! Ытла та пысăк парне сĕнместĕн-ши эс мана? — тӳпенелле пăхса калаçрĕ хĕр. — Ăçта хурайăпши эп ăна?

— Çăлтăрĕ тӳперех юлтăр. Анчах санпа маншăн вăл — сан çăлтăр пулĕ. Ун ячĕ — Дианка. Çапла, Дианка. Авă куратăн-и? Мĕнлерех йăлтăрккa, çутă вăл. Мĕнлерех илĕртӳллĕ. Диана, сан пекех илемлĕ.

— Çемен, Çемен! Эс мана вăтантаратăн.

— Мĕншĕн? Эп чăннине калатăп-çке. Эсĕ çав çăлтăр пекех илемлĕ, — аллипе тин çеç ят панă çăлтăра тĕллесе сăмахларĕ каччă. — Анчах çăлтăр таçта инçетре, манран пин-пин çухрăмра. Эсĕ вара çумра. — Каччă хĕре ыталарĕ. Васкамасăр тутаран чуптурĕ. — Паян та, ыран та, ĕмĕр тăршшĕпех пул юнашар.

— Пулатăп, пулатăп... пулатăп, Çемен...

...— Диана! Такам алăка шаккать. Уçаймастăн-и? — ваннăй алăкне кăшт уçса кăшкăрчĕ Иван. Ун сасси кухньăра ларакан хĕре асаилӳ тӳпинчен çĕр çине антарчĕ.

— Паллах, уҫатăп.

— Улăштармалла та-ха ҫак шăнкăрава. Алă ҫитеймест, — алăка ҫапла шаккаса тăма тивнине тӳрре кăларса калаҫрĕ Рая. — Салам, Диана. Эсĕ тахҫанах килнĕ-и? Нумай кĕттертĕм пуль.

— Ҫук-ҫке. Хальтерех кăна ҫитрĕм.

— Ман шăллăм, Ваня, вăранса пĕтсе-и?

— Тăнă. Ваннăйĕнче вăл.

Сăмах ҫинех Иван тухрĕ. Ах, лекрĕ те-ҫке ăна аппăшĕнчен! Яла ашшĕ-амăшне курма кайма васкаманнишĕн, ĕнер вил ӳсĕр те тăр пылчăк килсе кĕнишĕн лекрĕ. Ют ҫын умĕнчех ҫапла пăсăрлантарни Ивана тарăхтарчĕ. Анчах вăл ҫакна палăртмарĕ. Рая ятланине каччă хирĕҫ пĕр сăмах каламасăр итлерĕ. Аппăшĕ хăйне мĕнле вăйлă юратнине пĕлнĕрен ун сăмахĕсем кӳрентермерĕҫ. Усал тăвас тесе мар, ырă сунса ятлать-ҫке вăл. Тата Райăн тарăхăвĕ нихăҫан та нумая пымасть. Пĕрре лайăх ятлаҫса «пăс кăларать» те — лăпланать. Урăх нихăҫан та аса илмест.

— Диана, каҫар-ха. Анчах вăхăтра тӳрлетмесен чул стена та ишĕлет. Ман шăллăма вара пачах та чулран туман, — ĕнтĕ Иванăн кĕске ҫӳҫне урлă-пирлĕ вĕлкĕштерсе шӳтлерĕ Рая. — Айтăр чей ĕҫер.

Виҫҫĕшĕ те сĕтел хушшине вырнаҫса ларчĕҫ. Иртнине аса илчĕҫ, пуласлăх пирки ĕмĕтленчĕҫ. Сĕтел хушшинче ытларах Иван пуплерĕ. Салтакри пăтăрмахсене каласа парса хĕрсене култарчĕ, хăйĕн малашнехи планĕсем ҫинчен калаҫрĕ.

Пысăк ĕмĕтсемпе таврăннă Иван тăван ҫĕршыва. Хура ҫĕр ҫинче ĕҫлес, вĕренес, тулли пурнăҫпа пурăнас кăмăлпа. Каччă мĕнле хавхаланса калаҫнине итлесе ларнă май Дианăн та кăмăлĕ уҫăлчĕ. Вăл хăйĕн шухăшĕсем ҫинчен пуҫĕпех манса Иван сăнлакан пуласлăх ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Диана хăйĕн пурнăҫ опытĕнчен мĕн ĕмĕтленни ытларах чух пачах пурнăҫланманнине лайăх пĕлет. Анчах каччăн ĕмĕчĕсене пурнăҫ чăнлăхĕн сăрчĕ ҫумне ҫапса аркатма васкамарĕ вăл. Ҫутă ĕмĕт Ивана хăйне кăна мар, пурнăҫ йӳҫекне сыпса курнă Райăпа Дианăна та хавхалантарчĕ. Шанăҫ ҫуратрĕ.

— Пĕлетĕр-и эп мĕн шутлатăп? — аппăшĕпе Диана ҫине ыйтуллăн пăхса ыйтрĕ Иван.

— Мĕн? — харăс персе ячĕç хĕрсем.

— Этемшĕн чи пысăк телей, чи пысăк пуянлăх, чи пысăк савăнăç вăл — пурнăç. Çакна эп салтакра чух ăнлантăм. Çавăнпа та манăн пурнăçран мĕн илме май пуррине пĕтĕмпех илес пулать. Ырана хăвармасăр — паянах.

— Ой, шăллăм! Айванкка-çке эс ман, — Ивана ыталарĕ Рая.

Диана нимĕн те чĕнмерĕ. «Пĕтĕмпех паянах илес килет... Анчах пурнăç нихăçан та, ниме те ахаль памасть. Кашни утăмшăн кĕрешме, кашни çитĕнӳшĕн пысăк вăй хума тивет. Ахаль нимĕн те памасть. Парсассăн та санăнне чи хаклине, чи кирлине илсе каять», — Ивана хирĕçлесе шухăшларĕ вăл.

## 5

...— Кил, Диана! Ан хăра.

— Аюк! Хăратăп, Çемен.

— Мĕнрен? Эпĕ санпа-çке, — хĕре хулпуççинчен ыталаса калаçрĕ каччă.

Диана умра сарăлса выртакан вĕçĕ-хĕррисĕр кӳлĕ хĕрринчи пĕчĕк кимĕ çине шикленсе пăхрĕ. Хĕрĕн ярăнас килчĕ, анчах шывран хăрани тытса чарчĕ.

— Айта хăравçă ан пул, — Диана еннелле аллисене тăсрĕ кимĕре тăракан Çемен.

Диана текех хирĕçлемерĕ. Хăй шăпине вăл çак çирĕп те вăйлă аласене шанса пачĕ. Вĕсем вара ăна çепĕççĕн те ачашшăн çĕклесе кимĕ çине лартрĕç, çыранран уйăрса кӳлĕ варринелле илсе кайрĕç.

— Турăçăм, мĕнле илемлĕ! Пĕртте çыранран курăннă пек мар, — кӳлĕ анлăшĕпе киленсе тĕлĕнчĕ Диана. — Ытарайми илем.

Каччăпа хĕре лартнă пĕчĕк кимĕ васкамасăр ишрĕ. Вĕтĕ-вĕтĕ хумункисене пĕрин хыççăн теприне çыран еннелле сапаласа вăл кӳлĕ варринче чарăнчĕ.

— Çемен, эп хăрамастăп! — чĕвĕлтетрĕ хĕр. — Пачах та хăрамас.

— Айванккаçăм! Чипер хăравçă эс ман, — хăй умĕнчех тăракан хĕре çумăн лартса калаçрĕ каччă. — Парăпши вара эп хамăн çăлтăра çак кӳлле ӳксе сӳнме? Пулта-

райăп-ши сансăр пурăнма? — васкамасăр, питĕ-питĕ ачашшăн çупăрларĕ вăл хĕре. Çавăн пекех çепĕççĕн çӳхе тутине чуптурĕ...

Чăнкăр! чăнкăртатса кайрĕ сĕтел хĕрринче ларакан сехет. Диван çинче выртакан Диана шарт! сиксе вăранчĕ. Тăрса ларчĕ. Ытла та кĕтмен çĕртен пулнăран хĕр анраса кайрĕ. Пуçра пĕр харăс пин шухăш вылярĕ. Миçе çитнĕши халь? Сĕтел çинчи сехет улттă кăтартать. Тул çутăлать-ши е каç пулать? Хĕр кантăкран пăхрĕ — çук, пĕлеймерĕ. Урамри тĕксĕмлĕхпе шăплăх ăна нимĕн те каламарĕç. Аптраса кайнă хĕр диван çине ларчĕ. Тем самантран çеç вăл пĕтĕмпех вăранса, тăна кĕрсе çитрĕ. Хăй кăшт выртса çывăрсах кайнине те, халĕ, паллах, каç пулнине те астурĕ.

Диана лăпланса каллех диван çине тăсăлса выртрĕ. Ниçта та васкас çук — мĕншĕн лăпкăн выртас мар? Анчах хĕр тепĕр минутранах вăшт сиксе тăчĕ. Мĕнле манса кайнă-ха вăл? Унăн тĕлпулăва каймалла-çке. Шăп та лăп çиччĕ тĕлне.

Ак пуçланчĕ те пăтăрмах. Диана хыпаланса, чупа-чупа тенĕ пекех, пуçтарăна пуçларĕ. Темиçе тĕрлĕ тум улăштарчĕ — тем, нихăш те кăмăла каймарĕ. Пĕри ытла вăрăм, тепри — кĕске. Пĕри — хулăн, иккĕмĕшĕ — çӳхе. Юлашкинчен вăл кĕске юбкăпа çутă сенкер блузка тăхăнчĕ. Анчах кунпа хĕвĕшӳ вĕçленмерĕ. Васкана чух яланах çапла вĕт. Ĕç çыпăçуллă пулмасть. Кашнинчех тирпейлĕ пуçтарăнакан çӳç те паян тем тусан та вырнаçтарнă пек выртасшăн пулмарĕ. Капла та турĕ хĕр, апла та — усси çук. Тарăхнă енне Диана ăна çурăм тăрăх сапаласа ячĕ. Нимĕнле те пуçтарăнмаççĕ пулсан çаплипех пулччăр.

Кунпа та пăлхану вĕçленмерĕ. Пит-куçа сăрлама ларсан та пĕр виç-тăват хут çуса яма тиврĕ. Паян хĕре нимĕн те кăмăла каймарĕ. Пурне те тиркерĕ вăл, пуринпе те кăмăлсăрланчĕ.

Чылай вăхăтран тин пуçтарăнса çитрĕ Диана. Паллах, ăна хăй мĕнле тăхăнни пачах та тивĕçтермерĕ. Анчах текех хыврăнса тăхăнма, сăрланма вăхăчĕ те, кăмăлĕ те пулмарĕ. «Мĕн ытла ăшталанатăп çак эп? — тĕкĕр умĕнче капăрланнă май шухăшларĕ хĕр. — Такампа тĕл пулма

кайнă пек. Вăл паян пур та ыран — çук. Мĕн уншăнах пит капăрланас?» — çапла шухăшларĕ Диана хăй çине юлашки хут пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таран пăхнă май.

Кая юласран шикленсе хваттертен çиçĕм пек тухса вĕçрĕ. Пуринчен ытла вăл хăйпе тĕлпулу палăртнă каччă кĕтсе илеймесĕр пăрахса каясран хăрарĕ...

Хулан тĕп урамĕнче вырнаçнă «Апогей» ресторан умĕнче пирус ĕмсе тăракан Роберта Диана троллейбусран ансанах асăрхарĕ. Анчах каччă патне чупса пыма васкамарĕ. Малтан кăшт тăхтаса лăпланчĕ, кайран тин ерипен ярса пусса ун еннелле утрĕ.

— Хĕрсем каччăсем патне кăшт кая юлса çитме тăрăшнине пĕлетĕп-ха эп. Анчах çак кăшт тени пĕр сехетпех танлашма пултарассине шутламан, — сывлăх сунмасăрах ӳпкелешме пуçларĕ Роберт.

— Пĕр сехетех кая юлтăм-ши? — пĕр айăпсăр сăн-пит тума васкарĕ Диана.

Çак самантра вăл питĕ кулăшла курăнчĕ пулас. Хĕр каласа пĕтеричченех Роберт кулса ячĕ.

— Пĕр сехетех мар, анчах вăтăр сакăр минут — точно, — аллинчи сехечĕ çине пăхса халь тин кăмăллăн каларĕ вăл.

— Ну, ку нумаях мар, — ĕнтĕ хăй те кулса пуплешрĕ Диана.

Вĕсем ресторана кĕчĕç. Хывăнса тирпейленнĕскерсене алăк патĕнче кĕтсе илнĕ официантка уйрăм сĕтел хушшине кайса лартрĕ, меню килсе пачĕ. Мĕн ĕçсе-çимеллине Роберт хĕре суйлаттарасшăнччĕ, анчах Диана яхăнне те ямарĕ. «Мана валли эрехне пылаккине пама ыйт», — терĕ çеç вăл.

Каччă заказ тунă вăхăтра Диана ресторан ăш-чикне, ытти сĕтелсем хушшинче ларакан мăшăрсене сăнарĕ. Кунти лăпкăлăх, кăшт тĕксĕмрех çутă ăна килĕшрĕ. Ытла хытах мар янăракан ташă кĕвви те кăмăла кайрĕ.

Официантка пăрăнса утсан каччăпа хĕр пĕр вăхăт чĕнмерĕç. Пĕрне-пĕри питĕ сахал пĕлнĕрен ютшăнчĕç те пулас. Паллашнă ятпа шаккаса ĕçсен кăна иккĕшĕн те чĕлхисем чăхăмлама пăрахрĕç. Ыйту хыççăн ыйту пачĕç вĕсем пĕр-пĕрне, шăкăл-шăкăл калаçрĕç. Вăхăт-вăхăтпа

Роберт кулăшла анекдотсемпе хаваслă самантсене аса илсе хĕре култарчĕ.

Часах ресторана килнĕ мăшăрсем пĕрин хыççăн тепри ташă картине туха пуçларĕç. Роберт та Дианăна ташша чĕнчĕ. Çăмăллăн çĕкленчĕ хĕр сĕтел хушшинчен. Анчах ташă картинче кам çумне пырса çапăнассине пĕлнĕ пулсан вăл çемçе пукан çинче пăталаса хунă пекех ларнă пулĕччĕ. Пĕлмен... Çĕкленчĕ те кĕтесри сĕтел хушшинчен Сашăпа сап-сарă çӳçлĕ, çинçе пилĕклĕ хĕр тухнине курчĕ. Пуçран чукмарпа çапнă пекех пулчĕ ку. Сашăна урăх хĕрпе курни мар, ăна хăйне нумай вăхăт иртнĕ хыççăн курни пăлхантарса ячĕ. Диана каялла пукан çине лĕш ларчĕ. Анчах Саша асăрхама ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ ăна. Авă куçĕпе мĕнле пăралать.

— Диана, темĕн пулмарĕ пулĕ те? Эсĕ сăнран веç улшăнса кайрăн, — хĕр пĕр çеккунтрах çапла ылмашнинчен пĕр тĕлĕнсе, пĕр хăраса ыйтрĕ Роберт.

— Çук-çке. Нимех те мар. Анчах ташша тухмастпăр.

— Юрĕ ара...

Хĕрпе каччă хушшинчи калаçу татăлчĕ. Вĕсем текех паçăрхи пек шăкăл-шăкăл калаçма та, кулма та пултараймарĕç.

— Сирĕн хĕре ташша чĕнме юрать-ши? — янăраса кайрĕ сас.

Диана пуçне çĕклерĕ. Сĕтел умĕнче Саша тăрать.

— Çук. Эпĕ ташламастăп, — хуравлама васкарĕ Диана.

Саша çаврăнса утмарĕ. Хĕр çине йĕкĕлтеш куçпа пăхса тăчĕ, темĕн кĕтрĕ.

— Çухалса кайман-ха эсĕ, Диана, — терĕ вăл тем самантран. — Мана çакăншăн хăваласа ятăн-и? — Роберт еннелле пуçĕпе сĕлтрĕ. — Хăвăрт маннă эс мана. Хăвăрт. Е манпа чухнех ăна... — малалла каччă усал сăмахсен суйламан пуххине каларĕ. — Пĕлетĕп, эсĕ...

Диана текех чăтса лараймарĕ. Умра тăракан Сашăна тĕртсе ярсах алăк патнелле вирхĕнчĕ. Роберт хыçран чĕнни те, Саша калаçни те ун хăлхинче пĕрлешсе, хутăшса кайрĕç. Чуна йывăрлатса вăя пĕтерчĕç.

Тăхăннă-тăхăнман вĕçсе тухрĕ Диана ресторантан. Хăлхара Сашăн юлашки сăмахĕсем кăна янăрарĕç. «Пĕлетĕп эсĕ çăмăлттай пулнине», — терĕ вăл. Мĕн пĕлетĕн эсĕ? Мĕн?!

Çăмăлттай терĕн. Çăмăлттай... Анчах çак çăмăлттайлăх мĕн хака ларнине пĕлетĕн-и? Кашни хавас самантшăн тӳленине. Куççульпе. Тунсăхпа. Ыратупа. Кулнă чух макăрнине, куççуль витĕр кулнине пĕлетĕн-и? Мĕнех пĕлетĕн эсĕ? Мĕнех?..

## 6

Килелле выртакан çул яланах кĕске. Анчах çул çинчи хĕрĕх пилĕк минут яла таврăнакан Иваншăн нихăçанхинчен те вăрăм пулчĕ. Яка çулпа чупакан автобус питех те ерипен пынăн, кирлĕ мар çĕртех чарăннăн, чарăнăвĕсем ытла та вăрăм пулнăн туйăнчĕ ăна.

Çула кĕскетес тесе кантăк çумĕнче ларакан Иван тĕлĕрсе илме пăхрĕ. Çук, пултараймарĕ. Чĕре пăлханчăклăн хăвăрт тапни тĕлĕрсе кайма памарĕ. Кăшт та пулин лăпланас тата вăхăт ерипен шунине асăрхас мар тесе каччă пуçа килнĕ сăвă йĕркисене вула пуçларĕ:

Тăван енĕм, тăван енĕм!
Эп уйрăлнă санпала.
Тăван енĕм, тăван енĕм!
Илĕртен эс хăв патна...

Тăван кĕтес. Иван хăй çуралса ӳснĕ ялта пулманни çулталăк çурă çитрĕ. Мĕн таран улшăннă пулĕ ĕнтĕ вăл çак вăхăтра. Инçетри Таджикистан çĕршывĕн чиккинче службăра тăнă Ивана вăл тĕлĕкре кăна тĕлленнĕ. Кашни каç тенĕ пекех. Чи савăк, чи илемлĕ тĕлĕксем пулнă вĕсем. Чи-чи... Халь акă каччă тинех чулпа хăйăрлă сукмакпа мар, хура сĕткен çĕре витнĕ курăк-сулçă тăрăх утать. Нимрен хăрамасăр, никамран шикленмесĕр, çирĕп пусса.

Куç илмесĕр пăхса пычĕ Иван кантăкран. Автобусран анса юлсан вара чăтаймарĕ — тăван ял еннелле чупсах кайрĕ. Алра йывăр çĕклем пурри, хирĕç вĕрекен çил ăна чараймарĕç. Çулĕ çывăх пулманни те хăратмарĕ. Чупрĕ те чупрĕ вăл. Ял патне çывхарса пынăçемĕн вара хăвăртрах. Тата хăвăртрах...

Акă укăлча хапхи те курăнса кайрĕ. Чупма та чарăнмалла пек ĕнтĕ. Чарăнмалла, лăпланмалла. Иван вара çаплах чупрĕ. Ял хапхинчен тухнă çынна курсан çеç чарăнчĕ. Утма пуçларĕ те ним мартанах пăлханса кайрĕ. Хирĕç

килекене ун аякранах паллас килчӗ. Ҫулталӑк ҫурӑ хыҫҫӑн тӑван ялта курнӑ пӗрремӗш ҫын-ҫке вӑл. Сӑнаса пӑхрӗ Иван ҫывхаракана. Сӑнарӗ... Анчах хӑрах аллипе ача, тепринпе пысӑках мар сумка ҫӗкленӗ хӗрарӑма паллаймарӗ. Ҫӗнӗ ҫын е хӑна хӗрарӑмӗ пулчӗ пулас вӑл.

Салтакпа ачаллӑ хӗрарӑм хушши кӗскелсе пычӗ. Иван кӑна мар, хӗрарӑм та Ивана куҫ илмесӗр пӑхса пырать иккен. Вӑл та хӑйне хирӗҫ килекене палласа илме тӑрӑшать-ши? Калама йывӑр. Анчах ун сӑнӗнче салтак кам пулнине пӗлесшӗн ҫунни палӑрмарӗ. Пачах урӑхла. Тӗлӗнни, хӑрани, савӑнни, вӑтанни пулчӗ ун сӑнӗнче — пӗртте паллама тӑрӑшни мар.

Ӗнтӗ Иванпа хӗрарӑм хушшинче шутлӑ утӑмсем юлчӗҫ. Каччӑ ҫаплах ӑна паллаймарӗ. Пӗрре пӑхсан питӗ аван пӗлнӗ, чӗрене ҫывӑх сӑн пек туйӑнать. Сӑнарах пӑхсан — пачах курман-пӗлмен ҫын.

Ик-виҫ утӑм юлсан хӗрарӑм чарӑнчӗ, аллинчи сумкине ҫӗре лартрӗ. Темӗн кӗтнӗн тилмӗрсе пӑхрӗ вӑл каччӑ ҫине. Иван чарӑнмарӗ. Сӑмах та чӗнмерӗ. Чӗрипе палласа илчӗ вӑл хӑй умӗнче тӑракан хӗрарӑма. Палларӗ, анчах сӑмах чӗнмерӗ. Чӗнмерӗ... Ытла та кӗтмен, шутламан ҫӗртен пулнӑран Иван хӑйӗн савни пулнӑ Таньӑна сывлӑх сунма та пултараймарӗ. Мӗнле утнӑ ҫавӑн пекех иртсе кайрӗ. Самантлӑха чарӑнмасӑр, пӗр сӑмах чӗнмесӗр. Кӑкри ҫумне ача чӑмӑртанӑ хӗрарӑм та чӗнмерӗ. Куҫӗ кӑна шывланчӗ унӑн.

* * *

Пӗр самант кӑна е сехете яхӑнах тӑчӗ-ши Таня ҫул варринче? Вӑл кӑна пӗлмерӗ. Алӑри ача йӑшӑлтатни тӑна кӗртрӗ ӑна. Ерипен алла илчӗ вӑл умри сумкӑна. Халран кайса утса кайрӗ.

«Вӑл мана кураймасть. Кураймасть...» — вӗҫӗмсӗр пӑшӑлтатрӗ Таня. Тепӗр тесен, мӗн кӗтнӗ-ха вӑл? Мӗн кӗтнӗ юратӑва ҫапла ҫӑмӑллӑн сутнӑ хыҫҫӑн? Ивана салтакран кӗтсе илме тупа тунине манса виҫ уйӑхранах урӑххине качча тухрӗ пулсан? Мӗн кӗтнӗ курайманлӑхпа йӗрӗнӳсӗр пуҫне?

Иванпа Таня пӗр ҫулхисем. Мӗн ачаран пӗрле выляса ӳснӗ. Шкула та пӗрлех кайнӑ, пӗр парта хушшинче ларнӑ.

Пĕрремĕш кунран пуçласа юлашки шăнкăравччченех. Яланах пĕрле, пур çĕрте те юнашар пулнăран ял ачисем вĕсене «упăшкипе арăмĕ» тесе те мăшкăллатчĕç. Иванпа Таньăна çакă, паллах, питĕ пăшăрхантаратчĕ. Миçе хутчен çапăçман пулĕ арçын ача йĕкĕлтеме юратакансемпе? Мĕн чухлĕ кĕпе-йĕм çурнă? Миçе хут сусăрланнă? Кăна никам та шутламан.

Аслă классене çитсен кăна лăпланчĕç вĕт кулма юратакансем. Ывăнчĕç курăнать. Тен, хăнăхрĕç те пулĕ.

Çакăн хыççăн вĕсем пĕр тапхăр лăпкăн пурăнчĕç. Çĕр çинче Иван ятлă арçын ачапа Таня ятлă хĕр ача пуррине пурте манчĕç тейĕн. Анчах çинçешке хĕр ачаран йăрăс пўллĕ хĕр, арçын ачаран сарлака хул-çурăмлă, шăнăрлă каччă çитĕнсе пынă май ăмсанса хушша кĕрекенсем татах тупăнчĕç. Çирĕп туслăхпа таса юратăва ăмсанакансем. Мĕн кăна туса пăхмарĕç пулĕ вĕсем. Хĕрпе каччăна вăрçăнтарса яма мĕнле кăна тăрăшмарĕç. Уйрăмах Куçма Светипе леш касри Вася. Иртсе çўреме те памастчĕç-çке. Кашни меллĕ самантпа усă курма тăрăшатчĕç.

Пĕрре çапла, вуннăмĕш класс пĕтерсессĕн пуль, çуллахи каникул вăхăтĕнче Таньăн уйăх çурă хулара пурăнма тиврĕ. Амăшĕпе пĕртăван Анук аппăшне йывăр операци тунă хыççăн пăхмаллаччĕ. Иван ялтах юлчĕ. Хĕрпе каччăшăн пĕрремĕш вăрăм уйрăлу пулчĕ. Нихăшне те çăмăл килмерĕ. Вăхăта кăшт та пулин кĕскетес тесе вĕсем кашни кун пĕр-пĕрин патне çыру çырса тăчĕç. Пĕри яла, тепри хулана. Кашни кун çырчĕç, кашни кун илсе вуларĕç.

Çапла иртсе кайрĕ пилĕк эрне. Улттăмĕшĕ те çаплах пуçланчĕ. Эрне варринче Таня яланхи пекех почта ещĕкĕнчен çыру кăларса илчĕ. Кĕтнĕ çыру. Паллапă, чуна çывăх почерк... Сырăва вăл çакăнтах, пусма тăваткăлĕнче, уçрĕ. Палланă почерк, анчах темĕнле ют сăмахсем. Пĕрре вуларĕ хĕр çырăва, тепре. Вуларĕ те вуларĕ — нимĕн ăнланаймарĕ. Мĕн çырать унăн савнă Иванĕ? Мĕн?

«Таня! Пĕлетĕп, ман сăмахсем сана ыраттарĕç. Анчах суя та телейлĕрех тумĕ. Çавăнпа та ĕç-пуç шала кĕрсе кайиччен манăн халех пирĕн хушăри çыхăнăва татас килет. Эпĕ сана юратмастăп! Каçар, юратмастăп...» Пулма пултараймасть! Таня çырăва темиçе хут вуларĕ. Мĕн вуланине унăн ĕненес килмерĕ. Пулма пултараймасть. Ĕненме йывăр... Çук, Таня

çак хута ёненме пултараймарĕ. Мĕн çырнине Иван ăна хăйне куçран калатăр. Çапла, куçран пăхса...

Текех хĕр нимĕн çинчен те шухăшлаймарĕ. Май килнĕ таран хăвăртрах Иванпа тĕл пулса калаçасси çеç канăçсăрлантарчĕ ăна. Вăл ытлашши пĕр самант тăхтаса тăмасăрах яла тухса чупрĕ.

Каччă çырăвне çине-çинех вуланă вăхăтра Иван та çавăн евĕр çыру илсе вуланине Таня пĕлмерĕ. Хĕр ялалла васканă самантра каччă хуланалла çул тытрĕ.

Ялпа хула хушшинчи çул варринче тĕл пулчĕç вĕсем. Пĕр-пĕрне куçран пăхрĕç те сăмахсăрах ăнланчĕç — пĕтĕмпех суя. Хĕрпе каччă чĕрисем юратупа çунса тăраççĕ. Ытти пĕтĕмпех суя.

Каярах çак пăтăрмах вĕçне çитиех уçăлчĕ. Амăшĕ вырăнне вăхăтлăха почтальонкăра ĕçленĕ Светăпа Вася каварĕ пулнă иккен ку. Хĕрпе каччăн юрату çирĕплĕхне тĕрĕсленĕ кавар.

Çавăн чухне çакă хăйсен юратăвĕшĕн чи пысăк тĕрĕслев пулчĕ тесе шутланăччĕ Таня. Йăнăшрĕ... Умра тĕрĕслевсем пĕрре кăна мар пулассине пĕлмерĕ.

Чи пысăк тĕрĕслевĕ вара Иван салтака кайни пулчĕ. Ун витĕр хĕр юратăвĕ тухаймарĕ. Хуçăлчĕ те сӳнчĕ. Мĕншĕн çапла пулса тухнине Таня ун чухне те, тепĕр тесен, халĕ те ăнланаймасть. Пурте хăвăрт, пăтрануллă пулса иртрĕ. Темĕн пулчĕ вăл... Çиçĕм пек йăлтăртатрĕ те хĕр шăпине синкерлетрĕ.

Иванăн салтак ячĕ тухни хĕрпе каччăшăн кĕтменлĕх пулмарĕ. Ăна вĕсем кĕтнĕ. Паллах, уйрăлу çăмăл иртмерĕ, анчах куççуль таврашĕсĕр. Макăрма вăхăчĕ çитмерĕ. Кунĕпех, çĕрĕпех уйрăлмасăр çӳрерĕç вĕсем. Калаçрĕç, аса илчĕç, шӳтлерĕç те кулчĕç. Ара, пур-çке вĕсен мĕн çинчен аса илмелли, мĕнрен кулмалли. Пур... Кайран, ир çинче, Таня Ивана военкомата çитиех ăсатса ячĕ. Иван кунта та чарăнми шӳтлерĕ, пурне те култарчĕ. Хăй хыçĕнчен пысăк тимĕр алăк хупăниччен пĕр самант маларах çеç текех шӳтлемесĕр савнă хĕрĕ еннелле çаврăнчĕ.

— Таня! Уйрăлма вăхăт çитрĕ, — терĕ вăл хĕре куçран пăхса. — Пĕлетĕп, кĕтме çăмăл мар, анчах ан ман: эпĕ сана питĕ вăйлă юрататăп. Сансăр мана япăх пулать. Ан ман çакна.

Таня манмарĕ. Тимĕр хапха хупăннă-хупăнман кĕте пуçларĕ. Кĕтсе илессине пĕлсе, хăй юратăвне шанса...

Кĕтнĕ чух вăхăт хăвăрт шумасть. Кашни кун, кашни минутра Иванпа пĕрле пулма хăнăхнă Таньăна вара вăхăта савнă каччисĕр ирттерме пĕртте çăмăл пулмарĕ. Тепĕр чух ним патне ал пымасть, ниçта ларма-тăма пĕлмелле мар. Темĕнле канăçсăрлăх, тунсăх чунра. Килте, тăвата стена хушшинче, çак тăвăрлăх татах та ӳсет. Çавăнпах Таня нумаях пулмасть Иванпа юнашар утнă сукмакпа таса хире çул хыврĕ. Кашни каçах. Халăх çине, клуба, тухас кăмăл пулмарĕ унăн. Хăй çумне сухăр пек çыпăçакан Вася куçĕ умне лекес килмерĕ.

Сыхланакана турă сыхлать теççĕ те, шăпаран иртеймĕн çав. Таня темле тăрăшсан та Васьăпа хирĕçсе каяссинчен сыхланса çитерейменрĕ. Пĕрре, каçпа хăйĕн хăнăхнă сукмакĕпе уçăлса çӳренĕ чух, пырса тăрăнчĕ вăл ун çумне. Тĕрĕсрех, вĕсен çумне. Таньăран пĕр класс каярах вĕренсе пынă Любăпа пыратчĕ вăл. Клубран таврăнатчĕç-ши е ахаль уçăлса çӳретчĕç? Вĕсене маларах асăрханă пулсан Таня çул айккине пăрănса пытаннă пулĕччĕ. Анчах шухăшпа асаилӳсен авăрне путнă хĕр хирĕç килекенсене ик утăм юлсан çеç асăрхарĕ. Ăçта тарса пытанăн ĕнтĕ ун пек чух?

— Ак тамаша! Тĕпсакайĕнче пурăнакансем те çутта туха пуçланă тем? — хăй умĕнче Таня пулнине курсан тӳрех ун çине сиксе ӳкрĕ Вася. Юнашар Люба тăнине те манса кайрĕ. — Хăй тата анис улма пекех хĕп-хĕрлĕ, пачах та шурса кайман.

Хĕр Вася сăмахĕсене илтмĕш пулчĕ. Сукмак çинчен пăрăнса иртсе кайма пăхрĕ. Кап! ярса тытрĕ ăна каччă. Хăй çумне туртса илчĕ.

— Шурса кайман та чĕлхине вара çăтнах курăнать, чĕвĕл чĕкеç, — йĕкĕлтеме пăрахмарĕ Вася.

— Яр! Мĕн пăтрансах кайрăн? — каччă ытамĕнчен хăтăлма пăхрĕ хĕр.

— Ай-ай! Калаçма та пĕлет-çке. Апла, тен, ăшшине те çухатман-ха, — ахăрса хĕре вăйлăрах ыталарĕ сĕмсĕр каччă. Вăл ӳсĕр иккен: эрех шăрши сăмсана шар пырса çапрĕ.

— Яр терĕм-иç, — тарăхса кайнине пачах пытармасăр калаçрĕ Таня. — Яр, атту...

— Мĕн атту? Мĕн? — çаплипех ахăрчĕ Вася. — Атту сыхлавçă «упăшкуна» евитлесе парап тесшĕн-и?

Таня самантлăх çухалса кайрĕ. Чăнах, мĕнпе хăрата-ять вăл çак пуçтаха? Ним калама пĕлмелле мар. Чĕлхе çине çеç шанма тивет. Хул-çурăм вăйĕпе илейрес çук.

— Сыхлавçă «упăшку» çак самантра çинçе пилĕклĕ чи-перккене ăшăтать тем. Эсĕ вара «читлĕхре» пурăнан.

Çат! çутăлтарса ячĕ Таня пĕр чарăнмасăр пакăлтата-кан каччăна. Кĕтмен çĕртен пулнăран лешĕ тайăлсах кайрĕ. Хĕре вĕçертрĕ. Вăл тата темĕн каласшăнччĕ. Таня сăмах чĕнме памарĕ. Çăвар уçнăскерне пĕтĕм вăйран тĕртсе ячĕ. Вася мĕн çумне пырса çапăнассине те уямарĕ.

Хăйпе ӳсĕр каччă хушшинче пулса иртнине Таня çав самантрах манма тăрăшрĕ. Çапах шутламасăр каланă сăмахсене манаймарĕ. Темшĕн вăл вĕсене кайран та çине-çинех аса илчĕ.

Çак ĕç хыççăн хĕр урама пачах тухми пулчĕ. Пĕтĕм пушă вăхăта килте ирттерчĕ. Çыхрĕ, çĕлерĕ, тĕрлерĕ. Ал-ĕç патне чун выртмасан сăвă кĕнеки вуларĕ. Е хăйĕн савнă Иванĕ патне вăрăм-вăрăм çырусем çырчĕ. Кашни каçах. Хурав кĕтсе илмесĕрех.

Çĕнĕ çул каçне те Таня пĕччен ирттерме хатĕрленчĕ. Тăванĕсемпе те, юлташĕсемпе те мар — пĕччен. Анчах уяв шутланă пек иртмерĕ. Пачах вăл шутланă пек мар.

Çур çĕр çитиччен тăват сехет маларах ун патне Люда пырса кĕчĕ. Вăл Таньăна клуба илсе тухма кĕнĕ иккен. Çакă хĕре самаях тĕлĕнтерчĕ. Ара, мĕнле тĕлĕнмĕн-ха кун-та? Людăпа Таня çывăх туссем мар-çке. Хăçан та пулин юнашар ларса калаçни те пулман. Пĕр-пĕрне евĕклĕхшĕн çеç сывлăх суннă. Вĕсене нимĕн çыхăнтарман. Тен, То-лик? Людăн пиччĕшĕ. Вăл пĕр вăхăт Таньăпа çӳреме хăтланса пăхрĕ. Анчах май килмерĕ. Çавăнпах хăйне кĕтмен çĕртен Люда чĕнме кĕнинчен те, çапла тилмĕрсех ӳкĕтлениинчен те питĕ тĕлĕнчĕ. Люда вара ун кăмăлĕ пул-маннине пăхмарĕ: клуба тухма чĕнчĕ, хаваслă уявпа илĕртрĕ. Таня ăна хирĕçлерĕ-хирĕçлерĕ те — килĕшрĕ. Илĕртӳ ытла пысăк пулчĕ çав.

Хĕрсем клуба пырса кĕнĕ чух унта халăх лăк тул-личчĕ. Пурте пĕрле, çав вăхăтрах кашни хăйĕн ушкăнĕн-че ташлатчĕç çамрăксем. Таня кунта пурне те паллать.

Пĕр ялсем. Толик та пур. Каччăсем вĕсене хаваслăн саламласа кĕтсе илчĕç. Темшĕн пĕрре Толик çине, тепре Таня енне пăхса йăл-йăл кулчĕç. Темĕн систерсе куç хĕсрĕç. Таня çакна пĕтĕмпех асăрхарĕ те, асăрхамарĕ те. Мĕн курнинче нимĕн тĕлĕнмелли курмарĕ. Пурте хаваслă — çавă кăна.

Сехет йĕпписем васкаса çур çĕр çитнине кăтартрĕç. Çĕнĕ çулччен вăхăт нумаях та юлмарĕ. Клубри халăх салана пуçларĕ. Ара, сехет вун икĕ хут çапнине тулли кĕрекере шампань эрехĕ çĕклесе кĕтсе илме самай асамлăрах-çке. Кайран вара каллех клуба ташласа савăнма тухма пулать. Хăть ирчченех...

Таня та килелле кайма пуçтарăнчĕ. Никама систермесĕр тухса каясшăнччĕ вăл. Хăй тăр пĕччен таврăннине никама кăтартмасăр. Пулмарĕ. Ташă каçĕпех юнашар пулнă Толик пĕччен кăларса ямарĕ, ăсатса ярасшăн пулчĕ. Хĕр хирĕçлерĕ. Анчах часах килĕшрĕ. Унăн пачах пĕччен утас килмерĕ. «Мĕн пулать ара Толик пĕрре ăсатса янишĕн? Нимĕн те», — çапла шухăшларĕ вăл. Ним усалли çинчен аса илмесĕр каччăпа юнашар утрĕ.

Ĕнтĕ сехет вун иккĕ çапиччен шутлă минутсем юлчĕç. Таньăпа Толик васкаса, чупнă пек хăвăрт утрĕç. Акă каччă пурăнакан урама та çитрĕç. Тĕттĕм тăкăрлăка кĕчĕç. Кунта таçти муртан вĕсен умне тăваттăн сиксе тухрĕç. Хĕр «ай» теме çеç ĕлкĕрчĕ. Тĕттĕмлĕхрен тухнисем ăна темĕнпе витрĕç те таçталла çĕклесе кайрĕç. Мĕн пулса иртнине ăнланайман Таня кăшкăрма та пултараймарĕ. Чĕри çеç ырра мар систерсе ыратса илчĕ.

Тем самантран хĕре ура çине тăратрĕç, пуç çине витнĕ çиттине илчĕç. Тĕттĕмрен çутта тăрук тухнăран Таня нимĕн те курмарĕ. Кĕçех ăнланчĕ: ăна вăрласа кĕнĕ. Вăрт çаврăнчĕ хĕр алăк еннелле. Тухса тарма пăхрĕ. Май килмерĕ. Вăрласа килнĕ каччăсем кăларса ямарĕç.

Макăрса та, кăшкăрса та, ӳкĕтлесе те, ылханса та пăхрĕ Таня. Усси пулмарĕ — кăларса ямарĕç. Виçĕ кун пурăнчĕ хĕр Толик патĕнче. Виçĕ кун йăлăнчĕ, виçĕ каç ылханчĕ. Виçĕ кун та виçĕ каç ӳкĕтлерĕ Толик. Тăваттăмĕш кунне вара алăка уçрĕ.

— Таня, юлашки хут ыйтатăп. Пул ман арăм. Ял халăхĕ умĕнче эсĕ пурпĕрех ĕнтĕ манăн, — терĕ вăл.

— Ял халăхĕ умĕнче мар, эп хам умра таса пулни мана кирлĕрех. Эпĕ сана пачах та юратмастăп. Е санăн кашни самантра урăххи ҫинчен ĕмĕтленекен арăмпа пурнăҫа ĕмĕрлес килет-и? — ĕнтĕ ӳкĕтлесе те, ылханса та мар калаҫрĕ Таня.

— Кай...

Таня киле таврăнчĕ. Анчах тăван килте те, ял ҫинче те ăна ăнланмарĕҫ. Пулнине пулман, пулманнине пулнă пек туса мĕн кăна каламарĕҫ-ши. Хăшĕсем вăрттăн, теприсем куҫранах. Кашни кĕтесрех. Таньăна мĕн таран йывăр пулнине пĕри те асăрхамарĕ. Ял халăхĕ ҫеҫ-и? Хăйне ҫуратса ӳстернĕ амăшĕ те унăн сассине илтмерĕ, хĕрĕ мĕн каланине мар, ял ҫинчи элеке тимлерĕ. Ҫăмăл пулмарĕ Таньăна. Унăн мĕн илтнине итлемесĕр, мĕн курнине курмасăр пурăнма киврĕ. Ахальлĕн пĕччен усал тĕнчене епле хирĕҫ тăрайăн?

Вăхăт иртсе пычĕ. Элекҫĕсем Таня пурри ҫинчен мана пуҫларĕҫ. Анчах хĕр ир лăпланчĕ курăнать. Инкек тени ăна хыҫран пĕр шит юлмасăр хăваларĕ. Хăй юратăвне упраса хăварма тăрăшаканскерĕн чунне тăвăрлатрĕ, амантса ыраттарчĕ.

Ял ҫинче Таня ятне асăнма та пăрахрĕҫ. Шăпах ҫак вăхăтра Толик аварие лекрĕ. Машина ҫапса кайнă ăна. Такампа та пулма пултаракан инкек. Апла пулин те ял халăхĕ ҫак ĕҫе тӳрех Таньăпа ҫыхăнтарчĕ. Хĕр хăйне тирксе качча тухманшăн хуйхăрнипе хăй ҫине алă хума тăнă имĕш Толик. Ҫавăнпах машина урапи айне сикнĕ. Хĕр мăшкăлне тӳсеймесĕр...

Тин кăна кăшт лăпланнă Таня чунĕшĕн ҫакă ҫĕнĕ пăлхану хумĕ пулчĕ. Иванран тахҫантанпах ҫыру ҫукки ăна пушшех вăйлатрĕ. Иккĕленӳ ҫуратрĕ. Ҫак кунсенче вăл темшĕн тахҫан Вася каланă сăмахсене час-часах аса илчĕ. Вĕсем ир тăрсан та, каҫ выртсан та хăлхара янăрарĕҫ. Хĕр ҫакна нимĕнпе сиреймерĕ.

Юлашки тумлам тени пĕр ял хĕрĕ Света ячĕпе янă Иван ҫырăвĕ пулчĕ. Света кĕнеки ăшĕнче тупрĕ ҫырăва Таня. Те юри, те ăнсăртран чиксе хунă ăна. Кăна хĕр пĕлмерĕ. Пĕлесех те килмерĕ. Ахаль те тамăкри пек пурăнаканскер ҫак ҫыру хыҫҫăн пуҫĕпех ăссăрланчĕ пулас. Ҫырура мĕн ҫырние те вуламарĕ-ҫке вăл. Вулаймарĕ.

Анчах хӑйне нӗрсӗррӗн сутнӑн туйрӗ. Хӑйне тата хӑйсен юратӑвне.

Толик патӗнче больницӑра Таня темиҫе хут та пулчӗ. Ҫапах та ун патне кӗмерӗ. Чирлисем патне килнисем хушшинче ларчӗ-ларчӗ те тухса кайрӗ. Кӗрес тесен те ӗнтӗ миҫемӗш кун тӑнсӑр выртакан Толик патне кӗртместчӗҫ ӑна. Кӗрес тесен те...

Толик больницӑра самаях выртрӗ. Киле килсен те вырӑн ҫинчен тӳрех ҫӗкленеймерӗ. Каччӑ больницӑран тухиччен Таня унпа курса калаҫрӗ-калаҫрех. Мӗскӗнленмесӗр, нимшӗн те каҫару ыйтмасӑр. Калаҫу ҫӑмӑл пулмарӗ. Юлашки вӑхӑтра мӗн пулса иртни хӗре кӑна мар, каччӑна та сӗртӗнмесӗр иртмен иккен. Паврама юратакансем ун ятне те чылаях «ӑмланӑ».

— Эпӗ сана вилсе каяслах юрататӑп, анчах хама хам вӗлерме шутламан та, — калаҫу хӑй аварие лекни пирки тапрансан пӗлтерчӗ Толик. — Юрату пурнӑҫ парнелет — вилӗм мар...

Калаҫма нумай калаҫрӗҫ, хӗр чӗри пурпӗрех ҫӑмӑлланмарӗ. Хӑйне ҫаплипех темшӗн айӑплӑ туйрӗ вӑл. Ҫак туйӑм кайран та сӗвӗрӗлмерӗ. Сӗвӗрӗлме терӗн... Кунранкун вӑйланчӗ пулӗ. Толик ҫаплах ура ҫине тӑрайманни, Иванран миҫемӗш эрне ӗнтӗ хыпар пулманни чуна йывӑрлатрӗ. Сӗрӗм тивнӗ хыҫҫӑнхи евӗрех пурӑнчӗ вӑл.

Кун хыҫҫӑн кун иртрӗ. Пӗррехине вара Таня никамран ним ыйтмасӑр, никама нимӗн каламасӑр Толиксен килне кайрӗ. Ҫав каҫ вӑл ашшӗ-амӑш килне таврӑнмарӗ, каччӑ килӗнчех юлчӗ.

Ҫапла качча кайрӗ Таня. Ҫапла Толикӑн саккунлӑ арӑмӗ пулса тӑчӗ.

## 7

Вӑхӑт иртрӗ. Куна кун, эрнене эрне улӑштарчӗ. Киле таврӑннӑ хыҫҫӑнхи пӑлханулла вӑхӑт таҫта хыҫа юлчӗ. Кунсем хӑйсен яланхи еккипе улшӑнса пычӗҫ. Ни васкамасӑр, ни тӑхтамасӑр. Ӗнтӗ Иван салтакран таврӑнни кӳршӗ-аршӑсемпе пӗлӗш-тӑванӗсене те хумхантарма пӑрахрӗ. Каччӑ хӑй те ирсерен «Подъем!» тесе кӑшкӑрса тӑратнине манса амӑшӗн ҫепӗҫ те лӑпкӑ сассипе вӑранма

хăнăхса çитрĕ. «Тревога!», «В ружье» тенисем те асра усал тĕлĕк пек çеç тăрса юлчĕç.

Иван хăй пурнăçĕн çак сыпăкне часрах манма тăрăшрĕ. Ăна тискер е усăсăр ирттернĕ вăхăт тесе шутланăран мар, асилӳсем ытла йывăр пулнăран. Санран виç утăмра пыракан салтак кĕтмен çĕртен снайпер пульли çине пырса кĕрсе хуçăлнине, хăв аллунти юнпа чыхăна-чыхăна кайса тем пăшăлтатакан тусун сенкер тӳпе пек янкăр куçне аса илни чуна хавхалантармасть. Анчах çакна манма та çăмăлах мар. Ирĕксĕрех ун вырăнĕнче эпĕ пулма пултарнă-çке текен шухăш пуçра вĕлтлетет. Пулма пултарнă... Иван нихăçан та такам çурăмĕ хыçне пытанман. Суккăр пуля çумран пăрăнса иртнишĕн ун айăпĕ çук. Çук, куншăн мар... Куншăн мар хăйне айăплă туять каччă. Паян вун саккăр тултарса Тăван çĕршыва сыхлама каякан салтаксем мирлĕ пурнăçрах вуншарăн, çĕршерĕн пуçĕсене хуни чунра айăп туйăмĕ çуратать. Вăрçă тесен вăрçă мар... Анчах киле цинк тупăкра таврăнакан салтаксен шучĕ кунран-кун ӳсет. Кам айăплă? Кунта Иванăн та, ялсемпе хуласенче ывăлĕсене кĕтекенсен те, кĕтменнисен те айăпĕ çук. Çав вăхăтрах пурте айăплă! Ĕнер çеç ача шутĕнче çӳренĕ çамрăксене çапла шутламасăр вилĕме хирĕç хăваласа кайнине курса тăрсах сăмах чĕнменнишĕн айăплă. Эпир айăплă.

Ку çеç мар-ха. Ку çеç мар канăçсăрлантарать каччăна. Чунĕнче темĕнле ăнлантарма йывăр пушăлăх пуррине туять вăл. Çак туйăм ĕнер е виçмине çуралман. Чылай маларах. Савнă хĕрĕ урăххин арăмĕ пулса тăнине пĕлсен темĕн татăлчĕ унра. Тĕттĕм пушлăха путрĕ. Ăна каччă чунĕпе çеç мар, пĕтĕм кĕлеткипе туйса тăрать. Пушлăх. Вĕçĕ-хĕррисĕр пушлăх.

Укăлча хапхи умĕнче тĕл пулнă хĕрарăмра савнă Таньăна палласа илейменни те ăнсăртран пулмарĕ пуль çав. Пачах ăнсăртран мар. Çунса кайнă юрату кĕлĕпе пĕрле асран çывăх сăн та çухалнă курăнать. Манăçнă. Е çук. Тĕксĕмленнĕ, анчах пуçĕпех çухалман. Ахальтен мар Иван хăй çӳрес çулĕ ял вĕçнелле пачах выртман çĕртен кунне темиçе хут вĕсен çурчĕ умĕпе иртет. Ахальтен мар киле таврăнсан илнĕ Таня çырăвне, ĕнтĕ çĕтĕлме те ĕлкĕрнĕскере, татах та татах вулать. Хăй те ăнланмасăр темĕн шырать.

Акă халĕ те вăл ун аллинче. Кашни йĕркине, кашни сăмахне, кашни сас паллине пăхмасăр пĕлекен çыру.

«Ваня! Эсĕ манăн çырăва алла илмесĕрех çухатма, çурса тăкма е çунтарса çилпе вĕçтерме пултарăн. Çапах ыйтатăп — ан васка! Вуласа тух. Вĕçне çитиех. Эпĕ ĕнтĕ эсĕ мана каçарма пултарасси пирки ĕмĕтленместĕп. Манăн сан умра нимĕнле айăп çук пулсан та. Анчах шанатăп: ăнланма тăрăшăн. Çакна кăна шанатăп. Шанман пулсан çак йĕркесене те çырман пулăттăм», — тесе пуçланă çырăва.

Иван самантлăха чарăнчĕ. Куçне хупрĕ. Малалла вуламарĕ. Тĕрĕссипе, вуларĕ, анчах сăвă калană пек пăхмасăр, хăйĕн асĕнчен. Çапла вулана май мĕн çырнине куçĕ умне кăларса пычĕ.

Нумай çырнă Таня. Нумайăйи çинчен аса илнĕ... Иван военкомат алăкĕнчен кĕрсе кайнă самантран пуçласа укăлча хапхи умĕнчи тĕлпулу таран. Хăйĕн кашни утăмне, мĕнпур шухăшне.

Каччă çырăва вĕçне çитиех çапла куçне уçмасăр, хăй асĕнчен вуласа тухрĕ. Юлашки пăнчă таранах. Пурте уçăмлă, пĕтĕмпех ăнланмалла. Иван хĕрĕн шухăш-кăмăлне, мĕн калас тенине веçех ăнланчĕ пек ĕнтĕ. Анчах темшĕн ун чĕри çаплипех: «Мĕншĕн? Мĕншĕн юратăва упраймарăн?» — тесе пăлханчăклăн тапрĕ. Мĕн ку? Ыйту е ўпкелешў? Тўрех калаймăн. Тен, ыйту та, ўпкев те — пурте пĕрле. Çапах каччă Таньăна ўпкелемерĕ. Такама, теме — анчах ăна мар. Пачах урăхла. Ытларах хăйне, пĕр хăйне айăпларĕ. Айăпне те, сăлтавне те хăйĕнче шырарĕ.

Иван хăйĕнпе мĕн пулса иртнине ăнланаймарĕ. Çак самантра Таньăна пĕтĕм чĕререн курайми пулнă пулсан ăна чылай çăмăлтарахчĕ. Анчах ытла вăйлăн та черченнĕн юратнăран кăшт çеç кураймасăр тăма та пултараймарĕ. Каялла таврăнма май çук. Кăна вăл пĕлет. Малашлăх та ытла тĕтреллĕ-çке! Нумаях пулмасть унăн кашни утăмĕ, пĕтĕм ĕмĕчĕпе шухăшĕ Таньăпа, пĕр Таньăпа çыхăннăччĕ. Халĕ çакă çук. Пурнăç вара малаллах шăвать. Иванăн та пурăнмалла. Пурнăçне çĕнĕрен йĕркелемелле. Анчах мĕнле?

## 8

Тук, тук! Тук, тук!

— Такам алăка шаккать мар-и? — хыттăн кĕрлекен магнитофон сассине кăшт пĕчĕклетсе сăмах чĕнчĕ Диана.

— Çук пуль. Хăнасене килме иртерех-ха. Иван килес тĕк хăй уçса кĕрет — уçă пур унăн, — газ плити çинче пиçсе пыракан апата тутанса пăхнă май сăмахларĕ Рая.

Диана чĕнмерĕ. Хăлхи урăхла илтрĕ пулас.

Тук, тук! — ун иккĕленĕвне сирсе янраса кайрĕ пӳлĕмре.

— Ай-уй, килсе çитрĕç-ши? Пирĕн вара нимĕн те хатĕр мар, — тӳрех хыпаланса ӳкрĕ Рая. — Алăка эсĕ уç-ха. Эпĕ кунта тирпейлем.

Диана ума çакнă саппунне салтса алăк уçма утрĕ. Тĕкĕр умĕпе иртнĕ май çӳç-пуçне якаткаларĕ.

Тук, тук!

Хĕр алăка уçрĕ.

— Хĕрсем, эсир çыврăрсах кайман пулĕ те унта, плита умĕнче? — Диана мĕн те пулин калама ĕлкĕриччен хушса хучĕ Иван. — Алсем йăтăнса анаççĕ. Пулăш-ха, — хăй аллинчи сумкăсемпе пакетсен пĕр пайне хĕре тыттарчĕ вăл. — Роберт, мĕн эсĕ алăк урлă та каçаймастăн. Айта, айта. Ирт.

Диана тинех Иван пĕччен маррине асăрхарĕ. Пуçне çĕклерĕ те пĕр вĕриленсе, пĕр пăлханса кайрĕ. Пит çăмартийĕсем хĕмленсе çуннине туйса илчĕ. Анчах çав самантрах хăйĕнпе темĕн пулса кайнине пытарма васкарĕ. Килнĕ каччăсене алăкран кĕме çул парам пек туса тĕттĕмрех кĕтеселле пăрăнчĕ.

— Паллашăр. Ку — Диана, ман аппан çывăх тусĕ, — хĕрпе пулса иртнĕ улшăнăва вуçех асăрхамасăр каччăпа паллаштарма пуçларĕ Иван. — Ку — Роберт, ман юлташ. Пирĕн кӳршĕ ялсем.

Халĕ ĕнтĕ килнĕ каччă та Диана çине сăнаса пăхрĕ. Вăл та ăна палларĕ курăнать. Тутине кулăпа çиçтерсе темĕн калама пăхрĕ. Анчах Диана сăмах чĕнтермерĕ. Хыпаланса аллине тăсса пачĕ.

— Салам. Паллашма хавас, — терĕ вăл. Куçĕ вара: «Ан чĕн! Палланă ан пул!» — тесе çиçрĕ.

— Салам, — те хĕр куçĕ мĕн каланине ăнланнăран, те урăх сăлтавпа тек нимĕн те каламарĕ Роберт.

Ытти хăнасем килсен те, сĕтел хушшинче вырнаçса ларсан та Дианăпа Роберт хăйсене тин çеç паллашнă пек тыткаларĕç. Пĕр-пĕринпе сахал калаçрĕç, темрен именчĕç. Уйрăмах Диана.

Часах пĕрремĕш ташă кĕвви янăраса кайрĕ. Сĕтел хушшинчи çамрăксем мăшăрланса ташă картине тăчĕç. Дианăна хăйпе хирĕçле ларнă Роберт ташша илсе тухрĕ.

— Салам, — пăшăлтатрĕ каччă ташла пуçласан.

Диана ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ:

— Эпир санпа паçăрах пĕр-пĕрне сывлăх сунмарăмăр-им?

— Паçăр саламлани вăл — саламлани мар. Ют çынсем пек.

— Эпир санпа тăвансем-им тата?

— Тăваннине тăван мар та, анчах вуçех палламан çынсем те мар, — хĕре хăй çумне çупăрласа куç хĕсрĕ каччă.

— Паллама паллатпăр та — кун çинчен ытлашши çын пĕлмесен лайăхрах, — Роберта куçран тӳррĕн пăхрĕ Диана. — Итле-ха. Манса кай пирĕн тĕлпулусем çинчен. Мана та аса ан илтер, — терĕ вăл тепĕр самантран.

— Мĕншĕн? Эпĕ сана темпе кӳрентермерĕм пулĕ те?

— Çук... Кӳрентермен.

— Апла мĕншĕн?

— Манăн аса илес килмест. Урăх нимĕн те ан ыйт.

Роберт текех сăмахламарĕ. Ташă тăршшĕпех çапла калаçмасăр çаврăнчĕç вĕсем. Каччă кӳренчĕ курăнать.

— Йывăра ан ил. Каярах эпĕ сана веçех ăнлантарса парăп. Халĕ нимĕн те ан ыйт, — терĕ Диана ташă кĕвви вĕçлениччен пĕр самант маларах.

— Хăçан?

— Кайран.

Ташă вĕçленчĕ. Малалла çĕнĕ кĕвĕ янăрарĕ. Хĕр Роберта тав туса ташă картинчен тухрĕ. Тĕксĕм пӳлĕмĕн чи тĕттĕм кĕтесĕнче ларакан диван çине кайса вырнаçрĕ. Ытлашши савăнас кăмăл пулмарĕ унăн.

— Каçарăр та, эпĕ çакăнта ларсан сире чăрмантармастăп-и? — Диана çине айăпа кĕнĕ шкул ачи пек пăхса ирĕк ыйтрĕ тахăш самантра пырса тăнă Петĕр.

— Тархасшăн. Вырăна сутăн илмен эп, — кулса ярас-

ран хӑйне аран-аран тытса чарса хаваслӑн каласрӗ Диана. Хӑйӗн пӑсӑк кӑмӑлӗ пӗр самантрах ҫапла уҫӑлса кайнинчен тӗлӗнчӗ хӗр. Унӑн ҫак каччӑпа татах та татах калаҫас килчӗ. Каччӑ вара хӗрӗн калаҫас кӑмӑлне кӑна мар, хӑйне те тек пачах асӑрхамарӗ. Тен, асӑрхасшӑн пулмарӗ. Ҫакӑ Дианӑна тата вӑйлӑрах кӑсӑклантарса ячӗ. Вӑл каччӑ ҫине вӑрттӑн-вӑрттӑн пӑха-пӑха илчӗ, хӑлхипе куҫӗ пӗр ӑна ҫеҫ тимлерӗҫ.

Петӗре Диана ним чухлӗ те пӗлмест. Рая патне хӑнана та вӑл ӑнсӑртран ҫеҫ лекнӗ пулас. Рая савниййӗн юлташӗ пек паллаштарчӗҫ унпа паҫӑр. Питӗ лӑпкӑ, ытла та лӑпкӑ каччӑ. Пачах арҫынла мар. Йӑрӑлӑхӗ те ҫук. Пӗрре пӑхсан йывӑр чирпе асапланакан нишлӗ ҫын пекех курӑнать вӑл. Пӗртте чӗрӗ ҫын евӗр мар.

Ак халӗ те диван кӗтессине ларчӗ те тӳрех никама курми, илтми пулчӗ. Кӗлетки ват ҫыннӑннилле кӑшт пӗкӗрӗлнӗ, куҫӗ пуш-пушӑ. Диана вилнӗ ҫын куҫне курман. Анчах темшӗн Петӗрӗнне унӑн вилӗ куҫ теес килчӗ. Чӑннипех те вилӗ вӗсем: пӗр туййӑм, пӗр пӑлхану палӑртмаҫҫӗ. Ӑшӑ та, сивӗ те мар. Илемлӗ, кӑвак, пушӑ куҫ. Халӑхра куҫ чун тӗкӗрӗ теҫҫӗ. Петӗр чунӗнче ҫапла хӑрушла пушлӑх-ши вара? Ытла хӑрушла...

Диана хӑйпе ҫумӑн ларакан каччӑпа сӑмах пуҫарма хӑтланса пӑхрӗ. Кӑлӑхах. Петӗр «ҫапла», «ҫук» тенисӗр пуҫне ытлашши пӗр сас кӑлармарӗ.

— Итле-ха, Рая. Мӗнле каччӑ вӑл Петӗр? — тусӗнчен ыйтрӗ пылак шыв илме сӗтел патне пынӑ Диана.

— Эпӗ хам та пӗлместӗп. Турра пӗтӗм чунтан ӗненнине ҫеҫ калама пултаратӑп. Мӗн вара? Кӑмӑла кайрӗ-им?

— Кайма кайман та — интереслентерсе ячӗ.

— Ну, ну! Интересленсе пӑх, — тусне ыталаса кулчӗ Рая. — Анчах ӑна ниепле калаҫтарма пӗлмелле мар. Чул стена пекех чӗмсӗр.

Диана хӑй вырӑнне таврӑнма васкарӗ. Петӗр ӗнтӗ диван ҫинче пӗччен марччӗ. Унпа юнашар Роберт ларать. Каччӑсем тем ҫинчен тавлашаҫҫӗ. Авӑ Петӗр мӗнле хӗрӳллӗн калаҫать. Тӗлӗнтермӗш! Диана паҫӑрхи Петӗр ҫапла чӗрӗлсе каясси пирки шухӑшламан та. Чӑннипех тӗлӗнмелле.

— Çын хӑй телейне хӑй туптать теççӗ пулин те, эпир пурте турӑ айӗнче çӳретпӗр. Пире унран иртме пӳрмен.

— Эп мӗн туни пӗтӗмпех турӑ ирӗкӗнче пулсан, манри усал та унранах пулӗ? — йӗкӗлтеш сасӑпа ыйтрӗ Роберт.

— Çӗр çине пурте пӗрешкел таса та ырӑ пулса килеççӗ. Çын хӑйне хӑй пӑсать. Турӑ умӗнче те, хӑй умӗнче те пысӑк çылӑха кӗрет. Чи малтанах хӑй умӗнче, — çаплипех хӗрӳллӗн калаçрӗ Петӗр.

— Чим-ха, чим. Хӑй умӗнче çылӑха кӗрет терӗн. Мӗнле ӑнлантаран эсӗ çакна? — Петӗре чарсах ыйтрӗ Иван. Магнитофон пӗчченех тӑлӑххӑн кӗрлесе ларать иккен — ташлакансем çук. Пурте Петӗрпе Роберт тавра пухӑннӑ.

— Çапла. Хӑй умӗнче çылӑха кӗрет. Чунӗ мӗн ыйтнине, мӗн тума пултарнине пӗлмесӗр. Ун сассине илтмесӗр. Этем хӑйӗн ӑсӗпе — кунран-кун çивӗчленсе, хаярланса, хӑюланса пыракан ӑсӗпе — чунне сывлама памасӑр пӑвать. Вӗлерет. Чунӗпе пӗрле хӑйӗнчи тасалӑха, çынлӑха вӗлерет...

— Сан шутпа, манра пӗр-пӗринпе кӗрешекен икӗ вӑй пур апла. Чун тата ӑс. Ӑс чунпа пӗрле çынлӑха та вӗлерет пулсан, пуçран катӑккисем чи çынлӑхлисем пулса тухаççӗ. Çӗр çинчи çынлӑха упраса хӑварас тесен пирӗн пурин те ӑсран тайӑлмалла пулать-и вара? — тавлашӑва хутшӑнчӗ Рая.

— Ку вӑл урӑх калаçу. Кунта эпир чӗрӗ-сывӑ çынсем пирки пуплетпӗр. Ӑспа чунӑн пӗр шайра, пӗр виçере тӑмалла. Çавӑн чух кӑна этем хӑйшӗн хӑй канлӗх тупать. Чун ӑсран е ӑс чунран пысӑкрах пулсан çын телейлӗ пулмасть. Чунри туйӑм хумӗ е ӑс-тӑн сивлӗхӗ ӑна вӗлерме пултарать. Вӗлерет те. Ӳт-пӗвне мар пулсан шалти пурнӑç çӑлкуçне.

Диана ларнӑ çӗртен çӗкленчӗ. Кантӑк патне пычӗ. Петӗр мӗн калани пӗтӗмпех хӑй çинчен каланӑ пек туйӑнчӗ ӑна.

— Этем хӑйне, шалти вӑйне тӗпчеме ӳркенет. Çакӑнта унӑн чи пысӑк инкекӗ, — хӑй сӑмахне малалла тӑсрӗ Петӗр. — Хамӑрӑн шалти «эпӗ»не пирӗнтен чылайӑшӗ пачах пӗлмест. Эпир чылай çӑмӑлтарах çул тупнӑ. Хӑрушлӑхран пытанса пуçне хӑйӑр ӑшне чикекен страус пекех хамӑртан хамӑр тарса пытанма пӑхатпӑр. Хамӑртан хамӑр таратпӑр.

Çук, Диана текех итлеме пултараймарĕ. Васкамасăр тăхăнчĕ те хваттертен тухса кайрĕ. Тавлашакансенчен пĕри те вăл кайнине асăрхамарĕ.

## 9

Пĕт-пĕлтĕк! Пĕт-пĕлтĕк!

Диана кĕттерсе тăмарĕ. Алăка уçрĕ.

— Салам, чунăм! Таркăн тусăм! Чĕрĕ-сывах чупатна? — алăк уçăлса кайичченех такмакла пуçларĕ Рая.

— Салам, салам. Ирт хăвăртрах, — тусне хĕмленсе тăракан питĕнчен чуптуса сывлăх сунчĕ Диана. — Эсĕ мĕн пăравус пекех пашкатăн? Хыçран кашкăр хăвалать-им?

— Кашкăр-мĕнне пĕлмерĕм, анчах чипер каччă пыратчĕ вара. Çавна ирттерсе ярас марччĕ тесех чупнă çĕрте чупса, утнă çĕрте утса çитрĕм, — çиелти тумне хывнă май шӳтлерĕ хĕр. — Сирĕн çуртра канмалли кунсенче лифта сӳнтерсе лартасси йăлана кĕчĕ пулас, — терĕ вăл тепĕртакран.

Диана чăтаймарĕ, кулса ячĕ. Ара, юратмасть Рая çуран утма. Паян вара унăн саккăрмĕш хута çитиех хăй уттипе хăпарма тивнĕ.

— Кулах, кул. Кулаканăнне ăçта çыпăçнă теççĕ-ха? — кӳренем пек пулчĕ Рая.

— Ирсерен зарядка тума ӳркеннĕшĕн асап кăтартни кăна вăл пире. Ан хуйхăр, кĕлеткӳ çинçе, рюмка евĕр çинçе, пулĕ, — тусĕн вăййине йышăнса сăмахларĕ Диана.

Хĕрсем иккĕшĕ те харăс кулса ячĕç.

— Эпĕ «рюмка» кĕлеткеллĕ пулсан, эсĕ пичке пек тулса кайăн, — хăйĕн кăшт туллирех кĕлеткине кăтартрĕ Рая.

Шӳтлесе те кулса туссем пӳлĕмелле иртрĕç.

— Ĕнер мĕншĕн тухса тартăн? — кăшт кӳренчĕк саспа ыйтрĕ хăна пӳлĕмре. — Никампа сывпуллашмасăр. Шыраттарса халтан ячĕç вĕт.

— Ай-уй! Кама кирлĕ пултăм-ши эпĕ çав териех?

— Хăв пĕлместĕн-им? Е унăн ятне çине-çинех калаттарас, татах та татах илтес килет-и? Апла калам — Роберта-а! — юлашки сăмахне уйрăмах тăсса каларĕ Рая.

— Роберта? Ăçтан аса илнĕ вара вăл мана?

— Чим-ха, Диана, — тусне куçран пăхрĕ Рая. — Темĕн

пытаратӑн эсӗ манран. А ну, кала-ха! Мӗн пулса иртет унта сирӗн хушӑра?

— Нимӗн те. Итле-ха, Рая, манӑн Роберт ҫинчен те, моберт ҫинчен те сӑмахлас килмест. Урӑх сӑмах ҫук-им пирӗн?

— Юрӗ, юрӗ. Анчах калаҫуран пӑрӑнса юлтӑм тесе ан шутла. Веҫ каласа памасӑр пурпӗрех хӑпмастӑп, — Диана хӑй калас темен чух унран пӗр ытлашши сӑмах ыйтса илейрес ҫуккине пӗлнӗрен текех ҫине тӑмарӗ Рая. — Эсӗ ӑҫта кайма пуҫтарӑннӑ?

— Чиркӗве, пыратӑн-и?

— Чиркӗве-е? — ытла кӗтмен хыпар пулнӑран ҫӑварне те хупаймарӗ Рая. Диана атеист иккенне пӗлекенскершӗн ҫакӑ пысӑк тӗлӗнтермӗш пулчӗ.

— Мӗн хытсах кайрӑн? Е маншӑн чиркӳ алӑкӗ хупӑ-им?

— Ҫук та-ха, анчах... — Рая шӑпланчӗ, мӗн каламаллине пӗлмерӗ.

Пӗчченех утрӗ Диана чиркӗвелле выртакан сукмакпа. Тепӗр чух ӑна кам та пулин хуса ҫитсе е хирӗҫ пулса иртрӗ. Хӗр вӗсене асӑрхамарӗ. Яланхинчен те ерипенрех, тем ҫинчен шухӑша кайса утрӗ. Акӑ чиркӳ ҫурчӗн ылтӑн тӑррисем те курӑнса кайрӗҫ. Яри уҫӑ хапха умӗнче чарӑнчӗ Диана. Тем вӑхӑт кӗрен-тухана сӑнарӗ. Кӗмеллеши е ҫаврӑнса каялла утмалла? Иккӗленӳ, темрен хӑрани хӗре пӗр вырӑнта хӑратса тӑчӗ. Чиркӗве вара ҫынсем кӗчӗҫ те тухрӗҫ. Уҫӑ хапха умӗнче кашниех хӑй ҫине хӗрес хучӗ, пуҫ тайрӗ.

Диана та чиркӳ еннелле ярса пусрӗ. Анчах вӑл хӑй ҫине хӗрес хума та, пуҫ тайма та пултараймарӗ. Пӗлменрен мар, чунӗнчи темӗнле вӑй ӑна ҫапла тума чарнӑран. Чиркӗве те хӗр ҫаплипех пуҫне ҫӳле ҫӗклесе утса кӗчӗ. Васкамасӑр тӳрех куҫ тӗлне пулнӑ турӑш умне пырса тӑчӗ.

«Турӑҫӑм! Эсӗ чӑннипех те пур пулсан, ҫак хут ҫинчи ӳкерчӗк ҫеҫ мар пулсан илтсем ман сасса, — хӑй сисмесӗрех пӑшӑлтатрӗ Диана. — Илтсем...»

Хӗр такӑнчӗ. Малалла мӗн каламаллине пӗлмерӗ. Халӑх, ҫунакан ҫуртасен йывӑр шӑрши унӑн сывлӑш ҫулне картларӗ. Дианӑн тӑруках вӑй пӗтсе кайрӗ, куҫӗ хуралса килчӗ. Вӑл хӑй те сисмесӗр халиччен пӗлмен сывлӑшпа пурӑнакан чиркӳ ҫуртӗнчен уҫӑ ҫӗре сиксе тухрӗ. Усал ӗҫ тунӑ пекех чупсах кайрӗ.

## Иккӗмӗш пайӗ

### 1

— Анне, анне! Кирлӗ мар!.. Ан чик! Чарӑн!.. Ан вӗлер! Ч-а-р-ӑ-н! Хӗрхенсе-е-ем!

Шарт сиксе вӑранчӗ Настя. Ҫамки ҫине сивӗ тар тапса тухрӗ. Ҫурӑмӗ тӑрӑх сивӗ чупса иртрӗ. Ҫывӑрнӑ ҫӗртен ҫапла тӑрук вӑранса кайнӑран хӗрӗн пуҫӗ янӑрарӗ.

Настя вӑранчӗ, анчах хӑрушӑ тӗлӗк серепинчен хӑпаймарӗ. Инҫетри ачалӑх мӗлкийӗ ӑна хӑй ытамӗнчен ярасшӑн пулмарӗ. Аса юлнӑ хӑрушӑ ҫӗр ахрӑмӗ хыҫранах йӗрлерӗ.

Хӗр куҫне хупрӗ. Ним шухӑшламасӑр, ним аса илмесӗр лӑпкӑн ҫывӑрса каяс килчӗ унӑн. Анчах куҫ умӗнчи сӑнсем, хӑлхари тискер сас ҫаплипех лӑпланмарӗ. Миҫемӗш хут ӗнтӗ татах та татах аса килчӗ...

...Илемлӗ те лӑпкӑ тӗлӗк курса ҫывӑратчӗ пилӗк ҫулхи Настя. Тавралӑха пӑрлӑ тӗрӗпе эрешлекен раштав сиввин канӑҫсӑр кӗвви уншӑн сӑпка юрри пекех янӑрарӗ. Кунӗпех урамра выляса чылай ӗшеннӗскершӗн ҫакӑнтан ырри мӗн пултӑр. Лӑпкӑн ҫывӑратчӗ Настя. Анчах тем самантрах ӑна хӑр-хар кӑшкӑрашнипе сӗтел-пукан хыттӑн сас парса хӑй вырӑнӗнчен куҫни тата чунри темӗнле пӑлхану ыйхӑран вӑратрӗ. Ашшӗпе амӑшӗн, вӑл палламан арҫынсен урмӑш сассисем хӑлхана кӗчӗҫ. Хӗр ача ыйхӑллӑ куҫне уҫрӗ. Мӗнле палламан пиччесем килнӗ-ха вӗсем патне тесе пуҫне ҫӗклерӗ. Вӑранмалла марччӗ те ҫав унӑн. Курмалла марччӗ мӗн курнине... Анчах курчӗ — паян кунччен те куҫ умӗнче ҫавӑ.

Икӗ ҫӳллӗ те хуп-хура сухаллӑ арҫын хушшинче тӑракан ашшӗ енчен енне сулӑнать. Хӳтӗленме пӑхать. Ҫийӗнчи шурӑ кӗпи хӗп-хӗрлӗ юнпа пӗвеннӗ. Хаярлӑхпа, ӳкӗтлӳпе ҫиҫекен ахаль чух пӗчӗк куҫӗ хӑрушла пысӑкланса кайнӑ. Читлӗхри чӗрчун пек канӑҫсӑр хускалать вӑл. Тем кӑшкӑрса пӗрре хайне ик енчен тытакан арҫынсемпе умӗнчи арӑмӗ ҫине, тепре ачисем ҫывӑракан вырӑн ҫине пӑхать. Акӑ Настьӑпа ашшӗн куҫӗсем тӗл пулчӗҫ. «Каҫар, хӗрӗм, каҫар... Сана ҫакна курма тивнишӗн каҫар...» — йӑлӑнчӗ ашшӗн куҫӗ. Настя ашшӗ хайне хӑҫан та пулсан ачашланине астумасть. Анчах сӑлтавсӑр ятлани е алӑ

çěклени те пулман. Кăшт шикленетчě пулин те, Настя ăна юрататчě.

Пěчěк те айван хěр ача ашшěне пулăшма тăрас тесе витěннě утияла сирчě. Çак самантра ун еннелле çурăмпа тăракан амăшěн аллинчи вăрăм çěçě выляса илчě. Настя хытса ларчě. Мěн пулнине пилěк çулхи ача ăнланаймарě, анчах хăрушă ěç пуласса туйрě. Ашшěн кěлеткине çивěч çěçě сассăр та хăвăрттăн кěнине курчě. Пěр хутчен кăна мар — çине-çинех темиçе хут...

«Аннеçěм, мěншěн вěлертěн? Мěншěн вěлертěн аттене?» — капланса килнě куççульне çăтрě Настя. Ěнтě вăл тахçанах пилěк çулхи айван ача мар, кăçал вун çиччě тултарса вун саккăра кайрě. Анчах çав хăрушă та вăрăм каç мěн пулса иртнине çаплипех манаймасть. Нихăçан та манаймě.

Мěншěн усал çут тěнче? Е Настьăшăн çеç çапла-ши вăл? Ачалăхě ачалăх пек пулмарě. Синкерлě каçхи ěç хыççăн пилěк çулхи хěр ача пěр самантра ӳссе кайрě. Пěтěм шухăш-туйăмěпе ватăлчě. Хăй çулěнчен маларах çитěнчě. Мěншěн хаяр пурнăç? Настьăшăн хаяр...

— Настя, Настена! Эсě ěсěклеместěн пулě те? — саспах макăрнине илтсе вăраннă Ирина Настя вырăнě çине пырса ларчě. — Мěн пулчě?

Настя чěнмерě. Вăл хăйне тутлăн çывăрнă пек кăтартасшăн пулчě. Анчах нăш-нăш тума чарăнаймарě.

— Настенька. Ну, Настя! Мěн пулчě? — тантăшě сăмахласшăн маррине пăхмасăрах ыйтрě Ирина.

Настьăпа пěр пӳлěмре иккěмěш уйăх çеç пурăнать-ха вăл. Лешěн кăмăлне вара лайăх пěлсе çитнě. Пěрре пăхма кăна пěччен пулма юратнă пек Настя. Анчах ку йăнăш туйăм. Пěчченлěхе хěр кураймасть. Пурнăçăн пěтěм тасамарлăхне, çын чунěн хура туйăмěсене курайман пекех кураймасть. Халě те Ирина хăйне пěччен хăвартăр тесе мар чěнмест вăл. Пачах уншăн мар. Вěри куççулěнчен, хăй вăйсăрлăхěнчен вăтаннипе илтмěш пулса выртать. Тата чун хěлěхě мěншěн ыратса ěнěрленине тӳрех уçса пама çукки те чарса тăрать пуль.

— Каллех усал тěлěк тěлленчě-им? — ыйтрě тантăшě.

— Пулать-ши ман тěлěкěн вěçě-хěрри? — Юлашки шанăç Иринăра пек ун аллине хытă-хытă чăмăртарě Настя. Ирина чутах кăшкăрса ямарě. — Ăçта ун вěçě?

— Лăплан... Лăплансам, — тӳрех ним калаймарĕ Ирина. — Пурнăç çулĕн кукăр-макăрсем нумай. Хăш кĕтессинче мĕн кĕтнине никам та пĕлмест. Лăплансам ĕнтĕ. Сана кура эпĕ те ак макăрса ярăп.

Пĕлнĕ, пултарнă пек лăплантарчĕ Ирина тусне. Лешĕ ерипен-ерипен çывăрса та кайрĕ. Тантăшĕ вара çывăраймарĕ. Ыйхи килменнипе аптрарĕ.

«Аннеçĕм, мĕн туса хутăн эсĕ?» — час-часах саспах ыйтать Настя. Паян вара çак ыйту Ирина пуçĕнче те чăрăнми янăрарĕ: «Аннеçĕм, аннеçĕм! Мĕн туса хутăн?»

Хĕр хăй вырăнĕ патĕнче ларакан пĕчĕк тумбочка çинчи сăн ӳкерчĕке алла илчĕ. Чи юратнă, чи çывăх, чи хаклă çынсен сăн ӳкерчĕкне. Ашшĕпе амăшĕн сăнне. «Анне! Мĕншĕн пăрахрăн? — Алăри ӳкерчĕк витĕр таçта инçете-инçете пăхрĕ Ирина. — Мĕншĕн?» Чарăнми, çинеçинех ыйтрĕ Ирина хăй нихăçан курман, палламан... тăван... амăшĕнчен. Ыйтрĕ. Хуравне илтмерĕ. Ыйтрĕ. Хуравне пĕлмерĕ.

Пĕр пăхсан Ирина пурнăçĕ яка та тикĕс. Хаваслă та телейлĕ ачалăх, çамрăклăх. Ачана мĕн кирли — туслă çемье, юратнă ашшĕ-амăшĕ — пурте пулнă унăн. Халĕ те пур. Настьăна асаплантаракан асаилӳсем те йĕрлемеççĕ ăна. Анчах нумаях пулмасть уçăлнă чăнлăх хĕре кунран-кун вăйлăрах хумхантарать. Вун улт çулччен Ирина «анне» тесе пурăннă хĕрарăм пачах та анне мар, атте те атте мар имĕш. Вăл усрав хĕрĕ, усрав хĕр...

Çук, хăйне пачах та хăрхăм хĕр пек туймасть Ирина. Нихăçан та туйман. Усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕ ăна теприн тăван ашшĕ-амăшĕнчен те вăйлăрах юратать пуль. Ырă кăна сунаççĕ. Анчах юн хăйĕннех тăвать. Хăйĕннех шырать...

Ĕнтĕ тул та çутăлса килет. Ирина çаплипех çывăраймасть. Тĕлĕнмелле япала иккен вăл шăпа тени. Вунултă çул хушши чăнлăха хĕртен пытарчĕ пулсан, мĕншĕн халь тин уçрĕ? Çук. Ку чăнлăх çурри кăна-ха. Тепĕр çуррине Иринăн хăйĕн пĕлмелле. Пĕлмеллех. Кам вăл, ăна пурнăç парнеленĕ хĕрарăм? Ăçта çӳрет халь? Анчах чăнлăх ачаш пулакан мар. Хăйĕн хаклă çыннисене çеç ырattарас марччĕ унăн. Йăнăшас марччĕ.

## 2

— Ирина, Ир! Вăран! Тăрса юлтăмăр...

Ялт! кăна сиксе тăчĕ Ирина. Тарăн ыйхăран сасартăк вăранса кайнăран ним ăнланаймасăр ларчĕ. «Мĕн пулнă? Мĕн пулнă?!» — йăлтăртатрĕ унăн куçĕ.

— Иришка, тĕлĕрсе ан лар. Лекцинчен çывăрса юлтăмăр, — хыпаланса пуçтараннă май сăмахларĕ Настя. Хыпаланма хыпаланчĕ-ха вăл, анчах усси сахалтарах — васкани ал-урана кăна çыхлантарчĕ.

— Уф! Эпĕ мĕн те пулин пулнă пуль тесе, — лăш йăванса кайрĕ вырăнĕ çине Ирина. — Юлнă тăк юлнă. Мĕн аплах ăшталанан? Пурпĕрех тĕрĕслемест вĕт.

— Тĕрĕслемест тесе пĕлмесĕрех юлар-и?

— Ним çĕнни те калас çук-ха вăл. Мĕн сÿпĕлтетнине ыттисенчен те çырса илме пулать.

— Вара мĕн, кунĕпех вырăн çинче йăваланатпăр-и? — Ĕнтĕ Настя та тĕпелĕн-алăкăн кусма чарăнчĕ. Лăпланса пÿлĕм варринче тăчĕ.

— Мĕншĕн кунĕпех? Пăх-ха çанталăкĕ мĕнле ырă. Айта уçăлма каятпăр, — ачашшăн карăнчĕ Ирина.

— Тĕрĕслев ĕçне хăçан хатĕрленетпĕр вара? Пĕр уçăлма тухса кайсан санпа эпир каççăр та çаврăнса çитейрес çук, — çаплипех канăçсăрланчĕ Настя.

— Атăл хĕрне каятпăр. Конспектсене илетпĕр те унта вĕренетпĕр.

— Атăл хĕрне пулсан Атăл хĕрне каяр, — Иринăна хирĕçлеме çуккине кура килĕшрĕ Настя. Унăн хăйĕн те пăчă аудиторинче лекци итлес е пÿлĕмре ларас кăмăл çук. Çамрăк чунĕ уçă çĕре, çут çанталăка туртрĕ. Пĕртте пĕр вырăнта ларас килмерĕ.

Атăл, Атăл... Анлă Атăл. Миçе пин çул юхать пуль вăл! Миçе пин çул. Пурпĕрех илемлĕ те мăнаçлă. Çаплипех илĕртÿллĕ те хăватлă. Мĕнпе танлаштарма пулать ăна? Нимĕнпе те! Юхакан шыва иккĕ кĕреймĕн теççĕ. Çавăн пекех, Атăлăн çак самантри сăнне те икĕ хут кураймăн. Çырана пыра-пыра çапакан кăпăклă хумсем унăн питне минутсерен çĕнетсе, урăхлатса тăраççĕ. Мĕн ачаран Атăл хĕрринче чупса ÿснĕ çын та унăн кăмăлне тĕпрен пĕлсе çитеймест. Иринăпа Настьăшăн вара вăл чăн-чăн юмах.

Паллах, хёрсем пуш хирте çуралса ӳсмен. Анчах Атăл пек анлă юхан шыва вёсем ку таранччен курман.

Акă вăл — куç умёнче! Хăйён пётём мăнаçлăхёпе, пётём илемёпе сарăлса выртать. Кăшт çӳллёрех вырăнта вырнаçнă юрату сăмсахёнчен вара татах та анлăрах курăнать. Атăл енчен вёрекен варкăш çил хăй ытамне илсе кăшт сулхăнрах, кăшт вёрирех хумёпе пуçа çаврăнтарса ӳсёрёлтерет. Тем чул пăхсан та йăлăхтармасть. Тем чул курсан та ывăнтармасть.

— Пăх-ха, Настя! Мёнле илем! Эсё вара пăчă пӳлёмре ларасшăн, — халь-халь вёçсе хăпарас кайăк евёр, аллисене сарса кăшкăрчё Ирина.

— Ай-уй! Ытла хăпартланнипе Атăла кутăн ан сик!

— Сана çак илем те тыткăнламасть-и вара?

— Тыткăнлать, тыткăнлать. Анчах мана ыранхи тёрёслев ёçё унтан та ытларах «тыткăнлать». Айта вырнаçса ларса вёренер, — сумкăран хулăн тетрадь кăларнă май калаçрё Настя.

— Ну, тусăм! Мёнле хут нăрри иккен эс! — шӳтлесе Настьăна аякран кăлт тёртрё Ирина.

— Ай, — йăлт сикрё Настя. Кётмен çёртен пулнăран аллинчи тетрачё сăмсахран аялалла кусса анчё.

— Ой! Мён туса хутăм? — хăй айăпне туйса аванмарланчё Ирина. — Эпё часах анса илетёп.

— Çук ёнтё, хамах, — тусё мён те пулин каличчен Настя ансăр сукмакпа аялалла чупса кайрё. Шур кёпин вăрăм арки çеç самантлăх курăнса юлчё унăн.

Алран вёçерёнсе кусса кайнă тетраде Настьăн нумай шырама тивмерё. Авă тёмрен çакланса чарăннă вăл. Сукмак çумёнчех. Хёр пёшкёнсе тетрадь еннелле аллине тăсрё. Тăсрё, анчах илеймерё. Такамăн пысăк та çирёп алли ăна унран пёр самант маларах тём çумёнчен çёклерё. Кап ярса тытрё хăйён тетрадьне Настя пёр вёçёнчен.

— Каçарăр та, анчах ку вăл манăн, — терё вăл хирёç тăракан çине пачах пăхмасăр. Хёре ытларах конспектсемсёр юлма пултарасси хăратрё: вăл ун çинчен куç илмерё.

— Паллах каçаратăп. Эпё сире пулăшасшăнччё çеç, — илемлён янăрарё çаплипех тетраде вёçертмесёр тытса тăраканăн сасси.

— Апла хам тетраде илме ирĕк парăр, — тинех пуçне çĕклерĕ Настя. Пуçне çĕклерĕ те пĕр вăтаннипе, пĕр тĕлĕннипе ним мар пулса кайрĕ. Ун умĕнче çӳллĕ те сарлака хул-çурăмлă, шăнăрлă каччă тăрать. Кĕске кастарнă хура çӳç, таса пит. Ялтăркка хăмăр куçĕ ăшшăн хĕр çине пăхать.

— Хосподи! Санашкал Илемписем те çылăхлă çĕр тăрăхах çӳреççĕ-ши вара? — те мăшкăлласа, те чăннипех те хĕрпе киленсе пылак саспа юрларĕ каччă. Вăл тата темĕн каласшăнччĕ, анчах сăмах тупаймарĕ курăнать — çăварне мĕнле уçнă çавăн пекех тăчĕ.

Настя та чĕнмерĕ. Ахаль те палламан çынсенчен ютшăнаканскер халĕ пушшех çухалса кайрĕ. Сăмах чĕнме мар, ытлашши сывлама та тытăнса тăчĕ вăл. Ытлашши хускану çак ăнсăрт тĕлпулăвăн асамлăхне хăратса ярасран шикленчĕ...

— Настя! Насть! — янраса кайрĕ Ирина сасси Сăмсахран.

Ши! ши! шăхăрчĕç тепĕр енчен.

— Мана чĕнеççĕ, — çепĕççĕн туртса илчĕ тетраде каччă аллинчен Настя.

— Мана та. Анчах... — пăрăнса утма тăнине кура хĕре алран тытрĕ каччă. — Анчах ан васка. Эсĕ мана хăвăн ятна та каламарăн-çке?

— Настя, — пĕр самант каччăна куçран пăхса тănă хыççăн хуравларĕ хĕр. Текех тытăнса тăмарĕ, ансăр сукмакпа тăвалла утрĕ.

— Эпĕ Иван ятлă, — Настьăна хыçран пăхса каларĕ каччă. — Настя! Эпĕ сана ыран Сăмсахра... Юрату сăмсахĕнче кĕтетĕп. Çич сехетре. Ан манса кай. Çич сехетре! — юлашки сăмахсене кăшкăрсах каларĕ ĕнтĕ çӳле хăпарса çитнĕ хĕре Иван.

— Эсĕ мĕн шыва путнă пекех çухалтăн? — йăл-йăл кулса кĕтсе илчĕ Настьăна çӳлте тăракан Ирина. — Е шыв шуйттанне тĕл пултăн-и? — çыран хĕррипе çăмăл машина патне утакан каччă еннелле пуçне сĕлтрĕ вăл.

— Ой-ой! Эс чисти прокурор. Санран нимĕн пытараймăн.

— Апла хăв айăпна йышăн. Чун-чĕререн ӳкĕнни айăпа çăмăллатать, — кулчĕ Ирина.

— Ан пăх-ха ман çине апла. Каччă мана тетраде тупма çеç пулăшрĕ.

— Çеç-ши вара? Çиччĕре Юрату сăмсахĕнче кĕтетĕп тенине çур Шупашкар илтрĕ пуль. Эсĕ вара тусунтан пытарасшăн — тунатăн.

— Пачах та тунмастăп. Вăл тем те сӳпĕлтетĕ. Ун сăмахĕсемшĕн эп яваплă мар, — пиçнĕ çырла пекех хĕрелчĕ Настя пичĕ.

— Мĕн, тĕлпулăва та килместĕн-и?

— Паллах, килместĕп...

* * *

Паллах, килместĕп терĕ ĕнер Настя Иринăна. Паян вара çиччĕ тĕлне Юрату сăмсахне васкарĕ. Мĕн улшăнчĕ-ха çак вăхăтра? Нимĕн те. Анчах хĕрĕн çав ялтăркка хăмăр куçа татах та татах курас килчĕ. Темшĕн самантлăха та манăçмарĕ, асран каймарĕ вăл.

Пĕрре курса юратнине Настя шансах каймасть. Хамăр курман япалана шанма яланах иккĕленӳллĕ. Хĕр чĕри теме пула-çке юрату мĕнне çак таранччен те туйман. Паллах, Настя тантăшĕсен калаçăвĕсенчен юрату ачаш та хаяр туйăм пулнине пĕлет. Вăл типĕтсе хăртма та, çунатлантарса çеçкелентерме те пултарать имĕш. Анчах хăй юратнăран макăрса та, савăнса та курман. Юрату «чирĕпе» чирлемен.

Юрату «чирĕ»... Тĕлĕнетчĕ Настя тантăшĕсен пăшăлтатăвĕсене итлесе: мĕншĕн унăн чĕри чĕнмест? Ара, ун тавра та сăнĕпе чипер, кăмăлĕпе ырă каччă пĕрре мар явăнать-çке?

Анчах пĕрин патне те уйрăм туйăм çук. Вĕсемпе хаваслă та аван — вĕсемсĕр те япăхах мар. Ни вĕри, ни сивĕ теççĕ-и-ха ун пек чух. Шăпах çапла.

Çак самантра вара Настя тăвăл умĕнхи тинĕс пекех хумханчĕ. Чĕри васкаса хăвăрт-хăвăрт тапрĕ. Ним мартанах хĕр пĕр вĕриленсе, пĕр шăнса кайрĕ. Мĕн ку?! Кун пекки унпа пулманччĕ...

Акă Юрату сăмсахĕ те куç умĕнче. Шутлă утăмсем юлчĕç. Настя текех васкамарĕ. Пĕр çамрăк хурăн патне çитрĕ те чарăнчĕ. Сывлăш çавăрса ямалла-çке унăн. Пăртак та пулин лăпланмалла. Тата хăй кам патне çапла

хыпаланнине кăшт сăнаса тăни те пăсмасть. Ара, ĕнер курнинчен пĕр хăмăр куç кăна асра юлнă-çке.

Сахал мар тăчĕ Настя. Хăй кĕтекен çынна вара анатра та, тура та курмарĕ. Юрату сăмсахне çывхармарĕ вăл. Унта чĕвĕл чĕкеç пек чĕвĕлтетекен мăшăра кансĕрлесрен именчĕ. Чылай пăхса тăчĕ хĕр. Пĕрремĕш хут ултав им-çамне тĕппипех ĕçсе ячĕ. Пĕрремĕш хут ĕненчĕ те — улталанчĕ.

Пăлханчăк, анчах пурпĕрех хаваслă та уçă кăмăлпа пынăччĕ Настя Юрату сăмсахне. Каялла вара тĕксĕм те пусăрăнчăк кăмăлпа утрĕ. Пӳлĕме те пуçран сивĕ шыв янă пек анкă-минкĕ пырса кĕчĕ.

— Настя, эсĕ ăçта кайса çухалтăн? — алăкран тусĕ кĕнине курса ыйтрĕ Ирина. Хăй хĕрсе кайсах темĕн шырать. Кашни япалана çĕклесе, сирсе, шутарса пăхать. — Эсĕ ман сехете курман-и? Юсама кайса парасшăнччĕ. Эрне хушшинче сехет çурă мала кайрĕ вĕт. Юри тĕрĕслерĕм.

— Мĕн? — пĕрре Ирина çине, тепре аллинчи тантăшĕн сехечĕ çине пăхрĕ Настя. — Мĕскер терĕн эсĕ?

— Эрне хушшинче юсавсăр сехет миçе минут мала каймалла пултарнине тĕрĕслеме эксперимент турăм теп.

— Турăçăм! — лăштăр урайне шуса анчĕ тăрук вăйсăрланса кайнă Настя...

### 3

Пĕр утăм. Иккĕ. Виççĕ. Кун кунланать.

Пĕр минут. Иккĕ. Виççĕ. Çĕр çĕрленет.

Пĕр ĕмĕр. Иккĕ. Виççĕ... Çула çул, пурнăçа пурнăç улăштарать. Хăй пурнăçĕн хăвăртлăхĕ пирки этем сайра шухăшлать. Ун çинчен аса илме ăна ача чухне пурнăçа пĕлменни, çитĕнсессĕн вăхăт çитменни, ватлăх енне кайсан вара шиклĕх туйăмĕ кансĕрлет.

Мĕн вăл, пирĕн пурнăç? Этем ăсĕпе ăнланма çук вăрăм çулăн пĕр пĕчĕк касăкĕ кăна. Пирĕнтен кашниех тахăш самантра çак çул çине пусать, вăхăчĕ çитсен пăрăнать. Таçтан килет те таçта каять. Тĕлĕнмелле, анчах этеме, инçетри уйăх çине вĕçсе кайса килме пултарнă этеме, хăй мĕнле çуралнипе мĕнле вилнине астума пӳрмен. Пурнăçпа вилĕмĕн пĕрремĕш тата юлашки саманчĕсем пирĕншĕн вăрттăнлăх. Ăс-тăнпа ăнланма йывăр вăрттăнлăх.

Акă Иринăнах илер. Утать те утать вăл ним тĕллевсĕр такăр сукмакпа. Утать, шухăшлать — апла пулсассăн пурăнать. Анчах мĕн пĕлет вăл пурнăç пирки? Мĕн пĕлет иртнипе ыранхи çинчен? Çак самантра такам урăххи такăрлатнă сукмакпа çăмăллăн утнă евĕр, пурнăç çулĕпе те пĕр йывăрлăхсăр утмасть-ши хĕр? Тепĕр тесен, мĕншĕн-ха унăн çулран пăрăнса кĕрт ашнă пек, чăрмав çук çĕрте чăрмав шырамалла? Такам урăххи Иринăн тата унпа çумăн çитĕнекен ăрăвăн кашни утăмне йĕрлесе, виçсе хунă-çке. Çулĕ такăр та тӳрĕ — ытлашши ыйту кăна ан шыра. Анчах çĕнĕ ăрун пурнăçа хăйшĕн хăй çĕнĕрен уçас, хăй куçĕпе курса хаклас, чĕрипе туйса пĕлес килет.

— Ыйту, ыйту... Мĕн чухлĕ ыйту, — сисмесĕрех саспа каларĕ шухăш авăрне путнă Ирина. Çавăнтах хăй тĕллĕн кулса та илчĕ. Каллех хăйĕн яланхи юхăмне, шухăшпа ыйту тĕнчине, çаврăнса кĕнĕ иккен вăл. Ним çук çинчен шухăшламасăр пĕр самант пурăнаймасть çав хĕр. Çавăнпах ĕнтĕ ăна аслă классенче вĕреннĕ чух философ тесе ят та панăччĕ. Анчах ку вăл ун çумне мăшкăл ят пек çыпăçмарĕ. Пачах урăхла. Вĕрентекенсем хĕр ача ыйтăвĕсем çине хурав пĕлмесен калаçу вĕçленнине пĕлтерекен сăмахчĕ вăл. «Пĕлетĕп, эсĕ философ, анчах халĕ эпир урăххи пирки калаçатпăр», — теетчĕç ун пек чух вĕрентекенсем. Сăмах вăйне çамрăклах туйса илнĕ Иринăна çакă, паллах, тивĕçтерместчĕ. Каярахпа вара хăй ыйтăвĕсем çине хăех хуравсем шыра пуçларĕ. Анчах ыйту мĕн чул ансатрах, хуравĕ çавăн чухлĕ кăткăсрах иккен. Аслисем вара чи айван ыйтусенчен яланах пăрăнаççĕ. Тепĕр тесен, пурнăçри пĕтĕм пулăмсемпе туйăмсене вĕсем пĕр хăйсене тивĕçтерекен «призма» витĕр кăлараççĕ. Çут çанталăк панă чăнлăх туйăмĕ хăйĕнче пысăк пулнăран Иринăна çакă уйрăмах ăнланмалла марччĕ. Тĕлĕнмелле, анчах аслисем пĕр енчен пĕтĕм чун-тăнĕпе чăнлăха хирĕç тăраççĕ, тепĕр енчен — мĕн виличчен çав чăнлăха шыраççĕ.

Аслисем, аслисем... Миçемĕш хут ĕнтĕ хĕр хăйне çак шухăш çинче тытать. Çине-çинех аслисем тет вăл. Анчах хăй те çав пурнăç урапи çинех ларнине манать. Ĕнтĕ вăл та ача шутĕнче мар — кăçал вун саккăр тултарать. Ун çулĕнчи хĕрсем çемье çаварма та пуçланă. Хăш-пĕрисен

ача-пӑча та пур. Ҫаплине ҫаплах-ха, ҫапах Ирина ҫакна чунӗпе те, ӑсӗпе те йышӑнасшӑн мар...

Тӑн-н! пырса ҫапӑнчӗ чиперех утса пыракан Ирина ҫумне темӗнле апӑрша. Кӗтменлӗх хӗре хӑратса ячӗ. Хӑй ҫумне пырса тӑрӑннӑ ҫынна куриччен Ирина вӑл сапӑннӑ тутлӑ духи шӑршине туйса илчӗ. Питӗ палланӑ шӑршӑ. Хӑй яланах усӑ куракан «Красавица ночи» ятлӑ духи.

— Ой! — шарт сикрӗ Ирина.

— Каҫарӑр, — каялла чакрӗ хӗр ҫумне пырса ҫапӑннӑ хӗрарӑм. Иккӗшӗ те пӗр самант хытса тӑчӗҫ. Ирина хӗрарӑм иртсе кайтӑр тесе тӑхтарӗ, лешӗ вара — тем сӑлтавпа... Самантлӑха ҫеҫ чарӑнчӗҫ вӑсем, анчах иккӗшӗ те пӗр-пӗрне тимлӗн сӑнарӗҫ.

— Каҫарӑр, — каллех каҫару ыйтрӗ сарлака аналлӑ шлепке, хура куҫлӑх тӑхӑннӑ хӗрарӑм. Вара текех тӑхтамасӑр тата васкавлӑрах ярса пусса малалла утрӗ. Ирина та хӑй ҫулӗпе кайрӗ.

«Мӗн ку? Куҫ ылмашӑвӗ е шӑпа кулли?» — хӑй пырса ҫапӑннӑ хӗр сӑнне манаймасӑр шухӑшларӗ чупнӑ пек малалла вирхӗнекен хӗрарӑм. Кӗтмен те шанман вӑхӑтра хӑй сӑнне палламан хӗрте курни Валентина Михайловнӑна пӗр хӑратса, пӗр тӗлӗнтерсе ячӗ. Пӗрешкел ҫын ҫӗр ҫинче ҫиччӗ тенине илтнӗ-ха вӑл. Анчах хӑҫан та пулсан вӗсенчен пӗринпе пырса ҫапӑнма пултарасси ҫинчен шухӑшламан. Вун ҫиччӗри яшлӑхне вӑтӑр урлӑ каҫсан тӗл пуласса шанман. Ытла та пӗр сӑнлӑ-ҫке вӗсем! Аппӑшӗпе йӑмӑкӗ е амӑшӗпе хӗрӗ пекех.

Амӑшӗпе, амӑшӗпе... Чим. Чим-ха, хӗрӗ, унӑн хӗрӗ, унӑн тӗпренчӗкӗ вӗт-ха вӑл? Мӗнле малтанах ӑнланаймарӗ вара ҫакна Валентина Михайловна. Хӑй тахҫан пӑрахса хӑварнӑ, каярах вилнӗ тесе шутланӑ хӗрӗ. «Турӑ, пурахши вара эсӗ? Илтрӗнех-ши манӑн кӗлле? — сисмесӗрех юхса аннӑ куҫҫульне пӑлханчӑклӑн шӑла-шӑла пӑшӑлтатрӗ хӗрарӑм. — Каҫартӑнах-ши манӑн ҫылӑха?»

## 4

Валентина Михайловна (ача чухне вара ӑна темшӗн пурте Веруня тесе чӗнетчӗҫ) хулара ҫуралса ӳснӗ. Унӑн пӗрремӗш утӑмӗпе астӑвӑмӗ те хулапах ҫыхӑннӑ. Нумай

хутлă пĕрешкел çуртсем, унталла та кунталла чупакан машина тавраш, вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлакан вăрăм урам. Паян, хăй ачалăхне аса илнĕ чух, вăл чи малтан çакна куç умне кăларать. Унтан кукамăшĕсен пысăках мар ялĕ аса килет. Ара, хулара çуралнине пăхмасăрах мĕн шкула кайиччен ялта ӳснĕ-çке. Вăрман варринче капăрланса ларакан ял уншăн ют пулман.

Веруня (ку ят ĕнтĕ мĕн паспорт иличченех Валентина Михайловнăпа çӳрерĕ) çемьери пĕртен-пĕр ача пулчĕ. Анчах ашшĕ-амăшĕ те, кукамăшĕ те ăна çирĕп тытатчĕç. Нихăçан та ытлашши иртĕхтермен. Çапах ытла хаяр та пулман. Вĕсен юратăвне Веруня кашни утăмра курса, туйса тăратчĕ. Хăй те вĕсене хисеплетчĕ, чĕререн юрататчĕ.

Тепĕр тесен, унпа çирĕп пулни пачах та кирлĕ марччĕ. Мĕн тума юранипе юраманнине хĕр ача шалти темĕнле сисĕмпе туйса тăратчĕ. Кирлĕ самантра чарăнма пĕлетчĕ. Çапла тума ăна никам та вĕрентмен. Ку унра хăйĕнче ларатчĕ. Паллах, хăш-пĕр чух Валентина Михайловнăн та пуçне çухатса пĕр-пĕр ăссăрла ĕç тăвас килетчĕ. Анчах шалти çирĕплĕхпе йĕркелĕх туйăмĕ çапла тума чаратчĕç. Тен, çавăнпах вăл хăйне яланах пĕр ӳсĕмрисенчен аслăрах та ăслăрах пек туятчĕ. Уйрăмах ял ачисенчен.

Валя вăтам классене çӳре пуçласан унăн юратнă кукамăшĕ çĕре кĕчĕ. Çак вăхăтран вара яла сайра çӳре пуçларĕ вăл. Тепĕр темиçе çултан кукамăшĕсен çуртне вуçех сутса ячĕç. Валя пурпĕрех ялпа çыхăну çухатмарĕ. Сайра хутра пулин те хăйсен çуртне илсе юлнă Максăм пиччĕшĕсем патне (малтан вĕсем ял вĕçĕнчи пĕр пĕчĕк çуртра шăллĕн çемйипе пĕрле пурăнатчĕç) килкелесе кайрĕ. Максăм пиччесен аслă хĕрĕпе Наташăпа питĕ туслăччĕ вĕсем. Хĕр тусĕн ашшĕ-амăшĕ те Вальăна хăйсен хĕрĕ пек хапăл туса кĕтсе илетчĕ. Мĕнле-ха урăхла? Ара, хĕрсем пĕр варта тĕвĕленсе ӳснĕ тăвансем пекех çывăхчĕ-çке. Вальăн çемйинче те Наташăна яланах хапăлччĕ. Тата хĕр ачасем кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те пĕр-пĕринпе хутшăнатчĕç. Çакă вара вĕсен туслăхне татах та çирĕплететчĕ.

Васкамасăр шăнкăртатакан çăл шывĕ пек таса та пĕр тикĕс юхса иртрĕ ачалăх. Ытарлă вăхăтчĕ вăл. Илĕртӳллĕ асаилӳсем хăварнă тапхăр.

Кунсем иртрĕç. Тантăшсем ача çулĕнчен тухса хĕр

шутне кĕчĕç. Ял хĕрĕн ялта, хуларин хулара савнисем тупăнчĕç. Анчах хăйсен хушшинчи çывăх туслăха пăхмасăрах хĕрсем пĕр-пĕрин савниййĕсене пĕлмерĕç. Кулăшла та кўренмелле пек ĕнтĕ çакă: Валя яла пырсан Наташа каччи таçта пулчĕ, Наташа хулана килсен — Вальăн. Вăхăчĕ вара малаллах васкарĕ. Акă ĕнтĕ хĕрсене çураçса та хунă — пĕр-пĕрин савниййĕсене çеç çаплипех пĕлмеççĕ-ха вĕсем.

Часах мăнкун та çитрĕ. Наташăпа Вальăн пурнăçĕнчи вун саккăрмĕш мăнкун. Пирĕнтен никам та Турра ытла ĕненмест. Анчах çак уява пурте — ачи-пăчи те, вăйпиттипе ватти те кĕтет. Вăл тĕн уявĕ пулнине ваттисем çеç астуса тăраççĕ. Ачасемпе яшсемшĕн вара ку пĕрле пухăнса савăнмалли пысăк уявсенчен пĕри пулса тăрать.

Çак çул Валя, яланхи пекех, мăнкуна кукамăшсен ялне кайрĕ. Ара, ăна ялта ирттерме чылай савăнăçлăрах-çке: кашни килте сана тăван пек кĕтсе илеççĕ, алăка шаккасан палламастăп тесе уçмасăр тăмаççĕ.

Мăнкун кунĕ ачасемшĕн кăнтăрла, яшсемпе хĕрсемшĕн каç кўлĕм уяв. Наташăпа Валя та ытти яш-кĕрĕмрен юлмарĕç. Вăхăт каç еннелле сулăнсан ял вĕçĕнчи çеремлĕ вырăна ятарласа лартнă таканкки патнелле утрĕç. Кунта ĕнтĕ çамрăксем чылай. Тĕттĕмленсе çитейменрен ачипăчи те çывăхрах явăнса çўрет. Анчах вĕсене аслисем таканкки таврашне яхăнне те ямаççĕ. Авă хăш таранччен черет йышăннă. Ара, кашни каччах хăй савнине ярăнтарасшăн-çке.

Тўпенелле ирĕклĕн вĕçсе каяссăн пĕр çўлелле, пĕр аялалла  анать таканкки. Хулăн каштаран урлă янă вĕренĕ унпа пĕр майлăн темĕн ĕнĕрлет. Кашни хăпармассерен вара каччисем ши! шăхăраççĕ, хĕрĕсем шари! çухăраççĕ.

Акă таканкки çине вăтам пўллĕ, сарлака хул-çурăмлă каччă хăпарса тăчĕ. Вальăпа çумăн тăракан Наташа ăна курсан нимле мар хускалса илчĕ. Пĕр вăхăтрах таканкки еннелле те, çамрăксем хушшинелле те туртăнчĕ вăл. Çўле хăпарнă каччă вара йăл çеç кулса ăна хăй патне чĕнчĕ.

— Валя, тух! Эпĕ хăратăп... — темшĕн пăшăлтатса калаçрĕ Наташа. Тусĕ мĕн те пулин калама ĕлкĕриччен ăна хăй çумĕнчен таканкки еннелле тĕксех ячĕ. Çакна кĕтмен Валя ўкмеллех сирпĕнсе кайрĕ. Телее, каччăсем тытса ĕлкĕрчĕç ăна.

— Ну, Володь! Пăх-ха. Сан пата хĕрсем мĕнлерех вĕçсе тухаççĕ, — ахăрса та шӳтлесе Вальăна таканкки çинех çĕклесе тăратрĕç вĕсем. — Апла ял ятне ан яр. Кăтарт хăна хĕрне чуччу мĕнле ярăнмаллине.

Пĕр çӳлелле, пĕр аялалла вĕçрĕ таканкки. Кашни хăпармассерен çӳлерех хăпарчĕ. Валя хăй хăранине палăртса шăй-шай çухăрманран таканкки таврашĕнче тăракансем татах та çӳлерех çĕкленме хистерĕç. Володя, паллах, вĕсене итлемесĕр тăмарĕ. Унăн хăйĕн те хĕр сехĕрленнине курас килчĕ. Ши-ши шăхăрчĕ вăл. Таканккине вăйлăрах та вăйлăрах суллантарчĕ. Хĕр çаплипех сас памарĕ. Урлă янă вĕрен çеç вшик-вшик туса сывлăша касрĕ.

Пĕтĕм тавралăх хаваслă шӳт-кулăпа кĕрлесе тăчĕ, вуншар мăшăр куç хăрушла çӳлелле хăпаракан хĕрпе каччăна пăталарĕ. Валя вара никама та асăрхамарĕ. Хăйĕнчен хăй тĕлĕнчĕ вăл. Лупас тăрне те сехĕрленмесĕр хăпарса анайманскер паян чи правур каччăсене тĕлĕнтерсе тӳпенелле çӳлерех те çӳлерех хăпарать, шăй-шай сас кăлармасăр йăл-йăл кулать.

— Ну, тусăм! Тĕлĕнтеретĕн, — хăй вуçех çухалса кайнине пытармасăр кĕтсе илчĕ тин çеç таканкки çинчен аннă Вальăна Наташа. — Сирпĕнсех каятăр пулĕ терĕм.

— Сирпĕнсе кайма терĕн. Таканкки çинче акробатран кая мар тăрать, — тахăш самантра туссем патне пырса тăчĕ Вальăна ярăнтарнă каччă. Хăй вăл анис улма пекех хĕрелсе кайнă, хăвăрт-хăвăрт сывлать, куçĕнче савăнăçлă хĕлхем çиçет.

— Эх, эсĕ те çав! Мана çывăх туссăр тăратса хăвараттăн вĕт, — качча курсан тӳрех юнам пек турĕ Наташа. — Паллашăр. Ку — Валя, хулари тусăм.

— Володя, — аллине хĕр еннелле тăсрĕ каччă. Çавăнтах хушса хучĕ. — Ялти тусĕ.

Хĕрсем харăс кулса ячĕç.

Мăнкун тĕлĕнтермĕшĕ пирки ял çинче чылай вăхăт хушши юмахларĕç. Анчах темле тĕлĕнтермĕш пулсан та, ун пирки ĕмĕр калаçаймăн ĕнтĕ. Ара, ялта кашни кунах мĕнле те пулин пăтăрмах сиксе тухать-çке. Кашни çĕнĕ хыпарĕ вара тĕлĕнмеллерех. Çавăнпах ытларах чухне ирхи тĕлĕнтермĕш каç тĕлне хăйĕн асамлăхне çухатать, часах манăçать.

Хӑна хӗрӗн хӑюлӑхӗ пирки калаҫни те нумая пымарӗ. Пӗрре хытӑ шавласа илчӗҫ те тек аса илмерӗҫ. Валя ҫеҫ ҫаплах лӑпланаймарӗ. Паллах, ҫакӑн ҫинчен никампа та калаҫмарӗ вӑл. Пӗчченех асаилӳпе йӑпанчӗ, савӑнчӗ те хурланчӗ.

Чунне уҫса калаҫма ҫын тупаймарӗ Валя. Юттипе кун пирки хӑйӗн калаҫас килмерӗ, тусӗпе сӑмахлама вара ытла йывӑр пулчӗ. Ара, Володя унӑн савнӑ каччи-ҫке! Мӗнле калӑн-ха ӑна сан савни ман асран тухма пӗлмест, ҫӗр те каҫ чуна хумхантарать тесе. Ку вӑл Наташӑна сутни, унӑн юратӑвне аркатма пӑхни мар-и вара? Ҫакӑн ҫинчен шухӑшласан Валя хӑйне сутӑнчӑкран сутӑнчӑкрах, чи путсӗрринчен те путсӗр ҫын пек туйрӗ. Ҫаплине ҫапла та-ха, анчах хӑйӗнпе те нимӗн тӑваймарӗ вӑл. Ҫав шухӑ каччӑна аса илмесӗр, ун ҫинчен шухӑшламасӑр, ӗмӗтленмесӗр пурӑнаймарӗ хӗр. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн тата асаилӗвӗ те темӗнле асамлӑрах, илӗртӳллӗрех курӑнчӗ.

Кашӑк-тирӗк шӑкӑртатмасӑр пулмасть теҫҫӗ. Хура кушак чупса иртесси вара такам хушшинче те пулать. Пӗрпӗрне юмахри пек вӑйлӑ савакансем хушшинче те. Ҫак инкек Наташӑпа Володьӑна та перӗнмесӗр иртмерӗ. Хӑйӗн вӑрӑм хӳрипе вара Вальӑна та сӗртӗнчӗ. Унӑн пӗтӗм черченлӗхӗпе тискерлӗхне хӗр чылай каярах ҫеҫ ӑнланса хаклама пултарчӗ.

Алла аттестат илнӗ хыҫҫӑн канма тесе яла килнӗ Валя ни усаллине, ни ыррине сисмерӗ. Хӑйӗн тусӗ савниййӗпе вӑрҫӑнса кайнине пӗлни те ӑна савӑнтармарӗ. Анчах Наташӑпа калаҫнӑ, ӑна йӑпатма пӑхнӑ май хӗр чӗринче темӗнле шанӑҫ хӗлхемӗ амаланчӗ. Хальлӗхе вӑл аран-аран ҫеҫ вӗлтлетрӗ-ха. Ниме шанмалли те ҫукчӗ ӗнтӗ унӑн, анчах шанӑҫ пурпӗрех вилмерӗ. Тен, асӑрхӗ Володя Вальӑна? Тен, хӗр чӗринчи туйӑм каччӑ чунне те хӗмлентерӗ. Пӗлмерӗ Валентина Михайловна пӗрремӗш юрату ҫӑлкуҫ пек таса та хӑва пек ҫирӗп пулнине. Пӗлмерӗ вӑл ӗмӗрлӗхех юлнине.

Наташӑпа Володя мӗншӗн вӑрҫӑнса кайнине халӗ ӗнтӗ астумасть те Валя. Те иккӗмӗш, те виҫҫӗмӗш каҫ (паллах, хӗр яла аннӑ хыҫҫӑн) Наташӑсен кантӑкӗ умӗнче такам ши-ши! шӑхӑрчӗ. Такам тени Володя пулнине хӗрсем иккӗшӗ те тӳрех ӑнланчӗҫ. Анчах нихӑшӗ те вырӑнтан

хускалмарĕ. Шăпах ăна курас мар тесе Наташăпа Валя урама тухмаççĕ те, халĕ чупса тухĕç-и? Шăхăрĕ-шăхăрĕ те кайĕ. Нумаях янрашса тăмĕ. Çапла шухăшларĕç вĕсем. Анчах кантăк айĕнчи «кайăк» кайма васкамарĕ. Пĕрре-иккĕ çеç мар, çине-çинех вунă-вун пилĕк хутчен шăхăрчĕ. Шăхăртăрах. Хĕрсем пурпĕр илтмĕш пулса ларчĕç. Уйрăмах Наташа.

— Шăпчăк юррин каçĕсем хыçа юлнă тесеттĕм. Тем, апла мар, — шăхăракан çаплипех лăпланайманнине кура шахвăртса калаçрĕ Наташа амăшĕ. — Атя ĕнтĕ, хĕрсем, тухса лăплантарăр каччăна. Атту хăй сассипе пĕтĕм яла çеç мар, кӳршĕ ялти хăлхасăр карчăксене те вăратĕ.

Хĕрсем сисмесĕрех йăл-йăл кулса илчĕç. Пĕлет çав амăшĕ вырăнлă сăмах калама. Вăл мĕн калани мар, мĕнле калани ытларах чухне витĕмлĕ.

— Валя, ман тухма вăй çитес çук. Эсĕ тухса кĕр-ха, — тусĕн куçĕнчен тилмĕрсе пăхса ыйтрĕ Наташа. — Кала, кайтăр вăл. Вăхăтне ахаль çухатса ан çӳретĕр.

Самантлăха çеç тесе тухрĕ Валя. Каялла вара шурăм-пуç çутипе кăна кĕчĕ. Самаях сыпса килнĕ Володя тӳрех кĕртсе ямарĕ ăна. Тепĕр тесен, хĕр хăй те каччăран уйрăлма васкамарĕ. Алран çавăтса ял вĕçнелле туртсан — хирĕçлемерĕ. Ыталаса илсе чуптăва пуçласан та тĕртсе ямарĕ. Темĕн çинчен чарăнми калаçрĕç вĕсем. Темĕн çинчен — çакна Валентина Михайловна астумасть. Анчах Володьăн пĕр тикĕс сасси халĕ те хăлхара, каччă çапла хăйне çывăх тăнăран хумханни те асрах. Çав каç Валя вăхăт çинчен те, хăй ăçта, кампа юнашар пулни пирки те шухăшламарĕ. Унăн ăс-тăнĕ пĕтĕмпех чун-чĕре туйăм-не парăнчĕ. Хĕрĕн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ чĕре таппине çеç пăхăнчĕ.

Малалли пĕтĕмпех питĕ хăвăрт та сасартăк пулса иртрĕ. Тахăш самантра хăйне ачашлакан, чуптăвакан каччă ыта-мĕнче тăнне çухатнă пулас Валя. Мĕн пулса иртнине ăнла-ниччен маларах пĕçĕ тăрăх вĕри юхса аннине туйрĕ хĕр. Çакă ăна тăна кĕртрĕ, ăс-тăнне ĕçлеттерсе ячĕ. Анчах качча сирсе яма кая юлчĕ вăл. Пылак сĕткене сăрхăнтаракан пыл хуртне чечекрен уйăрайман пекех, каччăна та хĕртен сирме çукчĕ...

Тепĕр тăватă эрне çурăран Валя хăйĕн çие юлнине пĕлчĕ. Хыпар ăна савăнтарчĕ. Ара, темле хĕр те ача амăшĕ

пулма ёмĕтленет-ҫке. Валя та, паллах, хăй пепкине уть-уть тума ёмĕтленнĕ. Анчах савăнăҫ нумая пымарĕ. Тепĕр самантранах вăл хăй мĕнле йывăр лару-тăрăва лекнине ăнланчĕ. Мĕн калĕҫ? Хĕр пуҫҫăн ача ҫуратма хатĕрленет-ҫке вăл. Пĕччен ача ҫитĕнтерме ҫăмăлах мар. Укҫа-тенкĕпе ҫыхăннă йывăрлăхсенчен ытла ҫын сăмахĕ хăрушăрах. Мĕн кăна калаҫмĕҫ ĕнтĕ? Вальăн вара пур сăмаха та илтме, сăмах чĕнмесĕр ирттерсе яма тивĕ. Чăннипех те пĕччен-ҫке вăл! Ăна йăпатма, пулăшма пултаракан ҫын ҫумра ҫук.

Наташăпа Володя часах мирлешрĕҫ. Вальăна вара каччă: «Каҫар, анчах эпĕ санпа пулаймастăп. Санпа юлсан та яланах Наташăна юратăп. Ан кĕр пирĕн хушша», — тесе ҫеҫ хăварчĕ.

Пуҫ тăрăх сивĕ шыв янă пек ҫӳрерĕ хĕр. Чуна уҫса калаҫма никам ҫукки тата ытларах канăҫсăрлантарчĕ. Кампа калаҫăн ĕнтĕ? Амăшĕпе? Амăшĕ ăна яланах ăнланнă. Анчах кун пек япалана вăл та ăнланаймĕ, йышăнаймĕ. Тусĕпе? Наташăн ку хыпара пĕлмелле мар. Пĕлсен те — чи юлашкинчен. Володьăпа? Илтесшĕн пулĕ-ши вăл Валя пирки мĕн те пулсан? Тата кĕлмĕҫленмеллех-ши хĕрĕн юрату ыйтса?

Валя хăйне хăҫан та пулсан ҫакнашкал йывăр пулнине астумасть. Юлашки кунсенче тĕлĕкрен вăранса ҫитеймен пекех ҫӳрерĕ. Хăйне Валера качча тухма ыйтнине те, вăйлă туй кĕрлеттерсе ирттернине те сĕрĕм витĕр тенĕ пек ҫеҫ астăвать. Туй хыҫҫăн тин вăранчĕ вăл...

Пĕлме пултарайман асаплă кунсем пуҫланчĕҫ. Валя хырăмпа качча тухнине Валера пит хăвăрт ăнланчĕ. Ачи хăйĕн маррине те часах шутласа кăларчĕ. Ҫакăнтан пуҫланчĕ те ĕнтĕ вĕсен чашăк-тирĕк шакăртатасси. Ҫын ҫинче ҫеҫ йăл-йăл кулса калаҫрĕҫ, шăкăл-шăкăлччĕ вĕсем. Иккĕш кăна юлсан вара Вальăшăн чĕр тамăк пуҫланатчĕ. Валера чи малтанах ача ашшĕ кам пулнине пĕлесшĕнччĕ. Ҫук, ал ҫĕклесе курман Валя ҫине упăшки. Анчах нумай чух сив сăмах чи шĕвĕр патакран та хытăрах пырса тивет-ҫке. Кĕлеткене мар, чуна сусăрлать.

Ҫапла иртрĕҫ Вальăн кунĕсем. Качча тухнăранпа хăйне пĕр самант та пулин лăпкăн та телейлĕн туйнине астумасть вăл. Ача ҫуралсан (Вальăн чăр-чăр куҫлă та мăнтăркка пирĕшти — ăна урăхла нимĕнле калаймăн —

çуралчĕ) Валера арăмне ачана больницăран илсе тухтармарĕ. Тус-тăванĕсем хушшинче ача сыв мар çуралнă пирки вилнĕ тесе хыпар сарчĕ. Юлашки вăхăтра пĕтĕмпех вăйсăрланса кайнăран мĕскĕн Валя упăшкине хирĕç каяймарĕ. Вăл калана тенĕ пек турĕ те ачине пĕрре кăкăр ĕмĕртсе курмасăрах пăрахрĕ...

Мĕнешкел пысăк йăнăш — çук, преступлени тунине Валя çулсем иртсен çеç ăнланчĕ. Турри те ăна тек ача памарĕ. Валера айăпĕ пулчĕ-ши кунта е Вальăн хăйĕн? Кăна вăл пĕлеймерĕ. Тата темиçе çултан вара çемйи те арканчĕ. Арçын ачашлăхĕпе çемье ăшшине пĕлмесĕрех уйрăлчĕ вăл упăшкинчен. Текех качча тухма шутламарĕ.

5

Йывăç-курăк сĕткенленсе папкаланать, симĕсленет, кайран вара сарăхса çаралать. Çулран-çул — çапла. Диана ялан çӳрекен çул айккипе ятарласа лартнă çăкасемпе тĕмсем хăйсен тумне çапла улăштарса тăнине пĕрремĕш çул кăна мар курать. Çакă ăна кăшт тĕлĕнтерет пулин те, пачах та асамлă пек туйăнмасть. Мĕнех, пурнăç йĕрки çапла. Диана вара ытларах вăхăт мĕнле хăвăрт, çиçĕм евĕр хăвăрт вĕçсе иртнинчен тĕлĕнет. Тин çеç ачаччĕ вăл, тахăш самантра хĕр шутне кĕчĕ. Ĕнер кăна вун çиччĕреччĕ, паян вара чĕрĕк ĕмĕр тултарать.

Чĕрĕк ĕмĕр... Чарăнми вăхăт юхăмĕшĕн çак тапхăр пĕр самант чухлĕ кăна. Анчах этем ĕмĕрĕшĕн вăл пурнăçăн пысăк сыпăкĕ. Хыçалта мĕн юлнине, малта мĕн кĕтнине тишкермелли вăхăт. Йывăç лартса ӳстерсен, çурт лартсан тата ывăл çитĕнтерсен пурнăçри тивĕçне пурнăçланă теме юрать теççĕ арçын пирки. Хĕрарăмшăн вара? Унăн çак пурнăçра тивĕçĕ мĕнре? Арăм пулса арçын кăмăлне тивĕçтерсе пурăнасси е чылай пысăкрах? Çакăн çинчен Диана тахçантанпах шухăшлать. Паян кăна мар вăл пĕрремĕш хут çак сукмакпа утать. Паян кăна мар хăйĕн тивĕçĕ пирки шухăша каять...

Темшĕн-çке эпир яланах хамăр инкексемшĕн такама урăххине айăплатпăр. Такама, теме — анчах хамăра мар. Çак тĕлĕшрен Диана та ыттисенчен уйрăлса тăмасть. Ара,

капла пуранма чылай çăмăлрах-çке. Этем вара яланах çăмăл çул шырать. Хăй умĕнчи йывăрлăхсене курмасăр, тĕрĕсрех, асăрхаман пек пулса ытларах найкăшма юрататть.

— Акă! Çакланчĕ те чиперкке ман ытама, — кап ыталаса илчĕ шухăша кайнăран никама та, ниме те асăрхамасăр утакан Дианăна каччă. — Салам! — чăпăрт чуптуса илчĕ вăл хĕре питрен.

— Салам, — хăйне Роберт ыталаса илнине курса лăпкăн саламларĕ Диана. Вăл каччă ытамĕнчен хăтăлма пăхрĕ. Кăлăхах. Лешĕ ăна ытла та вăйлă ярса тытнă, вĕçертес кăмăлĕ çук. — Ах, каплах ан сĕмсĕрлен-ха. Тăп-тăр кăнтăрла, халăх умĕнче, — каччăран эрех, пирус тата хаклă йышши одеколонăн хутăш шăрши кĕнине туйса сехĕрлене пуçларĕ Диана. Ӳсĕр яшсенчен тем те кĕтме пулать.

— Сĕмсĕрленместĕп-çке, — хăй хăюлăхĕнчен хăй кăшт вăтанса тинех хĕре вĕçертрĕ Роберт. — Ăçталла çул тытатăн?

— Çӳретĕп уçăлса, — ерипен малалла утса кайрĕ Диана.

— Мана та хăвпа пĕрле ил-ха, — хĕртен юлмарĕ каччă.

— Пырах. Кансĕрлеместĕн.

Малалла хĕрпе каччă юнашар утса кайрĕç. Анчах вĕсен хушшинчи калаçу час-часах татăлчĕ. Çавăнпа ытларах сăмах чĕнмесĕр пычĕç. Мĕншĕн çыхăнмарĕ-ха вĕсен сăмахĕ? Роберт хăй енчен шӳтлеме те, кулмасăр калаçма та пăхрĕ. Диана вара унăн кашни сăмахне шăртланса йышăнчĕ. Çапла хăтланса вăл каччăна аптратсах çитерчĕ. Ĕнтĕ Роберт ним калама та, ним тума та пĕлмерĕ.

— Диана, мĕншĕн эсĕ çапла? — тарăха пуçласа ыйтрĕ каччă.

— Мĕнле?

— Мĕншĕн кутăнлашатăн? Е эпĕ сана мĕнпе те пулин кӳрентертĕм-и?

Диана хирĕç чĕнмерĕ. Тĕрĕссипе, мĕншĕн хăйне çапла тыткаланине вăл хăй те ăнланмарĕ.

— Эсĕ мана килĕшетĕн, — хĕр чĕнменнине кура малалла сăмахларĕ Роберт. — Манăн санпа пĕрле пулас килет.

Диана çаплах чĕнмерĕ.

— Ахальтен мар чĕрене хушаймăн теççĕ. Эсĕ мана тир-кетĕн пулсан эпĕ чунранах сĕкĕнмĕп. Чипер çӳре хăв çулу-па. Анчах ĕмĕт пĕлĕтĕнче ярăнса телей умĕнчен иртсе ан кай.

Текех каччă пĕр сăмах та каламарĕ. Вăрт çаврăнчĕ те васкамасăр утса кайрĕ. Диана вара мĕнле тăнă çаплипех тăчĕ.

Кӳренчĕ... Паллах, кӳренчĕ. Мĕнле-ха урăхла. Ним маршăнах шăртланчĕ те-ха хĕр. Ним маршăнах.

Роберт паçăрхи пекех васкамасăр утрĕ. Анчах кашни ярса пусмассерен каччăпа Диана хушши пысăкланса пычĕ. Çакна пăхса тăракан хĕр тăруках хăйĕн чĕри яш чиксе илнине туйрĕ. Пуçĕнче тӳрех пин тĕрлĕ шухăш пĕр харăс явăна пуçларĕ.

Каять... Часах пач курăнми пулĕ. Диана! Мĕн туса тăратăн? Чуп, чуп! Хуса çит. Ирĕк пар ăна хăвна ăнлан-ма. Хăвăнпа çывăхрах пулма...

Хыçран чупма? Нихăçан никам хыçĕнчен чупманнине паян ярса пусатăн-и? Вăл кайĕ те — тепри килĕ.

Хăçанччен? Хăçанччен çапла тăрăн? Пĕчченлĕх хăв чĕрӳне пĕтĕмпех шăнтса хытарасса кĕтетĕн-и? Чуп! Хăва-ласа çит!

Шутлă вăхăтра пин шухăш вĕçсе иртрĕ Диана пуçĕн-че. Вăл хăйĕн пĕтĕм кĕлетки, чунĕ вăйсăрланса кайнине туйрĕ. Темшĕн куçĕ шывланчĕ.

Çук, Диана текех чăтаймарĕ. Çак вăйсăрлăха, çак ыра-тăва чăтаймарĕ. Пĕрремĕш утăма иккĕленсе, иккĕмĕшне çирĕппĕн ярса пусса Роберт еннелле утрĕ. Тем самантран чупсах кайрĕ. Каччă çаврăнса та пăхмарĕ, чарăнса та тăмарĕ. Акă Диана ăна хуса çитрĕ. Иккĕленсе те хăраса (каччă тĕксе ярасран хăраса) Роберт аллине тытрĕ. Каччă сăмах чĕнмерĕ. Хĕр еннелле пăхса ăшшăн йăл кулчĕ те хăй аллинчи алла хытăрах чăмăртарĕ...

Çăра лартнă çăкасемпе тĕмсем хушшипе выртакан сук-макпа иккĕн утрĕç. Ним çинчен те сăмахламарĕç вĕсем. Пĕр-пĕрин аллине хытăран та хытăрах чăмăртарĕç.

Иккĕн утрĕç. Вĕсене пĕчченлĕх йĕрлемерĕ.

## 6

Хăй пуранакан çурт тĕлне пырса чарăниччен самаях шикленнĕ Стас чылай вăхăт хушши ним тĕллевсĕр хула урамĕсем тăрăх ярăнса çӳрерĕ. «Хӳре çине» ларнă хура «Лада» çухалса юлнине курсан çеç килĕ еннелле çул тытрĕ. Çапах васкамарĕ. Сых ятне тепĕр хутчен хăй чăннипех те тарса ӳкнине тĕрĕслерĕ. Турра шĕкĕр, «Лада» курăнмарĕ. Хальлĕхе Стас хăтăлчĕ. Анчах нумайлăха-ши? Лида пиччĕшĕсем (Валентинпа Игорь пачах хĕр пиччĕшĕсем пулманнине Стас халĕ те, каярах та пĕлмерĕ) хăйне алран вĕçертес çуккине арçын лайăх ăнланать. Улт çĕр пин тенкĕ ура айĕнче йăваланса выртмасть. Кунашкал тупăша вара вĕсем ахаль вĕçертмĕç.

Вăтăр çула çывхарса пыракан Стас аслă пĕлӳ — инженер специальноçне алла илнĕ. Анчах хăй ĕçĕпе вăл нумаях ĕçлемерĕ. Уйăхĕ-уйăхĕпе ĕç укçи илеймесĕр тарăхса çитнĕрен бизнеспа аппалана пуçларĕ. Пĕр пысăках мар фирмăна куçрĕ. Паян укçа-тенкĕллĕ пулас тесен йăрă та çивĕч пулмалла. Пурнăç çапла ыйтать. Яланах таçта чупмалла, таçта васкамалла. Стасăн çĕнĕ ĕçĕ те командировкăсемпе çыхăннă. Эрнере пĕр кун килте, ултă кун таçта çул çинче вăл. Çакă ăна килĕшет. Паллах, арăмĕ малтан мăкăртаткаларĕ-ха ĕнтĕ. Анчах вăл та, яланхи укçасăрлăхран йăлăхнăскер, çакăнпа часах килĕшрĕ, ӳпкелешме пăрахрĕ.

Час-часах командировкăсене çӳренĕрен Стасăн таçта та çитме, такампа та паллашма тиврĕ. Пĕрре çапла ун машинине вун çич-вун сакăр çулхи чиперкке чарчĕ. Вăл хулана кайма тухнă иккен. Хĕр хăйне лартса кайма ыйтрĕ. Хăйĕн çулĕ те хуланалла выртнăран Стас Лидăна (çул хĕрринче сасăласа тăракан хĕр Лида ятлă пулчĕ) машинăна лартрĕ. Ара, пĕччен сĕнксе пыриччен çакнашкал чиперккепе пуплесе пыма чылай кăмăллăрах-çке.

Арçынпа хĕр калаçса кайрĕç. Паллашрĕç. Хăй çамрăккине пăхмасăрах Лида ăслă хĕр пулчĕ. Пур ыйтупа та калаçу тытса пыма пултарчĕ. Ун пирки пуш чиперкке тесе калаймăн.

Кăмăллă калаçура вăхăт та хăвăрт иртрĕ, çул та чылай кĕскелчĕ. Хĕре Стас вокзал таврашĕнче антарса хăварчĕ. Лартса килнĕшĕн Лида укçа тӳлесшĕнччĕ, ар-

çын килĕшмерĕ. Чиперкке умĕнче хăйне мĕскĕннĕн кăтартас килмерĕ унăн.

— Апла пулсан пысăк тав, — тикĕс те шултра шăлĕсене кăтартса йăл кулчĕ Лида. — Акă ман телефон. Тунсăх пуссан шăнкăравла.

Стас ним калама та ĕлкĕреймерĕ. Хĕр машина алăкне хăвăрт хупса халăх хушшинче çухалчĕ. Арçын малтанах çырса хатĕрленĕ телефон номерĕ çине куç хӳрипе пăхса илчĕ те аллинче лутăркарĕ — анчах пăрахмарĕ, кĕсйине чиксе хучĕ.

«Тунсăх пуссан шăнкăравла», — терĕ Лида. Çамрăк арçын тунсăхĕ вара хĕр куçран çухалсанах «йӳçе пуçларĕ». Çапах шăнкăравлама васкамарĕ вăл. Ĕнтĕ улттăмĕш çул çемьепе пурăнакан Стас çапла пĕр самантра пуçа çухатма юраманнине пурнăç опытĕнчен пĕлет. Кунашкал ĕçре пысăк асăрханулăх кирлĕ. Паллах, Лида пек чиперккесене арçын паян кăна мар куçлать. Ара, илем патне кам ан туртăнтăр? Чăваш классикĕ те ахальтен мар ĕнтĕ хирти сарă чечеке ăшă куçпа кам пăхмĕ тенĕ. Арăм кăна çакна ан систĕр. Ытти-хытти вара ним те мар.

Ăçта ӳкессе пĕлсен тӳшек сарнă пулăттăм теççĕ ваттисем. Инкеке лекессине сиснĕ пулсан пĕчĕк хут таткине Стас лӳчĕркесе кăна мар, вĕттĕн-вĕттĕн çурса çилпе вĕçтернĕ пулĕччĕ. Анчах мĕнрен мĕн пулса тухассине эпир ытларах чух курмастпăр çав. Инкек хăш енчен килсе çапассине пĕлместпĕр.

Стас та çакна пĕлмерĕ. Туйăм юхăмне пăхăнса вăл тем самантра асăрханулăхне çухатса суккăрланчĕ.

Чиперкке Лидăпа арçын хĕр хваттерĕнче тĕл пулчĕ. Хăй илсе килнĕ пылак эрех кĕленчине пушатнă хыççăн Стас хĕре ерипен янракан юрă кĕввипе ташша чĕнчĕ. Пĕрпĕрин ытамне кĕрсе ӳкнĕ мăшăр часах кĕвĕ сассине те, таврара мĕн пулнине те илтми, курми пулчĕ. Эрех ĕçнĕрен, пĕр-пĕрин çывăхлăхне туйнăран вĕсен чĕрисем хăвăрт-хăвăрт тапрĕç, ӳчĕсем хĕрӳленсе хĕмленчĕç...

Малалла мĕн пулса иртнине Стас халĕ те çӳçенмесĕр аса илеймест. Тем самантра пӳлĕме икĕ патвар кĕлеткеллĕ çӳллĕ каччă кĕрсе тăчĕ. Вĕсем тӳрех вырăн çинче хĕрпе савăшса выртакан арçынна ярса тытрĕç. Ытлашши сăмах каламасăр, «паттăрсен» çăварĕнчен чарăнми сăрхăна-

кан усал сăмахсене шута илмесен, Стаса хĕнеме тапратрĕç. Пĕлсе, вăйлă ыраттармалла, анчах кăвак хăвармалла мар çапрĕç, тапрĕç, чышрĕç каччăсем. Стас хăй те имшеркке те вăйсăр арçын мар. Анчах кĕтмен çĕртен тата тӳрех иккĕн аллине лекнĕрен вăл хăйне нимĕнле те хӳтĕлеймерĕ.

Çакна пачах та кĕтмен арçынна ватса ывăнсан каччăсенчен аслăраххи лăпкăнрах калаçа пуçларĕ. Малтанах вăл Стаса Уголовнăй кодексăн çĕр вăтăр пĕрремĕш статйипе хăратрĕ. Кайран сăмаха укçа çине куçарчĕ. Кăмăлсипет «тăкакĕшĕн» улт çĕр пин тенкĕ кăларса хурсан çак пӳлĕмре мĕн пулнине манса кайма пулчĕ. Тинех Стас хăй мĕнле капкăна лекнине ăнланса илчĕ. Вăйлă серепене çаклатрĕç иккен ăна. Анчах суйламалли çук-çке! Хăй мĕнле çирĕп алла лекнине арçын паçăрах кĕлетки çинче туйса илчĕ.

Мĕнпе вĕçленнĕ пулĕччĕ-ши хваттерти тĕркĕшӳ Стас вĕсене улталама май тупайман пулсан? Вăл тăна кĕрсе çитрĕ ĕнтĕ. Каччăсем кăшт тимсĕрленнипе Стас çав самантрах усă курма васкарĕ. Алăкранах тухса каяймарĕха вăл, уçă кантăкран сикрĕ. Телее, çӳллĕ пулмарĕ, иккĕмĕш хут кăна. Машинине те подъезд умнех лартнăччĕ...

Çав ăнăçсăр каç хăйне серепене лектернĕ чиперккепе «паттăрсенчен» Стаса тарса ӳкме май килчĕ. Анчах нумайлăха-ши? Лешсем хăйне çапла çăмăллăн вĕçертес çуккине вăл питĕ аван ăнланать. Хăçан та пулсан вĕсем ăна тупаççех. Апла пулсан унăн çухалмалла. Вăхăтлăха хуларан тухса каймалла.

Кама инкек, такама синкек тесе ахальтен каламан пуль çав. Телей тени вара Стаса пăрахмарĕ. Тепĕр куннех ăна виçĕ уйăхлăха инçе командировкăна ăсатрĕç. Хуларан тухса кайма сăлтав та тупăнчĕ, никама нимĕн ăнлантарас та çук. Уйрăмах арăма. Çакă пĕтĕмпех Стасшăн алă май пулчĕ. Кун пек ăнăçăва çухатма вăл пултараймарĕ.

* * *

Валентинпа Игорь, чăннипех те, Стаса çапла çăмăллăн вĕçертме шутламарĕç. Ара, ку вăл вĕсен «бизнесĕ-çке». Вĕсене тăрантарса пурăнакан ĕç. Пурте ăнăçлă вĕçленсен Валентин кĕсйине виç çĕр, унăн тусĕнне ик çĕр, чи-

перкке Лида аллине вара çĕр пин кĕмелле. Кун пек укçаран (ним тумасăрах килекен укçаран) мĕнле ухмах пăрăнтăр?

Çавăнпа юлашки эрне хушшинче Валентинпа Игорĕн кĕрсе тухман «шăтăк» юлмарĕ. Пур çĕрте те ыйтрĕç, сăнарĕç, итлерĕç вĕсем. Шанăçа çухатмасăр, пурпĕрех тупасса пĕлсе шырарĕç. Тем вăхăтран чăннипех те тупрĕç. Çын йĕп мар çав — тĕлли-паллисĕр çухалаймасть. Паллах, хальлĕхе вĕсем Стаспа хăйĕнпе курнăçаймарĕç-ха, анчах ун хваттер тĕлне пĕлчĕç. Апла çур ĕçне тунă. Текех ĕнтĕ вăл ниçта та тараймĕ. Темле кайăк та хăй йăвине таврăнать. Кĕтме çеç пĕлмелле. Каччăсем кĕтрĕç. Кăнтăрла та, çĕрле те. Ку вĕсемшĕн хăнăхнă «сунар» ĕçĕ çеç пулчĕ. Ĕнтĕ Стас лекесси те вăхăт ыйтăвĕ кăна.

Анчах «сунарçăсен» чăтăмлăхĕпе нервисем çирĕпех пулмарĕç. Пĕр тĕттĕм çĕр вара вĕсем йăнăшрĕç. Хальхинче каччăсен хăйсен тарма тиврĕ. Ара, ĕç шăм-шак ватнипе çеç вĕçленмерĕ-çке...

## 7

Пиртен нумайăшĕ ялтан тухнă. Пурте çĕр ачисем. Анчах пурнăç çулĕ чылайăшне çуралнă кĕтесрен инçе илсе кайса çĕн çĕрте тымар яртарнă. Пулса çитнĕ вăрра кĕрхи çил вĕçтернĕ пекех тĕнче тăрăх сапаланă. Çакна пăхмасăрах эпир яланах — кам маларах, кам каярах — хамăр çуралнă кĕтесе çаврăнса çитетпĕр. Пире тăван анне пек кĕтсе илекен çĕршыва, хамăрăн пĕчĕк е пысăк яла таврăнатпăр.

Чăваш çĕрĕн çырма-çатраллă, вĕçĕ-хĕррисĕр вăрманлă кĕтесĕнче вырнаçнă çак пысăках мар ял та çакнашкал вырăнсенчен пĕри. Такама илĕртет, тахăшне аса илтерет, теприне тĕлĕкре курăнать вăл. Анчах кашнин асĕнче çутă... çутă та илемлĕ йĕр хăварать. Çакна вара эпир хамăр чĕрере ĕмĕр тăршшĕпех упраса утатпăр. Вĕçне çитиех.

Ĕнерхи куна таврăнма çул çук. Ĕнерхипе паянхине пĕртен-пĕр кĕпер — асаилӳ çыхăнтарать. Хăйĕн ачалăхĕ вĕçсе иртнĕ ялалла утакан Валентина Михайловна та шăпах çак кĕпер çине ярса пусрĕ. Васкамасăр тӳпери çунтарса ярасла хĕртекен хĕвеле, таврари пĕр хусканăва

туймасăр утрĕ хĕрарăм. Аса илмелли нумай. Çулĕ вара кĕске.

Мĕне шанса, мĕн кĕтсе таврăнать ĕнтĕ вăл миçемĕш çул ура ярса пусман яла? Кăна Валентина Михайловна хăй те пĕлмерĕ. Анчах хула варринчи ăнсăрт тĕлпулу хыççăн пĕтĕм чунĕ ăна çакăнта килме хистерĕ. Преступник яланах преступлени тунă вырăна таврăнать теççĕ. Тен, Валентина Михайловнăшăн та çакă хăй пĕрремĕш хут йăнăш çулĕ çине пуснă саманта таврăнниех?

Ялалла выртакан çул уншăн çăмăл пулмарĕ. Кашни ярса пусмассерен ури çумне пĕрер пăт çакланнăн туйăнчĕ. Е çук. Тĕрĕсрех, çак йывăр пăт чун çине тиенчĕ. Ял хĕрринчи пĕрремĕш çурт тăррисем курăна пуçлани вара Валентина Михайловнăна çаврăнса пăхмасăр çак кĕтессерен инçерех тарма хистерĕ. Анчах ăçта? Асаилӳрен тарма пулать-ши? Тата хăçанччен? Ахаль те унăн пĕтĕм пурнăçĕ темрен тарни, теме шырани мар-и-ха ĕнтĕ...

Валентина Михайловна çапла асапланса ял хапхинчен кĕрсе кайнă самантра ăна хирĕç тепĕр енчен тăваттăн утрĕç. Васкамасăр — таврари кашни сас-чĕве, тĕс-илеме асăрхаса пычĕç вĕсем. Шӳтлерĕç те кулчĕç. Тӳпери хĕвеле, анлă уй-хире, ал тупанĕ çинчи пек курăнса ларакан яла курса киленчĕç çамрăксем.

Çамрăклăх, çамрăклăх... Пурте илемлĕ, пурте таса уншăн. Пурнăçра пин çул пур — пурне те хăйшĕн уçă тесе шутлать вăл. Пурнăç ăна асамлăн курăнать.

* * *

— Мускав каллех çумăр калать. Утăçи çумăра лекет е, кум? — хăйпе çумăн лараканран канаш ыйтса калаçрĕ ĕнтĕ самаях шуралнă Сантăр мучи.

Мучипе юнашар вырнаçнă Владимир Николаевич (ялти пек каласан Микула Волочĕ е Володь пичче) çулĕсемпе хăй кӳршинчен чылай çамрăкрах. Пĕр çирĕм-çирĕм пилĕк çул. Анчах çĕр ĕçĕнче унран канаш ыйтасси çак ялта йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Маларах, пĕр вунă-вун пилĕк çул каялла çур акине е çĕртмене хăçан тухасси, ĕçе мĕнрен пуçласси пирки Владимир Николаевич ашшĕпе, Микула мучипе, сăмахлатчĕç. Каярах çак хисеп ват мучирен ун

ывăлне куçрĕ. Паллах, ялта унран аслăрах çын нумай. Анчах темме-çке пурте — хăйĕнчен ватти те, çамрăкки те — пысăк ĕç тумалла чух сăмахлама яланах ун патне утать.

— Паян-ыран çулса пăрахма пултарсан типĕтсе капанлама ĕлкĕрĕпĕр, — анăçалла пăхса калаçрĕ Микула Волочĕ. Вăл тата темĕн каласшăнччĕ, анчах ял хапхинчен палламан майра кĕнине курсан чĕнмерĕ. Çывхарса килекене куç илмесĕр сăнарĕ.

Эпир пурте куллен вуншар çынпа паллашатпăр. Анчах кашниинпех çывăх туслашмастпăр. Пĕрисене паллашнă кунах манатпăр. Теприсемпе кăшт чылайрах — пĕр-икĕ çул е нумайрах хутшăнатпăр. Виççĕмĕшсемпе çеç ĕмĕр тăршшĕпе юнашар утатпăр. Çапах, паллашу вăрăм е кĕске пулнине пăхмасăр, кашнинех мĕнпе те пулин астуса юлатпăр. Пĕри мĕнле калаçни, тепри — кулни е пăхни, виççĕмĕшĕн утти пирĕн ăс-тăна, таçта шала кĕрсе ларать. Вăхăт иртнĕçемĕн эпир ун çинчен манатпăр. Ăнсăрт тĕлпулу çеç тӳрех пурне те аса илтерет. Ăçта курнă эп ăна? Кама аса илтерет вăл? Палласа илме тăрăшса асапланатпăр вара.

Ял хапхинчен кĕнĕ хĕрарăма курсан Микула Волочĕ те шăпах çак ыйтусене хуравлаймасăр ăшталанчĕ. Çук, хĕрарăм сăнĕнче те, пĕвĕнче те ним паллани курмарĕ арçын. Анчах ун утти, аллине мĕнле суллани тата типтерлĕ пуçтарса хунă çӳçне час-часах мĕнле якатса илни ăна такама аса илтерчĕ. Кама? Çакна Владимир Николаевич ниепле аса илеймерĕ.

Хĕрарăм вара çывхарса пычĕ. Вăл самаях пăлханать пулас. Унăн кашни хусканăвĕ çакна палăртать. Акă вăл Сантăр мучипе Владимир Николаевич ларакан сак тĕлне çитрĕ.

— Здравствуйте, — терĕ çеç хĕрарăм. Чарăнса та тăмарĕ. Анчах темшĕн Володя çине уйрăмах тĕсесе пăхрĕ. Куçĕпе персе пăрахма хатĕр пек, savăнăçпа хуйхă, ачашлăхпа тӳрккеслĕх, юратупа курайманлăх хĕлхемне сирпĕтрĕ.

Мĕн пĕлменнине пĕлес, маннине аса илес туртăм этемĕн ача чухне кăна мар, каярах та сыхланса юлать. Пуçа пуш шухăшпа анратасси Владимир Николаевичăн йăлара çук. Анчах паян çак йăлана арçын сисмесĕрех пăсрĕ. Хĕрарăм иртсе кайсан та, Сантăр мучипе пупленĕ хушăра та, каярах

килелле утнӑ май та илемлӗ, анчах хаяр хӗлхем сирпӗтекен куҫ пирки шухӑшлама пӑрахмарӗ вӑл. Ун хуҫи кам иккенне пӗлеймесӗр асапланчӗ...

— Кукка! Салам. Эпир ҫитрӗмӗр, — алӑкран кӗнӗ-кӗмен Владимир Николаевич мӑйӗнчен уртӑнчӗ аппӑшӗн кӗҫӗн хӗрӗ Лариса. Вӑл хӑй юлташӗсемпе хӑнана килесси пирки куккӑшӗпе иртнӗ эрнере калаҫса килӗшнӗччӗ. Ара, ытла илемлӗ вырӑнсем-ҫке кунта! Пулӑ тытма пӗви, кӑмпа татма вӑрманӗ, чечек-курӑк пуҫтарма анлӑ хирӗ — пурте пур. Канмалли куна лайӑх ирттерме кунтан ытла мӗн кирлӗ?

— Салам, салам, — Ларисӑна ҫурӑмран лӑпка-лӑпка саламларӗ Владимир Николаевич. — Мӗнле ҫитсе пӗтрӗр?

Куккӑшсем патне Лариса час-часах ҫӳремест. Ара, вӗсем кӳршӗ районта пурнаҫҫӗ-ҫке. Вӗсен хушши вара пӗр ҫухрӑм ҫеҫ мар. Тата Лариса ашшӗ-амӑшӗ темшӗн Володь куккӑшсем патне ҫӳресех каймасть. Ашшӗпе куккӑшӗ пӗр сӗтел хушшинче лӑпкӑн хӑналаннине хӗр курманпа пӗрех. Теме пула (мӗншӗнне хӗр ниепле те ӑнланаймасть) вӗсем яланах хирӗҫеҫҫӗ, пӗр-пӗрне чӑтма пултараймаҫҫӗ. Ҫакна пӑхмасӑрах куккӑшсен килӗнче Ларисӑна яланах хавас. Володь куккӑшӗн хӗр ача ҫукран-ши (ун арӑмӗ пӗрремӗш ывӑлне ҫуратсанах вилнӗ, тепре вара Володя авланман) е урӑх сӑлтавпа хӗре вӑл питӗ юратать.

— Кукка, паллаш. Ку ман юлташсем, — тӗпелте вырнаҫнӑ ҫамрӑксемпе паллаштарчӗ Лариса.

Ҫемҫе диван ҫинче ларакан яшсемпе Владимир Николаевич ал тытса паллашрӗ. Черет паҫӑртанпах сервант умӗнче алӑк еннелле ҫурӑмпа тӑракан хӗр патне ҫитрӗ. Анчах вӑл пӳлӗмре мӗн пулса иртнине пӗртте курмарӗ пулас. Унран та ытларах — шухӑшпа ҫак вырӑнтан пачах урӑх ҫӗрте пулчӗ.

— Кукка, ку пӗрле вӗренекен тусӑм, — хӗр ҫаплипех сӑмах чӗнмесӗр ҫурӑмпа тӑнине кура паллаштарма васкарӗ Лариса. — Ирина, ку Володь кукка.

Лариса хӑйне хулпуҫҫирен тытсан ҫеҫ хӗр кил хуҫи еннелле ҫаврӑнчӗ.

— Кам вӑл? — Арҫынна тӳрремӗн куҫран пӑхса кӑшт чӗтрекен, пӑлханчӑк саспа ыйтрӗ вӑл.

Владимир Николаевича хӗр ыйтӑвӗнчен ытла ун сӑнӗ хытарса лартрӗ. Ирина аллинчи сӑн ӳкерчӗкӗ вара аса-

илӳ урапине кустарса ячӗ. Ял хапхинчен кӗнӗ хӗрарӑм, нумай ҫул каялла арӑмӗпе ун ҫывӑх тусӗ ӳкерттернӗ сӑн ӳкерчӗк тата хурав кӗтсе кӑшт чӗтрекен хӗр тӳрех пӗр ҫыхха ҫыхӑнчӗҫ.

— Кам вӑл ҫак хӗр? — арҫын ним каламаннине кура пӑлханса ыйтрӗ хӑна хӗрӗ. Вӑл пӗрре Владимир Николаевич ҫине, тепре аллинчи ик тумлам пек хӑй сӑнлӑ хӗр ҫине пӑхрӗ...

## 8

Ӑс-хакӑлпа эп пурӑнма вӗрентӗм,
Тӳпенелле пӑхса Турра кӗлтурӑм.
Хам чӗрери лӑпкӑлӑха тупмашкӑн
Нимле сӑлтавсӑр ҫӗрӗпе ҫӳрерӗм.

Ӑс-хакӑлпа эп пурӑнма вӗрентӗм... Ытла хытах мар, хӑй валли хӑй ҫурма сасӑпа ҫеҫ ҫине-ҫинех вуларӗ темшӗн шӑпах паян аса килнӗ йӗркесене Диана. Ӑс-хакӑлпа пурӑнма... Калама ҫӑмӑл. Пӗр кун кӑна пурӑнса пӑхсан вара кашкӑр пекех ӳлесе ярӑн. Чун, чун тетпӗр. Анчах вӑл этем кӗлеткин хӑш кӗтесӗнче вырнаҫнине те, мӗн чухлӗ вырӑн йышӑннине те тӗплӗн пӗлместпӗр. Физиологи ӑслӑлӑхӗшӗн чун тени ҫук. Ҫапах пурте ӑна туятпӑр. Хамӑр пурнӑҫри ҫӗр утӑмран тӑхӑр вун тӑххӑрӑшне шӑпах вӑл ыйтнӑ, хушнӑ, хистенӗ пек тӑватпӑр.

Ӑс-хакӑлпа эп пурнӑма вӗрентӗм — ҫук, Дианӑн паян ҫак йӗркесене урӑхларах сӑмахсемпе улӑштарас килчӗ. Хам чунӑма эп итлеме вӗрентӗм! Ҫапла кӑшкӑрас килчӗ хӗрӗн. Анчах вӑл кӑшкӑрса та, пӑшӑлтатса та каламарӗ. Ҫак сӑмахсен асамлӑхӗпе сӑваплӑхне Диана кӗлеткен кашни клеткипе туйрӗ. Хӑйӗн чӗри ҫапла телейлӗн те ҫӑмӑллӑн хӑҫан тапнине хӗр тахҫантанпах астумасть. Паян вӑл пурнӑҫӑн ҫакӑн вӑрӑмӑш сыпӑкне суя ӗмӗтсемпе йӑпанса ирттернишӗн ҫеҫ ӳкӗнчӗ.

Дианӑн пӗтӗм кунӗ каҫа хатӗрленсе иртрӗ. Пӗр самантра тӑванран тӑван пулса тӑнӑ Роберта кӗтнӗ май хӑйӗн юхӑнса кайнӑ хуҫалӑхне йӗркене кӗртрӗ. Ҫурӗ, тасатрӗ, якатрӗ, апат пӗҫерчӗ. Тахҫанах ӗнтӗ хӗр кил-ҫурт таврашӗнчи ӗҫе ҫапла юратса туман. Паян вӑл хӑйшӗн тепӗр чӑнлӑх уҫрӗ: пурнӑҫ юратнӑ ҫыншӑн пурӑнсан ҫеҫ илӗртӳллӗ.

Пӳлёме каҫ сёмӗ те ҫапрӗ. Алӑк шӑнкӑравне кётсе Диана чӳрече умне вырнаҫрӗ. Кӗтнӗ чух ялан пӑлханатӑн. Роберт килмелли вӑхӑт ҫывхарса пынӑҫемӗн хӗр те минутсерен ытларах канӑҫсӑрланчӗ. Чӗри те нихҫанхинчен вӑйлӑрах тапрӗ, хӑй те чирлӗ ҫын пек пӗр вӗриленсе, пӗр шӑнса тӑчӗ. Анчах кӗтни, шанни, пӑлханни кӑлӑхах пулчӗ. Сӗтел варринчи вӑрӑм ҫуртана Диана пӗчченех ҫутрӗ...

Ҫак самантра хӗр хӑйне мӗнлерех туйнине тавҫӑрса илме йывӑрах мар. Пӗр хутчен те пулин улталанса курнӑ ҫын ӑна ӑнланать.

Ултав... Каллех ултав. Шӑпах чӗрери пӑра ирӗлме, шанӑҫа ҫуралма ирӗк панӑ, юрату тӗнчинелле утӑм тунӑ самантра. Юхакан шыва икӗ хут кӗреймӗн теҫҫӗ, анчах темшӗн-ҫке пӗр тымартанах вун пилӗк хут та такӑнатӑн. Темме-ҫке пӗрремӗш хутӗнченех ӑна курма вӗренейместӗн. Такӑнатӑн, ӳкетӗн — ура ҫине ҫӗкленнӗ хыҫҫӑн каллех ун умнех ҫитсе тӑратӑн. Тен, такам урӑххишӗн ҫакӑ пачах ҫапла мар пулӗ — Дианӑшӑн вара ку ылханлӑ ункӑ. Вӗҫленме пӗлмен пач тӗттӗм каҫ.

Ҫунакан ҫуртан вӗри тумламӗсем хытӑрах та хытӑрах ирӗлсе юхрӗҫ. Куҫҫуль пекех туйӑнчӗҫ вӗсем. Ҫулӑмӑн кӑшт кӑвакрах чӗлхи ҫине пӑхнӑ май Диана ҫурта тумламӗсене куҫҫульпе миҫемӗш хут танлаштарнине шута илме пӑхрӗ. Ҫук, хӗр макӑрмарӗ. Хӑй чунне хытарма вӑл тахҫанах вӗреннӗ. Ҫак самантра вара ун чӗрине ҫирӗп чул — мрамор ҫӑтрӗ. Ӑс-тӑнӗ те каллех паянхи, ҫак самантри пурнӑҫпа кӑна пурӑнма пуҫларӗ. Тин ҫеҫ, темиҫе сехет каялла, Диана пачах урӑх юхӑмра ишетчӗ-ҫке. Ачашлӑхпа асамлӑх, юратупа ӗмӗт хупӑрлатчӗ ӑна. Халӗ вӑл ерипен чулланса, юрату ӑссӑрлӑхӗнчен урӑлса пычӗ...

Пӗт-пӗлтӗк! Пӗт-пӗлтӗк!

Шап ӳксе ванчӗ хӗре тыткӑнланӑ сивӗ чул. Диана самант каялла хӑй мӗн туйнине, мӗн ҫинчен шутланине манса алӑк еннелле туртӑнчӗ. Кам? мӗн? тесе ыйтса тӑмарӗ вӑл — тӳрех уҫса ячӗ.

— Салам! — питӗ ывӑнчӑклӑн та асаплӑн йӑл кулчӗ Роберт. Пӗр утӑм ярса пусрӗ те Диана мӗн те пулин калама ӗлкӗриччен ун ури умне ӳкрӗ. Ҫав самантрах таса урай юнпа хӗрелчӗ...

*1996*

# АТТЕ ПИЛЁ

*Юратнă атте*
*Федор Васильевич*
*Мышкин умĕнче пуç тайса*

## 1

Пуш уйăхĕн пĕрремĕш кунĕсем. Çанталăк çур еннелле кайнă. Анчах хĕл те парăнасшăн мар-ха. Кăнтăрла ăшă, çĕрле вара çаплипех сивĕ.

Паян канмалли кун. Чаршав хыçĕнчи вырăн çинче выртакан Алюнкка ура çине тăма васкамарĕ. Çĕр каçа пӳрт самаях сивĕннĕ. Çавăнпах хĕр ачан утиял айĕнчен те тухас килмерĕ. Акă малти пӳртрен такамăн утти илтĕнчĕ. Ашшĕ выльăх-чĕрлĕхе ирхи апат парса кĕчĕ пулас. Алюна кантăк еннелле çаврăнчĕ. Пысăках мар чӳрече куçĕнчен янкăр таса тӳпе курăнать. Паян çанталăк уяр та ăшă пулать пулĕ...

Мĕн вăхăт çитнине хĕр ача чухлаймарĕ. Унăн ĕнтĕ ыйхи тулнă. Утияла сирсе ăшă кĕпе, çăм чăлха тăхăнчĕ. Вырăн çинчен анас тесе урине çĕрелле уснăччĕ ĕнтĕ...

— Аннӳ вилнĕ...

Ашшĕн сасси лăпкăн, типпĕн илтĕнчĕ. Шăкăл-шăкăл калаçса тумланакан ачасене усал хыпар чĕлхесĕр туса хучĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхма та шикленчĕç. Анчах кăшкăрса йĕрекен пулмарĕ. Ашшĕн сăмахĕсем мĕне пĕлтернине хальлĕхе нихăшĕ те ăнланса илеймерĕ.

Шăллĕпе йăмăкĕ хыççăн Алюнкка та хыпаланса ура çине тăчĕ, диван çинче пĕр хусканусăр выртакан амăшне курни ăна каялла чаршав хыçне пытантарчĕ. Çак самантра вун пĕр çулхи хĕр ача чунĕнче мĕн пулса иртнине каласа кăтартма çăмăл мар.

Çук. Çу-ук! Суя... Пулма пултараймасть! Хăйĕн пĕртенпĕр тĕрекĕ, шанăçĕ çапла пĕр самантра арканнине Алюнкка çаплах ĕненмерĕ. Çук! Анне сутăнчăкла пăрахса кайма пултараймасть. Анне вăйлă. Вăйсăр пулма пултараймасть...

Çĕр тĕрлĕ шухăш, пин тĕрлĕ сăмах. Хĕр ачан чунĕ мĕн илтнине йышăнмарĕ. Амăшĕ часах вăранать. Вăранать! Ак çĕкленĕ те кăштăр-кăштăр утса хуран çакса ярĕ, çăнăх алласа чуста хурĕ, вара кукăль, тутлă кукăль,

пĕçерсе кăларса пĕтĕм çемйине сĕтел хушшине чĕнĕ... Амăшĕ ываннă. Ыйхи тарăн...

— Хĕрĕм, çаплах ан хуçăл, — хыпар ытла хăруш пулнăран хытса кайнă хĕрне хăй çумне чăмăртасшăн аллине тăсрĕ Хĕветĕр.

Алюнкка карт! туртăнса ун ытамĕнчен пăрăнчĕ. Хăй умĕнче тăракан сарлака хул-çурăмлă, лутра кĕлеткеллĕ ашшĕне пĕрремĕш хут курнăн тĕсесе пăхрĕ. Куçĕнчен шикленӳпе курайманлăх вут-хĕмĕ сирпĕнчĕ. Тинех куçĕ шывланчĕ. Хĕр ачан вăйлă-вăйлă кăшкăрса чунри ыратăва кăларас килчĕ. Кăшкăраймарĕ... Вăрт çеç пăрăнса ашшĕ çумĕнчен малти пӳрте тарчĕ. Çаплипех диван çинче вырттакан амăшĕ çине куç хӳрипе пăхма та хал çитереймерĕ.

* * *

Хăй çумĕнчен тӳрккессĕн пăраннă хĕрĕн куçĕнче курайманлăх вылянине Хĕветĕр сисмерĕ мар. Апла пулин те çакна вăл курмăш пулчĕ. Унăн, ĕнтĕ аллă урлă каçнă, пурнăçра хурине те, шуррине те сахал мар курнă арçыннăн, хуйхи темле пысăк пулсан та ачан çухатăвĕ тата пысăкрах. Хĕветĕр арăмне кăна çухатрĕ, унăн ывăл-хĕрĕ вара — амăшне. Хăй те тăван мар амăшĕпе çитĕннĕрен вăл Алюнкка чунĕнче мĕнле тăвăл вылянине пĕлмерĕ мар. Ахальтен-ши, арăм вилсен тепри алăк хыçĕнчех теççĕ. Анне вара тепре пулмасть. Алăк хыçĕнче те, умĕнче те...

Çаплине çаплах та-ха, анчах Хĕветĕре те тăмран йăваламан-çке. Унăн та чунĕ çурăлса каясла ыратрĕ. Унăн та ӳлесе кăшкăрас, çĕр çинче йăваланса макăрас килчĕ...

Çук... Сакăр ача ашшĕ чунне çемçелме памарĕ. Куçран куççуль кăлармарĕ. Тутине тачăрах тытса шăлне çыртрĕ. Пур пĕтĕм вăя пĕр чăмăра пуçтарнăн хăй аллине хăй вăйлăн чăмăртарĕ. Пӳрнисем ыратса шăтăртата пуçличченех. Çак ырату арçыннăн чунне кăшт çăмăллатрĕ. Чаршав хыçĕнчен тухса арăмĕ умне пыма хал пачĕ.

## 2

Кашни ĕçĕн йĕрки пур теме юрататчĕ Алюнкка амăшĕ мĕн те пулин тунă чухне. Йĕрке... йăла...

Ĕнтĕ виççĕмĕш çĕр хĕрлĕ хăмачпа сырнă тупăк пӳрт

варринче ларать. Çĕрле те, кăнтăрла та ун умĕнчен çын татăлмасть. Кӳршисем, тăванĕсем, пĕлĕш таврашĕсем вилепе сывпуллашаççĕ. Пĕри кĕрет, тепри тухать...

Алюнкка та пĕрехмай тупăк таврашĕнче пулчĕ. Анчах çывăха пыма хăрарĕ. Вилнĕ çын кĕлетки ăна хăратрĕ. Тупăкра юратнă амăшĕ выртни те хĕр ачан çак туйăмне сиреймерĕ. Вăл аяккарах тăма, виле çине сахалтарах пăхма тăрăшрĕ.

Çапах та вăхăт-вăхăтпа тупăк умнех, пуçĕ патне, пырса тăчĕ хĕр ача. Çакăн пек самантсенче унăн кашни клетки вилĕм шăршипе тулса хăпарчĕ: пуçĕ сĕрĕмленчĕ, кĕлетки вăйсăрланчĕ, куçĕ хуралса суккăрланчĕ. Чĕри ырата-ырата кайса сывлама чăрмантарчĕ. Никама курмасăр, ниме туймасăр йăвалана-йăвалана макăрчĕ вара хĕр ача. Уншăн пĕтĕм тĕнче ишĕлсе арканчĕ...

— Ача халран ан ӳктĕрччĕ çеç ĕнтĕ...

Хаш! сывларĕ тахăшĕ.

— Ах, хуйхи ытла пысăккă-çке...

Пӳртрисем сăмах чĕнмерĕç. Алюнкка та макăрма чарăнчĕ. Çук, унăн куçĕ типмерĕ-ха, анчах халĕ вăл паçăрхи пек ăнтăлса йĕмерĕ. Тулли пӳртри чуна пусаракан шăплăх, тĕттĕмлĕх ытамне пытаннă тавралăх хĕр ача асĕнче ĕнтĕ ĕнерхи куна юлнă асаилӳсене çĕнĕрен хускатрĕ. Савăк та илемлĕ асаилӳсем...

...Пĕтĕм çемье каçхи апата вăрăм сĕтел хушшине пухăнса ларнă. Сак тулли ача-пăча. Амăшĕ апат антарать, ашшĕ çуллă чăх какайне пайлать.

— Мана тукмакки, мана тукмакки! — аллисене тăсатăса минретеççĕ кĕçĕннисем. Ашшĕ нихăшĕн кăмăлне те хăварасшăн мар. Такмакла-такмакла кашнин умне пĕрер татăк хурать вăл.

Качча каяс хĕрсене
Çитерер çунаттине.
Çирĕп пулма уттине —
Акă сире тукмакне.
Хуçалăх тытаканне
Тыттарар çак татăкне...

Такмаклать те такмаклать ашшĕ, амăшĕ апат антарать. Пӳртре вĕри яшка, тутлă какай, ăшă кăмака шăрши тăрать. Часах тимĕр кашăксем те пĕр тикĕссĕн шăкăлтатса

«такмакла» пуçларĕç. Савăк та ырă пӳртре. Чунсенче ăшă. Телей, ăнлану, юрату хуçаланать сĕтел хушшинче. Телей, телей пурăнать пысăк пӳртре...

...Тĕп хула урамĕпе Алюнккапа амăшĕ пыраççĕ. Хĕр ача аллинче пĕчĕк илемлĕ мечĕк. Тин çеç илсе пачĕ ăна амăшĕ. Алюнкка мăнаçлăн, хавхаланса утать. Ун аллинче амăшĕ илсе панă пĕрремĕш тата юлашки парне тетте. Хĕр ачан выляс килет. Вăл мечĕке çӳлелле ывăтрĕ. Анчах тытаймарĕ — мечĕк алла лекмесĕр машинăсем çӳрекен çул çине кусса кайрĕ. Алюнкка — ун хыççăн. Шăй-й-й! хăйрарĕç асфальта урапасем. Алюнккана чĕтрекен алăсем каялла туртса илчĕç, кăкăр çумне пăчăртарĕç. Хĕр ача амăшĕн чĕри пăлханчăклăн, хăвăрт-хăвăрт тапнине туйса илчĕ. Тем самантран çеç ытамран ячĕ ăна амăшĕ. Вара Алюнккана çапла ăссăрла хăтланнишĕн вăйлă пĕçеркке лекрĕ. Çук, амăшĕ ăна çапмарĕ. Ятларĕ кăна. Алюнкка çине нихăçан та алă çĕклемен...

...Алăсем. Анне аллисем. Сивĕ хĕл варринче сĕткенлĕ пан улми е сап-сарă тутлă măйăр паракан алăсем... Ĕçсĕр ларма пĕлменскерсем... Çемçе те ачаш алăсем. Яланах чирлекен Алюнккана час-часах ачашлатчĕç вĕсем. «Ватлăхра мана пăхаканни», — тетчĕ амăшĕ хĕр ача еннелле кăтартса. Вăталăх хĕрĕшĕн çакă мĕнле пысăк яваплăх пулнине пĕлетчĕ-ши вăл...

— А-а-ах! — çӳç вирелле тăмалла кăшкăрчĕ такам урам варринче. Лăпланса тĕлĕре пуçланă Алюнкка вăшт! кăна тăрса ларчĕ. Мĕн амакĕ пулнине вăл ăнланмарĕ. Анчах темрен хăраса чĕтре пуçларĕ.

— А-а-ах! Ы-ых! — чарăнмасăр мĕкĕрчĕ пуш-пушă, тĕттĕм урам. Сасă ерипен çывхарчĕ.

— Аçу Куçмасем патĕнчен килет пуль? — Те ыйтрĕ, те каларĕ такам.

— Çавăнта кайнăччĕ...

Сасă чарăнмарĕ. Хытăрах та хытăрах ӳлерĕ вăл. Пӳртрисем урăх чĕнмерĕç. Пĕтĕм тĕнче ухмаха тухнă пек çухăрса кăшкăракан арçын сассине итлерĕ тейĕн çав. Çынсем кăна мар, çут çанталăк та шăпланчĕ пулĕ...

— А-а-а-ах! — пĕтĕм пӳрте кисретрĕ çухату сасси. — А-ах!

— Хĕветĕр арăмне ăсатать... — пĕрин чĕлхинчен тухнă

сӑмах пӗтӗм ял тӑрӑх вӗҫрӗ. Пӗр минутра тӗнчипе сарӑлчӗ. Минут ӗмӗре пычӗ...

Хӳхлев сасси хапха тӗлне ҫитрӗ пулас. Урӑх илтӗнмерӗ. Тепӗр ҫур сехетрен пӳрт алӑкӗ уҫӑлчӗ. Урамран кӗнӗ Хӗветӗр никам ҫине пӑхмасӑр кӗтесри пушӑ пукан ҫине кайса ларчӗ. Ун куҫҫульне ӳлӗмрен никам та курмарӗ...

## 3

Хӗвел паян ирех вӑранчӗ. Хаваслӑн вылярӗ вӑл хӑй шевлипе. Алюнккан пысӑк хуйхине курмарӗ те. Кӑшт ирӗлсе ҫӳхе пӑрпа витӗннӗ, ҫаплипех шап-шурӑ юр ҫийӗн сике-сике ташланӑ май хӗр ачан пӗчченлӗхне туймарӗ те. Ҫапла ӗнтӗ, ҫут ҫанталӑкӑн хӑйӗн йӗрки. Ҫак пысӑк ҫӗр чӑмӑрӗн пӗр пӗчӗк кӗтессинче пӗр ҫын вилни е ҫурални сарӑ хӗвелшӗн пӗлтерӗшлӗ мар. Хӑй ӗмӗрӗнче, миллион, миллиард ҫул хушшинче, вӑл пӗр самантрах пиншер ҫын вилсе выртнине те, хули-хулипе ҫунса кайнине те, патшалӑхсем, халӑхсем ҫӗр ҫинчен ҫухалнине те пӗрре кӑна мар курнӑ. Мӗн вӑл пӗр ҫын кун-ҫулӗ ҫакӑнпа танлаштарсан? Вӗҫӗ-хӗррисӗр тинӗсри куҫа курӑнман тумлам... Ҫурхи вӑрманти пӗр ҫаврӑм пылак сывлӑш...

Ҫут ҫанталӑк хӑйӗн йӗркипе пурӑнать. Теме кӗтсе тавралӑха сӑнакан Алюнккана вӑл асӑрхамарӗ те. Хӗр ача вара унра хӳтлӗх шырарӗ. Мӗн пӗчӗкрен упаленсе, утса ӳснӗ ҫырма-ҫатра тӑрӑх ҫӳренӗ май хуҫӑлнӑ чун малалла пурӑнма вӑй-хӑват ыйтрӗ.

Ҫак самантран хӑй асамлӑ хӳтлӗхсӗр юлнине Алюнкка чунӗн кашни хӗлӗхӗпе туйрӗ. Вӑл ытла та имшер, вӑйсӑр. Кӗлеткипе ҫеҫ мар, чунӗпе те. Ун вӑйӗ амӑшӗнче пулнӑ. Амӑшӗсӗр вӑл — пушӑ кӗлте. Хӑй тымарне ҫӗрпе сыпайман ҫамрӑк хунав...

Пӳрте кӗрекен-тухакан ҫынсен йышӗ нумайланнӑ. Тепрер сехетрен тупӑка илсе тухӗҫ. Ӗмӗрлӗхех сывпуллашӗҫ. Алюнкка та амӑшне масар ҫине ӑсатма кайма хатӗрлене пуҫларӗ.

— Эсӗ килте юлатӑн, — ҫирӗппӗн каларӗ ашшӗ.

— Ҫук, пыратӑп!

— Юлатăн. Çурхи çанталăк вылянчăк. Сана йывăр пулать...

Алюнкка çак самантра ашшĕне мĕнле вăйлă курайманнине хĕр ача хăй кăна пĕлет. Паллах, ашшĕ ун пирки шухăшланăран ăна масар çине илсе каясшăн мар. Нумаях пулмасть операци сĕтелĕ çинчен тăнă ачашăн масар сывлăшĕ усăллă пулас çук. Çаплине çапла. Анчах Алюнккан çакна ăнланма пĕр чĕптĕм тăрă ăс та юлман. Вăл пĕтĕмпех хуйхăпа, ыратупа минренĕ...

Утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса вăрман тăрăх мĕн чухлĕ çӳренине Алюнкка астумасть. Макăрма та макăрмарĕ вăл. Ĕрĕхсе кайнă выльăх пек, кĕрт ашрĕ. Киле çаврăнса çитнĕ тĕле вара амăшне пӳртрен илсе тухнăччĕ. Машина çине хăпартрĕç. Унтан виле ăсатма каякансем те кузова лара пуçларĕç. Хĕр ача та хăпарма туртăнчĕ, анчах юнашарах тăракан ашшĕ ăна айккинелле сирчĕ. Ларма памарĕ. Алюнкка макăрса ячĕ. Хăй вăйсăрлăхĕнчен тарăхса макăрчĕ вăл...

Машина тапранчĕ. Ерипен, çын уттинчен кăшт çеç вăйлăрах пычĕ. Алюнкка ун хыçĕнчен юлми утрĕ. Каярах чупма пуçларĕ. Çапах та кашни утăмранах хăвăртлăхне пысăклатакан машинăна çитсе пыраймарĕ ача. Темрен такăнса çул варринех ӳкрĕ. Урăх çĕкленмерĕ. Мĕнле ларнă, çавăн пекех юлчĕ. Машина курăнми пулсан та чылай ларчĕ вăл. Ниме курмасăр, илтмесĕр çул варринче выртса юлнă чăрăш лăссисен симĕс йĕрне тинкерчĕ...

## 4

Вăхăт иртрĕ. Тăхăр кунĕ, хĕрĕх кунĕ, çур çулĕ иртрĕ. Хĕветĕр çемйинче те пурнăç малалла шурĕ. Аслă ывăлĕ авланчĕ, хĕрĕ алла аттестат илсе тĕп хулана тухса кайрĕ. Пысăк çемье сапаланчĕ. Кĕçĕннисемшĕн тăван кил ăшшине сыхласа хăварма Хĕветĕр нумай тăрăшрĕ. Паллах, вăл ачасемшĕн амăшне улăштараймарĕ, анчах май килнĕ таран ĕлĕкхи, арăмĕ пур чухнехи йĕркене тытса пычĕ. Ирхи вĕри апат, каçхи кăпăклă сĕт ачасем умĕнчен каймарĕ. Темле йывăр пулсан та ĕнине те сутмарĕ. Кӳршĕ-арша ыйтса чăрманмарĕ — ир те каç хăех сурĕ. Хĕрарăм ĕçне те, арçын ĕçне те хăй çине тиерĕ вăл. Кил хушшинчи ĕçе

те, кăмака кукринчине те тиркесе тăмарĕ. Кĕпе-йĕм çума çеçваскамарĕ. Аслă хĕрĕ хуларан килсен çуса-тасатса хăварнипе çырлахрĕ.

Ĕç йĕркипе ĕçкĕ виçине пĕлекен, сăпайлă та лăпкă кăмăллă, çирĕп хуçалăхлă урçана тăлăх арăмсем часах куç хыврĕç. Анчах Хĕветĕр вĕсене курнă çĕртех курмăш пулчĕ. Тепĕр хут авланма вăл аса та илмерĕ. Çавăнпа евчĕ ĕçне кӳлĕннĕ Чĕкеç куммăшĕ каçсерен мĕн тума килекиле ларнине те ăнланмăш пулчĕ. Лешĕ сăмаха тӳртен калама тăхтанăран Хĕветĕр те кăмăлне палăртмарĕ. Тен, лешĕ ăнланса илĕ те хăпĕ тесе те шутларĕ пуль. Евчĕн шухăшĕ урăхларах. Тăлăххăн юлнă арçын мĕнле нушаланнине курмасть мар-çке вăл. Хĕрарăм ĕçне хĕрарăмăнах тумалла та çав ăна. Йĕрки çапла вĕт. Тата ачисемпе те нуша...

— Мана текех арăм тавраш кирлĕ мар. Ачасемшĕн вара нимĕнле ют хĕрарăм та тăван амăшĕ вырăнĕнче пулаймĕ, — кĕскен çеç хуравларĕ Хĕветĕр.

Евчĕ çӳреме пăрахрĕ.

Ырату та, тунсăх та иртмерĕ. Арăмне самантлăха та манаймарĕ вăл. Ара, мĕнле манайăн-ха сакăр ача çуратса ӳстерсе сакăр туй выляма ĕмĕтленсе пурăннă савнине. Пӳрт-çуртри кашни япала унăн ăшшине сыхласа тăчĕ, кашни утăм ăна аса илтерчĕ...

Кивахпӳрт вăййине тухсан куç хыврĕ Хĕветĕр пулас арăмне. Пĕрре курсах юратрĕ хавас кăмăллă хĕре Юмансар каччи. Хĕрĕ те ăна асăрхарĕ иккен. Ара, Хĕветĕр те куç тулли каччăччĕ-çке. Çамрăк путекĕнни пек кăтраланса тăракан сарă çӳçĕ мĕне тăратчĕ пуль. Сăн-пичĕ те, чунĕ те пур теççĕ-и-ха ун пеккисем пирки? Ĕçрен те пăрăнса çӳремен, ял çине те усал сăмах кăларман.

Пĕр-пĕрне юратрĕç те часах пĕрлешрĕç. Уçырма ялне куçса килчĕç. Иккĕшĕ те кирпĕч заводне ĕçе кĕчĕç. Часах хăйсен вăйĕпе пӳрт те купаласа лартрĕç. Ывăлсем çуралчĕç. Хĕветĕр куçăмсăр майпа техникум пĕтерчĕ. Экскаватор çине куçса ларчĕ. Тата икĕ хĕрпе икĕ ывăл çуралчĕ. Арăмĕ саккăрмĕшпе йывăрланчĕ... Паллах, пурнăç пыл та çу пулман. Тăмлă вырăнта кил-çурт çавăрсан пахча çĕрĕпе те самаях нуша курнă. Çиекен çăвар нумайçке, хĕл хырăмĕ вара пĕчĕк мар. Хĕветĕрпе арăмĕ алă

усман. Мĕн кирлине çитерсе пынă. Выльăх-чĕрлĕх те усранă. Çынран япăх пурăнман.

Анчах çу варринче тухнă пушар вĕсене çапса хуçрĕ. Пĕтĕм хуçалăх çунса кайрĕ. Кĕçĕн ывăлне чутах çухататчĕç. Инкек Хĕветĕр чунне туптарĕ, хурçă пек çирĕплетрĕ. Пуçне усмарĕ арçын. Çак инкекрен татах та вăйланса тухма пултарчĕ. Арăмне те пулăшрĕ. Хуйхăпа касăлма памарĕ. Çĕнĕрен ураланма тиврĕ сакăр ачаллă пысăк çемьен. Çĕкленчĕç. Канăçа пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Паянхи кунпа пурăнса та курмарĕç пулĕ. Яланах пуласлăхшăн, ачасемшĕн ĕçлерĕç.

Шăпах канлĕ пурăнмалли вăхăтра вилчĕ арăмĕ. Чĕри чăтаймарĕ. Пурăнмалла та пурăнмаллаччĕ унăн. Тин çеç аллă урлă каçрĕ-çке. Анчах шăпа пӳрни урăхларах пулчĕ çав.

## 5

Алюнкка вун виççĕ урлă каçрĕ. Çак тĕлелле ун чĕрине юрату кайăкĕ йăва çавăрчĕ. Пĕрремĕш юрату... Унăн вăйне, черченлĕхне вăхăт иртсен, кайранхи ăспа çеç ăнланатпăр иккен. Хăш вăхăтра çунат илнине хĕр ача та асăрхамарĕ. Хальлĕхе вăл çак туйăм мĕн тери хĕрӳ, асаплă пулнине те, çакă унăн пĕрремĕш тата юлашки юратăвĕ пулнине те пĕлеймерĕ-ха...

Çак çул Алюнкка пурнăçне çĕнĕ тус та килчĕ. Инçетри Сахалин çур утравĕнчен куçса килнĕ Таньăпа (ялта ăна часах Вырăс Тани тесе ят хучĕç) вăл хăвăрт паллашса туслашрĕ. Чăвашла пачах тĕшмĕртмен Таньăпа вырăсла япăхрах пĕлекен Алюнккана хутшăнма çăмăлах пулмарĕ. Калаçнă чух йăнăш çине йăнăш тунăран, нумай сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланман пирки пĕрин вырăнне теприне каланăран хĕр ача мĕн калас тенине калама питĕ именчĕ. Ун пек чухне вара Таня куççуль тухичченех кулатчĕ. Анчах усал сунса мар, ытла кулăшла пулнăран. Çакăншăн Алюнкка юлташне пĕртте ӳпкелемерĕ. Унпа пĕрле хăй те чун каниччен кулчĕ. Кайран вара ăçта йăнăш тунине тĕпчесе пĕлсе тӳрлетме тăрăшрĕ. Таня калаçма та, пулăшса вĕрентме те ӳркенмерĕ. Нумай çул тинĕс хĕрринче пурăннăран, инçет çĕрсене çитсе курнăран тĕнчери тĕлĕнтермĕшсем пирки талăкĕ-талăкĕпе

юмахлама пултарать вӑл. Ҫавӑнпа кашни пушӑ минута юлташӗпе пӗрле ирттерчӗ Алюнкка. Тата темиҫе уйӑхран вара вӑл вырӑсла ӑнланса, пӗлсе калаҫакан, Таня та ерипен чӑвашла ӑнкаракан пулчӗҫ. Часах вӗсем уйрӑлми туссем пулса тӑчӗҫ, пӗр-пӗрне темле вӑрттӑнлӑха та шанма пуҫларӗҫ.

Юрату тенӗрен вара туссем иккӗшӗ те пӗр вӑхӑталла юратса пӑрахрӗҫ пулас. Тӗрӗссипе, Алюнкка малтанах хӑйӗн вӑтанчӑк-именчӗклӗхне, чунри темле канӑҫсӑрлӑхпа хӗрӳлӗхе туйса юрату килчӗ теме аса та илеймерӗ. Кӑмӑла кайнӑ каччӑна яланах курса тӑрас, анчах тӗл пулсан айккинелле тарас килнине те ҫак туйӑмпа ҫыхӑнтармарӗ. Чир-чӗр инкекне пула ытти хӗр ачасем пек пулманнине пӗлсе тӑнӑран Алюнкка хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене ҫеҫ курса тӑчӗ. Кӗлетки хӑрӑк, ал-ури тем таран, пичӗ имшер, сӑмси вара вӑрӑм, куҫ хӑрпӑкӗпе куҫ харшийӗ те ыттисенни пек илемлӗ мар. Хӑй ҫине кам та пулин сӑнарах пӑхнине сиссен ҫӗр айне анса каймах хатӗр пулчӗ вӑл. Ҫавӑнпах хӑй килӗштерекен каччӑ куҫӗ тӗлне пуласран та пытанса ҫӳрерӗ. Тепӗр тесен, лешӗ ӑна асӑрхамарӗ те, вӑл ҫӗр ҫинче пуррине пӗлмерӗ те.

Таня вара пачах урӑхла. Юрату юхӑмне вӑл хӑюллӑн чӑмрӗ. Пытанса, вӑтанса тӑмарӗ. Юратнӑ каччи ҫинчен те, хӑй туйӑмӗсем пирки те калаҫрӗ. Хӑйӗнчен пӗр ҫул кӗҫӗнрех, икӗ класс каярах вӗренсе пыракан Алюнкка ҫине сана юратма иртерех-ха тенӗ пекрех те пӑхрӗ пуль вӑл. Алюна та хӑй чӗринче амаланма пуҫланӑ туйӑм пирки юлташне пӗлтерме тӑхтаса тӑчӗ. Халӗ вӗсен пӗтӗм калаҫӑвӗ те Таня савнийӗ тавра пулчӗ. Кӳршӗ поселокра пурӑннӑран Алюнкка ӑна палламарӗ, хула шкулӗнче вӗреннӗрен ун пирки нимӗн те пӗлмерӗ. Таня сӑнласа панинчен ку каччӑ сарӑ ҫӳҫлӗ, кӑвак куҫлӑ, япшар чӗлхеллӗ пулнине ҫеҫ ӑнланчӗ. Ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмасть. Анчах ҫак каччӑ хӑй чӗришӗн ют маррине хӗр ача шалти темле туйӑмпа сиссе тӑчӗ. Таня калаҫӑвӗ ӑна хумхантарчӗ. Пӗрре вӗрилентерчӗ, тепре шӑнтса ячӗ. Мӗн амакӗ ку?

Сӑлтавӗ Таня хӑй савнипе паллаштарсан палӑрчӗ. Туссем иккӗшӗ те пӗр каччӑна пӗр вӑхӑтра килӗштерсе пӑрахнӑ иккен. Анчах Алюнкка ҫакӑн пирки шарламарӗ.

Калама терĕн, туйăмне тата шаларах пытарчĕ вăл, манма тăрăшрĕ. Тусĕ умĕнче намăсланчĕ хĕр ача. Ман савнине куç хывнисĕр пуçне урăххине тупаймарăн-им теесрен вăтанчĕ. Таня вара Алюнкка пăлханнине те, шуралсахĕрелсе кайнине те асăрхамарĕ. Пĕрремĕш юратупа хĕмленнĕ чĕре йĕри-тавра нимĕн те курмарĕ, çунатланса тӳпенелле, çăлтăрсем патнелле туртăнчĕ. Мĕн уншăн çĕр? Юратаканшăн анлă уçлăх та тăвăр...

...Çуллахи каç илемлĕ. Паян вара вăл уйрăмах лăпкă та илĕртӳллĕ. Уçăлса çӳрекен туссем хĕрсе кайсах инçет çăлтăрсем пирки тавлашрĕç. Тĕрĕсрех, пĕр Таня çеç калаçрĕ-ха, Алюнкка вара итлекенни пулчĕ. Акă вĕсем ачасем пухăннă тĕле çитрĕç. Лешсем пурин çинчен те манса кăшт нӳрĕрех çап-турата тивертсе кăвайт чĕртесшĕн иккен.

Хăйсенчен аслăрах хĕр ачасем пырса тăнине те асăрхамарĕç. Вут-кăварпа иртĕхнĕшĕн пĕчĕккисене ятламаллаччĕ те ĕнтĕ, анчах Таньăпа Алюнкка хăйсем те çак ĕçе пикенчĕç. Тем вăхăт кăвайт чĕртес тесе тăрмашрĕç вĕсем. Тĕтĕм мăкăрланчĕ кăна. Пĕтĕм тумтире, ӳте ĕнĕк шăрши çапрĕ. Анчах çакна никам та асăрхамарĕ. Тивсе илеймен кăвайт тавра сиккеле-сиккеле çухăрашакан ачасем хăйсем патне Маюк аппа (ачасем ăна пур çĕре те сăмсине чикнĕрен куç хыçĕнче Партком тесе чĕнеççĕ) çитсе тăнине те сисмен. Лешĕ вара тӳрех çухăрашма тапратрĕ. Ачасем чăл-пар тарса пытанчĕç. Алюнкка та ыттисенчен юлмарĕ. Хĕрарăм шăп ăна палласа юлчĕ иккен.

— Хĕветĕр хĕрĕ, ак аçуна кайса калатăп. Лектертĕр-ха пĕрре...

Маюк аппа тата тем те пĕр кăшкăрчĕ. Анчах ăна никам та итлесе тăмарĕ.

Алюнкка та хĕрарăм сăмахне хăлхана чикмерĕ. Çапах лешĕ пули-пулми сăмаха поселок тăрăх сарса çӳреме юратнине пĕлнĕрен киле кайма шикленсе тăчĕ. Амăшне пытарнă чухне ашшĕн çирĕплĕхне лайăх туйса илнĕ хĕр ача хăйне пĕçерккĕ лекме пултарасса туйрĕ. Ĕнтĕ вăхăт та нумая кайрĕ. Каймалла. Хăра-хăра Алюнкка хапхаран кĕчĕ. Тавралăха каç сĕмĕ сырса илнине пăхмасăрах ашшĕ кил хушшинче кăштăртататать. Хĕр ача тӳрех хĕрелсе, хĕмленсе кайрĕ. Ашшĕ çине пăхсанах лешĕ сехет каялла мĕн пулса иртнине пĕлнине ăнланчĕ. Ĕлкĕрнĕ вĕт... Ак

халĕ лекет!.. Хĕветĕр хĕрĕ ҫине пăхса илчĕ. Сăмах чĕнмерĕ. Таҫти шалти туйăмпа арҫын ҫак самантра ятлани, ахаль те шиклентерекен ĕҫ пирки аса илтерни мар, аса илменни лайăхрах пуласса ăнланчĕ. Хĕр ачашăн ҫак ĕҫ ĕмĕрлĕхе урок пулнине вăл лайăх курчĕ. Ытлашши сăмах ĕҫе пăсса кăна хурĕ...

Каярах вара Алюнкка ҫав самантра пĕлменнине те пĕлчĕ.

...Ачасем тарса салансанах Маюк поселокăн тепĕр пуҫнелле утрĕ. Тинех ҫав Хĕветĕре сăмах тĕксе намăслантарма сăлтав тупăнчĕ. Атту ытла мăн кăмăллă! Маюк сăмахĕ уншăн ним те мар. Тата чĕлхи ытла ҫивĕч-ҫке. Сăмах чĕнмесĕр тăрать-тăрать те каснă пек ҫапса хуҫать. Тĕрĕссипе, хĕрарăма Хĕветĕр ҫирĕплĕхĕ те шутсăр тарăхтарать. Арăмĕ вилнĕ хыҫҫăн та (ĕлĕкрех мăшăрĕ ăна пули-пулми ҫăвар уҫтармастчĕ) хуҫăлмарĕ вĕт, кил-йышне арканма памарĕ. Ял ҫине те элек-сăмах кăларттармарĕ.

Маюк пынă чух Хĕветĕр картиш таврашĕнче ĕҫлетчĕ. Пуҫне пĕкнĕ вăл, тем ҫинчен шухăшлать. Хĕрарăм кĕрсе тăнине те асăрхамарĕ. Пĕкĕрĕлсе ларнă пĕчĕкрех арҫынна курсан Маюк шеремете хĕрхенсе те илчĕ. Хуйхă кăшлать ĕнтĕ ăна.

— Кх-м...

Хĕветĕр пуҫне ҫĕклерĕ. Вăл куҫ умĕнчех улшăнчĕ. Самант каялла пĕр чăмăра хутланнă кĕлетки тӳрленчĕ, куҫĕ мăн кăмăллăн ҫиҫрĕ. Ятлама тесе пырса кĕнĕ Маюк та сăмаха тӳрех пуҫлаймарĕ. Анчах арҫын хăй ҫине сана тата мĕн кирлĕ тенĕн пăхни хĕрарăма ҫĕнĕрен тарăхтарса ячĕ. Ҫатăл-ҫатăл ҫатăлтатрĕ вăл. Ку таранччен чунра йӳҫтерсе пуранннă мĕнпур сăмаха кăларса пăрахма васкарĕ. Хĕр пирки сăмахла пуҫласан Хĕветĕр хĕрарăма чарчĕ.

— Ман хĕрĕн хулпуҫҫи ҫинче хăйĕн пуҫĕ пур. Мĕн тумаллипе тумалла маррине хăех пĕлет, — касса татрĕ вăл.

Урăх чĕнмерĕ. Сăмах вĕҫленчĕ тенĕн ҫурăмпа ҫаврăнса тăчĕ.

## 6

Утăҫи вăхăчĕ иртмен-ха. Анчах юлашки эрнере ҫумăр пичкин пăкки тухса ӳкнĕ тейĕн — лачака типме пĕлмест. Ҫанталăкăн та хăйĕн кăмăлĕ ҫав. Унăн та чунĕ ыратать.

Алюнккан паян ĕç нумай. Вăл асли — хуçа. Ĕç майне вĕренсе çитейменскерĕн ĕçĕ кал-кал пымасть. Çакă ăна тарăхтарать. Анчах мĕн тăвас? Хуçалăхри ĕçе хĕр ача амăшĕнчен вĕренет. Алюнккан вара амăшĕ çук.

Амăшĕ вилнĕ хыççăн вăл тăруках çитĕнчĕ. Çитĕнме тиврĕ. Ăс-шухăшлавпа. Анчах чунĕпе вăл çаплипех ача пулнине никам та асăрхамарĕ. Айван вăхăт уншăн иртрĕ.

— Çитет сире минресе ларма. Чашăк-тирĕк çумалла, — йăмăкне ĕç хушрĕ Алюнкка. Шăллĕне кил хушшине шăлса тухма каларĕ. Анчах лешсем ун еннелле çаврăнса та пăхмарĕç. Вĕсен хăйсен калаçăвĕ пулчĕ. Алюнкка сассине хăпартрĕ. Кĕçĕннисем хăнк та тумарĕç. Тарăхнă хĕр ача хăех чашăк çума тытăнчĕ. Часах шăллĕпе йăмăкĕ тем пайлаймасăр çапăçса кайрĕç. Алюнкка чăтаймарĕ — алла лекнĕ йĕтĕре илсе вĕсем патне пычĕ.

— Мĕн пайлаймасăр çухăратăр! Ĕç çук-и сире валли?! — тарăхăвне ниçта чикеймесĕр кăшкăрчĕ вăл. — Ак лектеретĕп пĕрре йĕтĕрпе...

Вăрçăнакансем шăпланчĕç. Аппăшĕ хăмсарнине кура пĕр харăс ун çине сиксе ўкрĕç. Тин çеç пĕр-пĕринпе вилесле çапăçнине те манса кайрĕç. Иккĕшне хирĕç Алюнкка тăраймарĕ. Хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр тенĕн айккинелле пăрăнчĕ. Çапла парăнас, хăй асли пулнине мантарас килмерĕ.

— Тухăр! Вĕлтрене тавăрăр! — сассине чакармасăр хушрĕ вăл. Хальхинче йăмăкĕпе шăллĕ итлерĕç — сенĕк йăтса хапхаран тухрĕç.

Кил-çуртри вак-тĕвек ĕçрен Алюнкка тепрер сехетрен çеç пушанчĕ. Йăмăкĕпе шăллĕ паçăртанпах килсе курăнманни ăна темшĕн пăлхантарчĕ. Ăçта çўреççĕ ĕнтĕ вĕсем? Кăнтăр апатне те килмерĕç. Хĕр ача урама тухрĕ. Тем вăхăт анаталла-тăвалла пăхса тăчĕ — ниçта та курăнмарĕç. Шырама ăçта каймаллине пĕлмесĕр çерем çине сапаласа пăрахнă вĕлтрен патнелле утрĕ. Ак тĕлĕнтермĕш! Вĕлтрене нихăш енчен те тĕкĕнмен иккен. Тавăрма йăтса тухнă сенĕксем те кунтах выртаççĕ. Тарăхмаллипех тарăхрĕ Алюнкка.

Вăхăт каç еннелле сулăнчĕ. Йăмăкĕпе шăллĕ çаплипех таврăнмарĕç. Хĕр ача шыраман вырăн хăвармарĕ. Кăлăхах. Ачасем ниçта та курăнмарĕç. Аптранă Алюнкка иртен-

каянран кӗҫӗннисем пирки ыйта пуҫларӗ. Никам та нимӗн те пӗлмест.

— Вӗсем ирех велосипед тӗртсе шоссе ҫине кайрӗҫ, — аса илчӗ кӳршӗ хӗр ачи.

Алюнкка шартах сикрӗ. Пуҫӗнче тӗрлӗрен усал шухăш явăнса иртрӗ. Машин ҫапса кайнă пулсан е... е пӗр-пӗр маньяк лартса кайнă... Этем кашкăртан та кашкăр пулни ҫинчен тем тӗрлӗ сăмах ҫӳрет. Шухăшлама та хăрушă.

Темиҫе минут ҫеҫ кирлӗ пулчӗ Алюнккана кӳршӗ ялпа ҫыхăнтаракан шоссе патне ҫитме. Тăвалла чупма мар, хăвăртрах утма та ҫăмăл пулмарӗ ăна. Вăл ҫакна асăрхамарӗ. Унăн пуҫа капланса килнӗ усал шухăшсенчен тарса хăтăлас килчӗ. Пулмарӗ. Кӗҫӗннисем шоссе ҫинче те курăнмарӗҫ. Вӗсем хăш еннелле кайнине куракан та тӗл пулмарӗ. Ҫапах хӗр ача чунӗ лăш кайрӗ. Усал ӗҫ-пуҫ йӗрӗ ҫук — ку хăех лайăх хыпар.

Халӗ Алюнкка чунне урăх шиклӗх кăшла пуҫларӗ. Ашшӗне мӗн каламалла? Ачасем ҫухалнине мӗнле ăнлантарса памалла? Тата ăҫта шырамалла халӗ вӗсене?

Ашшӗ ытлашши тӗпчемерӗ. Ятласа та сăмах каламарӗ. Тем хушă шухăша кайнă пек тăчӗ те Алюнккан аппăшӗпе пиччӗшне кукамăшсен ялне ҫитсе килме хушрӗ. Лешсем иккӗ калаттармарӗҫ — велосипед ҫине ларса ҫумăр витӗрех тухса кайрӗҫ.

Алюнкка ирех ҫывăрма выртрӗ. Чуна ҫӳҫентерекен шăплăха чăтма пултараймарӗ вăл урăх. Ашшӗ кил хушшинчех юлчӗ. Ҫумăрлă ҫанталăка пăхмасăрах вăл тем ӗҫлерӗ.Уншăн кун вӗҫленмен-ха. Ырă хуҫа кашни кун хуҫалăх картине пӗр тутăхнă пăта та пулин ҫапатех. Унсăрăн хуҫалăх ишӗлет. Ҫакна Хӗветӗр никамран лайăх пӗлет. Хресчен ҫемйинче ҫуралса ӳснӗ, вăрҫă ҫулӗсен йӳҫӗ тутине туйса курнă, сӗтел ҫинчи ҫăкăр хакне пӗрремӗш утăмранах туйса илнӗскерӗн алли ӗҫрен хăрамасть. Арăмӗ вилнӗ хыҫҫăн вара ӗҫ уншăн хӳтлӗхпе йăпану та пулса тăчӗ. Пӗчченлӗхе хăваласа тунсăха пусаракан хӳтлӗх.

Эх, пурнăҫ! Миҫе ӗмӗр, миҫе ҫул... Мӗнле ывăнтаратăн эсӗ хăш чухне! Капланса килнӗ шухăшсем чуна ҫемҫетрӗҫ. Хӗветӗр пуҫне тӳпенелле ҫӗклерӗ. Тăруках ун ҫурăмӗ тăрăх сивӗ хум чупса иртрӗ. Мӗн чухлӗ вăхăт иртнӗ пулӗ вăл юлашки хут тӳпенелле пăхнăранпа. Тахҫан пӗр каҫ

та, пĕр кун та иртместчĕ-çке. Тахçан... тахçан пурнăçĕ те туллирехчĕ унăн.

...Тепĕр ирхине Алюнкка ирех вăранчĕ. Аппăшĕпе пиччĕшĕ çывăратчĕç-ха. Тахăш вăхăтра килсе выртнă вĕсем. Алăк умĕнче тăм пылчăкпа вараланнă тумтирпе атă-пушмак выртать. Ашшĕ ĕçе кайма ĕлкĕреймен-ха. Алюнкка тӳрех унран кĕççĕннисем пирки ыйтрĕ. Лешĕ нумай ăнлантарса тăмарĕ. Кĕскен: «Куккăшсем патĕнче», — терĕ кăна. Ашшĕ сассинче савăнни те, пăшăрханни те палăрмарĕ. Сăмахĕсем яланхиллех типпĕн тухрĕç.

Шăллĕпе йăмăкĕ киле кăнтăрла тĕлнелле çитрĕç. Алюнкка вĕсене хапха умĕнче кĕтсе илчĕ. Хĕр ачан ытла кулăшла курăнакан ачасене ыталаса илес килчĕ. Ун пек тумарĕ. Ыталас вырăнне мăкăртатса илчĕ. Вăл çапла айванла хăтланнишĕн çакскерсене ашшĕнчен лекмеллипех лекет тесе шутларĕ. Çук, ашшĕ ятламарĕ. Ачасем çине шăтарасла пăхрĕ те лăпкă сасăпа куккăшсем мĕнле пурăнни пирки ыйтрĕ. Вара, пурне те ура çине тăратнă пăтăрмах пулман пекех, каллех алла ĕç тытрĕ.

## 7

Тата тепĕр хĕл ларчĕ. Тата тепĕр черетлĕ хĕл. Алюнккан чи юратман вăхăчĕ. Хĕл. Сивве кăмăллакансем те пайтахçке çĕр çинче! Алюнашăн вара çу ăшшинчен ырри çук. Уф-ф! Сивĕ. Хăвăрт-хăвăрт утрĕ хĕр ача. Часрах ăшă пӳрте çитсе ӳкме васкарĕ. Ку вăхăталла ашшĕ ĕçрен килекенччĕ. Апла кăмака хутса янă.

Акă Алюнккасен пӳрт тăрри те курăна пуçларĕ. Тăван кил, тăван кĕтес. Эсĕ пурриех чуна ăшăтать. Шăнса кайнă ал-урана ăшăтаяс пек, хĕр ача пӳрт еннелле тинкерсе пăхрĕ. Çук, ăшăнаймарĕ. Мăрьерен тӳп-тӳрĕ çĕкленекен сĕрĕм юписем пурпĕрех чуна хавхалантарчĕç. Пĕрре, иккĕ... Чим-ха! Алюнккасен мăрйинчен тĕтĕм тухмастьçке. Тĕлĕнмелле. Ашшĕ ерçеймен-ши вара? Капла пулакан марччĕ.

Ашшĕ килте пулмарĕ. Пиччĕшĕ те курăнмасть. Шăллĕпе йăмăкĕ малти пӳртре тем тăваççĕ. Пиччĕшĕпе ашшĕ ăçтине вĕсем те пĕлмерĕç. Алюнкка кăмака хутса ячĕ, кил хушшинче кăшкăрса тăракан ĕне-сурăхсене çăра шыв

ĕçтерсе витене хупрĕ. Унтан мĕн те пулин пĕçермеллех пулĕ тесе хуран çакса ячĕ. Пиччĕшĕ апат пиçсе çитнĕ тĕле кăна çитрĕ. Ун сăнĕ салху, темле ывăннăн курăнчĕ. Хывăнса та тăмарĕ вăл, вырăн çине лăш! выртрĕ. Алюнкка мăкăртатма пăхрĕ, анчах пиччĕшĕн куçĕпе тĕл пулсан нимле мар пулса кайрĕ те шăпланчĕ. Пиччĕшĕ тем вăхăт шăпăрт выртрĕ. Пӳртре никам та калаçмарĕ. Ачасем пурте ăçта тăнă, çавăнтах тăчĕç. Пиччĕшĕ мĕн каласса кĕтрĕç.

— Аттене ĕçрен «Васкавлă пулăшупа» больницăна илсе кайнă, — тинех сăмах хушрĕ асли. — Мĕншĕн аптраса ӳкнине врачсем калаймарĕç-ха...

Мĕн пулнине тепĕр кун та тата тепĕр кун та пĕлтереймерĕç. Эрне иртрĕ. Мĕнле инкек авса антарни пĕтĕм анализсене тусан çеç палăрчĕ. Хырăмлăх язви. Çак чир ячĕ Алюнккана нимĕн пирки те каламарĕ. Ашшĕне операци тума тивет текен хыпар та ăна хăратмарĕ. Хирург çĕççи айне ик-виç хут та выртса курма ĕлкĕрнĕ хĕр ача операци сăмаха хăнăхнă. Анчах ашшĕн чирĕ Алюнкка шутланă пек çăмăллăн иртеймерĕ. Операци сăмахпа пĕрле реанимаци тени те янăра пуçласан хĕр ача шарт! сикрĕ. Реанимаци вăл — пурнăçпа вилĕм чикки. Çакăнта лекекенсенчен хăшĕ-пĕрисем ахаль палатăна куçайманнине те курнă Алюнкка. Хĕр ача хăй сисмесĕрех «Турăçăм» сăмаха час-часах аса иле пуçларĕ. Вăхăт-вăхăтпа хăра-хăрах кĕтесри турăш еннелле те пăхрĕ вăл. Анчах турă çук тенине чуна ытла шала илнĕрен кĕлтума пĕлмерĕ.

Вăхăт иртрĕ. Çĕнĕ 1986 çула Хĕветĕр вырăн çинче кĕтсе илчĕ. Хăйĕн кĕçĕн ачисене больницăна килсе çӳреме ирĕк памарĕ вăл. Ыратăвĕ, асапĕ ачасен асĕнче ӳкерĕнсе ан юлтăр терĕ пулас. Пурнăç вăрăм — асапне те, хуйхине те пайтах курма ĕлкĕрĕç-ха вĕсем. Ку япала никамран та пăрăнса иртмест. Хĕветĕрĕн вара хăй чĕрĕ чух ачисене пурнăç хаярлăхĕнчен хӳтĕлес килчĕ. Эх! Пирĕнтен килес пулсан. Анчах пурнăçăн хăйĕн тăкăрлăкĕсем.

Ашшĕ больницăра иттернĕ уйăх çурă Алюнккашăн ĕмĕр пекех туйăнчĕ. Вĕçленме пĕлмерĕç вăрăм хĕл каçĕсем. Питĕ вăрах улшăнса пычĕç кунсем. Кил-çуртри ĕçсене, урок хатĕрленсе пĕтерсен ачасем ытларах чухне шашка-шахматла е урăхла лăпкă вăйă вылярĕç. Пĕррехинче

çапла «Тинĕс çапăçăвĕ» вăййа вылянă май вăхăт нумая кайнине те асăрхамрĕç. Ыран канмалли кун пулнăран ачасем хĕрсе кайнă вăййа чарса лартма васкамарĕç. Тахăш самантра вĕсем пурте пĕр харăс çăварĕсене такам хупланă пек шăпланса ларчĕç. Сывланă сас та илтĕнмерĕ. Çак шăплăха кĕтнĕ пекех, чӳрече айĕнче те шуйттан, те кушак вăйлăн кăшкăрса ячĕ. Тупăкри пек шăплăхра урамри сасă ача макăрнă пек те илтĕнчĕ. Аслисем те, кĕçĕннисем те сăмах чĕнмерĕç. Кантăк айĕнчен илтĕнекен сасă вĕсене хăратса, хытарса лартрĕ. Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхма та шикленчĕç. Çакă пĕтĕмпех темиçе çеккунтлăха çеç тăсăлчĕ. Хӳхлев мĕнле пуçланчĕ, çавăн пекех тăрук чарăнчĕ. Ачасене тинех чун кĕчĕ. Анчах вĕсенчен нихăшĕ те халь тин пулса иртни пирки сăмах тапратмарĕ. Çак самантра та, кайран та. Алюнкка темшĕн амăшĕ пĕррехинче ашшĕне: «Хам вилсессĕн сана нумая хăвармастăп», — тенине аса илчĕ.

...Çанталăк çур еннелле кайсан çеç ашшĕ киле таврăнчĕ. Палламалла мар улшăннă вăл. Кĕлеткийĕ типсе хăрнă, сăнĕ шурса кайнă. Куçĕнчи чĕрĕлĕх сӳннĕ. Алюнкка шкултан таврăннă тĕле ашшĕ шыçса шывланнă урисене çӳллĕ пукан çине хурса диван çинче выртатчĕ. Хăй çумĕнчех шăвăç витре. Вăхăт-вăхăтпа çак витрене сурасура пăрахрĕ вăл. Алюнкка тӳрех ашшĕ патне чупса пычĕ. Янка сассине пусармасăр ăна та кăна ыйта пуçларĕ. Ашшĕ чармарĕ, чĕнме те чĕнмерĕ. Тем вăхăтран вара эпĕ ывăнтăм тенĕн куçне хупрĕ. Те тĕлĕрсех кайрĕ вăл, те ахаль çеç çапла выртрĕ. Алюнкка пăрănса кайсанах чыхăнса кайса юнлă йăлмака сурса кăларчĕ... Унтан татах та татах чыхăнса ӳсĕрчĕ. Юлашкинчен хăсма пуçларĕ. Тепĕртакран лăпланчĕ. Ах! терĕ те куçне хупрĕ. Алюнкка ăçта пулнă çавăнтах тăчĕ. Ашшĕ мĕнле асапланнине курни ун чунне çемçетрĕ. Куçĕ шывланчĕ. Ашшĕ сурса-хăсса кăларнă шăршă ăна хăйне те лĕклентерe пуçларĕ. Çапах хĕр ача йĕрĕне-йĕрĕнех ашшĕ çумĕнчи витрене пырса илчĕ. Сăмсине хупла-хупла урама тухса тăкрĕ...

Татах вăхăт иртрĕ. Хĕветĕр ерипен, питĕ ерипен йăл илсе пычĕ. Малтан юнлă сурма пăрахрĕ, каярах ура шыççи те чакрĕ. Çапах та текех çынпа шай ĕçлекен çын пулмарĕ ĕнтĕ вăл. Врачсем ăна инвалид хучĕ туса пачĕç.

Вăйпитти шутěнче пулмалли арçын пенсие тухрě. Хăй нумай çул хушши ěçленě кирпěч завочě ăна «Ěç ветеранě» хисеплě ят пачě, асăнмалăх алла çыхмалли «Слава» сехет парнелерě. Кил-çуртри ěçе те тăваймарě Хěветěр. Хăй ěмěрне ěçре ирттернě çыншăн ěççěр ларнинчен пысăкрах нуша çук пулě. Ку вăл çěнěрен утма вěреннě пекех. Хěветěр те вěренчě: хăйне уяма, йывăр ěçрен пăрăнма. Анчах ăна çăмăл килмерě. Вăл мар, ěç унран тарнă. Паян вара, ваттисем калашле, урлă выртакан патака та тăрăхла илсе хураймарě арçын.

## 8

Тинех... Тинех çуркунне çитрě. Çут çанталăкпа пěрле Хěветěр те ураланма пуçларě. Паллах, вăл пўрт пуçěнчи çěмěртпе улмуççи мар — каллех çеçкене лараймě. Çавах чи хăрушши кая юлчě. Вăй таврăннине Хěветěр кунран-кун туйса тăчě. Типсе хăрнă кěлетки те ўт илчě, самай маттурланчě. Çапах та çěвě вырăнě сисěнмеллех ыратрě-ха. Хăвăрт утма та, авăнарах ларма та йывăр пулчě ăна.

Кунсем иртрěç. Тур пулăшнипе пахча таврашне йěркеллех акса-лартса хăварчěç вěсем. Часах пěрремěш тунасем те шăтса тухрěç. Пěрлех çум курăкě те ашкăрса кайрě. Ачасем тасатсах тăчěç те-ха ěнтě ăна — тасатса пěтерейменěç. Пиçен-йыт пырши тавраш çумăр хыççăнхи кăмпа пек шăтса тăчě.

Алюнккасен пахчи пысăках мар — йышлă çемьене тăрантарма çитместь. Çавăнпа çěрěн кашни шичěшěн, йăран çинчи кашни тунашăн кěрешме тивет. Тухăçлă çимěç пилěк авмасăр пулмасть иккен. Ашшě чирлесе ўкиччен Алюнкка çакна ăнлансах та кайман. Кăçал вара çум çумласси пěтěмпех кěçěннисем çине тиенчě. Иккěмěш кун ěнтě вěсем çěр улми пуссинче чакаланаççě. Вун икě-вун пилěк йăран çеç çумланă-ха. Ку вăл пахчан çурри те çук. Пиçен тавраш тăпăлтара-тăпăлтара вара алăсем касăлса юнланнă, пилěкě ыратать. Ир çинче, ачасем ěçе тытăннă чухне, пахчара хавaслă шўт-кулă илтěнетчě. Халě вара шăп. Вěсем хăвăртрах йăран вěçне тухса темиçе минутлăха тăсăлса выртасси çинчен çеç шутлаççě.

Ачисем ĕçлекен пахчана Хĕветĕр пĕрре мар пырса çаврăнса кайрĕ. Эх, сывах çӳренĕ пулсан! Ачасем çине шанса лармастчĕ те çав. Ача ачах-çке вăл — алли ĕçре те унăн, ăсĕ — урамрах. Авă самай çӳллĕ мăян тунисемех лара-лара юлаççĕ вĕсем хыçĕнчен. Эх-хе-хе! Хĕветĕр ерипен-ерипен, питĕ асăрханса пĕшкĕнчĕ, пуçĕсене каçăртса ларакан çум курăксене турта-турта кăларчĕ. Часах ачисем хыçнех çитрĕ вăл. Пĕр самант тӳрленсе тăчĕ. Унтан каллех пĕшкĕнчĕ. Кĕçĕн хĕрĕпе юнашар кукленсе çум çумла пуçларĕ. Анчах çĕвĕ вырăнĕ хăй çинчен асилтерсе ыратса кайни ĕçе пăрахтарчĕ. Çук, арçын пăрănса каймарĕ. Кукленнĕ çĕртен тăват уран тăрса ашкăрса кайнă çума тăпăлтарма пуçларĕ.

Чирлĕ ашшĕ хăйсемпе юнашар упаленсе çум çумлани ачасене хавхалантарчĕ. Вĕсем тӳрех тимлĕрех те хăвăртрах ĕçлеме пуçларĕç. Хăйсем хушшинче те ку сан енчи çум юлать тесе вăрçăнма пăрахрĕç. Ĕç кал-кал пычĕ. Çапла вĕсем калле-малле виçшер йăран упаленсе тухрĕç. Пахча самаях тасалчĕ, çумламалли йăран та шутлă кăна юлчĕ. Ачасем ывăнчĕç. Вĕсен аллисем пиçен йĕппи чикнĕрен, йыт пыршийĕ каснăран ыратса сăйлашрĕç. Халь тесен халь ĕçе пăрахса кайма хатĕр пулчĕç шăпăрлансем. Ашшĕ сас кăлармасăр, хăйсемпе шай ĕçлени кăна вĕсене тытса тăчĕ. Ахаль пулсан тахçанах пахчаран тухса вĕçтермелле.

Ачисем шăлне çыртса ĕçленине Хĕветĕр курмарĕ мар. Вăл вĕсене хĕрхенчĕ те. Анчах хĕрхенӳпе ĕç тухмасть-çке. Вĕсем мар тăк — кам çум çумлĕ? Такам çине шанса ларма çук. Вăхăтра тасатса, йăран шырса хăвармасан вара улма паçми сая каять. Çĕр улмисĕр мĕнле хĕл каçăн?

Акă черетлĕ йăран вĕçĕ тухрĕ.

— Çитĕ. Паянлăха çитĕ, — тинех ĕç вĕçленни пирки пĕлтерчĕ ашшĕ.

Ачасем иккĕ калаттармарĕç. Тепĕр самантранах вĕсен ура йĕрĕ те пахчара курăнмарĕ.

Алюнкка пуринчен малтан пӳрте чупса кĕчĕ. Ун куçĕ тӳрех диван çине тăсăлса выртнă Микул пиччĕшĕ çине тирĕнчĕ. Çирĕм урлă каçнă вăйпитти каччă канлĕн кăна кĕнеке вуласа выртать. Хĕр ача питĕ-питĕ тарăхса кайрĕ, анчах лӳппер пиччĕшне ним те каламарĕ...

Çуллахи кун вăрăм пулнине пăхмасăрах кунсем хăвăрт улшăнса пычĕç. Вăхăт хăй лашине пĕртте чарса тăратасшăн пулмарĕ. Пахча шырса майлаштарнă хыççăнах утăçи пуçланчĕ. Йывăр та хĕрӳ вăхăт. Алюнккасен таврашĕнче утă çаранĕсем çук. Ял халăхĕ харпăр хăй выльăхĕ валли çырма-çатра таврашĕнчи куракăка, вăрманти вĕлтрене çулса типĕтет. Пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарать. Вĕсемшĕн кашни тĕмеске, кашни лаптăк хакра.

Паян Хĕветĕр ĕне-сурăх усраман Лексантăрсен умĕнчи вăрманта кашласа ларакан вĕлтрене куç хывrĕ. Туни сĕткен те симĕс-ха унăн — ватăлма ĕлкĕреймен. Лаптăкĕ те самай пысăк. Пĕр урапа яхăнах çулса тултарма пулать.

Вĕлтрен çулакан пиччĕшĕсем патне Алюнкка ӳсĕр Лексантăрпа арăмĕн кăшкăрашăвне илтсе пырса тăчĕ. Арăмĕ хĕтĕртнипе çеç ĕçлекенсем патне чупса тухнă Лексантăр ытлашши калаçса тăмарĕ — хăвăртрах каялла киле кĕрсе кайма васкарĕ. Кӳршĕпе ятлаçмалли сăлтав пулмарĕ унăн. Арăмĕ Укаш лăпланма пĕлмерĕ вара. Çатăлçатăл! çатăлтатрĕ вăл. Пуринчен ытла ăна хăй сăмахĕсем Хĕветĕре витерейменни тарăхтарчĕ. Тухатмăш карчăк пекех курăнчĕ çак самантра хĕрарăм.

— Тасалăр! Мĕн мăшкăлласа çӳретĕр! — янрашрĕ Укаш.

Кӳршĕ-аршăпа нихăçан та ытлашши вăрçăнман Хĕветĕр çаплипех лăпкă пулчĕ. Сасси унăн çирĕп те витĕмлĕ янăрарĕ.

— Мăшкăллатăн теме эпĕ сан пахчунти çума çулмастăп вĕт. Ку вĕлтрене хур-чăхху валли типĕтес тесен хапху умне пырса тăкса парăп, — хĕрарăма куçран тӳррĕн пăхса калаçрĕ Хĕветĕр.

Укаш чĕлхине çыртрĕ. Арçын пăхнине хирĕç тăраймарĕ вăл. Анчах парăнас та килмерĕ. Чи ыратакан, суранлă вырăн шырарĕ.

— Ма çĕкленнĕ эсĕ операци сĕтелĕ çинчен? Ма арăму хыççăн кайман? Вилмелли çын эсĕ! Пурăнмалли мар... — сăмахне персе ячĕ те карчăк хăйĕнчен хăй хăраса кайрĕ. Вăшт! çеç çаврăнчĕ вăл. Ахаль чух аран-аран кăна йăраланакanскер çамрăк хĕр пек чупса кайрĕ.

Хĕветĕр нимĕн те каламарĕ. Хĕрарăм сăмахĕсем Алюнккана мĕнле хытарса лартнине курчĕ вăл. Çапах чĕнмерĕ.

Арçын курайманлăхпа кӳренӳрен çӳлерех тăчĕ. Ун вăйĕ сăмахра мар, сăмах чĕнменнинче пулчĕ...

Алюнкка хытса кайрĕ. Пуçĕ чукмарпа çапнă евĕр янăрарĕ. Ĕмĕр тӳрленми суран çĕнĕрен уçăлса чуна çурчĕ. Ашшĕ ним пулман пекех лăпкă пулни ăна вĕрилентерсе ячĕ. Хĕветĕр вара хăйне вилĕм сунакана та каçарчĕ. Манчĕ.

Хĕр ача каçармарĕ. Çапса хуçакан сăмахсене манмарĕ. Вăл тавăрчĕ. Ачалла хаяр, хĕрхенӳсĕр тавăрчĕ. Кунран-кун. Çултан-çул. Çак кунран Укаш чирпе хавшарĕ, хытанка хĕр ачаран тарса, пытанса çӳре пуçларĕ. Улах çĕрте-и, çын çинче-и — Алюнкка именмерĕ. Кунне вуннă курсан та — вунă хутчен Укаш еннелле лачлаттарса сурчĕ. Ашшĕне вилĕм суннă карчăка ылханчĕ.

9

Иртрĕ. Вăхăт татах та татах иртрĕ. Хĕветĕр сывлăхĕ кунсеренех çирĕпленчĕ. Çур çул каялла кăна вăл юнпа сурса выртнине халь çынна каласан çын ĕненмĕ. Çакна арçын хăй те мана пуçларĕ. Чир пирки аса илсе тăма терĕн. Çамрăкланнă пек туйрĕ вăл хăйне. Чунĕнче темĕнле шанăç, хĕлхем ялкăшрĕ. Çакă кĕлеткене те вăй пачĕ.

Июль варри çитрĕ. Хĕветĕр çемйинчи пурнăç хăй еккипе чупрĕ. Анчах çак канлĕх тăвăл умĕнхи лăпкăлăх çеç пулнă иккен.

Пĕрре, çĕрле арçын варĕ кассăн-кассăн пĕтĕрсе килнипе вăранса кайрĕ. Малтанах çакă ăна шиклентермерĕ-ха. Вар виттине кайрăм пулĕ тесе шутларĕ вăл. Çийĕнчех каç кӳлĕм хăй мĕн-мĕн çинине аса илчĕ. Ытлашши нимех те. Чăнах та, пĕр пысăках мар пиçнĕ çуллă какай татăкĕ хыпса янăччĕ ĕнтĕ. Уншăнах нимĕн те пулмалла мар пек.

Ыратни ир енне те иртсе каймарĕ. Иртме мар — вăйланчĕ. Кăнтăрла тĕлнелле вара «Васкавлă пулăшу» чĕнсе илмелле пулчĕ...

Ку хутĕнче Хĕветĕр нумай выртмарĕ. Эрне çур-ик эрне кăна. Анчах сывалса таврăнаймарĕ. Укол-эмелсем те ыратнине лăплантараймарĕç. Лăплантарсан та вăхăтлăха кăна. Апата тиркемен вар-хырăм мĕн хыпнине йышăнми пулчĕ.

Арçын сисĕнмеллех начарланчĕ: кĕлетки туртăнчĕ, ÿтне сарă сĕм çапрĕ. Хĕветĕр парăнмарĕ — хăй чирĕпе мĕнле кĕрешмеллине те пĕлмерĕ.

Август варринче Алюнкка ашшĕ татах больницăна кайрĕ. Тепĕр эрнерен вара... Тепĕр эрнерен кăнтăр кунĕнче Алюнккасен умне «Васкавлă пулăшу» машини çитсе чарăнчĕ. Ăна никам та чĕнсе илмен. Шап-шурă машина алăкĕнчен Хĕветĕр тухрĕ. Тĕрĕсрех, ăна икĕ арçын, шурă халатлă санитарсем, ик енчен тытса йăтса антарчĕç.

Машина сассине илтсе чупса тухнă Алюнкка ашшĕне курсан сăмах чĕнейми пулса тăчĕ. Ытла патвар та мар санитарсем хушшинче вăл пуш михĕ пекех çакăнса пырать. Кĕлеткинчен нимĕн те юлман — шăммипе тирĕ кăна. Вăталăх хĕрĕ тĕлне çитсен Хĕветĕр йăл кулма пăхрĕ. Пулмарĕ. Ырату шăла çырттарчĕ...

Тепĕр кунне мунча хутрĕç. Хĕветĕр мунчана ывăлĕсемпе мар, кĕçĕн хĕрĕсемпе кайрĕ.

— Вĕсем мана çуса кăларас çук, — ывăлĕсене кăшт ÿпкелесе калаçрĕ ашшĕ. — Мунчи те вĕри.

Алюнккапа йăмăкĕ сăмах чĕнмерĕç. Ашшĕн ĕненĕвĕ — тутлă мунча ăшшипе ÿтри чире кăларма пултарассине шанни — вĕсенче те пулчĕ. Ашшĕн хытанка кĕлеткине супăньленĕ мунчалапа сăтăрнă май Алюнкка нумаях та пулмасть, пĕр виçĕ-тăватă çул каялла кăна, ăна хăйне ашшĕ ак çаплах çуса-тасатса мунча кĕртнине аса илчĕ. Чирлĕ хĕр ача ĕнтĕ вĕри те мар мунчана та чăтаймастчĕ. Час-часах тăнне çухататчĕ. Ашшĕ вара ăна алла илсе киле йăтса каятчĕ. Амăшĕ çуса кăлариччен алăк умĕнчех кĕтсе тăратчĕ вăл. Нихăçан та ÿпкелешмен. Паян вара Алюнкка хăй ашшĕне çăвать...

Ашшĕ вĕрие чăтайман пирки алăка пĕрре те хупманран сивĕнсех кайнă мунчара ларнă май хĕр ача хăйне ачалăхран уйăракан картлашкан тепĕр пусăмĕ çине çĕкленнине ăнланчĕ. Ашшĕшĕн те вăл текех айван ача мар. Ун ачалла имшер хулпуççийĕ çине вăйпиттишĕн те йывăр çĕклем хума хатĕрленчĕ Хĕветĕр...

Мунчаран ăна ывăлĕ йăтса тухрĕ. Пĕр сехет çур-икке яхăн канлĕн çывăрчĕ вăл. Кайран вара... кайран ырату таврăнчĕ. Çĕрĕпех асапланчĕ арçын. Анчах сас кăлармарĕ.

Хĕветĕр пачах та вырăн çинчен тăми пулчĕ. Ир çинче

вăл ачисем пулăшнипе кантăкĕсене утиялпа картланă пӳрт умне тухса выртрĕ, каҫпа пӳрте кĕчĕ. Урăх хускану пулмарĕ. Ытлашши хускану тума мар, кача пӳрнине вылятма та тутине юн тухиччен ҫыртма тиврĕ. Апат анмарĕ. Анмарĕ мар, вăл пачах ҫимерĕ. Курăк чейне те тутине йĕпетмелĕх ҫеҫ ĕҫрĕ.

Ашшĕн ҫакăн пек вăйсăрлăхĕпе хӳтĕсĕрлĕхне Алюнкка ниепле те йышăнаймарĕ. Ку уншăн пысăк кĕтменлĕх пулчĕ. Ҫак самантра ашшĕпе мĕн пулса иртнине хĕр ача чухлаймарĕ. Ҫапах та ун ҫумĕнчех пулма тăрăшрĕ. Шыв ыйтсан — шыв, ача пăтти ыйтсан — пăтă пĕҫерсе пачĕ. Анчах Хĕветĕр ĕҫмерĕ те, ҫимерĕ те — Алюнкка пĕҫерсе пынă тĕле тĕлĕрсе кайрĕ. Хĕр ача чĕнсен те чĕнмерĕ.

Акă вăл каллех сас пачĕ. Ашшĕ мĕн каланине Алюнкка тӳрех ăнкарса илеймерĕ. Тепĕр хут ыйтрĕ.

— Сарамак чирĕ пуль ман, — те ыйтрĕ, те пĕлтерчĕ Хĕветĕр. — Сар кайăк ҫунатти тупасчĕ...

Чĕнмерĕ. Текех чĕнмерĕ. Алюнкка вара тăруках паҫăр, кăнтăрла, кирпĕч завочĕ еннелле выртакан сукмак ҫинче сар кайăк виллине курнине аса илчĕ. Самант тăхтамасăр хĕр ача сукмак тăрăх чупрĕ. Ун чунĕнче пысăк шанăҫ кăвайчĕ хĕмленсе илчĕ. Ҫак самантра уншăн пĕтĕм ҫăлăнăҫ вилнĕ сар кайăкра пулчĕ. Сывалать! Ашшĕ сывалать. Анчах Алюнккан сар кайăк тытмалла...

Пĕрре... иккĕ... виҫҫĕ... Татах та татах. Сукмак тăрăх каллĕ-маллĕ утрĕ хĕр ача. Кайăка курмарĕ. Кашни хутĕнче кашни утăмĕ шанчăка сӳнтерчĕ. Юлашкинчен чунĕ пĕтĕмпех пушанса юлчĕ. Киле ҫаврăнса ҫитнĕ тĕле хăй вăйсăрлăхне туйса тăракан хĕр ача чунĕ вуҫех шăнчĕ.

Тĕксĕм пӳрт умне Алюнкка ывăнса таврăнчĕ. Ашшĕ тепĕр хут кайăк пирки сăмах тапратма пултарасси хĕр ачана хăратрĕ. Ҫук тени ашшĕне вĕлерсе пăрахма пултарассăнах туйăнчĕ.

Хĕветĕр хĕрĕ таврăннине туйрĕ. Шарламарĕ. Сăмах чĕнме унăн хал ҫитмерĕ. Ырату питĕ вăйлă пулнăран вăл тăнне ҫухатрĕ.

Те ир, те каҫ. Тĕксĕм пӳлĕмре выртакан Хĕветĕр ҫакна тӳрех ăнланса илеймерĕ. Тепĕр тесен, уншăн пĕрех мар-и? Пурпĕрех вырăн ҫинчен тăраймасть. Ҫавăнпа ыратăвĕ кăшт лăпланнă саманта хăй пирки шухăшласа, хăйне

хăй хĕрхенсе ахаль ирттерес килмерĕ. Урăх шухăш пуçра нумай.

Текех пурăнас çын маррине Хĕветĕр ăнланчĕ ĕнтĕ. Çук, арçын вилĕмрен хăрамасть. Пӳрнĕ пулсан — вăл хатĕр. Ăна урăххи пăшăрхантарать. Урăххи... Арăмĕ Хĕветĕре çул çитмен тăвата ачапа пăрахса хăварчĕ. Вĕсенчен пĕри кăçал вун пĕрмĕш класа кайрĕ. Тепĕр виççĕшĕ вара — пĕри теприччен кĕçĕнрех, пĕри теприччен айвантарах.

Кĕçĕн ачисем пирки шутласа илнĕ май Хĕветĕр 1975 çулхи çу варринче тухнă пушара аса илчĕ. Темшĕн-çке шăпах çак синкерлĕ ĕçе. Çук, пĕлмĕше персе Хĕветĕр суеçтерет. Пĕлет... Пушар виççĕри хĕр ачин, çулталăкри ывăлĕн кĕлеткине амантса, çуралма ĕлкĕреймен пепкин шăпине хуçса хăварнине пĕлет. Темшĕн арçын хăйне айăплă туйрĕ. Вун пĕр çул каялла хăй ачисене инкекрен сыхласа, хӳтĕлесе çитерейменшĕн те, паянхи кун вĕсене тăлăх хăварнишĕн те.

Ырату вăйланчĕ. Вар-хырăм хĕрлĕ пăрăç хыпса янă пек çунчĕ. Часах çакă пĕтĕм кĕлетке тăрăх саланчĕ, ăстăна пăтраштарчĕ. Тепĕр самантран шăнтса пăрахрĕ. Сирсе пăрахнă утияла васкаса хăй çинелле туртрĕ Хĕветĕр. Ăшăнаймарĕ. Ал-урана хутлатса пĕр çĕрелле чăмăртанчĕ. Анчах çак хускану ыратăва вăйлатрĕ кăна. Арçын хăй сисмесĕрех ах! тесе ячĕ. Шăлне çыртса куçне хупрĕ. Хĕрхенӳсĕр çулăм ăна шалтан та, тултан та çупăрласа илчĕ.

Çак самантра таçта шалтан малтан питĕ ерипен, кайран вăйлăрах та вăйлăрах яланах усал тума хистекен сас калаçма пуçларĕ.

— Мĕн кĕтетĕн? Мĕне шанатăн? Тат! Кун-çул çиппи çӳхе. Ытла та çӳхе. Асапĕ вара пысăк. Тат! Пĕр кун... пĕр сехет... пĕр самант... Урăх вăхăт çук. Кĕрешни усăсăр. Тат! Хăтăл ыратуран! Асапран! Парăн! Ан хирĕçле. Хăтăл асапран. Хăтăл ыратуран. Тат! Та-а-ат!

Сасă чарăнма пĕлмерĕ. Çук. Хĕветĕр парăнмарĕ. Хăйшĕн мар. Малашлăхалла тулли шанчăкпа пăхакан мăшăр куçĕнчи хаваслăх хĕлхемĕ, ачалла айванлăх, лăпкăлăхпа канăçлăх тăсăмĕшĕн кĕрешрĕ. Пултăрах пĕр талăк, утмăл минут, пĕр самант кăна. Пултăрах. Пуçелĕк умне Вилĕм çитсе тăрсан та тата тепĕр самантшăн кĕрешĕ вăл. Ачисемшĕн кĕрешĕ. Вĕсен куллипе савăнăçĕшĕн.

Хĕветĕр çĕкленме хăтланчĕ. Ырату хумĕ шăм витĕр тухса минтер çумне лапчăнтарчĕ. Арçын шăлне çыртрĕ. Тем вăхăта каллех тăнне çухатрĕ.

## 11

Паян сентябрĕн виççĕмĕшĕ. Алюнкка кăçал улттăмĕш класа кайрĕ. Пĕлӳ сукмакĕ ăна нихăçан та хăратман. Шкул сывлăшĕ йăлăхтарман. Анчах паян вăл темшĕн киле кайма васкарĕ. Уроксенче те урок пирки мар, тăхтава кăларакан шăнкăрав çинчен шухăшласа ларчĕ. Хĕр ача чунĕ канăçсăрланчĕ. Мĕншĕнне вăл пĕлмерĕ.

Шкултан таврăнсан Алюнкка чи малтан пӳрт умне чупса кĕчĕ. Ашшĕ сывланине итлерĕ. Çывăрать пулас. Вăл ашшĕне чĕнчĕ. Лешĕ сас памарĕ. Хĕр ача вара май килнĕ таран шăппăн пусса пӳрте кĕчĕ.

Анкарти хыçĕнче трактор сасси кĕрлесе кайсан Алюнкка шалти пӳртрен тухрĕ.

— Шы-ыв, — тӳрех илтрĕ вăл ашшĕн вăйсăр сассине. Хĕр ача хыпаланса ятарлă куркапа лĕп шыв тăсса пачĕ. Ашшĕ ĕçеймерĕ, тутине çеç йĕпетрĕ. — Мĕн унта? — кĕрлеве илтсе ыйтрĕ ашшĕ.

— Улăм илсе килнĕ. Çавна пушатаççĕ.

— Веçех-и?

— Пĕлместĕп. Час тухса пĕлсе килетĕп, — ашшĕ хушнине пурнăçлама васкарĕ хĕрĕ.

Анкарти хыçĕнче хĕрӳ ĕç кĕрлет. Икĕ пиччĕшĕ кӳршĕсемпе пĕрле трактор çинчи улăма пушатса ура ураласçĕ. Патшалăха сутнă сĕтшĕн улăм пара пуçласан выльăх-чĕрлĕх валли апат тавраш хатĕрлес нуша чакрĕ. Сĕтне мĕн чуль нумайрах сутатăн, улăмĕ çавăн чуль нумайрах килет. Кăçал Алюнккасем икĕ трактор прицепĕ чухлĕ улăм илнĕ. Выльăхсене çитерме те, ая сарса пама та çитет.

Хĕр ача çаврăнса çитнĕ тĕле ашшĕ тĕлĕрсе кайнă иккен. Чĕнсен те чĕнмерĕ. Алюнкка пăрăнса кайма тăрсан вăл нăйкăшса ячĕ. Татах шыв ыйтрĕ. Шывне парсан ĕçеймерĕ те.

— Мĕн унта? — çаплипех вăйсăррăн ыйтрĕ вăл.

Алюнкка анкарти хыçĕнче ĕç мĕнле пынине каласа

пама пуçларĕ. Мĕн чухлĕ, камсем, ăçта пушатнине — веçех. Анчах ашшĕ сăмаха итлесе пĕтереймерĕ.

— Эпĕ вилетĕп, — темрен намăсланнă пек шăппăн каларĕ вăл.

— Мĕн? — урмăш илтрĕм пулĕ тесе тепĕр хут калама ыйтрĕ Алюнкка. Ашшĕ чĕнмерĕ. Хĕр ача вара тăруках çак сăмахсенех икĕ çул çур каялла хăйне амăшĕ каланине аса илчĕ. Паянхи пекех...

— Ытла ан хуçăлăр, ан макăрăр... — хăйпе хăй калаçнă пек çеç хушса хучĕ Хĕветĕр. Çак самантра та хăй пирки мар, ачисем çинчен шухăшларĕ вăл.

Алюнкка шăпăрт тăчĕ. Куçĕнчен куççуль те тухмарĕ унăн. Вăл ашшĕ тата мĕн каласса кĕтрĕ. Лешĕ чĕнмерĕ.

Мĕн чухлĕ тăчĕ-ши ĕнтĕ хĕр ача пуçелĕк умĕнче? Тен, пĕр сехет, тен, пĕр самант кăна. Вăл вăхăта туймарĕ. Ашшĕ вара шарламарĕ. Алюнкка вырăн патĕнчен пăрăнса кайма тăчĕ.

— Йывăр пулать сире пиччӳпе, — паçăрхинчен вăйлăрах тухрĕ чирлĕ çын сасси. — Эсĕ аптрамăн-ха. Кĕçĕннисем... — ку сăмахсене ашшĕ: «Сана пиллетĕп, ан пăрах вĕсене», — тенĕн каласа хучĕ. Çакна Хĕветĕр саспа та калатчĕ пулĕ, анчах тин çеç вун тăваттă урлă каçнă хĕр ачашăн çакă мĕн тери йывăр çĕклем пулнине туйни калаттармарĕ.

Алюнкка вара хытсах кайрĕ. Ашшĕ хăйпе çапла сыв-пуллашнине ĕненес те килмерĕ унăн.

— Ат-те, — куççуль витĕр ерипен чĕнчĕ вăл. Сассинче вара: «Мĕн калаçатăн эсĕ, çук», — тени янăрарĕ.

Хирĕç чĕнекен пулмарĕ. Ашшĕ каллех тĕлĕрсе кайнă. Вăл ахлатмарĕ те, нăйкăшмарĕ те. Анчах темме-çке шăлĕсене шăтăртаттарчĕ.

Алюнкка кил хушшине тухрĕ. Мунча кĕтессине кайса тем вăхăт саспах ĕсĕклерĕ. Хăй мĕншĕн макăрни çинчен хĕр ача шухăшламарĕ. Шухăшлама мар, шухăш мĕлкине те пуçран хăваларĕ. Усал пирки аса илмесен инкек пăрăнса иртес пек туйăнчĕ ăна.

Куççуль типсен хĕр ача каллех пӳрт умне таврăнчĕ. Сывлама манса ашшĕне итлесе тăчĕ. Питĕ ерипен, анчах сывлать. Алюнкка чунне нимпе ăнлантарса пама çук хавăслăх ярса илчĕ. Унăн кулас, сикес, вылляс килчĕ.

Мĕн çывăрма выртиччен хĕр ача пĕрре пӳрте — ашшĕ

вырӑнӗ умне, тепре урама — улӑм кӗртекенсем патне — хутларӗ. Кӑмӑлӗ те ӑнлантарма ҫук хӑвӑрт улшӑнса тӑчӗ: пӗрре кулас, тепре ӳлес килчӗ. Ашшӗ вара текех пӗр ытлашши сас та памарӗ. Пачах чӗнмерӗ. Ҫывӑрма выртнӑ май пӳрт умӗнчен шалти пӳрте куҫарнӑ чух ҫеҫ питӗ йывӑррӑн та асаплӑн ахлатрӗ. Кайран текех пӗр сас-чӳ те кӑлармарӗ...

Ҫутта сӳнтернӗ-сӳнтермен килтисем ҫывӑрса кайрӗҫ. Алюнкка ҫывӑраймарӗ. Вӑл ҫаплипех ашшӗ мӗнле сывланине тимлерӗ. Хӑй ҫывӑрса кайсан вӑл сывлама пӑрахассӑн туйӑнчӗ-ши ӑна? Те ахаль ҫеҫ ыйхи килмерӗ. Анчах Алюнкка ҫывӑраймарӗ.

Вӑхӑт иртрӗ. Акӑ кӳршӗ-аршӑсен автанӗсем авӑтни илтӗне-илтӗне кайрӗ. Ҫур ҫӗр ҫитрӗ. Хӗр ача куҫӗ ерипен йывӑрланчӗ. Ҫывӑрса кайиччен вӑл тепӗр хут ашшӗн тикӗс те лӑпкӑ сывлӑш ҫаврӑнӑшне итлерӗ. Канлӗн ҫывӑрать.

Тепӗр кунне Алюнккасем ҫемйипех ҫывӑрса юлчӗҫ. Сӗтел ҫинчи будильник ҫур ҫӗр иртсен виҫҫӗмӗш сехетре чарӑнса ларнӑ. Хӗр ача чупа-чупа шкула пуҫтарӑна пуҫларӗ. Ашшӗ выртакан диван ҫумӗнченех иртсе ҫӳрерӗ вӑл. Ун еннелле вӗлт! ҫеҫ пӑхса илчӗ. Вӑл кӑшт ҫӗкленнӗ те диван хыҫӗ ҫумне тӗшӗрӗннӗ. Хӑй куҫ илмесӗр таҫта инҫетелле пӑхать. Пӗрре иртсе кайрӗ Алюнкка, иккӗ... Виҫҫӗмӗш хутӗнче чарӑнса тӑчӗ.

— Атте, — чӗнчӗ вӑл.

Хирӗҫ сас паракан пулмарӗ. Хӗр ача ашшӗ ҫине тинкеререх пӑхрӗ. Лешӗ йӑшӑл та тумарӗ. Алюнкка асӑрхануллӑн диван хыҫӗ ҫине хунӑ аллине сӗртӗнчӗ. Ҫав самантрах ток ҫапнӑ пек каялла туртса илчӗ. Малтанах нимӗн те чухлаймарӗ-ха вӑл. Анчах ашшӗне пулӑшу, пӗрремӗш пулӑшу, кирлине ӑнланчӗ. Хӑвӑрт-хӑвӑрт, анчах лӑпкӑлӑха ҫухатмасӑр, хӗр ача хытма ӗлкӗреймен сивӗ алӑсене ик еннелле сарчӗ, кайран кӑкӑр ҫинче хӗреслерӗ. Пӗр хутчен, иккӗ... Татах та татах. Хӗветӗр хирӗҫлемерӗ. Аллисене хытармарӗ, анчах ҫемҫетсе лӑш та ямарӗ. Алюнкка ҫаплипех теме шанчӗ. Мӗн пулса иртнине — ашшӗ ҫапла пӗр сассӑр, лӑпкӑн вилсе выртнине — ӗненес килмерӗ. Ҫакна вӑл ӗненмерӗ те...

Алюнкка мӗн тунине икӗ пиччӗшӗпе кӗҫӗннисем урай варринче шӑпӑрт пӑхса тӑчӗҫ. Вӗсем те шанчӗҫ, кӗтрӗҫ. Хӗр ача хӑй аллипе сивӗ алӑсене ӑшӑтса кӗлеткене пур-

нăç хĕлхемĕ кĕртессе кĕтрĕç. Шанчăк вĕсен чунĕсенче те амаланчĕ...

Тем вăхăтран хĕр ача виле умĕнчен пăрăнчĕ. Чӳрече патĕнчи сĕтел хушшине ларчĕ те хыттăн, сасăпах ӳлесе ячĕ. Шанчăк сӳнчĕ. Пуриншĕн те. Ĕнтĕ диван патне пиччĕшĕ пычĕ. Ашшĕне урисене тăсса, аллисене кăкăр умне хĕреслесе вырттарчĕ. Куçне тачă хупса хучĕ.

Пӳртре хӳхлев кăна илтĕнсе тăчĕ.

## 12

Хĕветĕре морга касма илсе каймарĕç. Больницăна кайса хут илсе килчĕç кăна. Сывлăшра хăрушă сăмах явăнса иртрĕ. Рак... Ашшĕн рак пулнă иккен. Кĕлеткене типĕтекен, ӳте чĕрĕлле çиекен рак. Анчах хальлĕхе Алюнкка çакăн пирки шухăшламарĕ-ха. Ашшĕ мĕнле асап витĕр тухнине пĕлмерĕ. Çакна вăл чылай каярах çеç ăнланĕ.

Халĕ вара... Халĕ... пурте вилепе сывпуллашрĕç. Кăнтăрла тĕлнелле Хĕветĕр пиччĕш-шăллĕсем, аппăш-йăмăкĕсем, кинĕ-инкĕшĕсем çитсе кĕчĕç. Алюнкка вĕсенчен ютшăнса айккинелле пăрăнчĕ. Хĕр ача хăй çичĕ çулта чухне ашшĕн кĕçĕн шăллĕн çĕн пӳрт ĕçкине кайса килнине манман-ха. Хура кĕркунне çĕр хута вун-вун ик çухрăмри ялтан киле çуран таврăннине те, ашшĕне аслă инкĕшĕ вырăн айне тапса кĕртнине те, хăй шăнса чирленине те манман. Ир кӳлĕм киле çитсен ăшă кăмака çинче кӳренӳпе ырату куççульне çăтни те манăçман. Паян кун та çак ырату чĕререх.

Аслисем Алюнккан кăмăлне курмарĕç. Тепĕр тесен, вĕсемшĕн çак хĕр ачан ĕмĕт-шухăшĕ пĕртте пĕлтерĕшлĕ пулмарĕ. Авă вĕсем пĕр çĕре кĕпĕрленсе тăнă та хĕрсе кайсах хăйсен ĕç-пуçĕ пирки калаçаççĕ. Çак пӳртре, хăйсенчен ик-виç утăмра, шăллĕ вытнине те маннă тейĕн. Алюнккан чунĕ хытрĕ, куçĕнчен курайманлăх куççулĕ тухрĕ.

Çынсем çаплипех килчĕç те килчĕç. Тахăш самантра пӳрте ашшĕн Тутарта пурăнакан йăмăкĕпе лесник шăллĕ кĕрсе тăчĕç. Никама сывлăх суниччен малтан виле умне пычĕç. Куçĕсем шывланчĕç, сасăпах йĕрсе ячĕç вĕсем. Пиччĕшне асăнса йĕчĕç. Çакна кĕтесрен сăнаса тăракан

Алюнккан чунĕнче темĕн улшăнчĕ. Каçарчĕ. Куççуль витĕр каçарчĕ вăл çак икĕ çынна. Ашшĕ умĕнче каçарчĕ.

Çынсем килсех тăчĕç. Алюнккана пӳртре сывлăш çитми пулчĕ. Вăл кил хушшине тухрĕ. Кунта та çынсем. Вĕçĕ-хĕррисĕр. Хĕр ачан пĕтĕм тĕнчерен тарас, пуринчен те таçта кайса пытанас килчĕ. Анчах ăçта? Вăл хапхаран пĕр тĕллевсĕр тухрĕ. Чарăнчĕ. Таврара мĕн пулса иртнине пĕрремĕш хут курнă пек унталла-кунталла пăхрĕ. Тăрукках тахăш вăхăтра хапха çумне кăларса тăратнă тупăк хуппине асăрхарĕ. Темшĕн-çке халиччен ăна Алюнкка курман. Çак самантра хĕр ача чунне тем амакĕ астарса ячĕ. Кулас килмен çĕрте кулчĕ. Сăлтавсăр кулчĕ вăл. Тем шыраса, тем тума тупăк хуппи хыçне кĕрсе тăчĕ. Малашнехи çиçĕм пек хăвăрт пулса иртрĕ — Алюнккашăн çакă ĕмĕр тăршшĕ пулчĕ...

Малтанхи самантра вăл тин çеç савалантнă хăман пылак шăршипе киленчĕ. Пурин çинчен те манса ерипен ӳсĕрĕлчĕ. Унтан кĕçех хăйне хăй вуçех туйми пулчĕ. Куçĕ курмарĕ, хăлхи илтмерĕ. Тĕттĕм, тăвăр. Хăрушă. Тин çеç пылаккăн ӳсĕрĕлтернĕ шăршă сывлăша картласа пăва пуçларĕ. Ерипен-ерипен, питĕ ерипен хĕр ачана тĕттĕм тĕпсĕрлĕх çăта пуçларĕ. Çăтрĕ, çăтрĕ. Хирĕçлени усăсăр. Алюнкка хускалмарĕ те.

Анчах... анчах темле Вăй, асамлă Вăй, тĕттĕмлĕх сăнчăрĕсене çапса аркатрĕ. Хура шăтăка хăйпе хупласа ăна çутта тĕксе кăларчĕ. Хăй юлчĕ. Алюнкка чунĕнче вара ĕмĕрлĕхех вилĕм шăрши — тин çеç савалантнă йывăç пылакĕ — асра юлчĕ.

## 13

Паян пытараççĕ. Паян ашшĕне пытараççĕ. Ĕнтĕ темиçе эрне илемлĕн тăнă çанталăк паян ирех пăсăлчĕ. Хĕвел тухмарĕ, тӳпене хура пĕлĕтсем сырса илчĕç. Халь-халь çумăр ярас пек туйăнать. Анчах çĕр çине пĕр тумлам та ӳкмест.

Алюнкка куçĕнчен те куççуль ӳкмерĕ. Ашшĕн ури вĕçĕнче тăнă чух та хĕр ача хуçăлса макăрмарĕ. Тем чарса тăчĕ ăна. Çакăнта вăл хăйне вăйсăр, хӳтлĕхсĕр туймарĕ. Пӳртри халăх ах! та ах! тени, куçĕсене шăлкалани ăна тĕлĕнтерчĕ. Мĕн пулнă? Нимĕн те! Мĕншĕн макăратăр?! Кама хĕрхенетĕр?

Сăлтавĕ çук! Çук. Çапах тепĕр самантранах Алюнкка хăй чăнлăхран тарма тăрăшнине, хăйне суяпа йăпатма хăтланнине ăнланать. Çакăн пек чух ун чунĕ куççульпе чыхăнать, юнĕ шăнать. Анчах лăпкăлăх ăна пăрахмасть. Айккинчен пăхакан çак çинçешке хĕр ача чунĕнче хаяр пушар, çил-тăвăл алхасать тесе те шутлаймăн. Хăйпе хăй мĕн пулса иртнине Алюнкка та ăнланаймасть.

Халăх, çурта, виле шăршипе тулса ларнă пӳртри сывлăш хĕр ачана анратсах ячĕç. Икĕ çĕр çывăри-çывăрми ирттерни, виççĕмĕш кун путлĕн апатланманни, кунĕн-çĕрĕн макăрни те ăна халсăрлатрĕ. Урай варринех персе анасран асăрханса Алюнкка хапха умĕнчи пĕрене купи çине кайса ларчĕ. Мĕнле пурăнмалла? Мĕнле? Вун тăват çулхи хĕр ачана çакна татса пама çăмăлах мар.

Кăнтăрла хыççăн тупăка пӳртрен илсе тухрĕç. Масар çине ăсатма пырайманнисем виле тавра çаврăнчĕç. Унтан хуппине хурса машина çине хăпартрĕç. Хĕветĕр хĕрывăлĕсем тупăк çумне вырнаçса ларчĕç. Сак тулли ача, сак тулли тăлăх.

Машина тапранса кайрĕ. Ун хыçĕнчен симĕс лăс çул выртса пычĕ. Тупăка пӳртрен илсе тухнă самантра уçăлса кайнă тӳпе каллех пĕлĕтленчĕ. Темиçе тумлам çумăр та ӳкрĕ. Çавăнтах чарăнчĕ. Çумăр пĕлĕчĕсем хăйсен çĕклемне темле сăваплă самант валли упрарĕç пулас. Йывăррăн, ерипен шурĕç вĕсем машина хыçĕнчен. Хăйсен васкавлăхĕпе ахаль те кĕске уйрăлу сехетне çывхартас темерĕç.

Масар çинче пурте хатĕр. Хĕветĕрĕн ĕмĕрлĕх вырăнне ĕнерех алтса хатĕрленĕ. Арăмĕн вил тăпри пуçĕнче выртĕ вăл. Хăй çуралса ӳснĕ ял масарĕ çинче.

Йывăç айне пулнă масар çинчи хĕрес тăррисем курăна пуçласан Алюнккан лăпкăлăхĕ таçта çухалчĕ. Чĕри хăвăрт-хăвăрт тапрĕ, алли вĕттĕн чĕтрерĕ. Хĕр ача чунĕ вĕри куççульпе тулса ларчĕ. Нăш! нăш! мăшлатрĕ вăл. Хыттăн ӳлесе ярасран асăрханса тутине çыртрĕ. Тупăка шăтăка антарнă чух нӳрлĕ тăм лăч! та лăч! ӳкнине итленĕ май Алюнкка веçех халран ӳкрĕ. Никама, ниме курмарĕ, илтмерĕ вăл. Темле усал ăна пĕр кĕске утăм тума хистерĕ. Кĕске утăм ашшĕн шăтăкне... Унăн пĕтĕм кĕлетки малалла ӳпĕнчĕ. Çак вăхăтра юлашки кĕреçе вил тăпри тĕмески çине выртрĕ. Алюнкка нӳрĕпе сывлакан çĕр çине

пĕшкĕнсе ларчĕ. Хăй кĕлеткине тытса тăма вăй юлмарĕ унăн. Ăна такам тем каларĕ, ура çине тăратма хăтланчĕ. Алюнкка хирĕçлемерĕ. Анчах хăй кĕлеткине хăй тытса çĕклеймерĕ. Шăпах çак самантра çуллахи пек шултра, вăйлă çумăр пуçланчĕ. Вил тăпри умĕнче тăракан халăх масар пӳрчĕ еннелле чупрĕ. Алюнкка тытăнса юлчĕ. Çумăрăн кашни тумламĕ ун ăсне тăрăлтарчĕ, кĕлеткине вăй кĕртрĕ, кăмăлне çирĕплетрĕ. Пĕр минут... Çак пĕр минут хушшинче хĕр ача веçех улшăнчĕ. Таçта шалта темĕн ăна ахăрттарчĕ, вăй выляма илĕртрĕ. Йăл-йăл кулакан Алюнкка çумăртан тарса пытаннă çынсем хушшине кĕрсе тăнă май аванмарланса пуçне пĕкрĕ. Ашшĕне тин çеç пытарнă хĕр ача хăй чунĕнчи хаваслăха, çăмăллăха нимĕнпе те ăнлантарса параймарĕ. Уншăн çак самантран урăх пурнăç — хаяр пурнăç пуçланнине çеç чухларĕ вăл.

## 14

Вĕçленчĕ. Пĕтĕмпех. Ырри те, усалли те. Савăнăçĕ те, хуйхи те. Пĕтĕм канăçсăрлăх, ырату, пĕтĕм канлĕхĕ, телей. Мĕн юлчĕ? Пушăлăх, тĕттĕмлĕх, ĕмĕрлĕх. Тата? Тата пилĕк ывăлпа виçĕ хĕр юлчĕ Хĕветĕрĕн. Ун пурнăçĕ малалла — вĕсенче, шухăш-ĕмĕчĕ, çитĕнĕвĕ вĕсенче. Вăл мĕн туса ĕлкĕрейменнине вĕсем тăвĕç. Унăн ятне çĕр çинчен çухалма памĕç.

Алюнккашăн вара ку пуçламăшĕ çеç пулчĕ. Аслă пурнăçăн пуçламăшĕ. Хальлĕхе хĕр ача хăйне малашне мĕн кĕтнине пĕлмерĕ-ха. Пурнăç çулĕ тăвалла выртнине те, шухăш çĕклемĕ мĕнешкел йывăррине те ăнланмарĕ. Вăл чи пуçламăшĕнче тăчĕ.

Умра хĕвелĕ те, çăлтăрсемпе уйăхĕ те пулĕ. Вăхăт çитсессĕн... Вăхăт çитсессĕн нумайăшĕ пулĕ. Пĕчченлĕх тунсăхĕ. Амăшлăх телейĕ. Пурте пулĕ. Анчах ырату чĕререн сирĕлмĕ. Çак ырату çапса ярсассăн çĕкленме, ӳксессĕн тăма пулăшĕ. Çухату чуна хытарĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме, пуçа пĕкмесĕр утма вĕрентĕ.

Çакă пурте малашне пулĕ. Хальлĕхе вăл хуйхăпа хуçăлнă, пурнăç тăнăçлăхне çухатнă мĕскĕн кăна. Ун чунĕ вилнĕ, куçĕ сӳннĕ, мал ĕмĕчĕ çук...

*1999*

# КАЛАВСЕМ

## ПУРНĂÇ ТЕХĔМĔ

### 1

Сывлăша çурса ши-ши! янăрарĕ сасă. Каç сĕмлĕхне путнă пĕтĕм тавралăха хускатрĕ вăл. Ши-ши! чарăнма пĕлмерĕ тин çеç нумай хутлă çурт подъездĕнчен чупса тухнă Мĕлке. Хăй çинчен систерсе такама тем каласшăн тейĕн çав. Пÿрт çумĕнчи тĕмсем хÿттине пытаннă та шăхăрать те шăхăрать. Хăй вара куç илмесĕр те ала пек çутă тÿпене, те çак çуртăн пĕр хура чÿречине тинкерет. Ши! Ши-и!

Ыйха путнă мăнаçлă çурт лăпланма пĕлмен пĕччен сасса асăрхамасăр ларма тăрăшрĕ. Анчах кăлăхах. Акă тĕттĕм кантăксенче пĕрин хыççăн тепринче çутă чăлт-чалт çутăлчĕ. Яри уçса пăрахнă чÿречесенчен çурма хывăннă çын кĕлеткисем курăнчĕç.

— Хулигансем!

— Мĕн çĕр çĕмĕретĕр?

— Шуйттансем! Ни кăнтăрла, ни каçпа канăç çук çав мурсенчен!

— Пĕр-ик витре сивĕ шыв пуç çийĕн ярсан самант шăпланĕç те-ха.

Ча-аш-ш! сирпĕтрĕ такам шывпа. Лектереймерĕ. Тĕмсем айĕнче тăракан Мĕлке текех сас памарĕ. Анчах уçă чÿречесенчен илтĕнекен ятлаçу çаплипех янăрарĕ-ха. Çакăн сăлтавĕ пулнă Мĕлке вара пурпĕрех хăй вырăнĕнчен пĕр шит те сикмерĕ. Пуçне каçăртса тăваттăмĕш хутри кăшт çеç çутă кăларакан чÿрече çине пăхрĕ. Тĕксĕм çутăпа çунакан çак хупă чÿрече уншăн чи çут çăлтăртан çутăрах, чи ăш хĕвелтен хĕрÿрех пек туйăнчĕ. Туйăнчĕ кăна мар, çакна вăл хăйĕн чĕрипе туйрĕ.

Шăв-шав нумай вăхăтран кăна аран-аран лăпланчĕ. Тем самантран каçхи шăплăхра пĕртен-пĕр тĕксĕм чӳрече çути кăна юлчĕ. Акă ун сĕмĕнче пĕччен кĕлетке курăнчĕ. Васкамасăр, ерипен, темĕнле ярăнса тенĕ пек, утса пычĕ вăл чӳрече умне. Çавăн пекех ытлашши хускану тумасăр чӳрече чĕнтĕрне сирчĕ те... Турăçăм, мĕнле ĕлккен вăл! Уйăх шевлипе, темĕнле иксĕлми вăрттăнлăхпа çыхăннă çĕр çинчи Пирĕшти! Унăн кашни хусканăвĕ, кашни утăмĕ илем çуратать. Сирчĕ те... хĕп-хĕрлĕ кĕл чечек çыххине уçă кантăкран кăларса вăркăнтарчĕ.

— Хăвăн милĕкне илме ан ман!

Ăçта çухалчĕ Пирĕшти? Тин кăна çакăнтаччĕ-çке! Тин кăна... Халĕ те кантăк умĕнчех вăл. Сăнĕпе те, хăва пек çирĕп кĕлеткипе те улшăнман. Анчах текех... Текех Пирĕшти мар! Пĕр самантрах пĕтĕм тĕнче кутăнла çаврăнчĕ.

Чӳречерен вăркăнтарнă черчен чечексем çын урипе таптаннă асфальт çине вĕçсе анчĕç. Темĕн шăнтăр-р! турĕ. Те чечек туни, те юрату асаплă сас кăларчĕ. Мĕлке çаплах хускалмарĕ. Вăл хăйĕн чĕрине çара алăпах çăлса кăларнине туйрĕ. Ырату... Чăтма çук вăйлă ырату. Анчах Мĕлке черчен чечек мар, вăл ку ыратăва пĕр сассăр чăтса ирттерĕ. Тӳпери пин-пин çăлтăрпа тулли уйăх та, вăштăркка, кăшт сивĕрех сывлăш хумĕ те çак ыратăва, куççульпе тулнă мăшăр куçа курмарĕ те, туймарĕ те. Ун ыратăвне Пирĕшти те пĕлеймĕ.

## 2

Ташша тухма илĕртсе чĕнекен хаваслă кĕвĕ бар алăкне кăшт уçсанах илтĕнет. Ева йывăçран касса эрешленĕ пысăк алăка хăнăхнă йăлипе яри уçса кĕчĕ. Барăн пысăках мар залĕнче пĕр-ик мăшăр ташлать тата тепĕр темиçе мăшăрĕ сĕтел хушшинче шăкăл-шăкăл калаçса ларать. Сывлăшра тĕрлĕ йышши хаклă эрех, одеколон-духи, пирус-сигарет, мăшăрсем ларакан сĕтелсем çинче çунакан çурта шăрши тăрать. Анчах çакă никама та пĕртте кунтан хăваламасть. Пачах урăхла. Çак хутăш шăршă, тĕрлĕ тĕспе вылякан çутă хăйсен ытамне кĕрсе ӳкме чĕнеççĕ. Ева тӳрех бара иртрĕ. Кунта пĕччен тунсăхлакансем те пур иккен. Çӳллĕ пукан çине меллĕрех вырнаç-

санах хӗр хӑйӗнчен инçех мар ларакан каччӑна асӑрхарӗ. Çут çанталӑк панӑ илемпе тата пысӑк вӑйпа выляса тӑракан кӗлетке, вӗттӗн-вӗттӗн кӑтраланакан типтерлӗ кастарнӑ йӗпкӗн хура çӳç, çавракка пит çинчи кӑшт чутласах çитерреймен пысӑк сӑмса, хулӑн, анчах каччӑн илемне пачах пӑсман тута. Унра хӑй патне илӗртекен, çав вӑхӑтрах хӑйӗнчен хӑвалакан темӗнле вӑй пур.

— Коктейль, — кӗскен хушрӗ хӗр кунти ӗçлекене.

Барта ӗçлекен çамрӑк каччӑ Евӑран заказ йышӑннӑ май хӗрпе калаçу пуçарма пӑхрӗ. Анчах Ева унпа сӑмахламарӗ. Ӑна ытларах çак палламан каччӑ кӑсӑклантарчӗ. Кам вӑл? Ева ку бара кашни каç тенӗ пекех кӗрсе тухать. Ыт ахальтен, пӗчченлӗх тунсӑхне сирме кӑна. Анчах çак сарлака хул-çурӑмлӑ, çӳллех мар каччӑна ку таранччен курман. Çак пӗлменлӗх вара хӗре тата ытларах кӑсӑклантарса ячӗ.

Килсе кӗнӗреннпех хӑйӗн енне тинкерсе пӑхакан хӗре Артур та паçӑрах асӑрхарӗ. Ытла хитре тесе калаймӑн ӑна: типшӗмрех вӑрӑм кӗлетке, хулпуççи çине сапаласа янӑ çырӑ çӳç, тӑрӑхла пит. Тӳперен аннӑ Пирӗшти мар. Çак юлашки шухӑш çуралсассӑн Артур хӑйӗнче тарӑхупа кӳренӳ хумӗ вӗреме пуçланине туйса илчӗ. Куçӗ умне асфальт çине выртса юлнӑ чечексем шуса тухрӗç. Çак хӗр тути тӗслӗ хӗп-хӗрлӗ чечексем. Ыратупа тарӑхӑва путарас тесе каччӑ умӗнче ларакан эрех черккине ӗçсе пушатрӗ. Анчах ку ӑна пулӑшмарӗ. Вӑл хӑй ӳсӗрӗлме пуçланине кӑна туйса илчӗ.

Çак вӑхӑтра залра тунсӑхлӑ вальс кӗвви илтӗнсе кайрӗ. Каччӑ мӗншӗнне пӗлмесӗрех хӗре ташша чӗнчӗ. Вальс... Вальс... Тунсӑх вальсӗ. Вӑл ик чӗрене пӗрлештерме те, уйӑрса яма та, пӗр-пӗрне пӗлменнисене паллаштарма та пултарать.

Артурпа Ева та ташӑ картинче паллашрӗç. Ева калаçӑва тӳрех шӳт хумӗпе яма пӑхрӗ. Ыйтусене типпӗн хуравланипех çырлахрӗ Артур. Тин çеç паллашнӑ хӗр ятне пӗлни те çителӗклӗ иккен уншӑн. Ева кам пулни, мӗн ӗçпе пурӑнни тата ыттине те пӗлес килмерӗ каччӑн. Ун пуçӗнче пачах урӑх сӑнар. Чӗре ыратса, хӗссе илчӗ. Çак ыратӑва пытарас тесе Артур хӗре вӑйлӑрах ыталарӗ. Хӗр çакна хӑйне май ӑнланчӗ курӑнать. Вӑл пӗтӗм кӗлеткипе

каччӑ ытамне чӑмрӗ, хулпуҫҫи ҫинче выртакан аллисемпе ачашшӑн ун мӑйӗнчен ҫакӑнчӗ. Ҫакӑ пӗтӗмпех Артура именттерчӗ. Анчах каялла ҫул ҫук ӗнтӗ. Вӑл ирӗксӗртен тенӗ пек хӗр тутине сӗртӗнчӗ. Писев тутипе сӑмсана кӑтӑклантаракан духи шӑрши Артур пуҫне ҫавӑрса ячӗҫ. Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑй Ева ҫумнелле туртӑнчӗ. Ӗлкӗреймесрен хӑранӑн хӗр тутине ӗмрӗ, юнӗ вӗриленнине туйрӗ.

— Ӑҫта каятпӑр? Сан патна е ... — тутаран тута самантлӑх уйрӑлсан пӑшӑлтатрӗ хӗр.

— Сан патна...

...Хавасла кӗвӗ, шутне пӗлмесӗр ӗҫнӗ эрех тата куҫран пӑхса тӑракан хӗр Артуршӑн ачаш юрату тӗнчине алӑк уҫрӗҫ.

## 3

Артур ирхине пуҫ ыратнипе вӑранчӗ. Вӑранма вӑранчӗ, анчах яланхиллех хӑвӑрт сиксе тӑрса зарядка тума та, сивӗ душ айне тӑма та васкамарӗ. Паян ӑна темшӗн хӑйӗн чунӗпе кӗлетки темле майпа пӗр-пӗринчен уйрӑлса кайнӑн туйӑнчӗ. Ҫакна ӑнланма ҫук, ӑна туймалла. Вун тӑхӑр ҫулхи кӗлеткере ҫитмӗл тӑхӑр ҫулхи е тата аслӑрах чун ларать тенине ӗненме йывӑр. Анчах вӑл паян хӑй туять-ҫке. Ватлӑх тени эс миҫе ҫултинчен килмест иккен. Пачах унран мар. Вӑл пӗтӗмпех этем чунӗнчен, вӑл мӗнле ҫулӑмпа ҫуннинчен килет. Тин ҫеҫ пӗрремӗш утӑмсем тӑвакан пӗчӗк чун та ҫул шутне ҫухатнӑ ватӑ пек пурнӑҫран ывӑнма е, пачах урӑхла, ҫӗр ҫул ытла пурӑнакан та пурнӑҫ илемне ҫӗнӗрен уҫма, ҫӗнӗлле юратма пултарать.

Вӑраннӑранпа вӑхӑт чылай иртрӗ. Пурпӗрех ҫемҫе вырӑн ҫинчен ҫӗкленес килмест. Тепӗр тесен ӑҫта васкас — паян ун канмалли кун. Артур куҫне хупса выртрӗ, тепӗр хут ҫывӑрса кайма тӑрӑшрӗ. Анчах пулмарӗ, юнашар пӳлӗмре телефон шӑнкӑртатрӗ. Ӑна никам та тытмарӗ: хваттерте пӗчченех ӗнтӗ вӑл. Лешӗ вара пӗр вӗҫӗмсӗр шӑнкӑртатрӗ. Тӑма тивет.

— Алло, — кӑмӑлсӑррӑн илтӗнчӗ ун сасси.

— Алло, Артур. Эсӗ-и ку? Салам!

Каччӑ самантлӑха чӗмсӗрленсе ларчӗ. Кам мурӗ калаҫать унпа? Пачах палламан хӗр сасси.

— Алло. Мĕншĕн чĕнместĕн? Япăх илтĕнет-им? — çаплипех калаçрĕç телефон трубкинче.

— Салам. Чиперех илтĕнет. Эп... — малалла мĕн каламаллине пĕлмесĕр сăмахне çăтрĕ каччă.

— Эпĕ ку, Ева! — Артур хăйне палласа илейменнине ăнланса ятне каларĕ хĕр.

— Палларăм. Ĕçсем мĕнле?

— Аван. Ĕнер мĕн калаçса татăлнине манмарăн-и?

— М-м...

— Эсĕ манпа пĕрле çуралнă кун уявне пыма пулнăччĕ.

— А-а! Астăватăп, манман.

— Апла пулсан халех ман пата вĕçтерсе кил. Адрес астăватăн-и?

— Халех тухатăп...

Артур хĕре халех тухатăп терĕ пулин те, ытлах хыпаланмарĕ. Малтан çур сехете яхăнах ваннăра, кайран кухньăра вăхăт ирттерчĕ. Вара тин васкамасăр хваттертен тухса кайрĕ.

Ева пурăнакан çурт тĕлне çитнĕ чух хĕр шăпах алăк питĕретчĕ. Артура кĕтсе илес шанчăка çухатнăран пĕчченех кайма тухнă ĕнтĕ вăл. Хĕр хăй кăмăлсăр пулнине палăртмарĕ, качча çавăтрĕ те, вĕсем урама тухрĕç.

### 4

Ĕçкĕ-çикĕ ирттерме пысăк сăлтав кирлĕ мар иккен. Мĕн ĕçмелли кăна пултăр — сăлтав яланах тупăнать. Хăш чух сăлтавĕ те пачах кирлĕ мар.

Артуршăн та юлашки вăхăтра çакăн пеккисем тупăнсах пычĕç. Чи пысăкки вара Ева пĕлĕшĕсемпе паллашни пулчĕ. Текех вăл пĕр çĕр те килте ирттермерĕ. Кашни каçах çуралнă кун ĕçкинче паллашнă Коля ятлă хусах (лешĕ ытларах хăйне Коля тете тенине кăмăллать) хваттерĕнче пулчĕ. Сĕм çĕрлеччен, çур çĕр иртсе ик-виç сехетчен, картла вылярĕç вĕсем. Вĕсем тенĕрен, унсăр пуçне кунта яланах тата тăватă каччă пухăнчĕ. Кĕленче тĕпне кăмăллакан Коля тетĕшĕ кашнинче кама та пулсан икпиç литр эрех тупса килме кăларса ячĕ. Вара ним сăлтавсăрах çапла, картла вылянă май, тăн çухатиччен тенĕ пек ĕçсе ӳсĕрĕлчĕç. Тепĕр тесен, çул çитмен Эдикпа Славике

те, тин çеç çирĕм урлă каçнă Юрăпа Сашăна та нумай кирлĕ пулмарĕ. Артур та ик-виç черкке хыççăнах хăйне вил ӳсĕр туйрĕ. Пĕр Коля тетĕшĕ кăна юлашки тумламчченех ура çинче тăчĕ. Паллашнă самантранах çак хусаха Артур уйрăмах тимлĕн сăнарĕ. Ун кашни сăмахне, кашни хусканăвне.

Хваттер хуçи вăтăр урлă каçнă, лутра та имшеркке кĕлеткеллĕ арçын. Сăнĕнче тискерлĕх çук ун. Илемлĕ теме те пулать ăна. Анчах чунĕ... Хусахăн кăмăлĕ кашни вун минутра улшăнса тăрать. Пĕрре вăл ырă, ытла та ырă, тепре — хаяр. Урса кайнă тискер чĕрчун пек хаяр. Çакнашкал самантсенче çынна çапса пăрахма та, вĕлерме те пултарать вăл. Куçра чун ӳкерĕнет теççĕ. Çавăнпах пуль Коля тетĕшĕн куçĕ темле хаяр, тискер тата тĕссĕр. Чĕрĕ пурнăçăн пĕр таппине те палăртман вилĕ куç.

Çемйи те, çывăх тăванĕсем те çук пулас хусахăн. Ун пĕтĕм пурнăçĕ темĕнле тĕтрепе сырăннă. Коля тетĕшпе пĕр пилĕк минут калаçсанах унран инçерех пулас кăмăл çуралать. Çакна Артур пĕрремĕш тĕлпулурах ăнланчĕ, кайран та туйсах тăчĕ. Çапах хăй кашни каçах хусах хваттерне çӳрерĕ. Çакна вăл хăвăрт хăнăхрĕ. Йăлана кĕртрĕ.

Хăвна пурнăçра ытла та телейсĕр, ытла та пĕччен туйнă чух, чĕрене йывăр шухăшсем кăшланă вăхăтра чи сиплĕ эмел — манăçу. Пĕр тĕлсĕр ĕçсе лартни вара пурнăçа çăмăлрах курăнма пулăшать-мĕн. Темиçе сехетлĕхе çеç пулсан та. Çакă Артура питĕ кирлĕ. Ыр канаш, пурнăçа ăнланма пулăшни те мар, пĕр манăçу çеç. Çавăнпах каччă кашни ир амăшĕ вăрçăнине пăхмасăрах каçсерен çакăнта килет. Ахрашуллă ĕçкĕ-çикĕре чун вăйсăрлăхне хăйĕнчен хăй пытарать.

## 5

Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртрĕ. Анчах Артур çак вăхăтра хăйне кăшт та пулин телейлĕрех, кăшт çеç лăпкăрах пулнине туймарĕ. Пачах урăхла. Уншăн халĕ сарă кун та кун мар, тĕттĕм те — çĕр мар. Пуçри кашни шухăш тинĕс хумĕ пек вылять. Тайкаланмасăр утма та манса кайрĕ пулас. Яланах пуç ыратни, шăм-шак йывăр-

ри асаплантарать. Кун çумне уралнă самантсенче пуçланакан кăмăл-туйăм ыратăвне хушсан çĕр çинчи тамăк — акă мĕн пулать.

Тасалăхпа илемлĕх янравне илтми, туйми пулма пуçларĕ. Пурнăçĕ темĕнле тĕпсĕр шурлăх пек пулса тăчĕ. Çăтать те çăтать, чыхăнтарать, путарать. Çак пурнăçăн кашни сехечĕ, кашни минучĕ ăна темĕнле чăнкă çыран патнелле илсе пычĕ. Тĕксе яма меллĕ самант кĕтрĕ. Çакна каччă хăй те аван сисрĕ, анчах хирĕçлеме вăй çитереймерĕ.

Мĕнпе вĕçленнĕ пулĕччĕ-ши çакă, енчен те...

...Каллех Коля тетĕш хваттерĕнче пухăнчĕç. Анчах кĕçĕр вĕсен ушкăнне тепĕр çын хушăнчĕ. Юрăпа пĕрле ун юлташĕ — вун пилĕк çулхи Толик килчĕ. Тĕлпулу яланхиллех ĕçкĕрен пуçланчĕ. Сăлтавĕ те пур. Йыша çĕнĕ çын — Толик — кĕнĕ. Паллашăва, паллах, «çуса» çирĕплетмелле.

Славик тупса килнĕ аншарлин пĕрремĕш черккине пурте ним каламасăр тĕппипе ĕçсе ячĕç. Никам та ĕçместĕп тесе кутăнлашмарĕ. Анчах черккесене иккĕмĕш хут тултарсан юлашки вăхăтра вар ыратнипе аптракан Эдик ăна пушатма васкамарĕ.

— Эсĕ тата мĕн хĕрарăмланса ларатăн? — тӳрех сассине хăпартса ыйтрĕ çакна асăрханă Коля тетĕш.

— Ман вар ыратать-ха. Касать... — кил хуçи урса каймa пуçланине туйса юлашки сăмахне çăтса ячĕ Эдик.

— Мĕн?! — мĕкĕрсех ячĕ лешĕ. — Ĕç!

Коля тетĕшне хирĕçлени мĕн патне илсе çитернине лайăх пĕлекен Эдик урăх пĕр сăмах та каламарĕ. Черккене алла тытрĕ, ерипен тути патне илсе пычĕ. Анчах... Ĕçсе яма васкамарĕ. Коля тетĕш пуçне айккинелле пăрнă самантпа усă курса тулли черккене çурăм хыçнелле ӳпĕнтерме пăхрĕ. Мĕскĕн! Хăйне мĕн кĕтнине пĕлес тĕк çак наркăмăша вăл шăла çыртса çăтса янă пулĕччĕ. Анчах пĕлеймерĕ. Эдик хăтланăвне куç хӳрипе курса юлнă Коля тетĕш пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса тискер чĕрчун евĕр урса кайрĕ. Хăйĕнчен ик-виç утăмра ларакан Эдик хыçне пĕрре сиксе çитрĕ те лешне çӳçĕнчен ярса тытрĕ. Ыратнипе Эдик кăшкăрасшăнччĕ, сасси тухма ĕлкĕреймерĕ. Кил хуçи аллинчи эрехе ун çăварне ӳпĕнтерчĕ. Эдик пуçне пăркаларĕ, арçын аллинчен хăтăлма тăрăшрĕ. Май килмерĕ. Çăтса

ĕлкĕреймен эрех Эдик янахĕ тăрăх юхса анчĕ. Кăвайт çине типĕ çап пăрахнăн Коля тетĕшне çакă тата ытларах уртарса ячĕ. Вăл чыхăна-чыхăна каякан ачана çӳçрен вăйлăрах та вăйлăрах туртрĕ.

— Çăт! Çăт! — ура тапса çухăрчĕ тискерленнĕ арçын. Аллине лекнĕ çамрăк ача сывлайми пулнипе кăвакарнине те, кĕлетки пукан çинче лĕнчĕр кайнине те пăхмарĕ.

Çак ĕç пĕтĕмпех ик-виç минут хушшинче пулса иртрĕ. Пӳлĕмри çамрăксенчен нихăшĕ пĕр сăмах калама ĕлкĕреймерĕ. Тискер ĕçе Артур та сăмахсăр пăхса тăчĕ. Анчах Эдик кĕлеткинчи пурнăç çиппи ерипен-ерипен çӳхелсе, кĕскелсе пынине курсан чăтаймарĕ, пĕтĕм вăйне пухрĕ те Коля тетĕшне янахран янклаттарчĕ. Лешĕ самантрах стена çумне пырса çапăнчĕ. Вара... урайне лĕштĕр шуса анчĕ.

Малалла мĕн пулассине Артур кĕтсе тăмарĕ. Унăн çак хваттертен, ирсĕрлĕхпе тулса ларнă вырăнтан, тасамарлăхран инçерех пулас килчĕ. Вăл урама ыткăнса тухрĕ. Каçхи сывлăш ăна уçăлтарчĕ, тарăху урăлтарчĕ.

Анчах каччă хăйне пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таран пылчăкпа сĕрсе янăн туйрĕ. Çак пылчăк вара ӳте мар, чуна вараларĕ. Унран тарма та, ăна çуса яма та çук...

Коля тетĕшĕн янахне пăрса янăранпа эрне çурă иртрĕ. Çак вăхăтра Артур хăйĕн çĕнĕ тусĕсенчен пĕрне те тĕл пулмарĕ. Лешсем ăна шырамарĕç, вăл та вĕсемшĕн çунсах каймарĕ. Уйăх ытла кашни кун тăн çухаттиччен ĕçнĕ хыççăн каччă халĕ хăйне эрех ункинчен тухнăн туйрĕ. Вăл ирĕклĕ. Шел, телейлĕ мар. Ăна çаплах тем çитмерĕ. Чунĕ те çаплипех пушă. Çак пушăлăха яланах ăнланакан, пурне те каçаракан амăшĕ те, пĕрле выляса ӳснĕ, чи çывăх тусĕ Витя та нимпе тултараймарĕç. Чунĕ уйрăмах вăйлă кӳтсе килнĕ самантсенче чĕмсĕр гитара çеç кăшт лăплантарчĕ ăна. Гитара хĕлĕхĕн янăравлă сасси ун чĕринче темĕнле кăшт тунсăхлăрах, кăшт савăкрах кĕвĕ çуратрĕ. Шел, çак кĕвĕ пӳрнесем хурçă хĕлĕхе сĕртĕнме пăрахсанах çухалать. Яланлăхах, ĕмĕрлĕхех... Ун вырăнне вара тепри çуралать. Каллех вăхăтлăха, самантлăха кăна. Çĕнĕ кĕвĕ пĕрре кĕрхи çулçă вĕçевĕ пек çăмăл та лăпкă, тепре Атăл хумĕ евĕрех пăлханчăк.

Çакăн пек пăтрашура иртсе пычĕ Артурăн кашни кунĕ. Коля тетĕш хваттерĕнче курнă тискер ĕç усал тĕлĕк пе-

кех манӑҫа туха пуҫларӗ. Анчах темшӗн-ҫке хӑш чух иртни хӑй ытамӗнчен часах ярасшӑн мар. Вӑл инҫетрен-и, ҫывӑхран-и — пурпӗрех ҫаврӑнса килет. Яланхиллех сасартӑк, ӑна нихӑш енчен те кӗтмен чух. Иртнӗ кунсен инкекӗ Артур патне те таврӑнчӗ.

...Хӑйне хирӗҫ калаҫнине кӑна мар, хӑйӗнпе килӗшменнине куҫпа палӑртнине те чӑтма пултараймасть Коля тетӗш. Ӑна вара мӗн тӑвас тенине тума чарчӗҫ. Нихӑҫан курман мӑшкӑл кӑтартрӗҫ. Кам-ха тата? Темӗнле шӑрчӑк. Ҫук, кӑна ҫапла манӑҫа кӑларма юрамасть. Тавӑрмалла. Ҫакӑ чи малтан ӑна куҫран пӑхса тӑракан шӗшлӗсемшӗн пысӑк урок пулӗ. Авӑ мӗнлерех хытса тӑчӗҫ вӗсем. Ӑна, Коля тетӗшне, мӗнле тӗп тунине пӑхса савӑнчӗҫ. Анчах кӑлӑхах. Ку пуҫламӑшӗ кӑна-ха. Коля тетӗшӗ хӑйне хирӗҫлекене каҫармасть. Ҫакна яланах астуса тӑччӑр.

Ҫапла ерипен Артур пуҫӗ ҫийӗн хура пӗлӗтсем пухӑнчӗҫ. Каччӑ вара ҫакна пӗлмесӗр ним пулман пекех кашни каҫ хулан пушӑ урамӗсемпе ҫӳрерӗ. Ним тӗллевсӗр, ниҫта васкамасӑр. Вӑрӑм та сарлака, речӗпе лартса тухнӑ юпасем ҫинче йӑлтӑртатакан пин-пин ҫутӑпа капӑрланнӑ, тӗлӗрекен урамсем тӑрӑх. Илемпе киленсе, шӑплӑхпа йӑпанса. Халиччен Артур каҫ тӗттӗмлӗхӗпе калаҫма май пуррине шутлама та пултарайман. Халӗ акӑ... Чи лайӑх итлекен вӑл — шӑплӑх. Эс утатӑн, утатӑн... Вӑл сан ҫумра. Умра та, хыҫра та никам ҫук. Анчах вӑл, чӗмсӗр шӑплӑх, сан ҫумрах. Хыҫа та юлмасть, иртсе те каймасть. Сехечӗсехечӗпе калаҫма пултаратӑн. Вӑл сана чармӗ, ывӑнмӗ.

— Пӑхӑр-ха, кама куратпӑр!

Хӑйне пӗтӗм тӗнчипе те пӗр-пӗччен тесе шутласа утакан Артура ҫак сасӑ шарт сиктерчӗ. Янкӑр кун аслати кӗмсӗртетнӗ евӗрех. Кӑшт ҫухалса кайнӑ каччӑ пуҫне ерипен сасӑ илтӗннӗ еннелле пӑрчӗ. Унран ик-виҫ утӑмра, пӳртӗн чи тӗттӗм кӗтессинче, Коля тетӗш тӑра парать. Хыҫаларах — хусах хваттерӗнче хӳтлӗх тупнӑ ҫамрӑксем. Яланхи йышпах. Пӗр Эдик ҫеҫ курӑнмасть.

— Салам, — нимӗн те пулса иртмен пекех, анчах сиввӗн сывлӑх сунса аллине тӑсрӗ Артур.

Коля тетӗш те аллине тӑсрӗ. Сасартӑк вӑл Артура хӑй ҫинелле туртса илчӗ те ура лартса такӑнтарчӗ. Ҫакна пачах кӗтмен каччӑ тӑруках вӗҫсе кайрӗ, ҫара асфальт ҫине

тăсăлса выртрĕ. Пичĕ тăрăх вĕри юн юхса аннине туйса илчĕ. Тăма хăтланчĕ.

— Эсĕ! Эс... Ман çине ал çĕклеме-и? — Çук, кăшкăрса мар, шăл витĕр хаяррăн пăшăлтатрĕ арçын. Çĕлен евĕр. — Санпа тытăçса алла вараламастăп. Ман пушмак тĕпне тутанса пăх.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Артур çĕкленме пăхрĕ. Йывăр пушмак тĕпĕ ăна каллех асфальт çумне лăпчăнтарчĕ. Татах та татах. Каччă хăйне ура çине тăма парас çуккине ăнланчĕ. Пушмак тĕпĕ пĕрре хырăмран, тепре пуçран, унтан кăкăртан пырса лекрĕ. Хăвăрт, хăвăрт. Тапмассерен вăйлăрах. Артур хăйĕн кĕлеткине хӳтĕлеме пăхрĕ. Кăшт хутланарах выртса тепĕр хут тапасса кĕтрĕ. Акă пĕрре... Каччă пĕтĕм вăйне пухса хăйне тапакан урана ярса тытрĕ, хыттăн туртрĕ. Лешĕ çав самантрах çурăм çине тăсăлса выртрĕ. Кăна никам та кĕтмен. Çакăнпа усă курса Артур чĕркуççи çине сиксе тăчĕ. Анчах ура çине тăма ĕлкĕреймерĕ. Такам хыçалтан пырса мăн туяпа пуçран çапрĕ. Артур тăруках илтми, курми пулса ларчĕ. Хĕп-хĕрлĕ юн çӳхе йĕр хăварса çĕр çине тумларĕ. Унăн пĕтĕм кĕлетки, пушă михĕ евĕр, çĕр çине сарăлса выртрĕ. Пĕрре... иккĕ... виççĕ... Çаплипех тапрĕç те чышрĕç хӳтĕленме пултарайман каччăна. Пĕр-ре... ик-кĕ... Шучĕ çук. Пĕр-ре... Туйми пулчĕ. Ик-кĕ... Тăнне çухатрĕ. Виç-çĕ...

## 7

— Эх, çамрăксем, мĕн хăтланатăр-ха эсир?

Мĕнлерех çепĕç сасă. Каччă турра ĕненнĕ пулсан çак сăмахсене тӳперен вĕçсе аннă таса пирĕшти каларĕ тесе шутлĕччĕ. Чĕлхепе мар, чĕререн юхтарса кăларса. Анчах каччăра ĕненӳ çук. Вăл турра та, пирĕштие те ĕненмест.

Каччăн сасă хуçине курас килчĕ. Мĕнлерех çын-ши вăл? Ватă е çамрăк? Темле пулсан та вăл илемлĕ çын. Чунĕпе илемлĕ. Кун пирки темшĕн пĕртте иккĕленмерĕ.

Каччă куçне уçма хăтланчĕ. Анчах куçĕ пур-ши е çук та-ши — çакна туймарĕ. Темшĕн-çке пĕр чĕптĕм çутă курăнмасть. Куç çинче темĕнле йывăр япала выртнă пек. Каччă тăрса ларма хăтланчĕ, анчах кĕлеткине çĕклеймерĕ. Пуç çаврăнать.

— Санӑн хускалма юрамасть. Вырт, вырт, — илтӗнчӗ каллех паҫӑрхи сасӑ. Ҫӑмӑл та ҫемҫе аллӑсем ӑна хулпуҫҫирен тытса каллех вырӑн ҫине вырттарчӗҫ.

Мӗн пулнӑ ӑна? Вӑл аллине пичӗ патне илсе пычӗ. Куҫне бинтпа хупланӑ. Мӗншӗн? Каччӑ аса илме тӑрӑшрӗ. Усӑсӑр. Асӗнче минут каялла илтнӗ сасӑсӑр пуҫне нимӗн те ҫук. Ятне те астумасть. Тӗлӗнтермӗш. Мӗне пӗлтерет ку? Ҫак самантра ҫуралчӗ-ши вара вӑл? Ҫапла туять-ши хӑйне тин ҫеҫ амӑш варӗпе уйрӑлнӑ пепке? Ҫук, вӑл пепке мар. Тин ҫеҫ ҫуралнӑ ача пулма ун кӗлетки те ытла вӑрӑм, янах айӗ те мӑклӑ.

Кам вӑл? Мӗн пулнӑ? Каччӑ ҫак ыйтусен хуравне вырӑн майлакан ҫынран ыйтса пӗлесшӗнччӗ. Анчах тута-ҫӑварӗ типнипе хӑйӑл-хӑйӑл тунисӗр пуҫне пӗр сас та кӑлараймарӗ. Лешӗ вӑл мӗн каласшӑн пулнине ӑнланмасӑр каччӑ тутине шывпа йӗпетрӗ те ун патӗнчен пӑрӑнчӗ. Ҫумри ҫын ҫапла ним ӑнлантарса памасӑр пӑрӑнса утасран хӑраса ӳкнӗ каччӑ тӑрук сиксе тӑрса ӑна алран ярса тытма хӑтланчӗ. Ӗлкӗреймерӗ. Пуҫӗ вӑйлӑ ыратса кайрӗ. Лӗкленterчӗ. Каччӑ хӑй йывӑррӑн, ҫав вӑхӑтрах питӗ вӑраххӑн вырӑн ҫине ӳкнине туйрӗ. Анчах кӗлетки тӳшеке перӗниччен те тӑнне ҫухатрӗ, те вӑйлӑн ҫывӑрса кайрӗ.

## 8

Урса кайнӑ Коля тетӗш Артура тӑнне ҫухатнӑ хыҫҫӑн та чылай вӑхӑт хушши тӳнккерӗ. Паҫӑрах хӳтӗленме пӑрахнӑ кӗлетке кашни тапмассерен сике-сике илчӗ. Юн нумай ҫухатнӑран каччӑн ӳчӗ шурса кайнӑ. Часах вӑл сывлани те илтӗнми пулчӗ. Артурӑн чунӗ тӳпене хӑпарма хатӗрленчӗ, анчах васкамарӗ-ха. Коля тетӗш мӗнле хӗненине айккинчен пӑхса тӑнӑ ҫамрӑксем качча пӳрт хыҫӗнчи ҫӳп-ҫап контейнерне кайса пӑрахсан та васкамарӗ. Вӑйлӑ та ҫирӗп кӗлетке, пурнӑҫшӑн ҫунакан ҫамрӑклӑх ҫав-ҫавах парӑнмарӗ. Пурнӑҫпа вилӗм пӗр пӗчӗк чуншӑн кӗрешӗве тухрӗҫ. Ҫапӑҫу самантлӑх ҫеҫ пулмарӗ. Вӑл нумай сехете, эрнене тӑсӑлчӗ...

Артура ҫурт картишне типтерлесе тӑракан Сантӑр мучи тупрӗ. Ир-ирех тӑрса тухнӑ мучи ҫакӑн пек тискерлӗхе ку таранччен курман. Тискер чӗрчун туласа пӑрахнӑ кӗлетке...

Çын тесе калама ытла та йывăр ăна. Сăнĕ пачах юлман. Кăвакарса хăпарнă тути, çĕр тĕсĕ çапнă шыçмак куç, аран-аран тытăнса тăракан кĕпе-йĕм айĕнчи кăвакарнă ÿт тата кĕвелсе ларнă юн ытла та хăрушшăн курăнать. Сантăр мучин хăйĕн ĕмĕрĕнче чылай виле курма тивнĕ. Нумайăшĕн чунĕ ун аллинчех тухнă. Анчах кун пеккине хаяр вăрçă хирĕнче те курман. Ытла та çамрăк-çке! Çирĕм урлă та каçман пулĕ. Мĕн çитменнипе, мĕнле çылăхшăн пурнăçне татнă унăнне?

Хăранипе, тарăхнипе, хĕрхеннипе хытса кайнă мучи хăйне аран-аран алла илчĕ. Виле патĕнчен айккинелле пăрăнчĕ. Анчах ват çын шухăшĕ çаплипех пăтрашăнчĕ: «Васкавлă пулăшу» чĕнсе илмелле... Мĕн тума? Милицие шăнкăравламалла... Çапла, ку каччăн халь пĕртен-пĕр çул — морга. Урасемпе малалла...

Сантăр мучи çывăхри подъезда телефон патне утрĕ. Анчах пĕр-ик утăм тусанах çаплипех çĕтĕк-çатăк тултарнă контейнер ăшĕнче выртакан кĕлетке «мана вилнисен шутне кĕртме ан васка» тенĕн вăрăммăн йынăшса ячĕ. Мучи шарт! сикрĕ. Çавăнтах хăйне ятла пуçларĕ. Вăт ватсупнă! Чĕре таппине тĕрĕслемелли пирки аса та илмен-çке, вилнисен шутне кĕртме васканă.

Сантăр мучи ватлăха мансах контейнер патнелле чупрĕ. Çук, чупрĕ мар, вĕçрĕ. Пурнăçшăн кĕрешекен кĕлеткене тăвăр тимĕр ещĕкрен хăвăртрах кăларма хăтланчĕ. Вăйĕ çитмерĕ. Вара пĕр тăхтамасăр телефон патне чупрĕ. Иккĕленмесĕр «Васкавлă пулăшу» чĕнсе илчĕ.

Хĕрлĕ хĕреслĕ машина хыттăн кăшкăртса Сантăр мучи тупнă качча пушă урампа инçетелле илсе кайрĕ. Темшĕн çак пачах палламан каччăшăн хăйне явапла туйса илнĕ мучи «Васкавлă пулăшу» машинине хĕрес хучĕ. «Çăлăр. Çăлăр ăна», — пăшăлтатрĕ тути.

## 9

Шăп та лăп тата виç çĕр вăтăр ултă сехетрен — вун тăватă кунпа вун тăватă çĕр иртсен — Артур тăна кĕчĕ. Ултшар сехете тăсăлнă виçĕ пысăк операци хыççăн тинех пурнăç урапи çине çирĕп тăчĕ. Тăчĕ теме, паллах, иртерехха. Артур тата темиçе уйăх вырăнпа выртрĕ. Тĕрлĕ тĕлтен

хуçăлнă ура шăмми, аяк пĕрчисем ăна нумай вăхăт хушши гипсран кăлармарĕç. Çапах та халĕ вăл туйма, курма, илтме пултарать. Çакă пурне те — тухтăрсене, юлташĕсене, уйрăмах амăшне — питĕ савăнтарчĕ. Пурнăç çĕнтерчĕ.

Артуршăн та çакă пысăк савăнăç пулмалла пек, енчен те... Енчен те пĕр чăрмав пулмасан. Хăйĕн иртнĕ пурнăçне вăл пачах астумасть. Паллană пĕр сăн, пĕр сас çук ун асĕнче. Иртнипе çыхăннă нимĕнле шухăш çук. Артур асĕнче те, чунĕнче те пушăлăх. Нимĕн çырăнман таса тетрадь. Çак тĕнчене, хăй пурнăçне пĕтĕмпех çĕнĕрен уçма тивет унăн. Кашни сăна, кашни утăма.

Пысăках мар палатăн алăкĕ пĕр сассăр, ерипен уçăлчĕ. Вырăн çинче выртакан Артур сасă еннелле çаврăнса та пăхмарĕ. Эмел ĕçтерме е укол тума килчĕç пулĕ. Килнĕ çын вара пĕр сассăр ун вырăнĕ патне утса пычĕ, çавăн пекех сассăр ура вĕçĕнчи пукан çине ларчĕ. Çак ик эрне хушшинче Артур патне тухтăрпа медсестрасăр пуçне никам та кĕмен. Вĕсем вара ура вĕçне пырса ларакан марччĕ. Каччă кăсăкланса пуçне çĕклерĕ. Ун çине куç илмесĕр алă çулалла çывхарса пыракан, туллирех те лутра кĕлеткеллĕ, таса сăн-питлĕ, типтерлĕ тумланнă хĕрарăм пăхса ларать. Пачах палламан... астуман çын. Анчах Артур куçран пăхсах вăл кам пулнине ăнланчĕ. Пысăк юратупа çунса тăракан илемлĕ те ăшă куç. Ăнланчĕ, анчах нимĕн те туймарĕ. Каччă чĕри пĕр ытлашши хускану та тумарĕ, куçĕ те хĕпĕртӳ палăртмарĕ. Хĕрарăм куçĕ вара шывланчĕ, тути чĕтрерĕ. Артур ăна хĕрхенчĕ. Ун ыратăвне çăмăллатас тесе май килнĕ таран ачашрах «анне» тесе чĕнчĕ. Чĕнчĕ, анчах çак кĕске сăмахăн пĕтĕм ачашлăхĕпе ăшшине, илемĕпе юратăвне, савăнăçĕпе черченлĕхне туймарĕ. Артурăн чĕри те, асаилĕвĕ те хускалмарĕ.

## 10

Вăл хăвăрт сывалса пырать. Ĕнтĕ унăн суранĕсем те ыратма пăрахрĕç, ӳт илсе тӳрленчĕç. Сурансем тӳрленчĕç, анчах иртнине çаплах аса илеймерĕ. Паллах, халĕ вăл хăйне тин çеç тăна кĕнĕ хыççăнхи пек ятсăр-шывсăр, иртнипе пуласлăхсăр, туймарĕ. Хăй, тĕрĕсрех каласан, пурте пĕлекен Артур çинчен нумай пĕлет каччă. Мĕн юратнине,

мĕне курайманнине, ĕмĕчĕсене, шухăшĕсене. Амăшĕ кашни килмессерен вуншар сăн ӳкерчĕк, вăл юратнă апатçимĕç, тахçан килĕштерсе вуланă кĕнекесем илсе килет. Тĕлĕнмелле, Артур хăй тахçан пурăннă пурнăçа, хăй тунă ĕççене, хăй каланă сăмахсене темле истори палăкне тĕпченĕ евĕрех тишкерет. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пайласа. Анчах çак çĕнĕрен уçăлакан пурнăçа темшĕн-çке «ман» тесе ниепле те йышăнмасть. Тем çитмест.

Пĕррехинче амăшĕ ăна пĕр хулăн тетрадь килсе пачĕ. Унăн кун кĕнекийĕ. Ку япала Артуршăн кăшт тĕлĕнмелле, кăшт кулăшларах пек туйăнчĕ. Çав вăхăтрах шиклентерчĕ те, хăратрĕ те. Халиччен Артур хăйне тĕкĕр çинчи пек çиелтен кăна куратчĕ. Япăххине те, лайăххине те çиелтен. Халĕ вара таçта шала, унсăр пуçне никам лекме пултарайман тĕнчене кĕмелле. Тахçан пĕр хăйĕн пулнă шухăшсене вуламалла. Çак шухăшсем килĕшмесрен шикленчĕ Артур. Вĕсем пачах урăх Артура кăтартасран хăрарĕ. Кун кĕнекине вуламасăр та пултараймарĕ. Малашне тулли пурнăçпа пурăнас тесен каччăн хăйĕн чĕринчи кашни шăйлăка мар пулсан та, нумайăшне ăнкармалла, пĕлмелле, сисмелле.

Сĕм çĕрлеччен вуларĕ Артур. Юлашки страницăна «çăтса» янă хыççăн вара тăруках чунĕ темĕнле çĕнĕ туйăмпа тулнине туйса илчĕ. Çук, иртнин пĕр пĕчĕк пайне те аса илмерĕ вăл. Анчах çак самантчен пушă пулнă чунĕ кун кĕнекинче çырăннă туйăмшăн, шухăшшăн çуннине ăнланчĕ. Мĕн чухлĕ юрату пулнă иккен унра! Юрату! Вăл Артура сывлама, ир тăрса каç выртма, пурăнма пулăшнă. Пултарĕ-ши паянхи Артур ун чухнехиллех пурнăçа вăйлăн юратма? Ун илемне, техĕмне туйма. Калама йывăр. Пысăк юрату пурăннă каччăра. Çав вăхăтрах пысăк курайманлăх. Кашни сив сăмаха, кашни кӳренĕве шута илекен курайманлăх. Икĕ пысăк вăй. Юратма,пурăнма, кĕрешме пулăшакан хире-хирĕçле икĕ вăй. Курайманлăх ыратупа çуралать. Анчах чĕрере юрату пур чухне вăл вăйсăр. Юрату кăшт çеç чаксан вара курайманлăх аркату çуратать. Çак аркату Артур чунне те пырса тивнĕ. Каччă çакна хирĕçлеймен...

*1995*

## «ХĂВ ХĔР ПУЛСА ŸСМЕН-ИМ?..»

Пур-ши янкăр тўпери çĕршер çутă çăлтăрпа тулли уйăхран илемлĕреххи? Асамлăраххи? Таси? Паллах, пур. Анчах вĕсен пачах урăх асамлăх, урăх илĕртўлĕх. Çак каç илемĕпе пурпĕр танлашаймĕç...

Сĕтел хушшинче ларакан Соня ниепле те куçне чўрече çинчен илеймерĕ. Чўрече куçĕнчен курăнакан вĕçĕ-хĕррисĕр тўпен пĕр пĕчĕк пайне пăхса савăнчĕ. Художник пулсан сăрăпа, юрăç пулсан кĕвĕпе сăнлăччĕ вăл çак тўпене. Шел, Соня художник та, юрăç та мар — сăрăпа та, сăмахпа та хăй куракан, туякан илеме ўкерсе параймĕ.

Хаш! сывларĕ çапла ăнсăртран пылак ĕмĕт юхăмне кĕрсе ўкнĕ хĕр ача. Унăн шухăшĕсем ерипен хăй умĕнче выртакан кĕнеке-тетрадь çине куçрĕç. Анчах куçĕ тепĕр самантлăха сĕтел кĕтессинче ларакан тĕкĕр çинче тытăнса тăчĕ. Çаврака та тулли питлĕ, пысăк кăвак куçлă, хулăнрах туталлă, тўрĕ сăмсаллă та чечек шатриллĕ сăна курчĕ вăл. Куçĕ çине шуса аннă сап-сарă, кăштах кăтраланса тăракан çўçне васкамасăр хыçалалла илсе хучĕ. Вара çĕр çинчи пĕтĕм япала çинчен манса теоремăсемпе фигурăсен, вĕçĕ-хĕррисĕр тўрĕ йĕрсемпе татăксен, вуншар числосемпе цифрăсен тĕнчине путрĕ. Кĕнекери задачăсене пĕрин хыççăн теприне шĕкĕлчерĕ. Ку вăл унăн тĕнчи, унăн юхăмĕ пулчĕ.

— Аппа, сана урамра чĕнеççĕ, — сăмах чĕнчĕ тахăш самантра Соня çумне пырса тăнă Катя йăмăкĕ.

Соня аллинчи ручкине пăрахмасăрах пуçне çĕклерĕ. Шухăшĕпе вăл теоремăсемпе числосен хушшинчех пулчĕ-ха.

— Мĕн хытса ларатăн? Чĕнеççĕ тетĕп.

— Кам?

— Атту пĕлместĕн? — Соньăна йĕкĕлтесе хихиклетрĕ йăмăкĕ. Хăй çавăнтах тепĕр пўлĕме кĕрсе тарчĕ.

Соня сĕтел хушшинчен тухрĕ. Алăк патне кайса çăм тутăр, килте çĕленĕ кĕрĕк, кăçат тăхăнчĕ. Урама тухма алăк хăлăпне тытрĕ...

— Мĕн, çĕр каçмаллах тухатăн-им? — темшĕн ятлаçса ыйтрĕ тепĕр пўлĕмрен тухнă амăшĕ.

— Эпĕ хăвăрт тухса кĕретĕп.

Хĕр ача урама тухрĕ. Хапха умĕнче пĕр класра вĕренекен Женя тăрать иккен. Арçын ача чирленĕ пирки эрне хушши шкула çӳременччĕ. Халĕ ак Соньăран мĕн вĕреннине пĕлме килнĕ. Анчах темшĕн хăйпе кӳршĕллĕ пурăнакан Таньăран мар, Соньăран ыйтма шутланă. Ялăн тепĕр вĕçĕнче пурăннине пăхмасăр кунта килме ӳркенмен.

Соня арçын ачана пĕтĕмпех тĕплĕн каласа ăнлантарчĕ. Ытларах тĕрĕслев ĕçĕсем пулнă пирки киле ĕç нимех те паман. Сăмах вĕçленчĕ. Соньăн киле кĕмелле. Анчах Женя ăна кĕртсе яма васкамарĕ. Хĕр ача хăй те пăчă пӳрте ытлах кĕресшĕн пулмарĕ. Халĕ вăл паçăр кантăкран курнă илеме тата туллинрех курма пултарчĕ. Çакăн çинчен Женьăна каласа парас тесе çăвар уçнăччĕ кăна — крыльца çинче Соня амăшĕн уçă сасси янăраса кайрĕ:

— Соня! Ăçта çӳретĕн эс унта? Киле кĕр.

Хĕр ача Женьăпа хăвăрт сывпуллашрĕ. Васкамасăр киле кĕчĕ. Алăк умĕнче ăна амăшĕ кĕтсе илчĕ.

— Каччă тесен вăхăт çинчен манатăр. Мĕн кирлĕ ăна?

— Нумай тăмарăм-çке. Киле ĕç мĕн панине пĕлме килнĕ.

— Класра эс кăна-им?

— Анне, усал ĕç тумарăм-çке. Мĕншĕн ятлаçатăн?

— Пăх-ха, калани килĕшмест. Ĕçне тусан кая юлатăн. Час арăк айĕнче ача килсе парăн...

Соня амăшĕн пĕр сăмахне те урăх итлесе тăмарĕ. Кашнинчех çапла. Урамра кăшт ытларах тытăнса тăрсанах тем те пĕр каласа ятлаçать. Кашнинчех... Çакна Соньăн тахçанах хăнăхма вăхăт пулнă. Анчах кашнинчех куçĕ вĕри куççульпе, ним айăпсăр чун тарăхупа тулать. Паян та çаплах пулчĕ.

Соня хывăннă-хывăнман вырăнĕ ăшне кĕрсе выртрĕ. Пĕр сассăр макăрчĕ. Мĕншĕн? Мĕнле айăпшăн? Анне, мĕншĕн хĕрна ăнланмастăн? Шанмастăн... Соня хăйĕн чысĕпе тасалăхне сыхлама, ашшĕ-амăш ятне упрама пултарассине шанмастăн? Мĕншĕн курăймастăн? Хĕрĕн мăнаçлăхне пĕчĕклетме, ăна вăйлăрах ыраттарма тăрăшатăн?

Хĕр ача тата чылай вăхăт хушши сас кăлармасăр ĕсĕклерĕ. Ĕнтĕ амăшĕ те шăпланчĕ. Соня вара çаплах лăпла-

наймарĕ. Пӳртре шăп. Радио сасси çеç илтĕнет. Такамăн уçă та хаваслă сасси такмак хыççăн такмак шăрантарать:

Анне, мана ма вăрçан,
Хăв хĕр пулса ӳсмен-им?
Атте каччă пулман-им?
Иксĕр улах туман-им?..

*1995*

## ВĂРЛАНĂ ЮРАТУ

Пысăк хулари нумай хутлă çурт. Кĕрхи тĕксĕм каç. Канăçсăр çилпе шавлакан йывăçсем. Тăлăххăн курăнакан урам. Тутлăн тĕлĕрекен тĕнче.

Пурнăç таппине нимĕнпе палăртман тăхăр хутлă çурт. Çакăн йышши çуртсем хулара нумай. Тулашран пĕр евĕр курăнакан, анчах ăш-чикĕпе урăхла çуртсем. Вĕсенче кашнинчех уйрăм пурнăç, уйрăм савăнăçпа хуйхă.

Сăнлакан çуртра та пурнăç хăйне майлă кустăрмапа чупать. Çак çуртăн кашни хваттерĕ хăйне уйрăм пурăнать. Хăшĕнче савăнăç, тепринче — пĕчченлĕхпе тунсăх.

Тунсăха пĕчченлĕх çуратать, пĕчченлĕхе — шăплăх. Кантăк витĕр кĕрхи каç тĕттĕмлĕхне сăнаса тăракан Алена хваттерĕнче шăплăх тени çук. Хаваслă кĕвĕ, савăнăçлă кулă, шăкăл-шăкăл калаçу янăрать. Тунсăхлама вăхăт та, вырăн та çук. Хĕре пурпĕрех пĕчченлĕхпе тунсăх кăшлать. Мĕн çитмест ăна? Мĕн?! Чи çывăх тусĕсем те, хăйне пирĕшти пек хисеплесе юратакан Владик та çумрах. Авă пурте ун патĕнче хăнара. Аленăна вара çаплах темĕн çитмест. Темĕн... темĕн çитмест.

Çак темĕн мĕн иккенне хĕр аван пĕлет. Ах, мĕнле аван пĕлет! Анчах хăйне хăй нимĕнпе те пулăшаймасть. Никам та пулăшаймасть.

Юрату телейлĕ тата телейсĕр пулать теççĕ. Алена юратăвĕ вара? Телейлĕ-и вăл? Е? Телейлĕ! Телейлĕ хĕр савнă çын ытамĕнче. Телейлĕ Кольăпа юнашар. Çĕр хут, пин хут телейлĕ юратнă çынпа тĕл пулсан. Телейлĕ! Анчах... Мĕншĕн пур-ши çĕр çинче çак «анчах». Анчах Аленăн çак юратăва пуринчен те пытарма тивет. Пытарма, вăрлама тивет.

Таня тусĕн çуралнă кунне уявлама кайсан паллашрĕ хĕр Кольăпа. Арăмĕпе юнашарччĕ вăл. Шухăшламан та, тĕлленмен те çемьеллĕ арçынна юратса пăрахма пултарасса. Çуралнă куна Алена та хăйĕн каччипе Владикпа пынăччĕ-çке. Çак самантчен хĕр ăна савни тесе чĕнетчĕ. Кольăпа паллашсан вара туйăмсем улшăнчĕç. Паллах, пĕр самантра мар. Анчах Алена Владикран сивĕнсе-сивĕнсе пычĕ. Коля еннелле вăйлăрах та вăйлăрах туртăнчĕ.

Çак туртăну пĕр Алена енчен çеç пулсан юрату хĕлхемĕ хыпса илместчĕ те тен. Вăхăт иртнĕçемĕн манатчĕ вăл ăна. Анчах Коля та хĕр еннелле туртăнчĕ. Унпа тĕлпулу шырарĕ. Вăрттăн тĕлпулу...

Вăрттăн тĕлпулусем. Вăрланă юрату... Çапла. Ун юратăвĕ — вăрланă юрату. Шăпах çапла. Çапах Алена хăйĕн юратăвĕнчен вăтанмасть. Пултăрах вăл вăрă. Пултăрах. Анчах чĕрене мĕн тесе юратма чарăн? Ăна хушма çукçке. Тата айăплă-ши хĕр Кольăран вунă çул каярах çуралнишĕн? Айăплă-ши ăна кая юлса тĕл пулнишĕн?

...— Манăн кайма вăхăт.

Коля Алена çумĕнчен çĕкленсе кăшт лӳчĕркеннĕ тумтирне якаткаларĕ.

— Юл тепĕр самантлăха, — ӳкĕтлесе ыйтса ун еннелле аллисене тăсрĕ хĕр.

Арçын пĕрре сехечĕ çине, тепре Алена енне пăхса илчĕ. Уйрăлас та килмерĕ, анчах каймалла.

— Юл самантлăха.

Коля каллех хăй халь çеç тăнă диван çине вырнаçрĕ. Хăй еннелле туртăнакан хĕре ыталарĕ, сĕткен тутине чуптурĕ.

Ытла та йӳçĕ вăл вăрланă юрату. Çапах Алена сайра хутра савнă çынпа юнашар пулассишĕн темĕнле ыратăва та, асапа та чăтма хатĕр. Тӳсĕмлĕ пулма ăна юрату вăй парать. Шăпах уйрăлусен ыратăвĕ вĕсен тĕлпулăвĕсене çапла пылаклатать те. Пĕрле пулнă кашни саманта асра хăварать.

— Манăн каймаллах...

Алена чĕнмерĕ. Коля текех ытлашши пĕр самант та тăма пултарайманнине вăл ăнланать. Ахаль те ытти кунхисенчен ытларах тытăнса тăчĕ. Ăнланать, анчах çăмăллăн çеç «кай» тееймест...

Шăплăх пĕчченлĕхе, пĕчченлĕх тунсăха çуратать. Хаваслă туй кĕрлевĕпе тулса ларнă хваттерте вара шăплăхĕ те, тунсăхĕ те çук. Çавăнпа та шап-шурă туй пĕркенчĕкĕ айĕнче тăракан Алена тунсăхне хăнасем хăйне майлă ăнланчĕç. Хĕр ĕмĕрĕ иртсе кайнишĕн хурланать ĕнтĕ вăл. Тата мĕншĕн тунсăхлама пултарать пĕркенчĕк айĕнчи хĕр? Хĕр ĕмĕрĕ иртнишĕн...

— Алена, чунăм. Ывăнтăн-и? — ачашшăн пăшăлтатса ыйтрĕ Владик арăмĕнчен. Вăл ăна питĕ-питĕ çепĕççĕн, арканса кайма пултарасран хăранăн, пилĕкĕнчен ыталарĕ.

— Пур кăштах.

Аленăн упăшки çумĕнчен пăрăнса утас килчĕ. Юрамасть. Текех ĕнтĕ вăл пăрăнса утма та, тĕртсе яма та пултараймасть.

— Савнă арăмăм. Пĕлетĕн-ши эпĕ сана мĕн тери вăйлă юратнине?

Алена пĕлет. Шел, анчах ăна хăйне çавăн пекех вăйлă юратмасть. Владик сăн-пичĕпе те, кăмăлĕпе те илемлĕ каччă. Вăл пысăк та таса юратăва тивĕçлĕ. Анчах пĕр чĕрере икĕ сăнар пурăнаймасть. Алена чĕрине урăххи йышăннă.

— Илтетĕн-и? Эпĕ сана юрататăп. Кунран-кун вăйлăрах юрататăп.

— Эпĕ те... Эпĕ та сана юрататăп, — питĕ шăппăн хуравларĕ Алена. Вăл пуçне çĕклесе йăл кулма пăхрĕ. Кулли тухмарĕ. Тути çеç илемсĕррĕн пăрăнчĕ. — Эпĕ те сана юрататăп, — тепĕр хут кăшт хытăрах каларĕ Алена. Каларĕ, анчах сăмахĕсен пĕлтерĕшне чĕрипе туймарĕ.

— Паян эпĕ тĕнчери чи телейлĕ арçын, — арăмне тата вăйлăрах та ачашрах çупăрласа калаçрĕ Владик.

— Маншăн та паян телейлĕ кун.

Алена хăйĕн суйии тухасран хăранăн пуçне Владик хулпуççийĕ çине хучĕ. Вăл упăшкин, хăйĕн чĕри мĕнле хăвăрт та пăлханчăклăн тапнине туйрĕ. Тук! тук! шаккаççĕ вĕсем. Çак самантрах тата хĕрарăм варĕнче тепĕр чун хăй çинчен систерсе йăшăлтатрĕ. Ун хусканăвне пĕр Алена çеç туйса юлчĕ.

*1995*

## ĂССĂРЛĂХ ТАШШИ

Шăв-шав — тĕркĕшӳ. Пăлхану — тарăху. Уйрăлу-тĕлпулу... Халăх тĕрлĕ еннелле хĕвĕшекен вокзалта кăна курма пулать çакна. Паллах, билет илсессĕн. Тата тапранса кайиччен вăхăчĕ чылай пулсан. Пушă вырăн тупса вырнаçма май килсессĕн вара темĕнле пăтăрмаха та, камитне те сăнама пултаратăн.

Вокзалти халăх конвейер çинчи пекех улшăнать. Пĕрисем тухса каяççĕ, вĕсем вырăнне çав самантрах теприсем йышăнаççĕ. Кунĕпех çапла. Пĕри каять — тепри килет.

Паян та вокзалта халăх нумай. Пĕрисем билет илекенсен вăрăм черетне тăнă, теприсем тухан-кĕрен халăх мĕнле хĕвĕшнине сăнаса лараççĕ. Черетрисем пĕр вĕçĕмсĕр пĕрре хăйсен сехечĕ, тепре умри çынсем çине пăхкалаççĕ. Ларакансем вара тунсăхлăн анасла-анасла илеççĕ е çумра лараканпа пуплеççĕ. Кĕтекенсем валли ятарласа лартнă вăрăм тенкелĕн чи кĕтессине вырнаçнă çамрăк хĕр те ыттисем пекех тунсăхлать. Анчах вăл хăйĕн канăçсăрлăхне пачах та палăртмасть. Лăпкăн, ытлашши, çук, пĕр хускануsăр, темĕнле чулран тунă кĕлетке евĕр ларать вăл. Пуçне уссах тутлăн тĕлĕрет-ши? Е тарăн шухăша кайнă? Хĕр çине пăхсан çакна калама йывăр. Унăн сенкер кăвак, ахаль те пысăк куçĕ татах та пысăкланса чакăрланнă. Илемлĕ çӳхе тути вăхăт-вăхăтпа темĕн пăшăлтатнă пек хускалса илет. Сăн-пичĕ нимĕнле туйăма та палăртмасть.

Пулать-çке хăш чухне çут çанталăкра çакăн пек тĕлĕнтермĕш. Хĕвеллĕ те лăпкă çанталăкра та çавра çил тухма пултарать. Хăрушă çавра çил. Вăл ăçтан тухса кайнине ăнлантарма çăмăлах мар. Таçтан килсе тухать те çавăн пекех таçта кайса çухалать. Тăруках хĕвел тĕксĕмленет, вăйлă çил çĕр çинчи май пур пĕтĕм япалана пĕлĕте çĕклет. Тусанĕ, çӳп-çапĕ — пурте-пурте. Çĕр çинче çирĕп тăракан эtеме те, çурт-хуралтăна та ним мар хăйпе пĕрле илсе каять.

Çакăн евĕр çавра çил лăпкăн çеç ларакан чипер хĕрĕн чунĕнче çĕкленессине никам та пĕлме пултарайман. Анчах çĕкленчĕ. Тахăш самантра хĕр вокзал варрине сиксе тухрĕ. Пĕр-пĕрин хыçĕнче тăракан çынсен вăрăм черетне пăтраштарса ячĕ. Те аманнă акăш пек, те çил çинчи арман евĕр хăлаçланчĕ. Мĕн ку? Калама йывăр. Анчах хĕрĕн

илемĕ те, лăпкăлăхĕ те куç умĕнчех çухалчĕ. Вăл çынсене хăратса такама пĕрре йăлăнчĕ, тепре ылханчĕ. Пĕрре макăрчĕ, тепре ахăрчĕ. Хăй тавра тăракансене пачах та курмарĕ. Вокзалти халăх та çак улшăнăва курса хытса кайрĕ. Никам та нимĕн те калаймарĕ. Чĕлхисене çăтрĕç тейĕн.

Шари! çухăрса ячĕ такам аллинчи ача. Халăх тинех тăрук чĕрĕлсе, пăлханса кайрĕ. Пурте пĕр харăс сăмах хушма васкарĕç.

— Кам та пулсан шăнкăравлăр больницăна.

— Чарăр!.. Лăплантарăр.

— Мĕн ачасене хăратса тăраттаратăр?

— Кам та пулсан паллать-и ăна?

— Кам вара вăл? Ăçта кайма тухнă?

Сăмах çине сăмах, ыйту çине ыйту. Вокзалти халăха çапла тĕлĕнтерсе те хăратса чĕлхесĕр тунă хĕре çавăтса тухса кайсан та шăв-шав, калаçу лăпланмарĕ. Ăна паллакансем те тупăнмарĕç. Халăх халĕ ытларах хĕре пĕлекенсем мĕн каланине итлерĕ.

— Пирĕн ялсем вăл. Мĕскĕн.

— Тем, пуçран кăшт катăкрах пулас...

— Ун пек-кун пеккине асăрхаман. Ăслă-тăнлахчĕ-ха.

— Тăнлахчĕ çав, тăнлахчĕ... Эсĕ илтмен-им вара анатри Саша вилсен вăл ял халăхне мĕнле тĕлĕнтернине?

— Çук. Ик уйăх яла анман та. Анатри Саша вилсе-им?

— Хĕрĕх кунне асăнчĕç ĕнтĕ. Машинăпа çапăнса вилчĕ.

— Вăл аманнă тенине илтсеччĕ. Апла çамрăк арăма тăлăха хăварчĕ.

— Авлансах пĕтеймерĕ çав. Туй умĕнхи каç вилчĕ. Шăпах çак Надьăна килĕшсе хунăччĕ. Турри çырман пулас.

— А-а-а...

— Вăт çапла. Саши вилнĕренпе вăхăт-вăхăтпа тем амакĕ пулать ăна. Ялта та кун пекки пĕрре мар кăтартнă ĕнтĕ вăл. Пĕччен çӳретместчĕç те-ха ăна — паян темле кăларса янă.

— Пысăк хуйхăран ăссăрланнă апла.

— Пысăк хуйхă. Пурне те сĕртĕнет-çке вăл. Пурне те тивет.

Вокзалти халăх пĕр вăхăт шăп пулчĕ. Кашниех халь çеç илтни пирки шухăшларĕ курăнать.

— Чунĕ хавшак пулнă ĕнтĕ апăршан. Чунĕ хавшак, —

шăплăха татса сăмах хушрĕ паçăртанпа шăппăн ларакан мучи. Вăл хăйĕн çирĕп ал туйи çине тайăнса алăк еннелле утрĕ. Кашни утăм тумассерен кăкăрĕ çинчи медаль-орденĕ шăнкăртатрĕ.

— Мĕскĕннĕн пурăнатпăр. Тĕллевсĕр, — те хăйне хăй, те вокзалти халăха каларĕ ĕнтĕ алăк патне çитнĕ мучи.

Хирĕç хуравлакан пулмарĕ.

*1995*

## УЯВ КАÇĔНЧЕ

Яланхилле, кĕлеткине тӳрĕ тытса, утас-и-утас мар-и тенĕн урине вĕттĕн-вĕттĕн шутарса, пуçне çӳле çĕклесе картлашкапа хăпарчĕ Нарспи Ильинична. Хăй хĕрĕх çула яхăнах ĕçленĕ Культура керменĕн ырă та тарават сывлăшĕ ачашшăн çупăрланине туйса пычĕ вăл. Уяв каçне ятарласа капăрлатнă пысăках мар зал та хĕрарăма ăшшăн кĕтсе илчĕ. Нарспи Ильиничнăна пĕлекенсем хăшĕ ун еннелле пуçне сĕлтсе, хăшĕ ура çине тăрсах сывлăх сунчĕç. Хĕрарăм хăй те кашнинех кăмăллăн йăл кулса саламларĕ.

Халăх поэчĕ ята илме тивĕç маттур чăвашăн пултарулăх каçне тахçанах пенсие тухса килте ларакан Нарспи Ильинична ятарласа килчĕ. Ачалăхпа яшлăхри тусĕсене курма пӳрмест-ши текен шухăш хăваласа кăларчĕ ăна паян килтен. Ара, поэтăн амăшĕпе, Пăлакипе, пĕр ялта çуралса ӳснĕ-çке вăл, тахçан ача чухне унпа туслă та пулнă, анчах юлашки вăтăр çул хушшинче, ашшĕ-амăшĕн тĕп килне сутса тухса кайнăранпа, унпа нимĕнле çыхăну та тытман. Тĕрĕссипе, ун чунĕ нихăçан та ялалла, çĕр патнелле туртăнман, çавăнпах ял еннелле выртакан çула та, хăй унта çуралса ӳснине те тахçанах маннă ĕнтĕ хĕрарăм.

...Хăйпе пĕр çулсенчи нумай ватăсем пекех, Нарспи Ильинична ялти чăваш хресченĕн çемйинче çуралнă. Çемьере пĕр-пĕччен пулнăран-ши е кая юлса килнĕ, çавăнпа питĕ кĕтнĕ ача пулнăран ашшĕ-амăшĕ хĕр ачана юмахри пек пăхса ӳстерчĕ. Хура ĕç патне пырса пилĕкĕ авăнмарĕ унăн. Çичĕ класс кăна пĕтернĕ ашшĕ ăна хăй çитеймен пĕлӳ тӳпине çитерес тенĕ пулас. Çавăнпа ашшĕ-амăшĕ Нарспие ытларах культура пĕлĕвĕ парса аталантарма тăрăшрĕ.

Вырăс, чăваш тата ют çĕршыв классикĕсен кĕнекисен вуншар томне илсе паратчĕç ăна, нумайăшĕсене сутлăхри хакран хаклăрах парса илме те укçа-тенкĕ шеллеместчĕç. Кăмăллатчĕ çав классика хайлавĕсене ашшĕ, хĕрне те вĕсене вулаттарма тăрăшатчĕ. Ахальтен мар пуль хĕр ачан ятне те Константин Ивановăн поэзине чунран кăмăллакан ашшĕ ыттисенни пек маррине суйласа илнĕ.

Чăнласах та Кĕçтенттин Нарспийĕ пекех юратса ӳстерчĕ ашшĕ-амăшĕ Нарспи Ильиничнăна. Улттăмĕш класа çӳре пуçласан ялта никам курман тĕлĕнтермĕш — пианино туянчĕ ашшĕ. Çав çулах ялта музыка шкулĕ çук пирки ĕçсĕр килте ларакан кӳршĕри Кĕркури кинне (вăл Хусан филармонине пĕтернĕ хыççăн вĕсен ялне качча килнĕччĕ) укçа тӳлесе музыкăна вĕренттерме пуçларĕ. Кĕркури кинĕ пулăшнипех Мускаври культура институтне вĕренме кĕме пултарчĕ Нарспи, кайран вара Шупашкар хулине килсе вырнаçрĕ те çакăнтах ĕмĕрне ĕмĕрлерĕ...

Нарспи Ильиничнăн шухăш çăмхине залра тăвăллăн алă çупса яни татрĕ. Хĕрарăм сцена çине çăмăллăн чупса хăпаракан арçын енне пуçне пăрчĕ. Салтак Тӳми Иванĕ (çӳçĕ сап-сарă пулнăран ачасем çапла витлетчĕç ăна) халăх умне тухса тăнăнах туйăнса кайрĕ ăна. Анчах ку вăл хăй мар, унăн чапа тухнă ывăлĕ пулчĕ. Ашшĕне ытла мĕнле хывма пĕлнĕ-ха вăл? Утти, кулли, кĕлетки — пĕтĕмпех ашшĕн. Вăтăр пилĕк çул каялла, ăна юлашки хут курнă чух, Иванăн шăпах çакнашкал сăн-сăпачĕ Нарспи асне ĕмĕрлĕхех çырăнса юлчĕ. Шел, çамрăкла çĕре кĕчĕ вăл: ывăлĕн паянхи савăнăçне те кураймарĕ. Тепĕр тесен, Иван çеç мар, Нарспи хăй те чĕрĕ пулнă çĕртех çак телее кураймасăр тăрса юлмарĕ-им вара?..

...Пĕр вун пиллĕк-вун ултта çитсен Нарспи ял каччисем хăй çине урăхларах пăхма тапратнине асăрха пуçларĕ. Хĕр пĕвне кĕрсе пыраканскерĕн куçа илĕртмелĕх илемĕ пурахчĕ çав унăн. Çакна Нарспи хăй те куратчĕ, туятчĕ. Ял каччисем уншăн тӳпелешнине, хыçалтан юратса пăхса юлнине нихăшĕ те пытармасчĕ. Ывăл ача пур амăшсем те ăна кин тума сăнаса пăха пуçларĕç. Çакă пĕтĕмпех, паллах, Нарспие кăмăла каймасăр тăмарĕ мар. Ара, ялти чи чаплă хĕр пулса тăчĕ-çке Нарспи! Анчах нихăш каччипе те сăмах татма васкамарĕ вăл.

Часах вара шӳтлесе-вӑрҫтарса ҫула пӗлекен, сӑмса туртри туртса илсе каҫ кӳлӗм тӗлпулӑва тухма чӗнекен каччӑсем Нарспи умӗнчен пӑрӑнса ҫӳре пуҫларӗҫ. Малтанах ҫакӑ хӗре тӗлӗнтерчӗ, сӑлтавне пӗлсен вара тарӑхтарчӗ. Салтак Тӳми Иванӗ тӳпӗлеше-тӳпӗлешех пӗтӗм каччӑна Нарспи ҫумӗнчен сивӗнтернӗ иккен. Кӑлӑк чӑх чӗпӗсем патне хурчкана яман пекех, пӗр каччӑна та хӗр ҫумне ҫывхарма памарӗ вӑл. Хӑй вара Нарспи патне тӳртен пыма хӑю ҫитереймерӗ пулас: кӳршӗллӗ пурӑнакан Пӑлакисен пӳрчӗпе Нарсписен кил хушши чиккинче ларакан ватӑ йӑмра айӗнче кашни каҫ шӑхӑрса тӑрсах вӑхӑта ирттерчӗ.

Нарспи ӑна та тиркерӗ. Шкул ҫулӗсенчех колхоз ӗҫӗнчен пӗр кун тӑрса юлман ҫак сарӑ пуҫлӑ ачапа хӑй шӑпине ҫыхӑнтарасси Нарспишӗн чи хӑрушӑ тӗлӗк пекех туйӑнчӗ. Илемлӗ кӗнекесен тӗнчинче ҫитӗннӗ хӗр хӑйпе мӑшӑрлӑ пулма аслӑ пӗлӳ илнӗ япшар каччӑна кӗтрӗ. Иван хӑйне урама тухма чӗннине курса тӑрсах ун еннелле куҫ хӳрипе те пӑхмарӗ. Пӗр лӑпкӑ каҫ вара лешӗ Нарсписен умӗнчен пӑрӑнса хӑй пекех ӗҫрен хӑраман Пӑлакисен кантӑкӗнчен пырса шӑхӑрчӗ...

Залри халӑх татах та тӑвӑллӑрах алӑ ҫупса ячӗ. Нарспи Ильинична пуҫне хӗвӗшекен халӑх еннелле пӑрчӗ. Сцена ҫинчен чупса аннӑ поэт ватӑ хӗрарӑма ачашшӑн ҫавӑтса утнине курчӗ вӑл. Ку унӑн амӑшӗ — Пӑлаки — пулнине ӑнланчӗ Нарспи Ильинична. Залри халӑх ҫаплипех алӑ ҫупма пӑрахмарӗ. Ӗнтӗ халӗ поэта саламласа мар, Пӑлакине хисеплесе, ун умӗнче пуҫ тайса алӑ ҫупрӗ вӑл, тем вӑхӑтра ӑна чечек ҫыххисем айне турӗ. Ял карчӑкӗ пек тумланнӑ Пӑлаки вара сӑпайлӑн халӑх еннелле пуҫне тайрӗ.

Нарспи Ильинична чӗри йӗппе тирнӗ пек ыратса кайрӗ. Кӗвӗҫӳ, тарӑху тата ырату пӗр ҫӑмхана ҫыхӑнса унӑн куҫне шывлантарчӗ. Пӑх та кур эс ӑна, ял укӑлчинчен те тухса курман мӗскӗн Пӑлакине! Тӗнчипе паллӑ артист тейӗн ҫав. Мӗн чухлӗ хисеп! Мӗнех тунӑ вӑл ҫак хисепе курма! Ну, ҫуратнӑ тейӗпӗр ача, ӳстернӗ ӑна, вӗрентнӗ, ӑс панӑ. Нарспи те тума пултараччӗ ҫакна! Пултараччӗ те — пулмарӗ...

...Малтан, качча тухсанах, ача кипкипе аппаланас кӑмӑл пулмарӗ унӑн, хӑйӗн йӑрӑс пӳне ача ҫуратса илемсӗрлетес килмерӗ. Мӑшӑрӗ темӗн чухлӗ тилмӗрсен те килӗшмерӗ. Каярах вӑл та ыйтма пӑрахрӗ. Пӗрле вунӑ ҫул пурӑннӑ

хыççăн ачаллă хĕрарăм патне тухса кайрĕ унăн упăшки. Ют ача мар пулнă иккен вăл — хăйĕн. Пĕтĕм пурлăхне Нарспи Ильиничнăна парса хăварчĕ те тепĕр çемьене кайрĕ. Мĕскĕнленмерĕ Нарспи, хăй ăçта йăнăш тунине те ăнланаймарĕ. Текех качча каймарĕ вара. Пуçĕпех ĕçе кӳлĕнчĕ. Яланах халăх çинче, куç умĕнче пулчĕ. Вуншар арçын чĕрине вут хучĕ хĕр пĕвне сыхласа хăварнă Нарспи, анчах нихăшне те çывăха ямарĕ. Вĕсем хăйне тивĕççĕр пек курăнчĕ ăна. Такама кĕтсе ĕмĕрне ирттерчĕ хĕрарăм...

Алă çупма çаплипех пăрахмарĕç. Ĕнтĕ пĕтĕм халăх ура çинче тăрать. Нарспи Ильинична çак шăв-шава текех тӳсеймерĕ. Никам çине пăхмасăр, никама асăрхамасăр алăк еннелле утрĕ вăл. Тăруках ывăнса тата ватăлса кайрĕ хĕрарăм. Кĕлетки курпунланса авăнчĕ, куçĕнчи хĕлхем сӳнчĕ. Сцена çинче тăракан Пăлаки вырăнĕнче пулас килсе кайрĕ çак самантра мĕскĕн Нарспин. Вăхăта каялла таврăрса ши! шăхăрса тăракан Иван патне чупса тухас, ача кипки шăршинчен тутлăрах шăршă çуккине чĕрипе туяс килчĕ.

*2004*

# КУКАМАЙ ПАТĔНЧЕ

## 1

Çĕньял ялĕн варринче сарăлса выртакан пысăках мар кӳлĕ умĕнче ларакан крыльцаллă йывăç çурт умне хуп-хура «Волга» çитсе чарăнчĕ. Хăйсем килнине систерсе вăрăммăн сас кăларнă хыççăн та никам кĕтсе илменнине кура хăнасем васкаса машинăран тухрĕç. Шофер сип-симĕс курăк çине тĕрлĕ çыхăсене пĕрин хыççăн теприне кăларса лартрĕ. Вăтам çулсенчи хĕрарăм тӳрех хапха еннелле утрĕ. Хăй çине çара пĕçĕсене чĕркуççи таран çеç хуплакан шăлавар (вырăссем ăна шорты теççĕ-ха) тата армак-чармак тем те пĕр ӳкерсе пĕтернĕ футболка тăхăннă вăрăм çӳçлĕ çамрăк вара ним тума пĕлеймесĕр пĕр вырăнта тăпăртатса тăчĕ.

— Анне, вара каласса килĕшнĕ пекех тăвар, — кил хушшине кĕрсе кайнă хĕрарăм туя çине тайăнса утакан карчăкпа урама тухрĕ. — Макс сан патрах çу каçтăр, кĕркунне мĕн тумаллине куç курĕ унта.

— Пурӑнтӑрах ёнтӗ. Кӗрӳпе иксӗр те канмалли вӑхӑта ялта ирттерме пултаратӑр. Вырӑн пурин валли те ҫитет, — мӑнукӗ хӑйпе юлнишӗн савӑннине е кӑмӑлсӑррине палӑртмасӑр калаҫрӗ Марук кинеми.

— Отпуска хуларах ирттерме тивет пуль ҫав. Хваттерте ремонт тӑвас тесе тӑратпӑр-ха, — машина ҫине ларнӑ май сӑмахларӗ хӗрарӑм. Унтан вӑл ывӑлӗ енне ҫаврӑнчӗ те:

— Сана илме хамӑрах килетпӗр. Малтан шӑв-шав лӑплантӑр. Хӑв тӗллӗн хулана таврӑнса ӗҫе пӑсса ан хур, — терӗ.

— Ҫула тухиччен сӗтел хушшине ларса чӗре сури тусан та юратчӗ те... — хӗрӗ каялла хулана кайма васканине курса кӑшт кӑмӑлсӑр пулчӗ ватти. Анчах хӗвел ҫинче йӑлкӑшса ҫеҫ тӑракан машина ҫинчи ҫынсем ӑна илтмерӗҫ те пулас, тен, илтесшӗн пулмарӗҫ.

Пӗр вӑхӑт машина хыҫӗнчен ҫӗкленнӗ тусана пӑхса тӑчӗҫ пӳрт умӗнче тӑрса юлнӑ ҫынсем. Унтан ватти мӑнукӗ енне ҫаврӑнчӗ:

— Айта, эппин, сыльнӑй мӑнукӑм, иртер пӳртелле, — те кулса, те хӗрхенсе сӑмахларӗ вӑл.

Макс е чӑвашла каласан Макҫӑм кукамӑшне хирӗҫ чӗнмерӗ, хӑйӗн ҫумӗнче выртакан ҫыхӑсене ҫӗклерӗ те карчӑк хыҫҫӑн утрӗ. Ват ҫыннӑнни пекех, унӑн та кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ. Тӗрӗсех каларӗ пуль ҫав кукамӑшӗ: ашшӗ-амӑшӗ ӑна, чӑнах та, ссылкӑна тенӗ пекех хуларан яла кӑларса ячӗ. Тепӗр тесен, Макс хӑй те пӗр айӑпсӑр мар-ха. Пӗр ҫуртри тусӗсемпе пӗрле чутах суд сакки ҫине ларатчӗ вӗт. Юрать, ашшӗ тара тытнӑ адвокат йӑрӑ ҫын пулчӗ. «Хӳтӗлесе» хӑварчӗ вӑл каччӑна. Ҫапах та ашшӗ-амӑшӗ суд ӗҫ-пуҫӗ вӗҫленсе пӗтнӗ-пӗтменех ывӑлне хулари тусӗсенчен инҫерех тӑтӑр тесе кукамӑшӗ патне ӑсатма шутларӗ. Милици таврашӗпе пӗрремӗш хут куҫа-куҫӑн тӗл пулнӑран ҫухалса кайнӑ Макс вара — хӑйӗн пачах та ҫу кунӗсене ялта ирттерес килмен ҫӗртенех — вӗсемпе килӗшрӗ.

## 2

Тепӗр кунхине ирех пырса вӑратрӗ Макса кукамӑшӗ. Капла ир вӑранма хӑнӑхман каччӑ аран-аран куҫне уҫайрӗ.

— Кил хушшине тухса ҫӑвӑн та ҫӳҫне кӑшт кӗскет.

Пилĕк таран ҫивĕтпе ҫӳреме эсĕ хĕр мар пулĕ. Яла ан килтар. Каҫпа вара, мунчана каяс умĕн, пускилти Микула ҫӳҫе кĕскетсе тирпей кĕртĕ сан пуҫна. Эпĕ ирхи апат хатĕрлем-ха, — вунултă ҫулхи мăнукĕн вăрăм ҫӳҫлĕ пуҫне куштăрканă аллисемпе ачашласа сăмахларĕ Марук кинеми.

Макс хăйне юратса пуҫран ҫапла хăҫан шăлнине маннăран карт! туртăнса вырăн ҫинчен тăчĕ. Темиҫе ҫул хушши асапланса ӳстернĕ вăрăм ҫӳҫне касса пăрахма пĕртте шел пулмарĕ ăна. Тĕрĕссипе, хăйĕн юлташĕсем пурте ҫӳҫ ӳстернĕрен кăна ҫитĕнтерсе янăччĕ вăл ăна. Хăйшĕн пулсан вăрăм ҫӳҫ чăрмав ҫеҫ. Уйрăмах ҫуллахи шăрăхра.

Арҫын ача тепĕр хут пӳрте ҫаврăнса кĕнĕ тĕле ватă ҫын сĕтел ҫине пуҫтарнăччĕ те ĕнтĕ.

— Эсĕ килни аван та пулчĕ-ха маншăн, — тӳрех сăмах чĕнчĕ ват хĕрарăм. — Утă ҫине ĕҫлеме тухакансене колхоз типĕ утăпа тӳлет. Ытти ҫулсенче укҫа парса илеттĕм эпĕ ăна, кăҫал сан ятупа илĕпĕр, — мĕншĕн ҫапла ир вăратнине ăнкарса илеймен мăнукне ăнлантарчĕ вăл. — Сана, ĕҫ майне пĕлменскере, анатри Ҫинук шефа илме килĕшрĕ. Часах килсе те ҫитет ак вăл. Унччен сĕтел хушшине лар.

Ирхи апата ҫиес килмен ҫĕртен сыпкаласа ларакан Макс нимĕн те чĕнмерĕ. Вăхăта мĕн те пулин туса ирттермеллех вĕт. Пĕр тăват-пилĕк ҫул каялла кукамăшĕпе пĕрле утă ҫулма кайса курнăччĕ вăл. Ытла йывăр ĕҫех мар. Кукамăшĕ ăна вĕрентекен «шеф» та пулать терĕ пулсан ĕҫ майне пĕлмесĕр ял халăхĕ умĕнче намăс та курмĕ-ха вăл.

— Макҫăм,васкарах. Ҫинук ав килсе те ҫитрĕ. Айта ҫынна кĕттерсе тăрар мар. Кăнтăр апатне хăвпа илме ан ман, — чӳрече умĕнче урамалла пăхса тăракан кукамăшĕ васкатрĕ ăна.

Ҫинук тесе чĕннĕрен ватă е вăтам ҫулсенчи хĕрарăма курма шутланăччĕ каччă. Анчах хăйпе пĕр ҫулсенчи йăрăс пӳллĕ хĕр умне тухса тăрсан вăл ҫухалсах кайрĕ. Тӳрех пĕтĕм ыйхи таҫта вĕҫсе кайрĕ унăн. Хăй ҫине ăшшăн кулса пăхакан хĕр куҫĕ вăтантарчĕ те килентерчĕ ăна. Хĕр хăй те вăтанса кайрĕ пулас: темшĕн хĕрелсе кайса пуҫне пĕкрĕ. Юрать-ха, вĕсен тĕлне утă ҫине каякан ҫынсене пуҫтаракан машина ҫитсе чарăнчĕ. Икĕ ҫамрăк вара хăвăрт кăна ытти яш-кĕрĕм хушшине кĕрсе ҫухалчĕ.

## 3

Макс ялта пурăна пуçлани иккĕмĕш уйăха кайрĕ. Çак вăхăтра каччă пуçпех ял çынни пулса тăчĕ темелле. Ирирех ура çине тăрасси те уншăн йăлана кĕчĕ. Хăйпе тантăш юлташсем те тупрĕ вăл кунта: «шефа» илнĕ Çинук урлă (хут çинче ун ячĕ Зина тесе çырăнать-ха) ытти ял çамрăкĕсемпе те паллашрĕ. Вĕсен иксĕлми ĕçченлĕхĕнчен, чун тасалăхĕнчен, тӳрĕ кăмăлĕнчен тĕлĕнсе пĕтерейменрĕ каччă. Çут çанталăка çывăхрах пулнăран-ши е, кукамăшĕ калашле, ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕрен ял ачисен куçĕсенче сăваплă вут хĕлхемĕ ялкăшнине курса тăчĕ Макс. Çав вăхăтрах хăйĕн чунĕнче каччă тивсе илеймесĕр сĕрĕм кăларакан вут сыппи йӳçĕкне çеç туйрĕ. Хăйĕн пурнăçĕ пушă, тĕллевсĕр пулнине ăнланса илчĕ вăл. Тăруках чунчĕрере ăнлантарма йывăр пăлхану, пуçра пин шухăш явăна пуçларĕ. Кăмăлĕ тата темшĕн ялан йӳçĕхсе, хĕмленсе тăчĕ.

Психологсем çамрăк яш-кĕрĕмĕн çакнашкал кăмăл-туйăмне ӳсĕм ылмашăвĕпе çыхăнтарса ăнлантарнине пĕрре мар илтнĕ, вуланăччĕ-ха Макс. Анчах кукамăшĕ калани (ват çын — тăват çын тесе ахаль каламан пуль çав, мăнукĕн кăмăл пăтранăвне туйса илнĕ вĕт-ха вăл!) пурпĕрех уншăн чи пысăк уçăм пулчĕ.

— Арçын юнĕ хăй сассине пара пуçларĕ пулсан ача шутĕнчен тухрăн ĕнтĕ эсĕ, — терĕ вăл. — Хăвăн çулна шыра. Санăн пурнăç малашне — йăнăш сукмакпа çеç кĕрсе ан кай. Пурнăç ытла та кĕске — хăв ĕмĕрна кĕрт ашса ан ирттер.

Юратса тата хĕрхенсе каларĕ хăй сăмахне кукамăшĕ. Анчах ӳпкелешни пулмарĕ ку. Сăмахĕсенче темĕнле тунсăх янăрарĕ. Макс хăй те сисмерĕ — ват çынна пырса çупăрларĕ — кăмăлĕ çемçелчĕ унăн: ан кулян, кукамай, эпĕ санăн тĕрекӳ теес килчĕ. Тепĕр тесен, ватти çакна сăмахсăрах ăнланчĕ.

## 4

Çу кунĕсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Çак вăхăтра Макс ӳт-пĕвĕпе çеç мар, кăмăлĕпе те пиçĕхрĕ. Пĕр кун сиктерми колхоз ĕçне çӳрерĕ вăл. Ялти яш-кĕрĕмпе малтан утă

çинче, кайран йӗтем çинче ӗçлерӗ. Кукамăшӗ ытарайми юратса çеç пăхса тăчӗ ун çине. «Кукаçуна хывнă эсӗ. Сăнупа та, кăмăлупа та», — ир çӗре кӗнӗ мăшăрне аса илнӗрен куçне шăлса миçе хут каламарӗ пуль вăл.

Макс хăйне вăрçă хирӗнчен орден-медальсем çакса таврăннă, кайран колхоз хирӗнче ырми-канми ӗçлесе «Ĕç паттăрӗ» ята илме тивӗçнӗ кукашшӗпе танлаштарнишӗн мăнаçланчӗ. Малтан йӗкӗлтевлӗрех пăхакан ял каччисем хисепле пуçланине те курмарӗ мар вăл. Пӗри тепринчен черченрех хӗрсем куç хывнине те асăрхарӗ. Анчах Макс чӗринче пӗртен-пӗр сăнар ӗмӗрлӗх йăва çавăрчӗ ӗнтӗ: çырă çӳçлӗ Зина ун чӗрине çирӗп тыткăнларӗ. Хӗрӗ хăй те Макса кăмăлларӗ пулас, ӗçре те, вăййăра та яланах каччă çумнерех тăма тăрăшрӗ. Анчах юрату пирки сăмах пулмарӗ вӗсен: чӗрери çак хӗрӳ туйăма вӗсенчен нихăшӗ те пӗр-пӗрне уçма хăяю çитереймерӗ.

— Кӗр кунӗсем çывхараççӗ, — терӗ пӗррехинче пачах кӗтмен çӗртен Зина Макса. — Часах эсӗ хулана каятăн... — каччă куçӗнчен ыйтуллăн пăхрӗ вăл.

Макс нимӗн те чӗнмерӗ. Мӗн каламаллине пӗлеймерӗ вăл. Хăй те çак шухăшпах асапланать мар-и ара! Кукамăшӗн ялӗ паянхи кун уншăн тăванран тăван кӗтес пулса тăчӗ. Хула пурнăçӗ халӗ каччăшăн ют. Ашшӗ-амăшӗшӗн тунсăхланине те туймарӗ вăл. Темме пула-çке ăна хăй пӗтӗм пурнăçне çак илемлӗ кӗтесре пурăнса irrттернӗн туйăнчӗ.

— Эсӗ каятăн, — тепӗр хут каларӗ Зина.

— Куç курӗ-ха унта, — мӗншӗн çапла каларӗ-ши хӗре Макс — кăна вăл хăй те пӗлмерӗ.

## 5

Кăмпаран ывăнса таврăнаççӗ ял ачисем. Вӗсен хушшинче Макспа Зина та пур. Кăшт çеç маларах утса пырать хӗр. Тахăш самантра вӗсене çăмăл машина хуса çитрӗ. Çул айккине пăрăннă ушкăнран иртсенех машина чарăнчӗ те унран çӳçне сапаласа янă хӗр сиксе тухрӗ.

— Макс, салам, — тесе никамран вăтанмасăр каччă мăйӗнчен уртăнчӗ çаксер.

Кӗтмен çӗртен пулнăран Макс çухалсах кайрӗ. Хăйпе

пĕр çуртра пурăнакан Надьăна çапла тĕл пуласса тĕлĕкре те курман вăл. Хĕр вара чарăнма пĕлмесĕр темĕн чĕвĕлтетрĕ. Каччă çаплипех мĕн тумаллине пĕлеймерĕ: пĕрре машинăран амăшĕ тухнине, тепре Зина ун çине куççульпе тулса ларнă куçпа пăхнине асăрхама ĕлкĕрчĕ. Тинех вăл тăна кĕчĕ пулас: хăйне çаплипех ыталаса тăракан хĕре кăнттаммăн айккинелле сирчĕ, лешĕ тутине кӳренчĕклĕн пăркаланине те асăрхамарĕ. Тепĕр тесен, Надьăн мĕншĕн кӳренмелле? Макспа иккĕшне нимĕн те çыхăнтармасть. Çапла, пĕр-ик хут ăсатса янă ăна каччă, анчах нимĕнле сăмах та паман. Анчах çакна каччăсăр пуçне никам та пĕлмест-çке. Авă халĕ мĕн курнисĕр пуçне нимĕн те пĕлмен Зина та текех пăхса тăмарĕ: çиçĕм пек килĕ еннелле вĕçтерчĕ. Макс чĕри вара йĕппе тирнĕ пек чиксе илчĕ.

...Каç кӳлĕм Марук кинеми умне килсе ларнă çăмăл машина вырăнтан тапранчĕ.

— Максим, санăн тепĕр эрне вăхăт пур. Шухăшласа пăх лайăххрах, — хăй кăмăлсăр пулнине пачах пытармасăр калаçрĕ амăшĕ. — Ачапчалла хăтланса пурнăçна чăл-пар аркатма ирĕк памастпăр аçупа иксĕмĕр сана.

— Анне, эпĕ кукамайпа юлатăп, — çирĕппĕн калаçрĕ Макс. — Шкула та кунтах пĕтерĕп. Çĕр çинче ĕçлесе пурăнас килет манăн, анне. Эпĕ хамăн çула тупрăм. Каçар...

Темĕн каларĕ пулас амăшĕ — машина шавĕ хупласа хучĕ. Хыçалти ларкăч çине кĕрсе вырнаçнă Надя вара Макс еннелле пăхмарĕ те. Шаннă кайăк йăвара пулманран кӳренчĕ пулас хĕр.

Машина тапранса кайрĕ. Кукамăшĕ çумне пырса тăнă Макс ăна ал сулса ăсатрĕ. Ват хĕрарăм ӳкесрен пачах хăрамасăр мăнукĕ çумне тĕршĕнчĕ. Мăшăрĕ вилнĕренпе алла тытнă туйине те айккинелле пăрахрĕ вăл.

Каччă пуçне анаталла пăрчĕ. Унăн куçĕ эрешлесе каснă хапха умĕнче ăшшăн йăл кулса хăй çине пăхакан Зина куçĕпе тĕл пулчĕ. Инçетренех хĕр ăшшине тата унăн юратăвне туйрĕ вăл. Çĕр чăмăрĕ çинче хăй çирĕппĕн те ирĕклĕн тăнине пĕтĕм чун-чĕрипе туйса ăнланчĕ вун çичче кайнă çамрăк.

*2004*

# ТУПМАЛЛИ

## ПОВЕҪСЕМ

Виҫӗ хӗрпе сар каччӑ . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Ҫур ҫӗр хыҫҫӑнхи шӑнкӑрав . . . . . . . . . . . . . 39
Атте пилӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 99

## КАЛАВСЕМ

Пурнӑҫ техӗмӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 129
«Хӑв хӗр пулса ӳсмен-им?..» . . . . . . . . . . . 143
Вӑрланӑ юрату . . . . . . . . . . . . . . . . . . 145
Ӑссӑрлӑх ташши . . . . . . . . . . . . . . . . . . 148
Уяв каҫӗнче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 150
Кукамай патӗнче . . . . . . . . . . . . . . . . . 153

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего
и старшего школьного возраста*

**Альбина Федоровна Мышкина**

**АТТЕ ПИЛĔ**

**БЛАГОСЛОВЕНИЕ ОТЦА**

Повести и рассказы

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Васильева*
Художник *Н.И. Орлова*
Художественный редактор *Г.С. Самсонова*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *А.Г. Владимирова, Н.П. Печникова, Н.Г. Ильина*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 22.12.04. Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 8,4. Учетно-изд. л. 8,04. Тираж 1500 экз. Заказ № К-5058. Изд. № 43.

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12 б.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

41=80

**Альбина Федоровна МЫШКИНА**

Канаш районĕнчи Уçырма ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкулта, Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче вĕреннĕ. 1995 çултанпа Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнче ĕçлет. 2002 çулта филологи ăслăлăхĕсен кандидат диссертацине хўтĕленĕ. Литературăри ўсĕмсемшĕн вăл Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премине илме тивĕçнĕ (1999). Литература ĕçне студент çулĕсенче тытăннă. «Ялав» журналта «Çур çĕр хыççăнхи шăнкăрав», «Сўннĕ ĕмĕтсен утравĕ», «Малтанхи пил» тата ытти хайлавсем пичетленнĕ. 2004 çулта унăн произведенийĕсем «Шурă туй кĕпи» кĕнекере кун çути курнă.

Чăваш
кĕнеке
издательстви